КС(чув)
Х-98
12060-чув

# ПЕТĚР ХУСАНКАЙ

*Чăваш сăмахĕ - пирĕн чăн çул куçĕ,*
*Шанкартатать вăл ĕмĕр-ĕмĕре.*
*Унпа кăна поэт хăйне çул уçĕ,*
*Унпа кăна вăл чĕрĕ тĕнчере.*

*П.Хузангай*



Национальная библиотека
4-012060



# ПЕТĔР ХУСАНКАЙ

## СУЙЛАСА ИЛНИСĔМ

Чăваш АССР
кĕнеке
издательстви

ШУПАШКАР
1968

ВИҪӖ ТОМПА ТУХАТЬ

ПӖРРЕМӖШ ТОМ

СӐВӐСЕМ

С(Чув)
Х-98

# Петĕр Хусанкай

## СУЙЛАСА ИЛНИСЕМ

ПРОВЕРЕНО 07 СЕН 2017
20 10

12060-4 чв

Национ...
Республики

* * *

*Вуншар çулпа шутлатпăр ёмĕре.*
*Ак тепĕр вунă çул вĕçсе ăсанчĕ.*
*Туссем сайраланаççĕ çулсерен,*
*Малта — çаплах йăлтăртатать-ха шанчăк.*

*Ĕçлес пек, пурăнас пек туйăнать:*
*Çул хыттипе кăрлач пăрлакĕ çийĕн*
*Чак-чак лартса пыратпăр туяна,*
*Хăш чух, тен, такăнăн, шуса та илĕн.*

*Этем вăл этемех çав, робот мар,*
*Анчах мĕскер вăл ман инкек-синкекĕм!*
*Çĕршывăм, халăх куртăр пархатар,*
*Эп çавăн ĕç-пуçне пăхса тинкертĕм.*

*Ĕççем-пуççем пыраççĕ пек аван,*
*Хăюллăрах пула пуçларĕ халăх.*
*Хăять хăй хăватне вăл шаннăран,*
*Хăвачĕ унăн —темĕн пултармалăх!*

*Эпир камсем? — Çав халăхăн сасси.*
*Каланă: сăвăç — тарçă та çулпуçĕ.*

Проверено 7 1 СЕН 2015

*Эпир — тăван чĕлхенĕн пуласси,*
*Пирĕнпеле вăл малалла çул уçĕ.*

*Эпир — сăмах тимĕрçисем — туптатпăр*
*Кунне-çĕрне пĕлмесĕр чĕлхене.*
*Сунтал çинчи кашни сăмах туянтăр*
*Хĕç сивчĕшне, çĕмрен шĕвĕрлĕхне.*

*Мухтав хăй тунă чĕлхине юратнă*
*Шывра путми, вутра çунми йăха!*
*Мухтав поэт çумне поэт çуратнă*
*Еçчен, талантлă, ăслă халăха!*

*1967.*

## ХАЛĂХ ПОЭЧĔ

Хусанкай Петĕрĕн сăвви-поэмисене пĕлмен чăваш çынни çук та пулĕ. Ахаль мар ĕнтĕ унăн пархатарлă ĕçне-хĕлне сума суса халăх ăна хăй поэчĕн ятне панă. Халăх поэчĕн хисеплĕ ятне илме вăл совет халăхĕшĕн чунне парса ĕçленипе тивĕçлĕ пулнă. Унăн сăпайлă та хавхалануллă лирики, халăх ĕçĕ-хĕлĕпе шухăш-туйăмĕсене анлăн та витĕмлĕн сăнласа паракан «Çирĕм уллă», «Магнит ту», «Таня», «Горкăри çурт», «Пĕрремĕш кĕркунне» тата ытти поэмисем, «Аптраман тавраш» сăвăлла романĕ, ача-пăча валли ятарласа çырнă «Тăван çĕршыв» поэмипе «Вăрман юрлать» сăвă кĕнеки, çепĕç чĕлхеллĕ «Тилли юррисем», юмарт сăнарлă сăвăлла юмахĕсем, хĕрӳ кăмăлпа туанă «Асталăхпа чăнлăх» критика статйисен кĕнеки тата ытти те халăх кăмăлласа, киленсе вулакан произведенисем пулса тăчĕç.

* * *

Петр Петрович Хусанкай 1907 çулта, январĕн 22-мĕшĕнче, хресчен кил-йышĕнче çуралнă. Вăл çуралса ӳснĕ ял, Сиктĕрме, ĕлĕк Ху-

сан кӗпӗрнин Сăпас уесне, халӗ Тутар республикин Элкел районне кӗрет. Çак ял Хусанкай ачалăхӗнче аслă çул-йӗрсенчен инçетре, хӳтӗ вырăнта ларнă. Çывăхра пысăк юхан шывсем те, чугун çул тавраш те пулман. Атăл хӗррине çитес пулсан, утмăл çухрăм çуран утма е лашапа кайма тивнӗ. «Вун ултă çула çитиччен эпӗ хула та, пăрахут та, пăравус та курман»,— аса илет поэт. Çапах та Сиктӗрме тӗттӗм ял пулнă тесе калама çук. Кунта ӗлӗкренпех И. Я. Яковлев пуçарнипе уçнă (ултă çул вӗренмелли) шкул ӗçленӗ, больница, агрономи участокӗ, лесничества пулнă. Ялта хресченсем кăна мар, учительсем те, врачсемпе агрономсем тата ытти интеллигентсем те пурăннă, ӗçленӗ. Сиктӗрме çыннисем хушшинче çав май, таврари ялсемпе танлаштарсан, хут пӗлекенсем ытларах пулнă, халăхăн культурă шайӗ те çӳлерех тăнă.

Çӗнӗ самана килсе çитсен, Сиктӗрмери интеллигентсен ушкăнӗ халăх культурине хăпартас, ял çыннисем хушшинче усăллă пӗлӳсем сарас ӗçе хӗрсех тытăнать. Унччен хупах пулнă çуртра культурă çурчӗ уçаççӗ, халăх валли тăтăшах концертсем, спектакльсем лартма, докладсемпе лекцисем туса пама тытăнаççӗ. Халăхăн культурă çуртне ытти ачасемпе пӗрле шкула чупакан Петӗр те çӳреме юратнă. Çапла пӗчӗклех вăл социализмла революци халăха панă культурă ырлăхне туйса илнӗ.

Хут вӗренме, шкула çӳреме тытăнни çинчен Хусанкай çапла каласа парать: «Пирӗн патра ютран килнӗ шкул ачисем хваттерте пу-

ранкалатчĕç те (Хусанкайсен йышĕ пĕчĕк пулнă: ашшĕ, амăшĕ тата Петĕр çеç, çав май пўрчĕ тăвăрах пулман.— М. С.), çавсен çумĕпе хам тĕллĕнех вулама-çырма тĕшмĕрткелеттĕм. Пиллĕкре-улттăра чухне шкула кайрăм, анчах «пĕчĕкçĕ-ха» тесе илмерĕç. Вĕренме саккăртан тин тытăнтăм».

Хусанкай ялти шкулта вĕреннĕ çулсем халăхпа çĕршыв пурнăçĕнчи паллă событисемпе пуян çулсем пулнă: Пĕрремĕш тĕнче вăрçи, Февральти революци, Октябрьти социализмла аслă революци, граждан вăрçи т. ыт. те. Хĕрў кĕрешўре ирĕке тухнă халăхăн пурнăçĕ Совет влаçĕн пуçламăш çулĕсенчех ытлă-çитлĕ пулма пултарайман-ха. Петĕрĕн те ачаллах ĕçе кўлĕнме тивнĕ. «Пурнăç тăтăшах çити-çитмиччĕ,— тет вăл хăйĕн аса илĕвĕсенче.— Икĕ ят çĕрне акса, пĕр лашапа пĕр ĕне усраттăмăр, пилĕк-ултă сурăх касаркалаттăмăр. 1920 çулта лаша вилчĕ те кил-çурта хуçсах хăварчĕ. Унтан выçлăх пулчĕ, атте çĕре кĕчĕ... Лашасăр та хуçасăр тăрса юлнăскерсем — аннепе эпир ят çĕрне те акайми пултăмăр: çурмалла актара пуçларăмăр. Хуçалăх тени колхоз самани пуçланичченех ура çине тăраймарĕ».

Ача чухнехи вăхăт çăмăл пулман пулин те, çав-çавах Хусанкайшăн та вăл рехетсĕр иртмен. Çамрăклах, акă, Хусанкай, халăх юмаххалапĕсене, сăвви-юррисене итлесе, вĕсен илемĕпе киленнĕ, хăй те юрлама юратнă.

«Тăван чĕлхен вăйĕпе илемне,— тесе çырать Хусанкай,— чи малтан мана «Нарспи» туйтарчĕ. Ун чухне ăна кам çырнине те пĕлмен эпĕ. Вуласса пĕчĕкçĕллех вуласа тухсат-

там. Пĕрре аттепе анне кӳршĕ яла туя кайнă та, пирĕн патра хĕрсем улаха юлнă. Ак хайхисем Сетнерпе Нарспи валак патĕнче тĕл пулни çинчен юрла пуçларĕç. Кĕввине ас тумастăп ĕнтĕ. Анчах Иванов сăмахĕсене улăштаркаланă пулмалла çав хĕрсем. «Шăхра-шăхра шăварать урхамах пек лашине» тенине пит аван ас тăватăп. Хĕрсем çывăрма выртсан, эпĕ ăнсăртран хурăнташ хĕрĕн пуçелĕкĕ айĕнче пĕр кĕнеке кĕтесси куртăм. Систермесĕр туртса кăлартăм та, пурте лăплансан, вула пуçларăм. Вăл Чĕмпĕрте 1908 çулта тухнă «Чăваш юмахĕсемпе халапĕсем» пулнă-мĕн. «Нарспи» тĕлне çитсен — эпĕ тĕлĕнсе хытсах кайрăм. Ун чухне хам пĕр çиччĕре-саккăрта çеç пулнă пулас».

Шкула çӳреме тытăнсан, учительсем ăна тăван халăх юрăçи-сăвăçисен пултарулăхĕпе çеç мар, вырăс литературин иксĕлми пуянлăхĕпе те паллаштарма пуçланă. Унтан та ытларах, шкулта вĕреннĕ вăхăтра Хусанкай хăй сăвăсем çырма пуçăнать. Тăван чĕлхен илемне туйса илме Сиктĕрмере нумай çул хушши ачасене вĕрентсе пурăннă Наталия Яковлевна пит пулăшни çинчен Хусанкай час-часах асăннă. Ватă учительница ачасене «Нарспи» поэмăна пĕрре çеç мар вуласа панă, вăлах хăй куçарса И. С. Тургеневăн «Бежин çаранĕ», В. Г. Короленкăн «Вут куçĕсем» калавĕсемпе паллаштарнă. Çав çулсенчех Хусанкай А. С. Пушкинăн, М. Ю. Лермонтован сăввисене, Л. Н. Толстой калавĕсене вырăсла вулама тытăннă. Шкулта ачасем «Вĕренекен сасси» ятлă алăпа çырнă литература журналĕ

кăларнă, литература произведенийĕсем тăрăх инсценировкăсем йĕркелесе лартнă.

1923 çулта Хусанкай ялти шкултан вĕренсе тухать те малалла вĕренме Хусана тухса каять. «Анне мана епле те пулин вĕрентессшĕнччĕ,— тет поэт.— 1923 çулта эпĕ Хусанти чăваш педтехникумне кĕтĕм»,— тесе çырать вăл. Унта поэт икĕ çул вĕреннĕ. Кунта вĕреннĕ чухнех, 1924 çулта, Шупашкара «Сунтал» редакцине вăл хăйĕн хăш-пĕр сăввисене ярса парать. Журналăн 1-мĕш номерĕнчех унăн виçĕ сăвви пичетленсе тухнă. Вĕсенчен уйрăмах «Ирĕк тимĕрçĕ» сăвва палăртса хăвармалла. Çак ытарлă сăвăра çамрăк поэт, ирĕке тухнă ĕç çыннисен хăвачĕпе хавхаланса, çĕнĕ пурнăça мухтанă:

Хытăрах янтра, Пĕтĕм Çĕр тавра
Çĕнтерӳ юрри! Пĕттĕр мул хурри!..

Хусанкай сăввисене вулакансем хапăлласа йышăнни ăна малалла ĕçлеме, çĕнĕрен-çĕнĕ сăвăсем çырма хавхалантарнă. «1925 çулта,— тесе çырать поэт,— эпĕ Хусантан Канаша пытăм. Канашран Шупашкара çитиччен ик-виçĕ талăк сĕтĕрĕнтĕмĕр. Ун чухне чугун çул та, шоссе те çукчĕ. Вĕренчĕкле çыркаланă сăввăмсене пичетлесессĕнех, мана ятлăрах поэтсем асăрхарĕç. Нумайăшне ман халь, пысăк тав туса, ăшă кăмăлпа асăнас килет. Г. Алентей, С. Элкер, Хумма Çеменĕ — маншăн нихăçан манми ятсем».

Шупашкарта Хусанкай ĕçе кĕрет. Тĕрлĕ учрежденисенче, унтан «Сунтал» журнал редакцинче ĕçлет, çĕнĕ сăвăсем çырать, хăй тĕл-

лĕн нумай вĕренсе пырать. Совет халăхĕн çĕнелнĕçем çĕнелсех пыракан анлă та нумай енлĕ пурнăçне сахал пĕлнине туйса, поэт Совет çĕршывĕ тăрăх курса çӳреме шут тытать. «1926—1927 çулсенче,— тет вăл,— эпĕ Совет Союзĕ тăрăх пуçласа çӳресе куртăм. Тĕрлĕ халăхсемпе паллашрăм. Ашхабадран — Каспи тинĕс урлă — Баку хулине çитрĕм. Бакуран «Çирĕм улттă» поэмăпа хавхаланса таврăнтăм».

Поэт Туркменире, Узбекистанра, Азербайджанра, Грузире пулса курнă. Çав вăхăтрах унăн, çул укçилĕх ĕçлесе тупма тесе, хăшпĕр хуласенче чарăнса тăма тивнĕ. Çапла вăл чылайччен Ашхабад хулинче статистик пулса ĕçленĕ. Çак ĕçпе халăх хушшинче тăтăшах пулма тивнĕ май, вăл Вăтам Азири тĕрлĕ халăхсен пурнăçĕпе, йăли-йĕркисемпе, вĕсен культурипе, литературипе аванах паллашнă, тăванла халăхсене сума сума вĕренсе пынă. Вăтам Азирен вăл Кавказа каять. Кавказ халăхĕсен пурнăçĕпе паллашать.

Çул çӳреврен хăйĕн тавра курăмĕпе ăс-хакăлне чылаях ӳстерсе таврăннă Хусанкай мĕн курнине-илтнине, ăша хывнине, хăйĕн кăмăлне мĕн хумхантарнине çинчен лирикăлла сăвăсем те, поэмăсем те çырать. Çул çӳревех малалла вĕренме кирлине туйтарать. Çапла вара, вăл 1927 çулхи кĕркунне Хусана кайса Хĕвелтухăç халăхĕсен педагогика институтне вĕренме кĕнĕ. «Унта,— аса илет поэт,— мана чăваш чĕлхи ăсти Н. И. Ашмарин профессор тăван чĕлхене ăнланма нумай пулăшрĕ. Чăвашсемпе вырăссем ĕмĕрех юнашар пурăннине асра тыт-

са, вăл чăваш чĕлхин сас ĕнерĕвĕ те, сăвă-юрă виçи те малашне вырăс чĕлхинчи пекрех пулса пырассине асăрхаттарчĕ».

Хусанта вĕреннĕ вăхăтра, 1928 çулта, Шупашкарта Хусанкай сăввисен пĕрремĕш — «Уяртсан» ятлă кĕнеки пичетленсе тухать. Ку кĕнекене мĕн пуçласа 1927 çулччен çырнă чи паллăрах сăвăсем кĕнĕ пулнă.

Асăннă çулсенче Хусанкай сăвăсенче ытларах хăй чун-чĕрин пăлхавĕсем çинчен каласси пулман мар, анчах вăл çине тăрсах халăх пурнăçĕпе пĕр кĕвĕллĕ произведенисем çырма пикенни, хăйĕн ăсталăхне хăпартма тăрăшни куç кĕретех палăрнă. Унăн ăсталăхĕн ӳсĕмĕшĕн, акă, 1928 çулта Хусанта Маяковскипе тĕл пулни пит вырăнлă пулнă. Çавăнтан тытăнса вăл паллă вырăс совет поэчĕн сăввисене тинкерсех вулама, каярах чăвашла куçарма та тытăннă. Унăн поэзи çĕнĕлĕхĕсемпе хăй çырнă сăвăсенче те усă курма тăрăшнă.

1931 çулта поэт Хусантан Мускава куçса каять, «Коммунар» ятлă чăваш хаçат редакцине ĕçлеме кĕрет. Кунта вăл хаçатăн тухса çӳрекен корреспонденчĕ пулса ĕçленĕ. Хаçат редакцийĕ сĕннипе Хусанкай тĕрлĕ хуласене çитсе курать, çĕнĕрен тăвакан фабрикă-заводсемпе паллашать. Горький хулинчи, Донбасри, Магнитогорскри рабочисен пурнăçĕпе ĕçне-хĕлне сăнать. Çавăн чухне ĕнтĕ вăл «Магнит ту» ятлă пысăк поэмă çырнă пулнă. Унсăр пуçне Хусанкай вăтăрмĕш çулсен тăршшĕнче ытти сăвă-поэмăсем те нумай çырнă, вырăс литературинчен чăвашла чылай куçарнă. Çапла вăл В. Маяковскин «В. И. Ленин»

поэмине, А. Пушкинăн «Евгений Онегин» романне, унчченех тата М. Горькин «Этем çурални», «Çирĕм улттăпа пĕрре» калавĕсене куçарнă. Куçару ĕçĕ Хусанкайăн хăйĕн поэзи ăсталăхне те ăнăçлă аталантарма пулăшса пынă. Пурăна киле ытти халăхсен литературин тĕслĕхĕсене чăвашла куçарасси Хусанкай ĕçĕ-хĕлĕн паха йăли пулса тăрать. Вăл куçарнă паллă произведенисен хисепĕнче, асăннисемсĕр пуçне, А. Пушкинăн «Полтава» поэми, А. Грибоедовăн «Ăса пула инкек» комедийĕ, В. Шекспирăн «Ромеопа Джульета» трагедийĕ тата ытти халăхсен нумай-нумай паллă писателĕсен произведенийĕсем шутланаççĕ.

1934 çулта «Коммунар» хаçат тухма чарăннă май Хусанкай пĕтĕмĕшпех литературă ĕçне куçать. Литературă ĕçĕ ĕнтĕ уншăн тĕп ĕç пулса тăрать. Поэт умлă-хыçлах хăй çырнă сăввисемпе поэмисене, куçарнă произведенисене хаçатсенче, журналсенче, альманахсенче пичетлесе кăларать. Вĕсем уйрăм кĕнекен те тухаççĕ. Çапла 1934—1935 çулсенче вăл «Сулмак» ятлă икĕ сăвă кĕнеки хатĕрлесе çитерет. 1936 çулта «Илемлĕ литературă» альманахра «Евгений Онегин» романăн куçарăвне кăларать. 1937 çулта Хусанкай К. Ивановăн «Нарспи» поэмине вырăсла куçарас тĕлĕшпе ĕçлеме тытăнать, колхоз ял çыннисен ĕçĕ-хĕлĕпе пурнăçĕ çинчен калакан лирикăлла сăвăсемпе поэмăсем çырать.

Совет писателĕсен Пĕтĕм Союзри пĕрремĕш съездĕнче пулни, унта А. М. Горький нумай нациллĕ совет литературин малашнехи ÿсĕмĕ çинчен каланисене тимлĕн итлени Хусанкая

таван литературăра тата та хавхаланарах ĕç-леме çĕнĕ вăй хушса панă. Вăл обществă ĕçне активлăн туса пынă, тăтăшах халăх хушшине тухса çӳренĕ, хăй çырнисемпе куçарнисене вула-вула панă.

Çак хĕрӳллĕ ĕçрен поэтăн сасартăк татăлмалла килсе тухнă. 1938 çулта ăна, халăхшăн ют шухăшлă произведенисем çырать тесе, айăплама тытăннă, хупса хунă. Анчах ку элек пулнă. 1939 çулта суд унăн ĕçне пăхса тухнă, Хусанкайăн ним айăпĕ те пулманнине кура, ăна ирĕке кăлармалла тунă. Поэт пĕр хушă сывалса пурăннă хыççăн каллех хăйĕн юратнă ĕçне тытăннă.

Таван çĕршывăн Аслă вăрçи пуçланнă вăхăтра Хусанкай Ленинградра пулнă. Пĕтĕм совет халăхĕпе пĕрле вăл ирсĕр тăшмана хирĕç хаяр кĕрешĕве тухнă. Унăн хĕç-пăшалĕ нимĕнрен маларах çивĕч сăмах пулса тăрать. Вăрçăн малтанхи кунĕсенчех Хусанкай, Ленинград хулине халалласа, «Памастпăр ирĕк хулана» ятлă сăвă çырать. 1941—1942 çулсенче поэт Хусанта тухса тăнă «Хĕрлĕ ялав» хаçатра ĕç-ленĕ. Кунта вăл фашистла çын çиенсене питлекен сатирăлла сăвăсемпе совет халăхне аслă кĕрешĕве чĕнекен патриотизмла сăвăсем сахал мар çырса кăларнă.

1942 çулта, апрель уйăхĕнче, Хусанкай фронта тухса каять, вара 1944 çулччenех çапăçури çарта пулать. Вăл нумай çапăçусенче пулса курнă: Дон шывĕ çинче, Брянск фронтĕнче, Украинăра, Буг шывĕ урлă каçнă çĕрте, Польшăра çапăçнă. 1943 çулта, март уйăхĕнче, поэт парти ретне кĕнĕ. 1944 çулта Польшă

çĕршывне нимĕç оккупанчĕсенчен хăтарасси-шĕн пынă хаяр çапăçусенчен пĕринче Хусанкай пит йывăр аманнă. Чылай хушă госпитальсенче сывалса выртнă хыççăн, 1945 çулта, июнь уйăхĕнче, вăл киле таврăнать. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче тăшмансене хирĕç паттăррăн çапăçнăшăн поэт «Хĕрлĕ Çăлтăр» орденĕ тата медальсем илме тивĕçлĕ пулнă.

Халăхпа пĕрлех поэт мирлĕ ĕçе тытăннă. Вăрçă хыççăн Хусанкай çĕнĕ те пысăк, халăх кăмăлне хавхалантаракан произведенисем çырас тĕлĕшпе тăрăшса ĕçленĕ. Çулсерен тенĕ пек вăл сăвă-поэмă кĕнекисем кăларать: «Тăван çĕршыв» (1950), «Вăрман юрлать» (1951), «Юмахсем» (1953), «Аптраман тавраш» (1957), «Поэмăсем» (1960), «Тилли юррисем» (1962), «Лирикă» (1962), «Савни» (1963) тата ыт. те. Вăрçă хыççăнхи тапхăртах унăн сăвви-поэмисене темиçе хут та вырăсла куçарса кăларнă. Вĕсенчен чылайăшне поэт хăй куçарнă.

Халăхпа пĕрле поэт та ӳснĕ, вăй илнĕ. 1950 çулта Чăваш совет автономийĕ 30 çул тултарнă майпа Мускавра ноябрь уйăхĕнче чăваш литературипе искусствин эрни иртнĕ. Чăваш писателĕсем, композиторĕсем, артисчĕсем хăйсен ĕçĕ-хĕлĕ çинчен пĕтĕм Совет çĕршывĕ умĕнче каласа панă. Унта П. П. Хусанкай та пулнă. Мускав чăваш писателĕсемпе искусства çыннисене хапăллаcа йышăннă. Чăваш АССР Верховнăй Совечĕ çав кунсенче, П. П. Хусанкайăн чăваш литературинчи пысăк ĕçне хисепе хурса, ăна халăх поэчĕн ятне панă.

Халăх поэчĕн ĕçĕ-хĕлĕ çулсерен ӳссе пы-

рать. Вăл общества ĕçне, çамрăк писательсене çитĕнтерес ĕçе активлăн хутшăнать.

Хăйĕн произведенийĕсемпе поэт совет халăхне коммунизм тăвас аслă ĕçре пулăшса пырать. Вăрçă вучĕ витĕр тухнă П. П. Хусанкай мĕн пур чун хавалĕпе тăнăç пурнăçшăн, миршĕн, халăхсен туслăхĕшĕн кĕрешет. 1951 çулта вăл чăваш халăхĕ ячĕпе миршĕн кĕрешекенсен Пĕтĕм Союзри III конференцийĕнче, вăрçă вутне чĕртекенсене питлесе, хĕрӳллĕ сăмах тухса каланă. Поэт 1954 çулта Пĕтĕм Союзри совет писателĕсен II съездĕнче, 1959 çулта — III, 1967 çулта IV съезчĕсенче, 1958 тата 1965 çулсенче РСФСР писателĕсен 1-мĕшпе II-мĕш съезчĕсенче чăваш литераторĕсен делегачĕ пулнă, ăна РСФСР тата СССР писателĕсен правлени членне суйланă.

1955—1957 çулсенче П. П. Хусанкай Мускавра М. Горький ячĕпе хисепленекен литература институчĕ çумĕнчи писательсен аслă курсĕнче вĕреннĕ. Çакă унăн ăсталăхĕпе пултарулăхне тата та çӳллĕрех пусăма хăпартма пулăшнă. Поэтăн ятне ĕнтĕ пĕтĕм Совет çĕршывĕнчи халăхсен вулаканĕсем пĕлсе тăраççĕ. Унăн произведенийĕсене вырăсла çеç мар, ытти нумай халăхсен чĕлхипе те куçарса кăларма, юратса вулама тытăнаççĕ. Вăл çырнă сăвăсемпе поэмăсем ют çĕршывсене те çитеççĕ.

П. П. Хусанкайăн обществăпа литература ĕçĕнчи çитĕнĕвĕсене сума суса, ăна Совет правительстви икĕ хутчен Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕ панă. Совет халăхĕшĕн тăрăшса ĕçленине кура вăл Чăваш АССР тата РСФСР Верховнăй Совечĕсен депутатне суйланма тивĕç илнĕ.



Национальная библиотека Чувашской Республики
12060-4

П. П. Хусанкай халăхпа тачă çыхăнса пурăнать, ĕçлет. Вăл нумай халăх писателĕсемпе çыхăну тытать, вĕсен пултарулăхĕпе интересленет, чăвашла куçарать.

* * *

Хусанкай сăвăсем çырма пит çамрăкла пуçланă. Вăл литература ĕçне пуçăннă çулсем—çирĕммĕш çулсен пуçламăшĕ пулнă. Çак тапхăрта ĕнтĕ Совет çĕршывĕ халăх хуçалăхне хăпартас, социализмла пурнăç никĕсне хывас ĕçе тытăннă. Чăваш халăхĕ те хăйĕн çĕнĕ пурнăç калчисене, наци формиллĕ социализмла культурине аталантарса пырать. Çамрăк чăваш литератури ӳснĕçем ӳссех пыни палăрать. Чăваш литературине çĕнĕ писательсем, уйрăмах çамрăксем, йышлăн пырса кĕреççĕ. Вĕсен хисепĕнче çамрăк Хусанкай та пулнă.

Мĕн çинчен çырнă-ха Хусанкай хăйĕн малтанхи сăввисенче? Октябрь революцийĕ çинчен, халăх пурнăçĕнче çĕнĕ самана пуçланни çинчен, çĕнĕ тĕнче никĕсне хывса пыракан ирĕклĕ ĕç çынни çинчен. Çав сăвăсенчи сăнарсем, пĕтĕмĕшпе илсен,— романтикăлла хавхаланупа тулнă сăнарсем. Ирĕке тухнă ĕç çыннин сăнарне пайăр, пурнăçпа таччăн çыхăнтарса кăтартса пани кунта пулман-ха. Акă унăн «Ирĕк тимĕрçĕ» сăвви:

Вăйлă кăкăрăм
Çăмăллăн сывлать,
Хăнăхнă аллăм
Пĕрмаях шаккать.
Шаккать те ватать

Асап сăнчăрне,
Çĕнĕрен хывать
Тĕнче никĕсне...

Çак сăнар уйрăм çынна мар, чуралăх сăнчăрне аркатса çĕнĕ тĕнче тума тытăннă ĕç халăхне пĕлтерекен пĕтĕмлетнĕ сăнар пулса тăрать. Хусанкай пултарулăхĕн тĕпчевçисенчен пĕри В. Мукусев каларăш, çавнашкал революцилле хавхаланупа тулнă сăнарсем: «Пурнăçри уйрăм чăнлăха мар, пĕрлештерсе пĕтĕмлетсе илнĕ чăнлăха кăтартнă; уйрăм кăмăл-туртăмсене мар, революцилле пафоса илсе кăтартнă; характерсенчи уйрăмлăхсене палăртса мар, миллионла массăсене мĕн палăртса тăнине уçса панă»[1].

Çавăн пек пĕтĕмĕшле риторикăлла сăнарсене асăннă сăвăра та, ытти хăш-пĕр малтанхи, сăмахран, «Тăвăл иртсен», «Ирĕк çĕршывăма», сăвăсенче те курма пулать. Поэт пурнăçа капла кăтартса пама çителĕксĕррине хăех туйса илет. Вăл вара, витĕмлĕрех мелсем шыраса, пĕрре Çеçпĕл Мишши сăввисен тĕслĕхĕсемпе, тепре халăхăн лирикăлла юррисен сăнлăхĕсемпе усă курма пикенет:

Вăшăлах та вăшăл, ай, сулхăн çил,
Улма çеçкисене татса ан ил...
Çил мар иккен вăл, тусăмçăм, çил мар,
Вăл — ман ăшри сиксе çунан кăвар..
(«Вăшăлах та...», 1926.).

Е тата кăмăлĕн еккине килнĕ вырăс поэзийĕн тĕслĕхĕсемпе анлăн усă курма тытăнать.

---

[1] «Тăван Атăл». 6 №, 1956 ç.

Хӑй пултарулӑх ӳсӗмӗн пуҫламӑш тапхӑрӗнче Хусанкай уйрӑмах, акӑ, паллӑ вырӑс поэчӗн Сергей Есенинӑн лирикипе киленни курӑнать. Мӗншӗн урӑх поэтсене мар, Есенина уйрӑмах килӗштернин сӑлтавӗ ҫинчен калас пулсан, ҫакна палӑртса хӑварма кирлӗ. Тин ҫеҫ ялтан «хӑпнӑ», пурнӑҫа ҫителӗклӗ пӗлсе ҫитеймен поэтшӑн Есенин сӑввисем витӗмлӗ сӑнарсемпе пурнӑҫа ҫав тери кӑмӑллӑн кӑтартса пама пултарнипе ҫывӑх пулса тӑнӑ. Есенин сӑввисем майлӑ сӑвӑсем Хусанкай пайтах ҫырнӑ. Анчах Есенин поэзийӗн ырӑ енӗсене (пуринчен ытларах витӗмлӗ сӑнарсем ӑсталама пултарнине тата сӑвӑ янравлӑхне) алла илнипе пӗрлех ҫамрӑк чӑваш сӑвӑҫи вырӑс поэчӗн хӑш-пӗр имшер енӗсене те ӑша хывнӑ темелле: пӗчченлӗхпе салхулӑха савма пӑхни, халӑхран ютшӑнни т. ыт. те. Каярахпа пурнӑҫ хӑех ӑна ҫав ҫитменлӗхсенчен уйӑрнӑ. Халӑх пурнӑҫӗнчи социализмла улшӑнусене кура Хусанкайӑн тунсӑхпа салху кӗввисем часах сӗвӗрӗлме пуҫлаҫҫӗ. Урӑхла пулма та пултарайман. Унӑн пултарулӑхӗ те халӑх пурнӑҫӗпе пӗр кӗвӗллӗ пулас ҫул ҫине тухать. Ҫавна эпир 20-мӗш ҫулсен вӗҫӗпе 30-мӗш ҫулсен пуҫламӑшӗнче ҫырнӑ «Сывла, Баку», «Итле, Германи», «Автономисен маршӗ», «Ҫирӗм уттӑ» (1927) ятлӑ халӑх хапӑлласа йышӑннӑ сӑвӑсемпе поэмӑсенчен куратпӑр.

«Ҫирӗм уттӑ» поэмӑра Хусанкай иртнӗ пурнӑҫ событийӗсене тӗрӗс хаклас ҫул ҫине малтанхи хут тӑрать. Унта вӑл Совет ҫӗршывӗнчи ҫынсен моралӗ ҫинчен, совет патриотизмӗ ҫинчен калать. Баку комиссарӗсене —

Шаумяна, Азизбекова, Джапаридзене — нимӗнле тӑшмансенчен те хӑраман ҫирӗп чунлӑ большевиксем пек сӑнласа кӑтартать. Тӑван ҫӗршывпа тӑван халӑха юратни пролетариат интересӗсемшӗн, Кавказа советлӑ Кавказ тӑвассишӗн чунтан парӑнса кӗрешни — акӑ мӗн чӑтӑмлӑ пулма хавхалантарнӑ Баку комиссарӗсене. Ирсӗр сутӑнчӑк тыттарнипе Тиг-Джонсӑн карательнӑй отрячӗ аллине лекнӗскерсем, вӗсем вилсессӗн те тӑшмана пур пӗр парӑнмаҫҫӗ.

Совет патриочӗсене хирӗҫ Кавказпа Вӑтам Ази халӑхӗсене чуралантарса ҫаратма пӑхакан Англи колонизаторӗсем тӑраҫҫӗ. Хӑйсен ирсӗр ӗмӗтне пурнӑҫлас шутпа вӗсем нимрен те: хӗҫ-пӑшалпа усӑ курассинчен те, ҫынна сутӑн илессинчен те, хӑратса е илӗртсе пӑхӑнтарассинчен те йӗрӗнсе тӑмаҫҫӗ.

Капитализм тӗнчин ирсӗрлӗхӗпе буржуази культури ҫӗршӗнсе пынине Хусанкай хӑйӗн нумай сӑввисенче сӑнласа кӑтартать. 1930-мӗш ҫулта ҫырнӑ «Итле, Германи!» ятлӑ публицистла сӑввинче вӑл, акӑ, Германин Мускаври посольстви Чӑвашпа Монголи республики представителӗсене, вӑрҫа хирӗҫ тӑракансен конференцинче пулма чарса, Германие кайма визӑ паманнине хирӗҫ протестлесе ҫырать:

Пӗлтер мана, илемсӗр туйӑнчим
Чӑвашпала монголӑн хӗрӗ-ывӑлӗ?
Ҫак ҫылӑхна ас илӗн эс, Германи,
«Каҫару ҫук сана, каҫару ҫук!» —

тет поэт.

Çапла икĕ хире хирĕçле — пĕр енчен, ӳссе, тĕрекленсе пыракан социализм çĕршывне, тепĕр енчен, çĕрсе пыракан капитализм тĕнчине танлаштарса, Хусанкай социализм тĕнчи малашне ӳссех пырасса ĕнентерӳллĕн кăтартса парать.

Социализм çĕршывĕ малалла хăватлăн çĕнтерсе пынине, капитализм тĕнчи çĕрсе пынине сăнласа кăтартакан публицистла сăвăсем çырма тытăннă хыççăн Хусанкай малалла совет пурнăçĕнчи ĕçсемпе событисене тарăнрах, тĕплĕрех сăнласа пама пикенет; хулара та, ялта та социализм тăвакан совет çыннисен ĕçри паттăрлăхне кăтартма тапратать. Çак тапхăра анлăн кăтартакан произведенисен шутне 1933 çулта çырнă «Магнит ту» ятлă поэмăна кĕртме кирлĕ.

Ку поэмăра Хусанкай улăпла капмар металлурги заводне мĕн тери пысăк хастарлăхпа тунине, вата Урал сăнне тĕпрен çĕнетсе пынине, социализмла индустрин çĕнĕ центрне тăвассишĕн кĕрешнĕ чухне совет çыннисем хăйсем те хăвăрт ӳссе, аталанса пынине анлăн кăтартнă.

Поэмă умсăмахĕнче, хăй çине илнĕ задачă йывăррăшне палăртса, поэт çапла калать:

Эп çыртăм та çак
　　　　　　　　сарлака сăввăма
Иментĕм:
　　　　Илейрĕ-ши вăл
　　　　　　　　çавăрса тĕп тема —
Сисĕнет-ши унта
Мĕльюнсенĕн вăй-халĕ? —
тет вăл, иккĕленнĕ пек пулса.

Автор шухăшĕ тăрăх, ку поэма социализмлă завод тăвас ĕçе пĕтĕм халăх хутшăннине сăнласа кăтартмалла пулнă. Ку чăннипех те çапла. Поэмăра тĕрлĕрен типлă сăнарсем питĕ йышлă: совет инженерĕсемпе техникĕсем, ют çĕршыв инженерĕсем, тĕрлĕрен рабочисем — промышленноçра тахçанах ĕçлекенсем те, завод тăвас ĕçе тин хутшăннă хресченсем те, хула çыннисем те, çеçен хирсенче куçса çӳрекенсем те — пĕр сăмахпа каласан, тĕрлĕ социалла сийрен тухнă, тĕрлĕрен шухăш-кăмăллă халăх.

Коммунистсемпе малта пыракан ăс-тăнлă рабочисем ертсе пынипе çак халăх ӳсĕçем ӳссе пырса пĕр пĕтĕм шухăшлă çирĕп коллектив пулса тăрать.

Поэмă сюжетне Хусанкай рабочисен йышĕ хĕрӳ ĕçре аталанса пынипе çыхăнтарса йĕркеленĕ.

Хусанкайшăн ку поэмă çĕнĕ индустриллĕ ĕç темине сутăтса пама тăрăшнипе кăна мар, хăйĕн шухăш-кăмăлне витĕмлĕрех кăтартас тĕллевпе çĕнĕ мелсем, поэзи чĕлхи валли çĕнĕ формăсем шыранипе те паллă. Çак ĕмĕтпе Хусанкай Маяковскин пурнăçри ĕçсене чĕррĕн сăнласа кăтартма пулăшакан ритмлă (çемĕллĕ), ирĕк сăвăллă поэзийĕ патне пырать. Çавăн пирки эпир ку поэмăра Хусанкайăн малтанхи сăввисен юрă кĕвви пек пĕр тикĕс юхакан виçине курмастпăр. Ун вырăнне поэт кунта, пур чухне те ăнăçлах мар пулин те, чĕрĕ калаçу интонацийĕпе, тепĕр тĕлте тата тавлашса калаçнă чухнехи ритмпа та усă ку-

рать. Çавăнпа вăл хăй поэмине рабочисен ĕç юррине те, такмакĕсене те кĕртет.

Хусанкай пултарулăхĕшĕн ку поэмă ун ӳсĕмĕн çĕнĕ утăмне пĕлтернĕ. Аталанса çитĕннĕ Хусанкай поэзийĕн тĕп палли вăл — формă енчен лирикăлла юрă çемми халăх калаçăвĕн чĕрĕ ритмĕпе уйрăлми çыхăнни, содержани енчен поэтăн лирикăлла туйăмĕ халăх шухăшкăмăлĕпе пĕр кĕвĕллĕ пулса тухни пулать. Çак уйрăмлăх шăпах «Магнит ту» поэмăран тытăнса кайнă.

Социализм çĕнтерни, пирĕн çĕршыв çĕнĕ Конституцие йышăнни поэта чăваш халăхĕн иртнипе хальхи пурнăçне çĕнĕлле хакласси патне илсе пынă. Социализмпа капитализм хушшинчи хирĕçĕве килĕштерме май çуккине, социализм тĕнчи капитализмран вĕçĕмсĕр çӳлте тăнине поэт ĕнтĕ тарăнрах, ĕç халăхĕ капитализмла çĕршывсенче те ирĕке тухассишĕн паттăррăн кĕрешнине анлăрах кăтартса пама тытăнать. Çак вăхăтра Хусанкай, тăван çĕршывпа унăн ĕç паттăрĕсене, чи лайăх çыннисене хапăлласа, вĕсемпе пĕрле мăн кăмăллăн савăннине палăртакан, капитализм çĕршывĕнчи прогреспа демократишĕн кĕрешекен çынсемпе пĕр шухăшлă пулнине кăтартакан лирикăлла сăвă нумай çырать. Чи паллисем вĕсем хушшинче «Федерико Гарсиа Лорка» тата «Аван-и, Пушкин!» (1937 ç.) ятлисем. Малтанхи сăвăра поэт хăйĕн Испанири поэт тăванĕшĕн, демократилле республикăшăн кĕрешсе вилнĕ паттăршăн, совет çынни мĕн тери чĕрине ыраттарса хуйхăрнине сăнласа кăтартать. Вăл çапла çырать:

Эп сана нихăçан та курман,
Итлемен эпĕ сан юрруна та.
Çав-çавах сан сăну халь пур ман,
Эсĕ ман чĕрере пурăнатăн...

Макăр, музă, хӳхле! Пĕлтĕн, куртăн —
Кам сан пуç кăшăлне таптакан.
Ерт эс халăх çарне паттăр Лоркăн
Парăнми юррипе атака.

Эсĕ куртăн ачаллă хĕрарăм
Кăкăрне касакан палача;
Бомбăсен сассипе эс анрарăн,
Штык вĕçне тирĕнет ав ача...

Чĕрĕ эс! Тыткăнланнă Гренадă
Çапса ватĕ тăшман сăнчăрне.
Ху çинчен те, хăвăн юрруна та
Савса юрлĕç ĕмĕр-ĕмĕрне.

«Аван-и, Пушкин!» сăвăра поэт, аслă Пушкинпа чĕрĕ çынпа калаçнă пек калаçса, ăна чăваш ĕç халăхĕ социализм çĕнтернĕ хыççăн тулли савăнăçпа телей шыраса тупни çинчен каласа кăтартать:

...Пăхсам, поэт, кур халăха паян ак,
Кур ĕмĕтне çитернĕ çĕршыва:
Çакса сулăпала юхтарса янă,
Юнпа ăна кĕлернĕ, вăл — сывах!

Хапхаранах тухса илет тăванăн
Сана вăл сарлака чĕрипеле;

— Пусма пек пултăр ман саламăм саншăн,
Кĕрсем, хăнам, иртсемччĕ тĕпеле.

Пехил сана: пĕр пĕрчĕрен пин пĕрчĕ!
Ларсам ман ирĕклĕ кĕрекене.
Сан вăрлăху вăрман пек ĕрчетĕрччĕ! —
Тесе сĕнет вăл савăш куркине.

Ларар, поэт: хальччен çăкăр-тăварсăр
Ӳсмен-ха вăл эреш те ярапа.
Тĕппи курка! Сахал пулсан — ăсатпăр
Юри хывтарнă Алтăр çăлтăрпа.

Совет обществи социализма ăнăçлăн туса пыни ĕç халăх пурнăçне çултан çул лайăхлатса пыма май панă. Социализм йăлана кĕнĕ. Совет çĕршывĕнчи çак историлле событи социализмла патшалăхăн çĕнĕ Конституцинче те сăнланса юлнă. Совет çĕршывĕнчи пурнăç тĕпренех улшăннă пирки совет çынни кăмăлĕнче çуралнă çĕнĕ шухăш-туйăма Хусанкайăн вăрçă умĕнхи лирики чылай туллин, тĕплĕн палăртса çутатать. Ку вăл поэт пурнăçа тимлĕн сăнаса пынинчен килнĕ.

Хусанкайăн лирикăлла сăввисемпе кĕске поэмисенче герой выранĕнче хулапа ялти çын, ĕç этемĕ тăрать. Коммунистсен партийĕ ертсе пынипе киленмелле тулăх пурнăç тунăшăн ку çын хăй тăван çĕршывĕшĕн чĕре тулли мăн кăмăллăн савăнать. Тăван халăхсен аслă та туслă çемйинче вăл хăйне хăй ыттисемпе тан тытать, хăйне хăй вăл пурнăç хуçи тесе шутлать. Халăхăн çак тулли туйăмне кăтартса пама поэт хăйне уйрăм жанрпа усă курать. Ку

тапхăрта поэт сăввисем юрă формипе шăранса тухаççĕ, вĕсенчен нумайăшне композиторсем чăн та кĕвĕлесе юрламалла тăваççĕ. Акă, сăмахран, «Ватă колхозник юрри» (1936):

Халиччен эп Мускавра пулманччĕ,
Сарлака иккен урамĕсем!
Пинĕн-пинĕн кĕрлесе чупаççĕ
Утсăрах капмар ураписем.

Халиччен эп Кремльте пулманччĕ,
Кисренми иккен ун хӳмисем,
Пилĕк юплĕ çăлтăрсем çунаççĕ
Сӳнми шанчăк евĕр хĕмленсе...

Çĕнĕ шухăш-туйăмсен пуянлăхне татах та витĕртерех кăтартса парас ĕмĕтпе поэт колхозлă ял çыннисен пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен çырнă «Инспектор», «Сантăр — çĕлĕк çавракан», «Тантăшсем», «Элтиван пичче» йышши (1939) лирикăлла кĕске поэмăсен жанрĕпе усă курать. Ку поэмăсенче тĕп персонажсем — иртнĕ инкеклĕ пурнăça чĕррĕн курса, халĕ колхозри тулăх пурнăça та хăйсемех тăвакан ватă колхозниксем. Сăмахран, «Элтиван» поэмăра произведени геройĕ — тăхăр вун тăхăр çулхи Элтиван старик «колхозсем чăмăртаннă çулхине» колхоз пухăвĕнче хăй тӳссе ирттернĕ кивĕ пурнăç çинчен, çĕннипе танлаштарса, çапла каласа парать:

— Çитрĕ тапхăр...
Куртăм сакăр самана,
Пурăнса ирттертĕм, ахăр,

Виç-тăвата патшана.
Выльăх-чĕрлĕхĕм — пĕр анчăк,
Эп тытман ут чĕлпĕрне.
Хăй ĕмĕрĕнче ман карчăк
Кукленмен ĕне айне.

Килĕм-çуртăм — хурал пӳрчĕ,
Кив капан — халап-юмах.
Пĕтĕм ырлăх — чĕлĕм пурччĕ,
Вăл та шăтрĕ, хăямат!

Çапла, Элтиванăн хăйĕн сăмахĕнченех вăл пит вăрăм ĕмĕр пурăнса ирттерни курăнать. Анчах виç-тăват патшана пурăнса ирттерсессĕн те, пур ĕçе те мĕн тери тăрăшса ĕçлесессĕн те, ĕмĕрĕ тăршшĕнче вăл хурал пӳртĕнчен лайăх кил-çуртра пурăнса курайман, тĕрĕкпе вăрçнă вăрçăран асăнмалăх юлнă шур кĕленче чĕлĕмрен пусне урăх нимĕн те туянса юлайман.

Тăван ялĕнче колхоз тума тытăнсан, Элтиван старик колхоза пуринчен малтан кĕрет.

Çапла, Элтиван старик ĕç савăнăçне, ĕç çынни хисепне колхозра кăна шыраса тупать. Колхозниксем хăйне пурте чунтан-вартан пулăшса хисепленипе халĕ вăл, ĕлĕк ĕмĕрĕ тăршшĕпе çĕрĕн хисепсĕр тарçи пулнăскер, хăйне хăй чăннипех çĕр хуçи пек туя пуçлать.

* * *

Совет патриотизмĕ темипе çырнă сăвăсем Хусанкай поэзийĕнче Тăван çĕршывшăн пынă аслă вăрçă çулĕсенче уйрăмах тулли шухăшлă та нумай енлĕ пулнă. Çак тапхăрта вăл лири-

кă жанрĕпе нумай паха произведени — пысăккине те, пĕчĕккине те — çырнă. Вăрçă пуçланассăнах Хусанкай, ытти совет поэчĕсем пекех, совет çыннисен шухăш-кăмăлĕ ним иккĕленми çирĕп пулнине, вĕсем Тăван çĕршыва чунтан парăннине, вăрçăра çĕнтерессе çирĕп шаннине палăртакан сăвăсем çырать. «Памастпăр ирĕк хулана!» ятлă сăвăра вăл Ленинград çинчен, сăмахран, çапла каланă:

Нева хаяррăн хумханать...
Ан ур, тăшман, ан антăх:
Памастпăр ирĕк хулана
Нихçан та! Никама та!

Хăватлă броневик çинче,
Çĕнтерĕве пилленĕн,
Тăрать вăл хăйĕн хулинче —
Алне çĕкленĕ Ленин;

Тăрать çĕршывăн чунĕ пек;
Вăл бронзă мар, вăл чĕрĕ;
Тăрать йыхрав пек, ĕмĕрех
Çак вырăнта вăл тăрĕ.

Вăрçă хирĕ тăрăх поэтăн алла хĕç-пăшал тытса утма тивнĕ. Усал тăшмана хирĕç куçакуçăн тăрса çапăçни унăн патриотизмла туйăмĕсене çирĕплетме пулăшнă. «Çапăçу умĕн» сăвăра (1942) вăл нимĕç фашисчĕсем совет çĕршывĕ çине ултавлăн килсе тапăннине пула юратнă ĕçне ирĕксĕр пăрахса аллине хĕç-пăшал тытма тивни çинчен çырать; анчах ку шухăш-туйăм çав вăхăтрах пĕтĕм совет халăхĕшĕн типлă пулни те курăнать.

П. Хусанкай вăрçă çулĕсенче çырнă сăвăсем тăрăх пĕр вăхăтрах вăрçă событийĕсем умлă-хыçлă епле улшăнса пыни те, совет халăхĕпе патшалăхĕн вăйĕ-хăвачĕ ӳссе пыни те, халăх тăшмана ытлараң ытла кураймасăр хаярланни те, áна часах çĕнтерессе пĕр иккĕленмесĕр шанса тăни те питĕ лайăх курăнать.

Хусанкайăн малтанхи тапхăрти интимлă лирики халăх пурнăçĕнчен ютшăнарах тăнă пулсассăн, унăн вăрçă çулĕсенчи лирики вара пĕтĕм совет çыннисен кăмăлне палăртса тăракан пулать. Ку вăхăтра поэт хăйĕн ăсĕпе чĕрине общества умĕнчи тивĕçĕнчен ним чухлĕ те уйăрмасть. Унăн лирики — поэтпа халăхăн пĕр пĕтĕм лирики пулса тăрать.

Вăрçă çулĕсенче Хусанкайăн поэзи асталăхĕ палăрмаллах ӳснĕ. Вырăс совет лирикин ритмикипе кĕввин пуянлăхне ăнăçлăн йышăнса пырса, поэт хăй сăввисене чăвашлаçта, вырăсла çырнă чухне те ку пуянлăхпа анлăн усă курни палăрать. Ун лирикăлла сăввисенче эпир пĕр харăс утса пынă чухне илтĕнекен, чуна паттăрлатакан марш çеммине те, юрланă чухне тĕрлĕрен янăраса илтĕнекен кĕвве те, хавхаланса калаçнă чухне илтĕнекен сасă виçи пуррине те асăрхатпăр.

Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи çулĕсенче поэт, совет халăхĕпе пĕрле пулса, тăшмана хирĕç кĕрешнн совет çыннисен патриотизмне туллин те чĕррĕн кăтартса пама пулăшнă. Хусанкай кĕске сăвăсемсĕр пуçне вăрçă событийĕсемпе вăрçăри паттăрсене анлăн сăнласа паракан пысăк произведенисем те çырнă. Ун пек произведенисен шутне пуринчен малтан 1942

çулта çырнă «Таня» ятлă лирикăлла-эпосла поэмăна кĕртмелле.

Ку поэмăра Хусанкай партизансем хушшинче Таня ячĕпе çӳренĕ Мускав комсомолки Зоя Космодемьянскаян ĕмĕр манми паттăр ĕçĕ çинчен çырать. Совет хĕрĕн Таньăн ĕçне поэт нумай нацилле совет халăхĕн массăллă паттăрлăхĕн уйрăлми пайĕ пек сăнласа кăтартать. Поэмăна вулакан çакна аванах туйса илет. Акă поэт вăрçа хатĕрленсе çитнĕ Мускав 1941 çулхи кĕр кунĕсенче епле пулнине сăнласа парать:

Мускав урамĕнче плакат:
«Атьсемĕр! Хыçăмăр — Мускав-çке!»
Урам чулне такан шаккать,
Салтак-çынсем тапса пусаççĕ.
Грузин утать эрменпеле,
Вырăспала пырать тутарĕ,
Чăвашĕ — таджикпа пĕрле...
Тăван çĕршыв пĕр хĕç туптарĕ
Тултарĕ те хăй халăхне
Тыттарчĕ çав хĕçе çĕршывăм:
«Ан ярччĕ ман чĕрем патне
Хăрушă тăшмана эс, ывăлăм.
Пуççăрланать, усал тăшман,
Сĕмсĕрленет, кĕрет... Ан яр эс!
Касса пăрах çав аçтахан
Вутпа сывлан пуçне пĕр харăс!»

Таня сăнарне кăтартса панă чухне поэт ку хĕр ăс-тăнĕпе кăна мар, чун-чĕрипе те вăйлă çын пулнине палăртса хăварать.

Çакăн пек паха кăмăл социализмла пурнăç

условийӗсенче кӑна ҫитӗнсе ҫитме пултарнӑ тесе калать поэт.

Тӑван ҫӗршывшӑн йывӑр килсе тухнӑ кунсенче пулас Таня — Зоя комсомолкӑ — тӑшмана хирӗҫ фронта кайса ҫапӑҫма ҫирӗп шухӑш тытать.

Совет Ҫарне йышӑннӑ хыҫҫӑн вӑл ҫине тӑрсах хӑйне тӑшман тылӗнче ҫапӑҫакан партизансен отрядне яма ыйтать.

Таня монологӗсемпе поэт ун ӑс-хакӑлне, шалти сисӗм-туйӑмне, вӑл хӑйӗн тӑван ҫӗршывне мӗн пирки ҫав тери хытӑ юратнине ҫутатса пама тӑрӑшать. Ҫак тӗлӗшпе поэт Таня ӑс-хакӑлне ҫитӗнме аслӑ вырӑс литератури пулӑшнине те асӑнать.

Вӑл Пушкина савса вуланӑ,—
тет поэт Зоя ҫинчен:—

Тен, асӗнче ҫавна тытсах,
Ятне те Таня вӑл суйланӑ,
Хӑйне йӑлтах вӑрттӑнлатса.

Малалла Хусанкай Зоя кӑмӑлӗ Пушкин Татьянинчен мӗнпе урӑхларах пулни ҫинчен те калать. Татьяна хӑй тӑван ҫӗршывне мӗншӗн юратнине пӗлсех те кайман пулсан, Зоя-Таня вара ҫавна лайӑх ӑнланнӑ.

Таня шухӑшланинчен, ун чӗри туйӑмӗнчен вӑл юлташӗсемпе калаҫнинчен, кирек те м... ӗҫ тунинчен — ҫакӑнтан пуринчен те — хӑй тӑван халӑхӗшӗн, тӑван ҫӗршывӗшӗн тӑрӑшакан совет ҫыннин ытарайми илемлӗ сӑнӗ курӑнать.

Поэмăра, партизансен отрячĕ Мускав сывăхĕнчи вăрмансемпе ялсем тăрăх çӳренине кăтартнă хыççăн, поэт совет çыннисем фашизм тыткăнĕнче тӳсме çук йывăр инкек курса пурăннине сăнласа кăтартать. Вĕсем патне (Петрищева ялне) Таня халăхăн тăшмана парăнми чун-халне илсе пырать, хăйĕн вилĕмсĕр ĕçĕпе вăл вĕсене фашистсене хирĕç пурнăçа шеллемесĕр кĕрешме хавхалантарса чĕнет, Тăван халăхĕ хăйне пулăшнине пĕлсе тăни, Тăван çĕршывĕ вăрçăран тăшмана çĕнтерсе тухассине ĕненни — çаксем Таньăна вилĕме мăн кăмăллăн кĕтсе илме вăй параççĕ.

> Эсир мана халех çакатăр.
> Анчах та эп пĕчченçĕ мар.
> Пурне те пурĕпĕр çакаймăр.
> Час килĕ пирĕн аслă çар!
> Пирте вăл тĕрĕслĕх, ăнланăр,
> Эпир, эпир çĕнтермелле!»

Таня вилес умĕн те тăшманшăн хăрушă пулса тăрать. Вилессе те вăл халăха тăшмана хирĕç хаяррăн кĕрешме чĕнсе вилет. Поэмăн юлашки пайĕнче автор Совет Çарĕ нимĕç фашисчĕсене Мускав сывăхĕнче аркатса тăкнине кăтартать. Таракан тăшмана йĕрлесе пырса, Совет çар çыннисем Таня хĕн курса вилнĕ яла та ирĕке кăлараççĕ. Кунта вĕсем Таня çинчен хурлăхлă хыпар илтсе пĕлеççĕ те, ăна чыслăн хисеплесе, тăшмана совет çĕрĕнчен татах та хытăрах хаярланса хăвалама тапрасçĕ.

Таса чунлă Таня ячĕ
Янăрать йыхравлăн...
Пархатарлă асамачĕ
Ĕмĕр сӳнес çук ун,—

тет поэт.

Çапла, Тăван çĕршывшăн пынă Аслă вăрçă çулĕсенчи чăн пулнă ĕçе ĕненмелле кăтартса, поэт Зоя сăнарĕпе пĕтĕм совет халăхĕн таса шухăш-кăмăлне тĕп-тĕрĕс çутатса пама май тупнă. Ахальтен мар поэмăн 15-мĕш пайне, «Ĕнтĕ кун иртет, ĕнтĕ çĕр иртет»...— тесе пуçланаканнине, вăрçă çулĕсенче чăваш ялĕсенче хĕрсем кĕвĕлесе юрланă пулнă.

«Таня» поэмă çапла пĕр Хусанкай ĕçĕнче кăна мар, вăрçă çулĕсенчи пĕтĕм чăваш совет литературишĕн пысăк çитĕнӳ пулса тăнă. Ку поэмă Хусанкай поэзийĕнче социализмла реализм принципĕсем çирĕпленнине аванах кăтартса панă.

Формă тĕлĕшĕнчен те ку поэмă ăнăçлă. Совет çыннин шухăш-кăмăлĕпе пурнăçĕн нумай енлĕхне туллин кăтартса парас ĕмĕтпе поэт кунта тĕслĕрен ритм виçипе усă курать. Поэмăн умсăмах пек çырнă малтанхи пайне вăл халăх юрри çеммипе пуçлать:

Эпĕ илтнĕччĕ пĕр юмах-халап
Сар Хĕвел хĕрĕ Хĕвелпи çинчен,—

тет. Унтан вăл тăватă стопаллă, шултра утăмлă ямб виçипе усă курать:

Утаççĕ çамрăк йĕкĕтсем:
Чăвашĕ, вырăсĕ, тутарĕ...

Тăвată стопаллă хорей тулли мар виçĕ стопаллипе ылмашăнса пырать:

Амăшне каларĕ хĕрĕ
Вăрттăн, ерипен;
«Эп вăрçа каятăп,— терĕ,—
Маншăн ан шиклен».

Ку виçе икĕ çын пĕр-пĕринпе хумханса калаçнине аван кăтартса парать.

Кун хыççăн поэт, совет çыннисем малалла сулмаклăн пынине кăтартма, тăвата стопаллă амфибрахипе, Таня хăй амăшĕ патне тăшман тылĕнчен пăлханнă кăмăлпа çыру çырнине палăртма, виçĕ стопаллă, паузăллă хорейпе усă курать:

1) Ак кайрĕ тухса вăл — Тăван çĕршыв хĕрĕ.
   Анне тӳссе юлчĕ, анне пехиллерĕ...
2) Ытарайми аннем!
   Мĕнле пурнатăн-ха?
   Мĕнле сан вăй-халсем?
   Сывах-ши эсĕ халь?

Пурнăçа туллирех кăтартас ĕмĕтпех поэт предложенисен тĕрлĕ формипе те пĕлсе усă курать. Событисем çине-çине хăвăрт улшăнса пынине кăтартма поэт кĕске, ят пуплевсене, нумайччен улшăнмасăр тăракан пулăмсен уйрăмлăхне палăртма кирлĕ чухне анлă предложенисене илет.

Çапла ĕнтĕ, вăрçă çулĕсенче Хусанкай вырăс поэзийĕн пуян опычĕпе те, чăваш халăхĕн сăмахлăхĕпе те ĕлĕкхинчен пултаруллăрах усă курни кĕретех палăрать.

* * *

Вăрçă çулĕсенчи йывăр пурнăçа пĕтĕм совет халăхĕпе пĕрле тӳссе ирттернĕ поэт фронтран, йывăр аманнă хыççăн, коммунист пулса таврăнчĕ. Вăрçă хыççăн вăл обществăпа литератури ĕçне активлăн, хастарлăн хутшăнса ĕçленине пĕтĕм халăх ырларĕ. Çавăнпа 1950 çулта чăваш халăхĕ Петĕр Хусанкая халăх поэчĕн хисеплĕ ятне парса чыс турĕ.

Вăрçă хыççăн çырнă сăввисенче Хусанкайăн лăпкă, мирлĕ пурнăçа упрас, пирĕн социализмла Тăван çĕршывăн пысăк вăй-хăватне мирлĕ ĕçлесе вăйлатас шухăш тĕп вырăн йышăнса тăрать. Хăй сăввисемпе Хусанкай тĕрлĕ халăхсем пĕр-пĕринпе тăван пек туслă пурăнассишĕн кĕрешет. Пур халăх ĕç çыннисен çак пысăк ĕмĕтне пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе чи хастаррăн кĕрешнĕшĕн поэт аслă вырăс халăхне чунтан тав туса мухтать.

Авалхи сăмахпа каласассăн:
Юхтăр чул, путса лартăр хăмла,—
Çав-çавах вырăсран татаймастăн
Пирĕн чун-чĕрене, кăмăла.

Сывă пултăр çĕнелнĕ Российă!
Аслă туслăхăн çурчĕ — Мускав!
Варкăшайтăр Чăваш çĕрĕ çийĕн
Пур йăха пĕрлештернĕ ялав!

(«Аслă çулпа» сăвă, 1950.)

Хусанкайăн вăрçă хыççăн çырнă сăввисем, «Тăван çĕршыв», «Автанран автанччен», «Çуллахи талăк», «Тури Вылра туй сикет»

ятлă лирикăлла поэмисем совет çыннин сăн-сăпатне, унăн пуян шухăш-кăмăлне çĕнĕлле сăнласа кăтартаççĕ, совет халăхĕ ăс-тăнпа тавра курăм тĕлĕшĕнчен ĕлĕкхинчен нумай хут ӳснине палăртаççĕ.

Аслă вырăс поэчĕсенчен пĕри — В. Маяковский совет стройĕ капитализм стройĕнчен, совет çынни — буржуалла çĕршыв çыннинчен пур енĕпе те нумай çӳлте тăнине кăтартнă пекех, П. Хусанкай та, В. Маяковский шухăшне аталантарса, 1949 çулта çырнă «Эп — Советлă Союз гражданинĕ!» ятлă сăвăра, пĕтĕм чун хавалĕпе хĕпĕртесе, çапла калать:

...Ак каллех харсăр сăвăç сасси илтĕнет:
Эп — Советлă Союз гражданинĕ!

Çав çунатлă сăмах çĕкленсе янрасан,
Пĕтĕм кивĕ тĕнче сехĕрленчĕ.
Çĕр çинче е çӳлте, е шывра çул тытан —
Чĕрене çав сăмах çĕклентерчĕ.
Кам пулсан та — сухаçă, шахтер е салтак.
Украинец, чăваш, армянин-и —
Манăн чыс та, мухтав та малтан вăл ак çак:
Эп — Советлă Союз гражданинĕ!

П. Хусанкайăн маларах асăннă лирикăлла поэмисене — «Автанран автанччен» (1948), «Çуллахи талăк» (1951) — формă тĕлĕшĕнчен философилле лирикă тесе шутлама пулать. Анчах ку пурнăçăн философилле ыйтăвĕсем çинчен, ĕлĕкхи поэтсем пек, пĕр-пĕччен шухăшласа ларни мар, пĕтĕм халăхпа пĕрле анлăн та тарăн шухăшлани. Поэт шухăш-кăмăлĕ

кунта халăхăннипе йăлтах килĕшсе тăрать. Ахальтен мар поэт халăхпа хăй çинчен, халăха юманпа танлаштарса, хăйне «эпĕ — сан йĕкелӳ» тет.

Çавăнпа та кун йышши философилле сăвăсенче час-часах поэт пĕтĕм халăха интереслентерекен ыйтусем çинчен пĕр-пĕр сынпа калаçнă май кăтартакан картинăсем тĕл пулаççĕ. Акă «Çуллахи талăк» поэмăра поэт çул çинче «ахаль çынсенчен» пĕринпе, пуштарпе, тĕл пулса калаçнинчен халăхăн кулленхи ĕçĕхĕлĕпе шухăш-ĕмĕчĕсем те, вăл тăван çĕршывпа ют çĕршывсенчи пурнăç пулăмĕсем пирки хăй мĕн шутлани те уççăн курăнать.

«Тăван çĕршыв» ятлă поэмă (1960), «Вăрман юрлать» ятлă сăвăсен ярăмĕ (1951), ача-пăча валли сăвăласа çырнă юмахсем (1953)— Хусанкайăн сăвă çырас ăсталăхĕ тĕрлĕ енлĕ, нумай формăллă пулнине пĕлтереççĕ. Ачасем çинчен те, ача-пăча валли те Хусанкай тĕрлĕ вăхăтра нумай произведени çырнă. Вĕсене çырнă чухне вăл: «Эй, ку пĕчĕккисем валлиха, юрĕ!» тесе шухăшламан. Ку вăл чăн-чăн илемлĕ, тарăн шухăшлă литературă.

Сăмахран, вăрçă умĕн поэт «Феликс—чикĕ пăсавçă» ятлă поэмă çырнăччĕ. Ку поэмăра вăл пĕр чикĕри офицер ывăлĕ пĕчĕк Феликс вăрманта выляна чухне, хăй те сисмесĕр, чикĕ леш енне каçса кайни çинчен каласа кăтартать. Çак пĕчĕк çеç фактпа поэт капитализмла çĕршывсенчи ĕç çынни ачисем совет çыннисен ачисенчен пачах урăхла пурнăçпа пурăннине пĕлтерет.

1948 çулта çырнă «Тăван çĕршыв» ятлă

поэмă та ачасене социализмла Тăван çĕршыва, тăван халăха, Совет Союзĕнчи ытти халăхсене тăванла чунтан-вартан хисеплесе, юратса пурăнма вĕрентет.

«Мĕн вăл Тăван çĕршыв? Пысăк-и вăл, пĕчĕккĕ-и, инçетре-и, çывăхра-и? Пирĕнпе кӳршĕллĕн камсем пурăнаççĕ? Вĕсенчен инçерех тата кам пурăнать? Камсем вĕсем, мĕн ĕçлесе пурăнаççĕ? Мĕнпе хăватлă пирĕн патшалăх?» — çак ыйтусене тĕпчесе ăнлантарнинчен тытăнать поэт хăй ĕçне. Тăван çĕршыври халăхсем епле ĕçлесе пурăннине конкретлă тĕслĕхсемпе çутатса парса, вĕсен историне те ăнланмалла кĕскен каласа кăтартса, поэт ачасене пирĕн Тăван çĕршывăмăр мĕн тери илемлине, вăйлине, вăл ытти пур çĕршывсенчен те лайăхраххине сăнласа кăтартать. Ача-пăча валли çырнă сăввисемпе юмахĕсем Хусанкайăн поэзи сăнлăхĕсемпе пуян. Вĕсене çырнă чухне вăл халăх юмахĕсемпе юррисенчи пуян чĕлхепе, сюжет кĕввисемпе анлăн усă курать. Тăрăхласа кулас е вĕрентсе калас тĕлĕшрен те вăл халăх опытне тивĕçлĕн хаклать. Анчах халăх сăмахлăхне поэт мĕнле пулнă, çапла кăна илмест, ăна аталантарса, унти произведенисенчен ку чухнехи тарăн шухăшлă çĕнĕ юмах е юрă туса хурать. Акă, сăмахран, «Сăпка юрринче» вăл пĕчĕк ачана çапла юрласа вĕрентет:

Сĕм вăрманĕ каш та каш,
Сулхăн çилĕ ваш та ваш,
Эс ан çуйăх, ан çухраш,
Çывăр, пĕчĕкçĕ чăваш!

Урупа ан тапкалаш,
Аллупа ан çапкалаш,
Аннӳпе эс ан тавлаш,
Çывăр, Аптраман тавраш!

Юлташпа эс пул юлташ,
Усалпа эс ан паллаш,
Ташманпа ан пул йăваш,
Çывăр, Аптраман тавраш!

Вырăспа та тăванлаш,
Тутарпа та эс туслаш,
Пурте — пирĕн хурăнташ,
Çывăр, пĕчĕкçĕ чăваш!

Аталанса пыракан пурнăçа тĕрĕс, истори тĕлĕшĕнчен конкретлă сăнласа кăтартас ăсталăха вĕренсе алла илес ĕçре П. Хусанкая вырăссен классикăлла литератури тата совет поэзийĕпе литератури пуринчен ытла пулăшнă. Анчах сăвă çырма тытăннă малтанхи çулсенче ăна С. Есенин йышши поэтсен сăввисен юрă пек илтĕнекен çемми илĕртерех пана пулсан, каярах вара, хăй пултарулăхĕ ӳссе пынă май, унăн шухăш-кăмăлĕ ытларан ытла А. Пушкин, М. Горький, В. Маяковский произведенийĕсем енне туртăна пуçлать.

Çак улăпсен ĕçне вĕренсе çитме П. Хусанкая пуринчен ытла вĕсен произведенийĕсене чăвашла хăй куçарма тытăнни пулăшнă.

Вăтăрмĕш çулсен пуçламăшĕнче П. Хусанкай кăмăлне А. Пушкинăн классикăлла произведенийĕсене куçарасси хумхатма тапратать. 1934—1935 çулсенче вăл «Евгений Оне-

гин» романа куçарать. Анчах малтанхи опыт поэт кăмăлне тултараймасть. Пушкинăн ытарайми илемлĕ сăвви чăвашла вулаканшăн та, вырăс çыннине илтĕннĕ пекех, лайăх янăраса илтĕнтĕр, аслă поэтăн гениллĕ шухăш-кăмăлĕ чăваш халăхне те тăван сăмах пекех çывăх пултăр» тенĕ шухăш П. Хусанкая канăç памасть. Çак шухăша епле те пулин пурнăçа кĕртес тесе, поэт нумай çул хушши тăрăшса ĕçлет. Вара 1950 çулта вăл «Евгений Онегин» романа çĕнĕрен куçарать. Чăн та вара Пушкин таланчĕ хальхинче чăваш вулаканĕшĕн те хĕвел çути пек çиçсе курăнакан пулать. «Евгений Онегин» сăввисем чăвашла çырнă пекех ăнланмалла пулса тухаççĕ. Акă, сăмахран, романăн 4-мĕш сыпăкĕнчен кĕрхи кунсене сăнласа кăтартакан йĕркесене вуласа пăхар:

Çанталăк кĕрхилле сывларĕ,
Хĕвел сайра пăха пуçларĕ,
Кунсем кĕскелчĕç, вăрмансен
Сархайнă сулхăн каррисем
Салхуллăн кашласа çаралчĕç;
Хирте çăра тĕтре куран,
Хур кайăксем картан-картан
Кикаклатса ăшша ăсанчĕç:
Çĕршыв кичемленсе килет,
Ноябрь уйăхĕ çитет.

А. Пушкинăн «Полтава» ятлă поэмипе А. Грибоедовăн «Ăса пула инкек» ятлă комедине те П. Хусанкай çаплах ăста куçарнă.

Вырăс классикĕсенчен мĕнле шухăшпа, епле

мелпе вĕренни ҫинчен П. Хусанкай хăй 1937 ҫулта ҫырнă «Аван-и, Пушкин!» ятлă сăвăра ҫапла каласа кăтартать:

Ăнлантăм: шăхăрса юрра ямашкăн
Ҫак пурнăҫ туй та уяв мар ялан...
Ҫĕршывăма куллен ман ӳсрĕ парăм...
Ак эп сан тăлмачу. Шăпланчĕ музăм...

Эп санпала куҫа хупмасăр лартăм:
Кашни сан сăмахун чăн-чăн тĕшне
Шĕкĕлчесе илесшĕн асаплантăм.
Мĕнле кăнттам эп пулнă ун чухне!

Тавах: сăмах тертне тӳсме вĕрентрĕн.
Сан урăхла янран сăввусенче
Хам чунăм кĕввиех пурне пĕлсессĕн,
Мĕнле вара эп савăнаттăмччĕ!

Пушкин произведенийĕсенчен вĕреннипе пĕрлех Хусанкай совет поэзийĕн никĕсне хывнă аслă Маяковскирен те нумай вĕреннĕ. Маяковский произведенийĕсене чăвашла пуҫласа куҫарма тытăннă поэтсенчен пĕри Хусанкай пулнă. Анчах ăна малтан ытларах Маяковский сăввисен ҫĕнĕ форми интереслентеререх панă. Маяковский пултарулăхĕн ҫĕнĕ шухăшне, идейăлла ҫĕнĕ содержанине Хусанкай каярахпа тин ăнланса ҫитнĕ. Унăн «Эп — Советлă Союз гражданинĕ!» ятлă сăвви, ритм тĕлĕшĕнчен Маяковский сăввисемпе килĕшсех каймасть пулин те, идейăллă содержани енчен ҫамрăкла ҫырнă сăвăсемпе танлаштарсан Маяковский пултарулăхĕ патне ҫывăхрах тăрать.

Вырăссен классикăлла поэзийĕн тата совет

поэзийĕн пуян опытне йышăнса, хăйĕн пултарулăхне ӳстерсе вăйлатнă май Петĕр Хусанкай чăваш халăхĕн сăмахлă поэзийĕпе тата анлăрах усă курма тытăнать. «Тури Вылта туй сикет» ятлă произведенире вăл, халăхăн çичĕ сыпăклă сăвă виçипе усă курса, совет çыннисен пуян шухăш-кăмăлне питĕ чĕррĕн сăнлаçа кăтартма мел тупать.

* * *

Вăрçăччен̆хи çулсенчех Хусанкай тăван халăх пурнăçне анлăн, унăн совет саманинчи ĕçне-хĕлне, ӳсĕмне туллин кăтартса паракан пысăк произведени çырма ĕмĕт тытнă пулнă. Çырма палăртса хунин хăш-пĕр сыпăкĕсене (сăмахран «Натали кĕпе тĕрлет» ятлине) 1939 çултах («Ĕç хĕрарăмĕ» журналта) пичетлесе кăларнă. Тăван çĕршыв аслă вăрçи пуçлански кайни халăх пурнăçне те, поэт ĕçне-хĕлне те пысăк улшăнусем кӳнĕ. Çав май произведени сюжечĕ те, унта сăнласа пама палăртнă сăнарсем те чылаях улшăнмалла пулнă. Вĕсене поэт пĕтĕм халăхпа кашни совет çынни пурнăçĕнче те тарăн йĕр хăварнă Тăван çĕршыв аслă вăрçин событийĕсемпе çыхăнтарнă, совет халăхĕн «вутра шăраннă кăмăлĕпе» виçнĕ. Ун çинчен поэт çапла каланă:

Малтан ман Аптраман тавраш̆ĕ
Кăшт урăхлаччĕ те-и, тен.
Асран кайми çулхи июнĕн
Хăрушă, тĕттĕм каçĕнче
Сасартăк улшăнчĕ ун чунĕ.
Ун, манăн, сан... Мĕн пур тĕнчен.

Произведенин чылай пайне Хусанкай вăрçă вăхăтĕнче çырнă. Поэмă майлă туса, вăрçă пĕтсессĕнех ăна, 1946 çулта, «Аптраман тавраш» ятпа пичетлесе кăларнă пулнă. Вулакансем ку поэмăна хапăлласах йышăннă, анчах авторне хăйне вăл çырлахтарсах çитереймен пулмалла. Çавăнпа вăрçă çулĕсем иртсе кайсассăн Хусанкай хăй çырнине ăсталаса пыма пăрахман. Çав ĕçе поэт 1954 çулта тин вĕçлесе çитернĕ. Çапла вара, «Аптраман тавраш» сăвăлла роман пулса тăнă.

Çĕнетсе анлăлатнă «Аптраман тавраш» никĕсне поэт халăх пурнăçĕн пысăк пĕлтерĕшлĕ, вăхăт таккăшĕпе анлă, событисемпе пуян Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи çулĕсен тапхăрне хунă. Анчах роман çав тапхăрти пурнăçа кăна мар, урăх вăхăтри ĕçсене те сăнласа парать. Унта эпир чăваш халăхĕн иртнĕ пурнăç ўкерчĕкĕсене те куратпăр. Персонажсен йышĕ те поэмăринчен пысăкрах, сăнарсем те туллирех, нумай енлĕрех. Вĕсен хисепĕнче ĕлĕкхи пурнăç хĕн-хурне курнă ватăсем те, вăтам çулхи çынсем те, совет саманинче çитĕнсе ўснĕ çамрăксем те, урăхла каласассăн,— халăхăн пур сийри çынсем те пур. Унтан та ытларах — çак çынсен ĕçĕ-хĕлĕнче, шухăшлани-каласнинче, пурнăç çине мĕнле пăхнинче, хăйсене хăйсем мĕнле тыткаланинче социализмла пурнăç тивлетне пула тĕпрен улшăннă е вĕр-çĕнĕлле çитĕннĕ совет çыннисен ăс-тăнĕпе кăмăлĕн уйрăмлăхĕсем туллин палăраççĕ. Кашнин хăй тăван халăхне кĕвĕллĕ (нациллĕ), çав вăхăтрах хăйне кăна тивĕçлĕ кăмăл пурри курăнать. Уйрăм çынсемпе халăх пурнăçне кунта тĕрлĕ

вăхăтпа илсе, пуринчен ытларах вăрçă событийĕсемпе çыхăнтарса, аталанура, ӳсĕмре, кĕрешӳре кăтартса панă. Произведенири ĕçсем çĕршывăн анлă талккăшĕнче,— чăваш ялĕнчен тытăнса, тĕрлĕ фронтсене, çывăхри те инçетри çĕрсене çити вырăнсенче — пулса иртеççĕ. Событисемпе çынсене сăнласа парас илемлĕх мелĕсем те пуян; çак сăлтавсене пула «Аптраман тавраш» сăвăлла роман хисепне кĕрет те ĕнтĕ.

«Аптраман тавраш» романăн теми, ансăррăн илсессĕн,—чăваш халăхĕн Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи тапхăрĕнчи пурнăçĕпе патриотизмла ĕçĕ-хĕлĕ. Анчах романра вăрçă вăхăчĕ çинчен çеç мар каланă. Унта халăхăн вăрçă умĕнхи хаваслă пурнăçне те, вăрçă хыççăнхи ларутăрăвне те, революцичченхи кун-çулне те çутатса панă. Çавăнпа та ĕнтĕ, анлăрах пăхсассăн, роман темине «Чăваш халăхĕн совет саманинчи пурнăçĕ» теме пулать. Поэт пуринчен ытларах çавна асра тытса ĕçленĕ те.

Октябрь революцийĕ тивлечĕпе ĕмĕрхи пусмăртан тухнă чăваш халăхĕн пурнăçĕ совет саманинче, социализмла аслă çĕнтерӳсен ырлăхне пула, тĕпренех çĕнелнĕ. Унăн ăсĕ-тăнĕпе кăмăлĕ те, тĕнче курăмĕ те йăлтах улшăннă. Çак пур енчен те çĕнелнĕ халăхăн пултарулăхĕ пысăкки, кăмăлĕ вăйли, патриотизм туйăмĕсем иксĕлми çирĕп пулни, социализмла Тăван çĕршывăн пуласлăхĕшĕн хăрушă самант килсе тухсан, уйрăмах хăватлăн палăрнă. Социализм тăвас ĕçре хăй ĕçченлĕхĕпе хисепе тухнă халăх Тăван çĕршыв чысĕшĕн пынă хаяр вăрçăра та хăйĕн паттăрлăх-хастарлăхĕпе

вăл ытти халăхсенчен кая юлман, «чăваш ятне çĕртмен». Çакăнта ĕнтĕ романăн тĕп шухăшĕ, унăн идейи.

Романăн темипе идейине уçса пама поэт пĕр кил-йышăн тата пĕр ял-йышăн ĕлĕкхи кун-çулне, совет саманинчи пурнăçне, вăрçă вăхăтĕнчи тата вăрçă хыççăнхи ĕçне-хĕлне, ларутăруне илнĕ. Çапла пĕр кил-йышпа ял-йыш çыннисен сăнарĕсемпе, вĕсен пурнăçĕнчен илнĕ событисемпе Хусанкай пĕтĕм чăваш халăхĕн сăн-сăпатне, унăн ĕлĕкхипе хальхи пурнăçĕн уйрăмлăхĕсене пĕтĕмлетсе pană. Çав çеç те мар, Аптрамансен кил-йышĕнче, Ярмуххаль ял-йышĕн пурнăçĕнче пĕтĕм совет çĕршыв пурнăçĕн паллисем сăнланса тăраççĕ.

Роман сюжетне поэт самана тĕп конфликтне пăхăнтарса йĕркеленĕ. Мĕнле конфликт вăл? Социализм çĕршывĕпе фашизм хура вăйĕсем хушшинчи хаяр тытăçу. Тĕп геройсен ĕçĕ-хĕлĕпе кун-çулĕ çав кĕрешӳ-тытăçу событийĕсемпе тачă çыхăнса тăраççĕ, вĕсенчен килеççĕ. Аптрамансен тăнăç тапхăрта хавасла та тату пурăннă пысăк йышĕ вăрçă кунĕсенчен пĕтĕм халăхпа пĕрле Тăван çĕршыв ирĕклĕхĕпе чысĕшĕн кам ĕçпе, кам хĕçпе çапăçма тухать. Ваттисемпе вĕттисем ялта юлаççĕ, колхозра шарасланса ĕçлеме тытăнаççĕ, çамрăккисем вăрçа тухса каяççĕ, тĕрлĕ фронтсенче тăшмансене хирĕç хаяррăн çапăçаççĕ.

Ĕнтĕ пĕри тепринчен пит инçетре пулин те, çав-çавах Аптрамансен йышĕ саланса каймасть, мĕншĕн тесен вĕсем пурте пĕр ĕмĕт-шухăшлă çынсем. Вĕсене пурне те çĕнтерӳ çыхăнтарса тăрать. Унччен ытларах тăван килпе,

тăван ял интересĕсемпе пураннăскерсем, халĕ вĕсем пĕтĕм çĕршыв хуйхи-суйхипе, пĕтĕм совет халăхĕн ĕмĕчĕсемпе пуранакан çынсем пулса тăраççĕ. Мĕншĕн тесен тăван çĕршывпа тăван йыш тени вĕсемшĕн чăваш çĕршывĕпе Ярмуххаль ял-йышĕ çеç мар, пĕтĕм совет çĕршывĕ, пур тăванла халăхсем. Çав шухăш-туйăма ăша хывса, асра тытса ĕçлеççĕ те, çапăçаççĕ те Аптрамансем.

Романри тĕп геройсем — Аптраман тавращĕсемпе вĕсене çывăх çынсем, вĕсен ял-йышĕсем. Ку геройсем хăйсене уйрăм çынсем те, çав вăхăтрах пĕтĕмлетнĕ сăнарсем те пулса тăнине автор хăех палăртса хăварать:

...Эп куртăм: мĕн вăл вăрçă...
Вара ăнлантăм эп — мĕн маншăн,
Кам маншăн вăрçăри чăваш.
Самаев пек калас пулсассăн,
Йăлтах вăл — Аптраман тавраш.

Поэт халăхăн «аптраманлăхне» — ĕçри хастарлăхне, çапăçури харсăрлăхне, кăмăлĕн пиçĕлĕхне — пуринчен ытларах Аптрамансен йышĕнчи çынсен сăнарĕсемпе кăтартса парать.

Аптрамансен виçĕ ӳсĕмри çынсен сăнарĕсенче халăхăн пурнăçĕ совет саманинче мĕн тери улшăнса çĕнелни уççăнах курăнать.

Аптрамансем — ĕçчен те маттур, пысăк тавра курăмлă, пуян кăмăллă çынсем. Тăван çĕршыва вĕсем чун-чĕререн юратаççĕ, унăн тĕрекне хăйсен ĕçĕпе ӳстерсе пыраççĕ, унăн чысĕпе хисепĕшĕн хăйсен пурнăçне хĕрхенмесĕр кĕрешеççĕ. Тăван çĕршывăн чăн-чăн патриочĕсем

пулса тăма вĕсене социализмла пурнăç йĕрки хăй пулăшнă.

Икĕ çăлкуç: пĕри — тăван литературăпа тăван халăх сăмахлăхĕн пуянлăхĕпе унăн илемлĕх мелĕсем, тепĕри — вырăс литературин паха опычĕ — çаксем ĕнтĕ Хусанкай пултарулăхне сĕткен парса çитĕнтернĕ. Халăх сăмахлăхĕн, халăх юррин ытарайми çепĕçлĕхĕ поэт пултарулăхĕнче сăн çапни «Тилли юррисенче» кĕретех палăрчĕ. Ку вăл пирĕн литературă, ытти халăхсен литератури пекех, фольклор никĕсĕ çинче тĕвĕленнине пĕлтерет. Пурăна киле пирĕн литературă та, ÿссе-сарăлса пынă май, фольклор йăлисемпе усă курассине улăштарса, çĕнетсе пырать. Анчах çав йăласене пуçĕпех вăл çапах та пăрахмасть. Тĕслĕх — «Тилли юррисем». Кусем — фольклор сĕткенĕпе тулнă оригиналлă юрăсем. Вĕсем пурин кăмăлне те кайнин сăлтавĕ поэт халăх лирикин философилле-сăнлăхлă тĕшшине пултаруллă шĕкĕлчесе илме пĕлнинче.

Петĕр Хусанкайăн поэзийĕ ÿсĕмре. Вăл тăван совет халăхне нумай-нумай çĕнĕ произведенисем çырса савăнтарĕ-ха, унăн ăс-тăнпа кăмăл пуянлăхне сарăлма пулăшĕ-ха. Çавăншăн эпир унăн ĕçĕ-хĕлĕпе сапăр.

М. СИРОТКИН.

# Урхи

## ТАНТĂША

Кивĕ тĕнче ÿпĕнет,
Каялла ан пăх.
Малта çĕнни çитĕнет,
Хĕпĕрте, тантăш!

Вăйлă тинĕс хумĕсем
Вирелле çапаç.
Пăнтăхнă мул хÿмисем
Чĕтресе тăраç.

Тăвăл пулĕ тĕнчипех,
Юлташ, ан шиклен.
Пар аллуна! Çирĕпрех
Унччен хатĕрлен.

1923. Сиктĕрме.

## АН ТИВ, ПИРЕ ЙЫВĂР ПУЛТĂР...

Ан тив, пире йывăр пултăр,
Ан тив, çамрăк — чечек ĕмĕр
Кĕрешӳре иртсе кайтăр,
Ăна пĕртте хĕрхенмĕпĕр.

Эпир, тĕнче Комсомолĕ,—
Ĕмĕр çирĕп, чĕрĕ вăйсем!
Килес куна никĕс пулĕ
Паян тунă пирĕн ĕçсем.

Вăхăт çитĕ: тăванланĕ
Этем йăхĕ çак Çĕр çинче.
Тивĕçлипе вăл асăнĕ
Пире хăйĕн кун-çулĕнче.

1923. Хусан.

## ИРЕК ТИМЕРÇЕ

Вăйлă кăкăрăм
Çăмăллăн сывлать.
Хăнăхнă аллăм
Пĕрмаях шаккать;
Шаккать те ватать
Асап сăнчăрне,
Çĕнĕрен хывать
Тĕнче никĕсне.
Çӳлерех çĕклен,
Ирĕк мăлатук!
Сана хĕсĕрлен
Урăх чĕрлес çук.

Хĕçпе-пăшалпа
Тухрăм эп вăрçа;
Юнпа, çулăмпа
Хăртрăм харамça.
Хĕрлĕ ялава
Çӳле çĕклерĕм,
Ултав-ылхава
Виртпе кĕллерĕм.
Çӳлерех çĕклен,
Ирĕк мăлатук!

Сана хĕсĕрлен
Урăх чĕрлес çук.

Аслă вĕркĕчре
Вăй-хăват улать,
Пĕтĕм тĕнчере
Кăвар ялкăшать.
Тăхта-ха пăртак —
Çулăм явăнĕ;
Вут юпа татах
Хыпĕ те çунĕ.
Çӳлерех çĕклен,
Ирĕк мăлатук!
Сана хĕсĕрлен
Урăх чĕрлес çук.

Хĕп-хĕрлĕ сунтал
Хĕлхем сирпĕтет.
Ĕç çыннин вăй-хал
Ӳсет те ӳсет.
Хытăрах янра,
Çĕнтерӳ юрри!
Пĕтĕм çĕр тавра
Пĕттĕр мул хурри!
Çӳлерех çĕклен,
Ирĕк мăлатук!
Сана хĕсĕрлен
Урăх чĕрлес çук.

1924.

## АННЕНЕ

Тӗнче ҫути кӑтартнипех, анне,
Тавтапуҫа эс тивӗҫ манӑнне.

Ҫуратнине асна илсен, ялан
Ах ахлатса сывлаттӑн эс кайран.

Ҫемҫе йӑвара мар аталанма
Тӳр килнӗ ман чуна, ҫунатӑма.

Кипкеренех хӗн-хур юррипеле
Эп тухнӑ паллашса чӗрепеле.

«Куланайне!» — тесе, юрлисене
Тӑратнӑ тӑтӑш саламат айне.

Тырри-пулли иккен ҫав ҫулхине
Хура кӗртех пушатнӑ пӳлмене.

Сурпан ҫакки, хушпу тата-тата,
Куштансемпе ҫӳренӗ старӑста.

Ҫити-ҫитми пирки пайтах куҫҫуль
Шур чӗрҫитти арки пуҫтарнӑ пуль..

Тавах, анне, тавах сан куççульне,
Куççуль тин мар çăватъ чăваш çулне.

Пилле мана — кашни ун тумламне
Ахаххăн ялтратмашкăн малашне!

1925. Сиктĕрме.

# ТАВĂЛ ИРТСЕН

Вăйлă çиçĕм çиçрĕ, аслати кĕрлерĕ,
Кĕмсĕртетсе анчĕ авалхи пашне.
Юнлă çумăр çурĕ, çĕршыва лӳшкетрĕ,
Аçа чулĕ çапрĕ — чикрĕ вут ăшне.

Мăшкăллăх, чуралăх çунчĕ те кĕлленчĕ,
Хĕрхенӳсĕр пулчĕ тимлĕ Вут Ама.
Çитмĕл çичĕ халăх ирĕкпе киленчĕ,
Харăссăн пикенчĕ ăна мухтама.

Вырăсĕ, чăвашĕ, çармăсĕ, тутарĕ —
Пурте ак юрлаççĕ паттăр юррине:
«Çăлакан пĕрех вăл — сулăм çеç хăтарĕ,
Сулăм çеç сунтарĕ пусмăр хуррине.

Йĕплĕ хулă пуçлă ĕмĕтри Христусĕ
Пире улталарĕ, çук вăл тĕнчере!
Пупĕ те, мулли те — харам пырăн тусĕ —
Тамăкпа хăратрĕ «çылăхлă» çĕре.

Анчах хăруш мар вăл, пĕртте шикленместпĕр,
Иртнĕ хĕн-асап та пирĕн — тамăках.
Ырлăх тивлетне те пĕлĕтрен кĕтместпĕр,
Çĕр çинчех тăватпăр ĕмĕрлĕх çăтмах!»

1925. Шупашкар.

* * *

Юр шывĕ сăрхăнсах пĕтмен чухне
Çурхи çилсен сип-сивĕ пăр йĕппи
Тирет халва пек хăлтă çĕр ӳтне.
Çавна сире эп систерейĕп-и?

Çуллахи кас, çил майăн ӳпĕнсе,
Пулса çитейнĕ сĕлĕ шерепи
Калать çинçе те хӳхĕм тӳттĕлсем.
Çавна сире эп илттерейĕп-и?

Ирпе тăп-тăрă сулхăн пĕвере
Кĕрхи хурсен — пĕрин те тепĕрин —
Раснах салху кикакĕ чĕтĕрет.
Çавна сире эп систерейĕпин!

Хĕлле — пасарнă ут кус хăрпăкĕ,
Çулти ут тулхăравĕ — пире пит
Астутарать пур чун та пĕрпеке.
Çавна сире эп систерейĕп-и?..

1926. Сиктĕрме.

* * *

Шанатăп хамăн çăлтăра,
Шалти çутта кăна шанатăп.
Ахалĕн мар вăл ялтăрать
Çĕрле те, ир те, кăнтăрла та.

Ахалĕн мар тĕнче çине
Куçа хĕссе пăхатăп эпĕ.
Ман чунăн тӳрĕ кĕпçине
Аваймĕ çуклăх, сум хисепĕ.

Вĕренлеттермĕп эп хама,
Çамка çине тамга картаймĕç.
Чĕрем çинче чаваланма
Сăмахăм чĕрĕ чух — хăяймĕç!

1926. Тахта-Базар.

## УЙ-ХИР ЮРРИ[1]

Эх, мĕскершĕн,
Эх, мĕскершĕн,
Эп ларатăп пăчăхса?
Уттарам-ха,
Чуптарам-ха,
Çаврăнам-ха хир пăхса.

Тайлăк пӳртĕм,
Ма эс тӳртĕн
Пăхкалатăн ман çине?
Антăр тырă —
Пулĕ ырă,
Тӳрлеттерĕп кĕркунне...

Йăранпа эп
Вĕçтеретĕп
Йӳле пилĕкĕн, çарран.
Чăнкăр-чанкăр,
Йăлтăр-ялтăр
Ялкăшать лапри çаран.

Хирĕ симĕс,
Хумĕ — тинĕс,

[1] И. Доронин кĕввипе çырнă.

Ыраш пуҫӗ шӑркара.
Час ак пулӗ,
Пӗрчӗ тулӗ,
Кунсем килӗҫ шӑрӑхрах

Час эп хам та,
Кирек кам та
Тухса кайӑпӑр хире.
Сулхӑн ҫилӗ
Кассӑн килӗ,
Тартан ҫӑлӗ вӑл пире.

Шурӑмпуҫӗ
Куҫне уҫӗ,
Хӗвел тухӗ чарласа.
Еҫлӗ халӑх
«Эх каҫалӑк!» —
Тесе ярӗ юрласа.

Тӗмӗн-тӗмӗн
Пилӗкшерӗн
Кӗлте ӳкӗ ҫӗрелле.
Хӗвел анӗ,
Ҫурла канӗ,
Кӗлте кӗрӗ ҫӗмеле.

Тӗттӗмленӗ,
Ял тӗлленӗ,
Уйӑх парӗ ҫутине.
Ҫамрӑк — харсӑр,
Ывӑнмасӑр
Татах ҫакӗ ҫурлине.

Тӗнкӗл-тенкӗл
Тӗнкӗлтетӗ

Йĕс хĕлĕхлĕ хыр тумра.
Сарă хĕрĕ
Чĕтрентерĕ —
Юрра ярĕ ман умра.

Эх, вырар-и,
Эх, юрлар-и,
Эпир килнĕ кĕрĕшсе.
Хăмăш хăмăл —
Вырма çăмăл,
Ыраш пулнă сĕрĕшсе.

1926.

* * *

Ç. ЭЛКЕРЕ.

Йĕс таканлă тимĕр-кăвак ут
Такăнминччĕ çурма çул юртсассăн.
Ялкăшинччĕ чунăм тепĕр хут,
Сивĕнминччĕ сăвăра пĕр саншăн.

Ах, пĕлетĕп: халь сана кичем,
Мана хытă ӳпкелетĕн пулĕ.
Эп чĕнмерĕм... Каçарах, пиччем!
Çырупа çеç мар-çке кăмăл тулĕ.

Юрататăн эс тăван уя,
Атăла чунна памашкăн хатĕр.
Пуклак пуçлă тупăлха туя
Час-часах сана ертсе тухать-тĕр.

Эс çӳретĕн пулĕ пĕр-пĕччен,—
Тăнăçра ӳсет çав пысăк шухăш.
Каçпала, пĕр авăк тĕттĕмччен,
Пур юмах та, пурăнăç та хутăш.

Вак ĕшнеллĕ лăпкă вăрмана
Эс кĕретĕн уйăх хăпарсассăн.
Вăрман урлă алă пар мана,—
Уçăрах янратăр манăн сассăм!

1927.

## САЛПАРАН

Пĕлĕт хăмăр, çилĕ — хирĕç,
Куç уçма çук сăлпăран.
Вак пăрсем тăхлан пек тиврĕç
Пĕрчĕн-пĕрчĕн çамкаран.

Хăçанччен хур курĕ йӳрĕк,
Килсĕр-çуртсăр пусăм ман?
Хăçанччен кастарăп-çӳрĕп
Е утпа эп, е çуран?

Пăх-ха, лавăç: курăнмасть-и
Хăй çути тавраш малта?
Пур-и, лавăç, улăм ластăк
Ешенсе килен ута?

Пур-и санăн пĕлĕш-тантăш
Çак çĕршыв тăрăхĕнче?
Ăшăнасчĕ те халь ман кăшт,
Хырăм та хыр тăрринче.

Кĕл çине — шултра паранкă,
Ума — çутă сăмавар...
Кӳр-ха, лавăç, юрттарам-ха,
Тилхепе мана тыттар.

Пĕлĕт хăмăр, çилĕ — хирĕç,
Куç уçма çук сăлпăран.
Вак пăрсем тăхлан пек тиврĕç
Пĕрчĕн-пĕрчĕн çамкаран.

Мĕн хыпар-ши, мĕн хăмар-ши,—
Телефон юпи улать:
Емĕтри телейĕм мар-ши
Е инкек картлать çула?

Ăçтарах эс, пуçăм, выртăн:
Аташса çĕтниспеле,
Чĕмере лексе е ыррăн —
Сарăмлах-ши вилмелле?

Е çулти вăрă-хурахăн
Çĕççине тăрнасси пур?
Е тӳсме хал çук юратăн,
Ху çине илсе хĕн-хур?

Е талант пекки хухсассăн,
Хам сиссессĕн ун çинчен,
Йăнĕ ман пăрахăç сассăм
Ватăлмалăх кунсенче?

Е кĕтмен çĕртен — ак кулă! —
Тишкерӳçĕ перине
Тӳсеймесĕрех салхуллăн
Хăвна ху пĕтерĕн-е?..

Пĕлĕт хăмăр, çилĕ — хирĕç,
Куç уçма çук сăлпăран.
Вак пăрсем тăхлан пек тиврĕç
Пĕрчĕн-пĕрчĕн çамкаран.

1928. Сиктĕрме.

## МАЛАЛЛĂХ МАРШĔ

Чăваш-и, вырăс-и, тутар-и,
Мĕн пурĕ пĕр çăлтăр айне!
Пĕтĕм Союзăмăр — ударник,
Утать социализм патне.

Пĕрре, иккĕ, виççĕ, тăваттă.
Çит бригадăна, бригадă!

Атя, республикăм, яра пар:
Хуçи те ху, хăни те ху.
Ану çинче кĕрлетĕр трактор,
Тĕп пултăр выçă виç пуссу.

Вăрăм курăк патăр улăх,
Тырă-пулă пултăр тулăх.

Ўсех, ман ирĕклĕ çĕршывăм,
Тĕреклĕ пул эс яланах.
Ĕçле, пултар, кĕреш, ан ывăн,
Ан ус юн витнĕ ялавна.

Атьăр пурте алла-аллăн,
Шухăш çирĕп, ĕмĕт паллă.

Чăваш-и, вырăс-и, тутар-и,
Мĕн пурĕ пĕр çăлтăр айне!
Пĕтĕм Союзăмăр — ударник,
Утать социализм патне.

Пĕрре, иккĕ, виççĕ, тăваттă...
Ирт бригадăран бригадă!

1930.

## ÇЕНЕ ÇУЛ ХАНИСЕМ

*(киввине асилсе)*

Ĕлĕк-авал, вун виçĕ çул кая
Е ытларах та-и хисеплесен,
Пуçтарăнатчĕçĕ ĕнтĕ паян
Ван Ванăчпа Тит Титăч майлисем.

Пуçтарăнатчĕç ăшă йăвана.
Сĕтел çинче çутти, курка-черкке.
Сăмавартан çăра пăс явăнать.
Касман сысна çури. Кăркка. Йĕрке.

Çĕн çул та çĕн телей! Тута чăп-чап,
Курка шăл-шалт, черкке чĕн-чен.
Çуралтăр хурт кĕшки пек ачапча,
Тур патăр выльăх перекетĕнчен:

«Пĕр вĕçĕ картара, тепри вакра,
Ени тулта, хăйми кĕрекере.
Тавах пире пăхан пихампара
Кăçал та, малашне те — ĕмĕрех!..»

Çапла кашни хăй майлă аппаланнă.
Çĕнни мĕскер-и? Вĕççĕрех çĕнни:
Ван Ванăчăн хăла кĕсри хăмланă,
Тит Титăчăн çурланă-мĕн сысни.

Ван Ванӑч пӗлтӗр пӗр табак юратнӑ,
Кӑҫал вӑл тепӗр йышшине шӑршлать.
Тит Титӑчӑн матки пӗрер ҫуратнӑ,
Кӑҫал — сасартӑк виҫҫӗ. Тупӑшла!

Хуҫа йӑл-йӑл, тумраҫӑ тӗнкӗл-тенкӗл,
Савӑнтарать виҫ ятлӑ кӗҫтина.
Курка тӗпне ҫап-ҫутӑ кӗмӗл тенкӗ
Ҫӗр иртнӗҫем янравлӑн тӑкӑнать...

Ҫаплаччӗ паян кун хӑна-вӗрле
Халь эпӗр маннӑ *к и в ӗ* ҫӗн ҫулта.
Ван Ванӑчпа, Тит Титӑчпа пӗрле
Пур Русь Рассеич утнӑ ҫав ҫулпа.

Анчах пӑрмашкӑн тиврӗ ун ҫулне:
Халь ӗнтӗ *п и н т е т ӑ х ӑ р ҫ ӗ р ҫ е ҫ м а р*—
Хӑватлӑ революцин ҫул шутне
Хисеплесе пырать ҫӗн календарь.

Ҫав хисепе кусма пур Ҫӗрӗпех
Шанатпӑр. Халлӗхе йӑла ялан пӗр:
Нимрен малтан сарланччӑр хӗрлӗпе
Пӗрремӗш май та ҫиччӗмӗш ноябрь.

1930. Мускав.

## ПУЛ ПРИМЕРЛА ЛЕНИНÇА

Чĕрӳ хăйраннă хĕç иккен,
Кăкру сӳнми вучах пулсан,
Епле çулти пиçен-кикен
Ан хăрăнтăр вăл, эс пуссан!

Куçу сан çăлтăр пек çунать,
Тӳпен чи çывăх çăлтăрĕ.
Пăхсан чĕр хал кӳртет чуна,
Çухалнă шанчăк ялтăрĕ.

Аван юнгштурм тăхăнма,
Хисеп вăл — комсомол палли,—
Шалтан тĕреклĕлет хăвна
Малашнехи штурмсем валли!

Республикăн пĕтмен ĕçĕ —
Тулта, пӳртре, çулла, хĕлле.
Эс пул примерлă ленинçă;
Вĕрен, вĕрент, ĕçле, тĕлле!

Вĕрен хăюллă çын пулма,
Вĕрент ӳсен шăллусене.
Еçре пиçсе хытар хулна,
Кĕрешĕве чăмса çĕнел.

Тăшманăн тупписемшĕн халь
Совет çĕрĕ пулсассăн тĕл —
Патронлă пултăр сан тăха,
Пулемета пусмашкăн пĕл.

Советсемпе электăра
Хушсассăн — коммунизм вăл,
Задачă йывăр пек тăрать,
Анчах хăçан çĕнни çăмăл?

Тусем ватма та чей чĕртме,
Кĕпер хывма, çу уçлама,
Вакун туртма та пир тĕртме
Кӳлер электăр-çулăма.

Хули-ялне хăть кăнтăрла,
Хăть каçхине пĕр сăн кӳртме —
Малтан хăвна электăрла,
Хуса кăлар сив тĕттĕме.

Республикăн пĕтмен ĕçĕ —
Тулта, пӳртре, çулла, хĕлле.
Эс пул примерлă ленинçă:
Вĕрен, вĕрент, ĕçле, тĕлле!

1931.

## ÇАР ИРТСЕН ПАТТĂР НУМАЙ

Манежная, 11. Никольская, 10.
Миçе виççе тухнă-ши эп çак хушша?
Миçе километр е çухрăм эп тунă —
Юри, шӳтшĕнех, хисеплесчĕ хушса.

Манежная—вун пĕр, хваттер—утмăл пиллĕк.
Никольская — вуннă, хваттер... чим, тăхта:
Манеж кассинче ман тăват хутлă килĕм,
Никольскийĕнче — кам пĕлмест? —
Центриздат.

Шăп ман портфель анлăш «Чăваш
хресченĕ»—
Кӳрneклĕ хаçат, тăпăл-тăпăл, таса.
Эп — ун сăвăçи. Наянрах-и, ĕçчен-и,—
Çыратăп суясăр, савса, хал парса.

Вăл — пиллĕкмĕш корпусăн сылтăм кĕтесĕ,
Куллен эп ун вывескипе курнăçап.
Театăра пыр, мунчана çул тыт эсĕ —
Унран иртейместĕн, вăл — хамăн хаçат!

Кĕреп. Шухăша шӳтпелен пĕркерех, эп,
Вăтанчăк ачах пулас марччĕ тесе,

Редакци ёçне кăшт чарсах çиçтеретĕп
Ямбсем, хорейсем, дактильсем, спондейсем...

Каврукĕ Якур çинелле пăхать тӳртĕн,
Якурĕ — Каврук çине уççăнах мар.
«Тепле,— тет вара Каврук тус,— тен, вăл
кӳртĕ:
Якур пирĕн çтих тĕлĕшпе, çавна пар».
Якур — Ломоносов, Каврук — Молостовкин.
Якур — заместитель, Каврук — хăй редактор.
Танкки кӳртсе памĕ-ши? Сăвăç-çке вçотки...
Хăрушă анчах: рифмăма ан çаклаттăр...

Кам сăвă çырмасть-ши? Аха, Шуркин пур-мĕн
(Лискав, Ахваниç — кусем йăлт сăвăçсем).
Итле-ха, юлташăм, итле, шăллăм Шуркин,
Кӳртсем çак марша хаçата, хĕстерсем.

Сана — сăвă хакĕ, сана гонорарĕ,
Мана... ята çеç çырса ларт манăннĕ.
Анлантăр вуланă тус-йыш: кахал мар эп,
Юлмастăп юртан самана айккине...

Тухап та каятăп. Пĕрремĕш этап
Пĕтет. Пит шултрах каласмастпăр.
Пĕр-ик эрнерен ак мана, поэта,
Чĕнет хайхи зам е редактор.

«Хаçат пирĕн массăллă-çке, как-никак,
Çырасчĕ сан Шелепилле,— тет,—
Ак çак тĕлтине тӳрлетсессĕн пăртак —
Яма пултаратпăр, мĕнле пек?..»

Пăхатăп ак çак тĕлтине хам илсе:
И-и! Хăçанах çапмалли-мĕн ку савăл!
Ма тин таварăс-ха çанна, нянисем?
Çар иртсен паттăр нумай вăл.

1931. Мускав.

## ХАДИ ТАКТАША

Хăнаçăм! Хăçан-ха, хăçан эсĕ килĕн?
Кĕтет кĕрекем. Сана парăм та пур-иç...
Мĕнле кӳлепесĕр те пушă-мĕн вилĕм!
Мĕнле сăн-сăпатлă та тулăх çак пурнăç!

Тиф ернĕ. Ăçтан кун пек проза таврăш?
Шупкалчĕ малтан умри ТАСС телеграмĕ,
Унтан вăл хуралчĕ: Гади Такташ..
Епле-ха, епле сана чĕмсĕр курам эп?

Çук, эс шухăшлаттăн вилме капла мар:
Мăкланнă аваллăх пуçне çĕклесен,
Вăр-вар эс тăраттăн хастар та хаяр,
Питлеттĕн ăна чĕнейми тăвиччен.

Сан тăваллă пĕлĕт сăнарлă куçу
Йăваш кулăпа та çиçетчĕ шалтан.
Вилме кăна мар — ватăлма та май çук
Шăпа пӳрнĕ пекчĕ сана пурнăçран.

Усламçă, мулла, пур йăх-ях та чĕтретчĕç,
Шыратчĕç санран пытанма сĕм кĕтес.
Сана çамрăксем алă вĕççĕн çĕклетчĕç,
Эп те вĕсемпеччĕ, онсеттĕн-ши эс?

Пире ун чухне пĕр тăлмач кусаратчĕ,
Паллашрăмăр унăн улах çуртĕнче.
Тулта сивĕ çил тĕнчене тустаратчĕ,
Анчах ĕç хĕрсен çап-çутахчĕ тĕнче.

Пĕрре кутсăр-пуççăр хаяр тăвăл витĕр
Барабăз [1] пиччен тутарла çунипе
Таçта Ар уйнех кайса килтĕмĕр шиксĕр,
Юри аллхасса, çăварни чупнă пек.

Казанка çине виççĕн харăс тухсассăн
Пăртак кантармашкăн анранă пуçа,
Пĕри çунашка, тепри йĕлтĕр тупсассăн,
Э-ех, тăвайкки ярăнаттăмăр çав!

Нумайччĕ вăй-хал, тен, ачалăх иртменччĕ,
Çакна та калассăм килет халĕ ман:
Этемччĕ эпир, пур енчен те этемччĕ,
Сĕтел хушшинче пĕшкĕнсе çеç ларман.

Кайран тĕл пулаттăмăр иксĕмĕр эпĕр
Бильярд умĕнче хăш каççем пĕр клубра.
Выляттăн хĕрсе. Ху чапна эс пĕлмесĕр
Ун чух, тен, ăмсаннă ăста партнера.

Пăшал пек тирпейлĕн тытаттăн эс кий:
Туза сулахай кĕтессе! Çук, чăммарĕ.
Е симĕс анан курăнми тĕмески
Пăрать-и шара? Е пустав яка мар-и?

---

[1] Барабăз — тутарла «каятпăр» тени пулать, Хусанти лавăççене çапла чĕнетчĕç.

Çапла çав: инкек те, ман халăх каларĕш,
Куçа курăнса килместех пулмалла.
Çапах ăнсăртран куç хупни хуплаймарĕ,
Хуплаймĕ те ырă ĕçлĕ кун-çула...

Çук, эс шухăшлаттăн вилме урăхла.
Сан пурнăç курки тулаймарĕ çурри те.
Ак эпĕ те саншăн паян хурлăхлă:
Епле юрăçне пытарать-ши юрри? — теп.

Анчах юрăçи юррине пытарни —
Тата хурлăрах пулмалла тĕнчере.
Апла пулас марччĕ! Çак пурнăç парни —
Ас-хал пултарулăхĕ пултăр пире.

Шанатăп: ялан çамрăк пулăн эс, юрăç!
Çĕршыв кĕнеки чыслăн упрĕ сана.
Çынсем çулсерен çутăрах хĕмлĕ курĕç
Сан тăваллă пĕлĕт сăнарлă куçна.

1931, Тбилиси.

## ÇУЛ МЫСКАРИ

Миçемĕш стихийăччĕ-ши
Аваллăх поэчĕшĕн шыв?

Стихийăсене пăхăнма
Аваллăхра мар сăввăм ман.

Анчах ак ларап Анненскра,
Ларап та хурах кăшкăрап:

Шыв çурнă та кайнă çула,
Рельссем сывлăшра — чуччулла.

Шпалсем — пианин уçнă пек,
Вылять шывпа çил аллипе!

Хитре кĕвех мар, хăямат!
Никам ташлама хăяймасть.

Хыватпăр кĕпер — кĕпере
Ишсе антарать чиперех.

Тăкатпăр-и хăйăр — çăрать
Кăвас çăрнă пек хăйăра.

Хуратпăр-и чул — чулĕ те
Йăлтах шыв кулли пулĕ, тен...

Шыв-шурĕ те путлĕ шыв мар,
Пулсанччĕ вăл штатлă çырма.

Ку пур — юр пулса выртнă та,
Хускалнă туран аната.

Çӳлтен утаманĕ — Урал —
Çухрать «малалла!» та «урра!»

Хĕвелĕ хаваслă, япшар,
Хистет, хĕтĕртет: «Яра пар!»

Мĕн пур вăтăр икĕ шăлне
Сирсе, лахлатать çуркунне.

Кулли — ирĕк вăй çирĕпне
Ĕненнĕ пекрех сирпĕнет.

Çапах, эп çакна çыриччен,
Çулсем пирĕн хатĕр иккен.

Тăхта, çутçанталăк-атте!
Сана пуççапмастпăр ак тек.

Ху шаккăн пире кантăкран:
«Уяр кирлĕ мар-и ыран?

Хĕвел кирлĕ мар-и?» — тесе,
Эс утăн хыçран, йӳтесе.

«Çилсем кирлĕ мар-и пăртак?
Ку — сулхăнлăх, ку — авăртать...»

«Çук,— тейĕпĕр эпĕр сана,—
Тултар-ха сада озонна.

Ыттишĕн халь çук-ха саккас,
Эрнелĕх-ха пирĕн саппас!»

1932. Магнитогорск — Мускав.

## ВАТА КОЛХОЗНИК ЮРРИ

Халиччен эп Мускавра пулманччĕ,
Сарлака иккен урамĕсем!
Пинĕн-пинĕн кĕрлесе чупаççĕ
Утсăрах капмар урапisем.

Халиччен эп Кремĕлре пулманччĕ,
Кисренми иккен ун хӳмисем.
Пилĕк юплĕ çăлтăрсем çунаççĕ
Сӳнми шанчăк евĕр хĕмленсе.

Эп Мавзолее кĕрсе курманччĕ,
Тахçанах асра пулсассăн та:
Çап-çутах-мĕн Ленин сăн-сăпачĕ,
Тĕрĕс шухăш евĕр çап-çутах...

1933.

## СЕН КАТАЯМАНА АСАНСА

Сайралать пирĕн ватă гварди.
Хурала, комсомолецсем!
Яш чĕре варрине шĕл кăвар чĕрт,
Хурлăхпа пуçна ан пĕксем.

Эп Мускав хулипе иртетĕп,
Мана чарчĕ хураллă ялав.
— Ĕнер çеç... мар, паян ирпе те
Шутламанччĕ...— тесе тайăлап.

Ĕнер çеç ман Октябрĕм харсăр
Юрласа янăрарĕ. Паян —
Тем чухлех, куççульне пытармасăр,
Ветеран тупăкне пуç таян.

Анчах эп ĕненеп: ватăлтармăн
Коммунизм ĕçне эс, ĕнер
Юрăпа утса, халь ветеранăн
Сив ÿтне салютлан пионер!

Сайралать пирĕн ватă гварди,
Аталанăр, хастар çамрăксем!
Яш чĕре варрине шĕл кăвар чĕрт,
Хурлăхпа пуçна ан пĕксем.

1933.

## ХĔВЕЛ ПАТНЕРЕХ!

«Осоавиахим» стратостат экипажне.

1

Паянтан çирĕм икĕ пин метр
Çӳлелле ĕнтĕ эпĕр вĕçетпĕр.

Кайăксем пирĕнтен аялта çеç
Хăйсен пĕчĕк ĕçне тукалаççĕ.

Тĕнчене çĕнетен пролетари
Пур вăя та хăйне пăхăнтарĕ.

Этем пулĕ хуçа пур çĕрте те,
Çутçанталăк кулаймĕ пиртен тек.

Ун хурри — виçĕ паттăр вĕçевçĕ,
Виçĕ кăйкăр çĕре ак кĕреççĕ.

Пит сахал сире паттăр тесен халь,
Федосенко, Усыскин, Васенко!

Хурланса та эпир пуç таятпăр,
Мухтанни, тен, тата ытларах-тăр.

Чап сире, юлташсем! Ĕмĕр-ĕмĕр
Çĕнелен çĕр çинче ятăр çĕрмĕ.

6*

2.

Вилĕм пур: çитсе перĕннĕ пульă
Çыннăн çĕнĕ çуралăвĕ пулĕ.

Ун пек харсăрсене йышлă эпĕр
«Перекоп» сăмахпа асилетпĕр.

Вилĕм пур: сăмахсен шĕл кăварĕ
Вут хыптарĕ, хăвна — кĕл хăварĕ.

Çавнашкал — мĕн тери чĕрĕ çын-çке! —
Çунса татăлчĕ Феликс Дзержинский...

Вилĕм пур: лăпкă лаборатори
Колбăсем вĕретсе пăслантарĕ;

Эс сăнатăн, чĕрӳ — ху та сисмĕн —
Сӳнĕ лап спиртсăрланнă фитилĕн.

Кăткăс формулăсем çеç пăртакçă
Лаборантăн пуçне çавăраççĕ.

Канлĕ эсĕ, тĕпчевçĕ: тĕнченĕн
Тепĕр сĕм çиттине сиртĕн меллĕн...

Вилĕм пур: пĕлĕте штурмласа
Хальччен чун çук çĕре улăхсам.

Чăмăр çĕр çăмхине эс мăнаçлăн
Тап хăвар та пĕрре, тăн-тăн аллăн

«Хĕвеле çывăхрах! Çӳлерехчĕ!»
Тесе ярăн, хастарлă вĕçевçĕ!

Этем ăсĕ çĕклентĕр пĕр шиксĕр
Çилсем витĕр, тăман-тăвăл витĕр.

Стратосфера шевли мĕнлерех-ши?
Çын çавна халь пĕлме ĕлкĕресшĕ.

Юлашки самантчен кӳтнĕ алă
Çумăнти блокнотна тутăр паллă.

Хĕвеле сывăхрах! Патнерехчĕ!
Эй, татаччĕ пĕр метр! Пĕрре çеç!

3.

Эп пĕлетĕп: халь сывлăш та класлă.
Ăнланатăп: хĕвелĕр халь сирĕн —
Коммунизмлă çутă пуласлăх,
Федосенко, Васенко, Усыскин!

Сывлăшра, тинĕсре, çĕр çинчех-и,—
Аслă класăн пĕр аслă ĕçне
Тума пуçăннă эпĕр. Инçе-ха
Тĕнчипех çитесси ун вĕçне.

Вилĕм суккăр. Пĕлместĕпĕр эпĕр —
Таçта лекĕ пырса вăл пире?
Анчах паттăр ĕçпе чĕрĕлетпĕр
Килес кун асĕнче çĕнĕрен.

Эп çĕр çул пурăнмашкăн та хатĕр —
Ĕçлесе, кĕрешсе, юратса.
Вилĕм кунĕ çитсен,— мана каттăр
Сирĕнле: тепĕр хут çуратса.

1934.

## ÇЫРУ

*Влас Паймена.*

Пин те пĕр айăп манăн, Влас!
Сывах. Кунтах. Манман.
Чĕрем те улшăнман пулас.
Çапах çыру çырман.

Каçар мана эс, пултарсан.
Ятла, халу çитсен.
Анчах хура ан пултăр сан
Çиллӳ ман тĕлĕшрен.

Сан шанчăкна хăвармасса
Ĕçлесчĕ хытă ман.
Хам ку таран аппаланса
Çур сăвă та çыхман.

Çак пурăнăç пуçа, сăмах
Пулса, вырнаçиччен —
Мĕнле йĕрке-ши? — яланах
Чĕрри туртать иккен.

Уй-хир сĕтелĕ хушшине
Ларса иртен те ир
Хура тăпра кĕнекине
Эс кассăн-кассăн сир.

Шултра та тутă рифмăллах
Акатпăр та пĕрче —
Виличченех вăл выртмалла,
Вилсессĕн — пин ĕрчет.

Ак çутçанталăк пĕрлĕхĕ,
Ак ĕмĕрне çиçен,
Чуна хавассăн тĕрлекен
Тĕп тупсăмĕ тĕнчен.

1934. Микушкель.

## НАРСПИ ÇЕРШЫВĔНЧЕ

Эп çитрĕм вишĕ сехете.
Пĕр лав та çукчĕ çывăхра.
Тул çутличчен эп кĕтрĕм те —
Уттартăм çуранах вара.

Хĕвелĕн куç хăрпăкĕсем
Сиккелене пуçланă та,
Часрах вăрантăрччĕ, тесе
Эп хирĕç ярăнса утап.

Сулахайра пĕр ластăк, пĕр
Çăм кĕнчели пек пĕлĕт çех
Яр çурăлчĕ: кĕрен кĕпер
Слак урлă хывăнчĕ кĕçех.

Пуса каччи пек ташласа
Асанчĕ çумăр. Кун чипер.
Кĕтӳ тухать. Çĕр тап-таса.
Сăнар та лайăхрах — кĕрер.

*

Ял сывăхĕ çара, вăрмансăр,
Анчах пуян хăй чулĕпе.
Пăхсан — çав Уралтан тăван сăрт
Кавказăн алăк умĕ пек.

Çавна татах та шантарать вăл,—
Ав ӳкрĕ манăн куçăма:
Çӳлтен — тыркас сăнан караппăл,
Çĕртен — шанкав [1] суйлан çырма.

Çак ту çинче кăшт самайланнă,
Çӳренĕрех вăхăтсенче,
Ялан кĕнекепе вăл ларнă —
Салхуллă, кăмăлсăр, пĕччен.

Мĕскер шутланă-ши вăл, тарăн,
Тинкерлĕ куçĕсемпеле
Йĕри-тавра пăхса мăнтарăн?
Мĕскершĕн çуннă? Кам пĕлет...

«Ача ваййи» тесе ал сулнă
Пĕрре вăл хăй сăввисене.
Тата мĕскер каласшăн пулнă
Чарусăр шухăш тĕнчене?

Мĕне савса е кураймасăр
Çĕкленнĕ пулĕччĕ тепре
Минут та лăш курман, шав харсăр,
Пултарупа тапан чĕре?

*

Шур çĕмĕрт шупăр хывнă тапхăр.
Ака пĕтернĕ ялсенче.
Силпи çаранĕпе утатпăр,
Тахçан туртатчĕ çак тĕнче.

Ак çакăнта Нарспи чӳхеннĕ,
Сетнер шăварнă пуль утне,

[1] Шанкав — катăк-катăк шурă чул.

Тесе пыран чĕлĕнкеленĕ,
Çĕрмен тункатасем кутне.

Ак ку — вĕлтрен пĕркенĕ путăк —
Тен, Михетер нӳхрепĕ пуль.
Çак улăхра ял çулнă утă,
Юрланă, тăкнă вăл куççуль.

Халичченех пур Кантăр Варĕ.
Шултралăха ертсе кĕрсен —
«Тăхта, йăмри ак çакчĕ мар-и?»
Тесе хурать этем хуллен.

*

Епле ун кун-çулĕ чĕрĕ!
Нумай пулмасть-ха пĕр пӳртре
Нарспипеле вăл кунĕн-çĕрĕн
Ларатчĕ, теççĕ, Çимĕкре.

Нарспи — слакпуççемех. Пĕр карчăк.
Поэт тулли куркапалан:
«Ну, мăнакка, каласа парччĕ...»
Тесе тав тунă кăмăлтан.

Пуçланă лешĕ, ятсăр сăвăç,
Чĕлхи-çăварĕ çемçелсен.
Аçтан пĕлейĕн: хăйĕн çав ĕç
Пекки пулса ун иртнĕ, тен.

Епле пулсассăн та — мухтавлă
«Çыруç», ăна сума суса,
Хăварнă ун ятне нумайлăх
Хăюлăх символĕ туса.

*

Чул çурт. Ытти пӳртсемпелен
Танлаштарсан — кермен пек пулнӑ.
«Эпир алкумӗнчен иртмен...»
Тет çын халь тӗпелте салхуллӑн.

«...Пуян Васинккапа — ӑçта! —
Ĕçсе-çимешкӗн асӑнман та.
Ун ывӑлӗ вара чӑн та
Аван ачаччӗ, ас тӑватӑп.

Туя çӳретчӗ, тыр вырма,
Пуринпеле те калаçатчӗ.
Ыр çыннӑн ӗмӗр вӑрӑм мар:
Çап çамрӑклах хур пулчӗ. Каччӑ.

Ак çакӑнта выртатчӗ вӑл.
Ун умӗнчен каймарӗ амӑш.
Эп тарçӑччӗ. Пӑхсассӑн — йӑлт
Ăшаланса ӳкетчӗ ман ӑш.

Пирус тухмарӗ тутинчен,
Тытаймиччен ӑна вӑл туртрӗ!
Çав сулӑмпа тӗтӗмпелен
Чӗри пушшех çунса, тен, хухрӗ.

Ун юлашки сӑмахӗсем
(Вара тек нимӗн те чӗнмерӗ):
— Вилетӗп пулӗ час, аннем,
Çӳл ту çине хӑпартрӗç...— терӗ»

*

Ун çуртӗнче — колхоз правлени.
Музей пулас сӑмах та пур.

Çав кирлĕ сăмаха çĕкленĕ
Ял-йышсемех иккен ку çур.

Вилни час çирĕм çул ак тулĕ.
Вăл лартнă тополь — пĕр ытам.
Унтан вара чăваш кун-çулĕ
Мĕскерлине — курать такам.

Хăватлă революцин çирĕп,
Хаяр çĕпри пур тутăха,
Пур пăнтăха çутатрĕ, çирĕ,
Тасатрĕ вăл яланлăха.

Тăхтамансен шалчи йăлт тулчĕ.
Сетнер — ялта халь бригадир
Е агроном, е сăвăç пулчĕ —
Ĕçле, тĕпче, шыра та çыр.

*

Хĕм куçлă, çаврака çамкаллă,
«Хура чикан пек» — Сенттилле —
Мана хăюллăн тăсрĕ алă
Поэт тăванĕн ывăлĕ.

Ун ячĕ... çук, Константин марччĕ,
Анчах мĕн пур кĕлеткипе
Вăл аслă куккăшне кăларчĕ
Ман куç умне чĕр тĕкĕр пек.

Вăл виççĕре — пĕр шиксĕр, тӳррĕн,
Тасан пăхан çав коммунар.
Мĕнпе хавхаланса, мĕн кӳрĕ
Çак тĕнчене вăл? — Паллă мар.

Паллах вăл çапăçĕ, вăл тăрĕ
Малашлăх çыннисем енче.
Ун тăнĕ-пуçĕ пулĕ тăра
Пур харпăрлăх сĕлтĕшĕнчен.

Тен, куккăшĕн трагедине те
Чухлаймĕ вăл тĕппипеле.
Вăл ӳсĕ, сисмĕ те — çĕнетĕ
Çĕре йăлтах хăйпе пĕрле.

«Чăваш чунне» тупасшăн пулнă
Поэт сăпайлă Сенттире.
Ăçта вăл çак ачан? Те юлнă,
Те çук? — тесе эп тинкереп.

Йăваш туталлăн, хĕсĕк куçлăн
Анчах ăна курас тесен —
Ан пултăр пĕрех хут вăл унăн,
Çитет авал хĕснипелен!

*

Кăра-мĕн пушкăрт çилĕсем!
Пиншер юланлă утлă çар,
Хĕçне ун-кунăн силлесе,
Кăшкăрашса та ятлаçса,

Сӳре пуххисене йăтса
Сăнни вĕçне тире-тире,
Кăлкан тĕмĕсене çăлса,
Пар тустарать çеçен хире.

Сыхлан, çӳревçĕ, çав самант!
Анчах кĕске вăл: айтласа
Иртсе каять те утаман,
Каллех çанталăк тап-таса;

Каллех тӳлек хӗвел ялтрать,
Иртейнӗ тӑвӑл та чечен...
Шӑп ҫавӑн пек ҫанталӑкра
Эп пултӑм ун тӑпри ҫинче.

Чӗлхе ӑсти! Вӑл хӑйӗн хыҫҫӑн
Ҫӑвар уҫас текенсене,
Ун шайӗпе калаҫмасассӑн,
Чӗлхесӗрлет халичченех.

Хальхи кунсен мухтавлӑ, анлӑ
Пултарӑвӗ кӑна пире,
Йӗри-тавра уҫса мӑн алӑк,
Йӑлт урӑх шай та сас пӳрет.

Эп туйӑнтӑм хама кӗперрӗн:
Ик саманан ик ҫырмине
Пӗр аслӑ шывшӑн пӗрлештерӗн,
Тесеттӗм эп ҫав ирхине.

Сиксе юхан ҫырман пӗр хумӗ
Пулсан та сӑвӑҫ ун чухне,—
Вӑл ҫапрӗ революци умӗн
Мильонлӑ халӑхӑн чунне.

Вӑл ҫапрӗ, ҫаврӑнса пӑхтарчӗ
Умма, хыҫа. Ним ҫук ҫӗртен
Вӑл аслӑ ӑмӑртӑвӑн старчӗ
Пулса тӑчӗ Октябрьтен.

Революционер пулман вӑл,
Анчах ун «кашкӑр билетне»

Эпир куратпăр юн тумланăн,
Тасан çĕклетпĕр ун ятне.

Вăл революципе вăраннă,
Пĕрер сăмах тире-тире
Вăл чĕрĕ чĕлхене упранă,
Ку — кирлĕ революцире.

1934.

## ÇĔМĔРЛЕРЕ

Эп Шур тинĕсрен Хурине çитиччен,
Магнит тăвĕпе шавлă Харьков таран
Çӳрерĕм йышпа та, çӳрерĕм пĕччен
Тус пек «Коммунар» хаçата савнăран.

Анчах мĕнле намăс! Мĕнле пысăк намăс!
Хальччен тĕп чăваш çĕршывне эп пĕлмен.
Ак станци сана. Чарăнатăн, анан эс.
Кашлать вата хырлăх. Юман та йĕлме.

Çĕрле. Янк уяр. Шупка уйăх хавшанчĕ,
Пытанчĕ вăл шăппăн вăрман хыçнелле.
Электăрăн хыпрĕ умра манăн шанчăк,
Çĕршывăм ун çулăмĕпе çĕнелет.

Кам хăйĕ мана халь «чăвашăн кун-çулĕ
Калла чакса пырĕ» тесе пелкеме?!
Пĕр хăй пĕчченçи ĕлĕкхи çĕр çул чухлĕ
Кĕрлет Çĕмĕрле, яр çурса тĕттĕме.

Манпа çамрăкки те, манпа чи ватти те:
Думилин поэт, юрăсти Шелепи.
А эпĕ... мана пĕр юлташ вăй питти тет,
Çĕршывшăн вăя эп паян шеллĕп-и!

— Туссем! — тетĕп ак пухура,— сирĕн савăт
Хисеплĕ те чаплă ĕçченлĕхпеле.
Анчах пулман мар— сирĕн те çыранса вĕт
Хура хăмана хăш-пĕр цехăр, пĕлеп.

Тасатăр часрах, большевик-и-мĕн тайĕ
Чăрмав-инкексем умĕнче халь пуçа?
Пуриншĕн те пултăр пример Ивандаев —
Рабочи те ăслă тĕпчевçĕ, хуçа.

Кашни йывăç татăкĕшĕн чун ыраттăр,
Тирпейлĕр цеха шалт тăван килти пек.
Ярсамăр часрах çĕршыва çĕнĕ рапорт
Манпа — «Коммунарăн» ударникĕпе.

1935.

## УРАМПА УТСЕМ ИРТЕҪҪӖ

Урампа утсем иртеҫҫӗ,
Ҫамрӑк каччӑ утсерен.
Карттуссем ҫинче ҫиҫеҫҫӗ
Ҫӑлтӑрсем хӗлхемпелен.

Тапкӑчсем чӑнкӑртатаҫҫӗ,
Ҫӗн йӗнерӗ сиктерет.
Хирӗҫ тухнӑ хӗрупраҫӗ
Пурте пек вун ҫиччӗре.

«Сывӑ пулӑр! Чипер кайӑр!
Ан мансамӑр ял ҫинчен...»
Кӗҫенейрӗ кӑвак ӑйӑр
Эскадронӑн пуҫӗнче.

Алтутри хӗрсем силлеҫҫӗ,
Тыттараҫҫӗ чечексем.
Тӗрлӗ пурҫӑн ҫиветлеҫҫӗ
Ут ҫилхи ҫумне тирсе.

Каччӑсем куҫпа шыраҫҫӗ
Пӗлӗш-тантӑшӗсене;
Саламсем парса пыраҫҫӗ.
Пуҫ тайса енчен енне.

«Сывă пулăр та пур пулăр!
Перекет колхоз халне!
Хам савни тĕрленĕ гутăр
Килтĕрех хампа калле...»

Сывлăша çурайрĕ мусăк,
Лашасен хăлхи чанках.
Уй хапхи ĕнтĕ яр уçă,
Такан кĕвĕлĕн чанккать.

«Чипер юлăр!» — «Чипер кайăр!
Ан мансамăр ял çинчен...»
Тапса сикрĕ кăвак ăйăр
Эскадронăн пуçĕнче.

1936.

## АВАН-И, ПУШКИН!

...Пире хирĕç сулă çине туса лартнă вилĕм таканĕ юхса анать-мĕн, ун урлавĕ çинче виççĕн çакăнса пыраççĕ... Тулли уйăх çав мĕскĕнсен сăнсăрланнă пичĕсене çутатать. Вĕсенчен пĕри вата чăвашчĕ.

А. ПУШКИН.

1

Çав çул пире ун вилĕмсĕр сăмахĕ
Çитсе çĕклерĕ Атăл хумĕ пек...
Ялтан яла, ытти ĕçе мансах, эп
«Онегинпа» çӳреп, чăвашлипе.

Кĕркуннехи тумхах пытанайман-ха,
Çуран тăман чупать çул хыттипе;
Автомобиль айне пулать айван хăй,
Хăй чăрсăр — шалт ие путекĕ пек.

Вĕрет-сурать, асать арçурилле те,
Слюда çумне те сыпăçса виртлет...
Çилпе такамăн юррине илтетĕп,
Таçтан пĕччен шăнкрав сасси çитет.

Таçта сĕм пурнăç кĕрчĕ-юрĕ тăрăх,
Çил-тăвăл витĕр пĕр кӳме пырать.

Хӑй ҫӗрӗнче те тыткӑнри пек тӑлӑх
Пӗр сын унта кун-каҫӑн ҫул тытать.

Пӗччен! Лаша тавраш ӗ те — жандармӑн
Аксельбантне ӑна асилтерет.
Сӗм пӗлӗте пин хулӑпа ҫаптарнӑн
Ҫаралнӑ шурӑ хурӑн шилетет.

Сив ҫӑлтӑрсем ҫине пӑхать вӑл халӗ,
Хур кайӑк Ҫулӗ сассӑр йыхӑрать...
Телей ҫуках! Анчах та ирӗк, канлӗх...
Кала-ха ун ҫинчен эс хытӑрах!..

Ҫӳлти хура юнсем, патша, Булгарин...
Куҫ шуррисем вӗлтлетрӗҫ вирелле.
Янаххине ун тӑлӑпӗ хупларӗ,
Пасарнӑ бакенбарчӗ ирӗлет.

Тӗнкӗлтетет пӗр ҫемлӗ шӑнкӑравӗ,
Чуна тивеҫҫӗ ямшӑк юррисем.
Чӗрме тупан сасси, ут тулхӑравӗ,
Ула юпаллӑ ҫухрӑмсем... Кичем!

2

Тин тунӑ уйӑх ылтӑн пулӑ евӗр
Чӑмать сайралнӑ пӗлӗт хушшипе:
Пӗр пуҫӗпе тухать вӑл, именмесӗр,
Пӗр хӳрипе ҫапать юмахри пек.

Ӑҫта кӳме? Шоферӑм кулса ячӗ,
Унпа кӑна-ши эп? Ҫук: пур тепри.
Портфелӗмре ун кӗнеки, ун ячӗ,
Хӑй — ҫуммӑнах, ҫап-ҫамрӑк та вӗри.

Аван-и, Пушкин! — Ăшă-и, çемçе-и
Çак ГАЗ минтерĕ çиййĕнче сана?
Каласшăнччĕ пĕр юрату çинчен эп,
Ман чĕрене хĕсет вăл тахçанах.

Пайтах пулать... Вăййа эп пит ерместĕм,
Сăмах та вакламастăмччĕ питех...
Кăтра ача, ман патăма кĕрсеттĕн,
Паллашрăмăр сĕм хăйă çутипех...

Кĕрхи каçсем вăрах вара, чĕнмесĕр,
Чавсаланса лараттăмăр ун чух.
Сисеттĕм эп: çунат ӳстернĕ евĕр
Кăтăкланса ман ырататчĕ чун.

Сан вĕлтĕрен уки пек çӳçӳнте те,
Кӳренчĕкле кӳпшек тутусенче,
Аяккалла пăхан куçусенче те
Кураттăм эпĕ урăхла тĕнче.

Аслăланатчĕ тăвăр пӳртĕм манăн:
Йĕре-йĕре çӳрен çил ачисен,
Чӳречерен шаккан кĕрхи тумламăн —
Йăлт урăхчĕ пĕлтерĕшĕ вĕсен...

3

Çул хыççăн çул... Ак иртрĕ те ачалăх.
Сенкер тĕтреллĕ щуçăм çутăлчĕ.
Куç уçăлчĕ. Яр сирĕлчĕ шăналăк:
Куç умĕнче тем пысăкăш тĕнче.

Çап-çарамас поэт чунĕпе утрăм
Асаплă-илĕртӳллĕ çулпала.
Çăмăлах мар çĕклерĕ манăн çурăм,
Каллех эп туртăнтăм сан патналла.

Ăнлантăм: шăхăрса юрра ямашкăн
Çак пурнăç туй та уяв мар ялан.
Поэзи куркине вара пăртаккăн
Хушмашкăн тиврĕ сивĕ шыв та ман.

Çĕршывăма куллен ман ӳсрĕ парăм.
Çурма çултан тавăрăнни — начар.
Каллех иккĕленӳ. Каллех шырарăм.
Каллех манпа эс пултăн юнашар.

Ак эп сан тăлмачу. Шăпланчĕ музăм:
Куç хӳрипе пăхать те хушăран,
Тухъяллăскер, тăрать вăл тайма пуçăн,
Вилес пек кӳлешет Татьянăран.

Эп санпала куçа хупмасăр лартăм:
Кашни сан сăмахун чăн-чăн тĕшне
Шĕкĕлчесе илесшĕн асаплантăм,
Мĕнле кăнттам эп пулнă ун чухне!

Тавах: сăмах тертне тӳсме вĕрентрĕн,
Сан урăхла янран сăввусенче
Хам чунăм кĕввиех пурне пĕлсессĕн,
Мĕнле вара эп савăнмăттăмччĕ!

Хавхаланса, çунса та, тарăхса та,
Хăй вырăнне лартсан сăмахăма,
Сĕм вăрманта çул тупнă пек сасартăк,
Чĕлхе ăсти пек туйăнтăм хама.

4

Ямб пек яка та тикĕс пирĕн çул-йĕр,
Шав ыткăнать вут куçлă урхамах.
Шап-шурă юр... Кайсан-кайсассăн — çӳллĕ
Хура вăрман сиксе тухать умах.

Армак-чармак ват юмансем лараççĕ
Çара туратсемпе кар карласа.
Вĕсем Пугачева та курнă, Разин
Çыннисене те юлнă палласа.

Эс курнă вĕсене. Ав вăл çĕкленнĕ
Виç ытама та кĕрейми юман.
Сан тăваллă кунна-çулна ирттернĕ,
Манран та пултарать-ха вăл юлма.

Анчах пире-и çак çĕрте çĕрмешкĕн?!
Эпир ун йышши мар. Ак эс паян
Пур çутçанталăка тĕлĕнтеретĕн,
Этемлĕх çамрăклăхĕ пек шавлан.

Кустар, машина, чун-чĕре çĕклентĕр,
Çил пек касса кĕр çĕнĕ ĕмĕре!
Кунта... кунта кăшт чарăнăпăр эпĕр:
Хăна пулма чĕнеççĕ халь пире.

Пăхсам, поэт, кур халăха паян ак,
Кур ĕмĕтне çитернĕ çĕршыва:
Çакса сулăпала юхтарса янă,
Юнпа ăна кĕлернĕ, вăл сывах!

Хапхаранах тухса илет тăванăн
Сана вăл сарлака чĕрипеле:

— Пусма пек пултăр ман саламăм саншăн,
Кĕрсем, хăнам, иртсемччĕ тĕпеле.

Пехил сана: пĕр пĕрчĕрен пин пĕрчĕ!
Ларсам ман ирĕклĕ кĕрекене.
Сан вăрлăху вăрман пек ĕрчетĕрччĕ! —
Тесе сĕнет вăл савăш куркине.

Ларар, поэт: хальччен çăкăр-тăварсăр
Ӳсмен-ха вăл эреш те ярапа.
Тĕппи курка! Сахал пулсан — ăсатпăр
Юри хывтарнă Алтăр çăлтăрпа.

1937—1949.

## ФЕДЕРИКО ГАРСИА ЛОРКА

Плачь, муза, плачь..
А. ПУШКИН.

Эп сана нихăçан та курман,
Итлемен эпĕ сан юрруна та.
Çав-çавах сан сăну халь пур ман,
Эсĕ ман чĕрере пурăнатăн.

Сан паха çĕршыву — çĕн Испани
Сана чĕртĕ виç хут, пĕрре мар.
Тумлам юн таранччен эсĕ панă
Унăн ирĕклĕхне упрама.

Эс чĕнни янăрать тавралла,
Сан тăван-тусусем пур çĕрте те.
Сан юнланнă ялавупала
Юлашки сăввуна эп çĕклетĕп.

Макăр, муза, хӳхле! Пĕлтĕн, куртăн —
Кам сан пуç кăшăлне таптакан.
Ерт эс халăх çарне паттăр Лоркăн
Парăнми юррипе паянтан.

Эсĕ куртăн — ачаллă хĕрарăм
Кăкăрне касакан палача;
Бомбăсен сассипе эс анрарăн,
Штык вĕçне тирĕнет ав ача.

Мăшкăлланнă хĕрсем макăраççĕ,
Вăтанаççĕ пăхма çын сине.
Макăр, муза, хӳхлет! Чĕрĕ Гарсия
Çиллипе хутăштар куççулне...

Чĕрĕ эс! Тыткăнланнă Гренадă
Çапса ватĕ тăшман сăнчăрне.
Ху çинчен те, хăвăн юрруна та
Савса юрлĕç вара ĕмĕрне.

Эп сана нихăçан та курман,
Манмасса ак паллатăп халь тин.
Анчах эс чĕремре пурăнан,
Харсăр юрăç, салтак, гражданин!

1936.

## МАКСИМ ГОРЬКИЕ

Сасартăках ҫăвар уҫма та йывăр
Пыра пăвать куҫҫуллĕ кĕмĕркке.
Ырми-канми ăс-халшăн «канлĕ ҫывăр»
Тени паян ытла та тĕлсĕр-ҫке!

Вăл вилнĕ Горкăра. Халь Мускавра
Вĕҫет тирекĕн мамăкĕ ҫемҫен.
Ку тепĕр траура ас тутарать,
Ас тутарать январь сивви ҫинчен.

Юр пĕрчисем ванмасăр кĕмĕлленнĕ
Ҫав аслă тупăк ҫийĕнче ун чух.
Тĕнче сывлани ассăн... Горький — Ленин
Пĕрлешнĕ ҫĕршĕн ĕмĕр вилĕм ҫук.

1936.

# Савни

* * *

Мерчен куçлă кĕмĕл çĕрĕ
Пĕр ята асăнтарать.
Эх, мăнтарăн сарă хĕрĕ,
Хыптарать те çунтарать!

Çеçкеленнĕ улма сачĕ
Тĕлĕрет-ха шăп-шăпах.
Алтăр çăлтăр, каласамччĕ:
Мĕнле пулĕ ман шăпа?

1923.

* * *

Хурама та пĕкĕ, йĕс шăнкрав
Сĕм вăрмана çурать янăрав.

Эх, аван-çке иккĕн каçпала
Çӳремешкĕн савнă туспала!

Тин ӳкейнĕ мамăк юр выртать
Кĕреке çитти пек вăрманта.

Анчах эрех-сăра тăкăнмасть,
Ман чун савни хушпу тăхăнмасть.

Юртах, утçăм, юртах тулхăрса,
Ан аклатсам, тусăм, хуйхăрса.

Нихăçан та, санпа пĕрле чух,
Ман куçăма куççуль нӳрлес çук.

Шур пĕркенчĕк витĕннĕ чăрăш,
Мана сăхлантарма ан тăрăш,

Çумра ларан хĕрĕн чĕрине
Ан ыраттар, пăхса ман çине...
1923.

* * *

Хура чĕкеç вĕçет çӳлелле,
Ик çуначĕ юлать хыçнелле.
Эпĕ шухăшлатăп малалла,
Ăрăскалăм юлать каялла.

Кăвик кăвакарчăн пулăттăм,
Карлăк çине ларса юрлăттăм.
Хуйхă-суйхă мĕнне пĕлмĕттĕм,
Куççуль сая ярса йĕмĕттĕм.

Çӳл тӳпере сӳнчĕ çут çăлтăр,
«Сан çăлтăру» тесе ан калăр.
Ман çăлтăрăм çĕртех, пĕлсемĕр:
Çулăм кăвак куçлă чипер хĕр.

Чĕвĕл чĕкеç чĕппи пулăттăм,
Шурăмпуçа хирĕç тухăттăм,
Сар хĕр шăналăкне сирĕттĕм,
Тутлă ыйхи тĕлне кĕрĕттĕм.

Вăратмăттăм эпĕ савнине,
Ыраттарса çамрăк чĕрене:
«Юрататăп, тусăм!» — теейсе
Хăварăттăм ăна илттерсе.
1924.

* * *

Ĕнер кăна тĕнче чăпарччĕ,
Паян вăл акă шап-шурах.
Хĕвел те именсе хăпарчĕ
Çанталăк тасине кура.

Ĕнер кăна тумхах та лакăм
Илетчĕ çул çинче чуна.
Паян ут кӳлтĕм те юрттартăм,
Пĕр сассăр вирхĕнчĕ çуна.

Çемçе те нӳрлĕ шурă юрĕ
Пусăрăнса çул пулнăçем
Ăшра ман çитĕнчĕ пĕр юрă,
Чĕре туптарчĕ сăмахсем.

Инçе-и, çывăх-и — çитетпĕр,
Тухатпăр асăннă çĕре.
Сиксе ларсам манпа, чипер хĕр —
Ман чун хавалĕ, ман чĕре!

Илемлĕ ир, çунаçăм хӳтĕ,
Тип утă унăн ăшĕнче.
Çапах пĕччен шăнса эп кӳтĕп,
Сана та сивĕ-тĕр пĕччен.

Сиксе ларсам манпа эс, тусăм.
Ларсам хăюллăн, тачăрах.
Çурма çула çитет ман утăм,
Иртсе те кайĕ сансăрах.

Иртсе кайсассăн, эс кӳренĕн,
Тăванăн курăнĕ çуна...
Пуçне ухса юртан çӳренĕм
«Чипер юл!» тенĕ пек сана.

1925.

* * *

Кĕтрĕм, кĕтрĕм эп сана, савниçĕм,
Йăмăхтартăм мăшăр куçăма.
Кантăка йăр-яр çуратчĕ çиçĕм,
Халь — хуллен пуçларĕ лăпланма.

Инçетре вылян шупка шевле те
Сан туту чечепĕн кулнă пек,
Тапхăр-тапхăр вăшăрхан çиле те
Пурçăн тутăр вĕлкĕшет пуль теп.

Ыйхăла пуçланă куçăма эс
Халь килсе уçассăн туйăнан.
Тĕлĕрсе ларатăп-çке, айван ăс:
Кĕтĕн... ыталарăн мăйăмран...

Кăкăрта кĕртех турĕ чĕремçĕм,
Сана чăмăртарăм хам çумма.
Çаплипех тӳнсе вара, пикемçĕм,
Тăснă эпĕ тутлă ыйхăма.

Шурăмпуç тула сенкеррĕн хыпнă,
Эпĕ аташатăп тĕлĕкре.
Вăранайрăм — ыталаса тытнă,
Чăмăртанă мамăк минтере.
1925.

* * *

Вăшăлах та вăшăл, ай, сулхăн çил,
Улма çеçкисене татса ан ил.

Ан çаратах ĕшнен илемĕшне,
Ӳпкелĕ-çке сана чечен ĕшне.

Çил мар иккен вăл, тусăмçăм, çил мар
Вăл — ман ăшри сиксе çунан кăвар.

Çеçке вĕçмест иккен, çеçке ларать:
Вĕçет ман шухă шухăш пуç тавра..

1926.

* * *

Уяр та сивӗ — кун илемлӗ!
Кун Пушкин сӑвви пек таса.
Ҫӑрха лаша кӳлсе килем-и,
Хӗр-тантӑшӑм, сана савса?

Ҫуна ӑшне тултарӑп утӑ,
Туллатнӑ тӑлӑп витӗпӗр.
Чӗремӗрте сӳнмеслӗх вут та —
Аҫта шӑнмашкӑн иксӗмӗр!

Эс — чаплӑ ҫӗр ӑсти, тееҫҫӗ,
Эп тӑрмашап сӑвӑпала.
Кӗрлеттерер-ха пӗр, поэзи
Чӑнне тупмашкӑн, тавралла!

Сырма хӗрри, ҫаранлӑх, улӑх
Шап-шур тумпа чӗнет пире:
Кӗрер тин ешӗл, тулӑх пулнӑ
Вӑрманалла, тухар хире...

Эс юр епле ларнине сӑнӑн,
Калча мӗнле юлать кӑҫал:
Шӑнмасть-и, хӳтӗ-и... Вӑл — санӑн
Хӗпӗртевӳ-ҫке, сан вӑй-хал.

Эп хам та ĕмĕрхи тыр-пулçăн
Чунне усратăп ăшăмра:
Йăран хура юлсассăн — уçăм
Килет, тееççĕ, начара;

Шур юр хур пек, хур пек ларсассăн —
Телей вара вăл тыр-пулçа.
Ун чух хаваслăрах ман сассăм,
Перам та хăвăртрах куçать.

Çитес çурхи хум-шавлă ӳсĕм
Хушать ман тимлĕ хастара.
Эс те, ерçӳ самантлăх тусăм,
Кăмăллăрах мана вара.

1926.

* * *

Хура тинĕс лăпкă мар,
Хура тинĕс хумлă.
Асăрхар-ха, асăрхар —
Мĕн амакĕ пулнă?

Пăнчă пек кăна карап,
Эс куратăн пулĕ?
— Эп куратăп та хăрап:
Е çĕтсессĕн çулĕ?

Кун пек çиллĕ вăхăтра
Пĕр урсан çанталăк —
Чарас çук ăна вара
Пилĕк-ултă талăк.

— Тепле, темĕн... Эс пĕлен.
Эп чухлаймăп лайăх.
Пĕчĕкрен хумсемпелен
Эс кĕрешнĕ кайăк.

— Ай, мăнтарăн! Пуçласа
Эс куратни тинĕс?
Пурнăç — тинĕс пуласса
Анланман эппин эс?

Кĕрешет карап инçе,
Те тухать, те путĕ...
Çавнашкал çак çĕр çинче
Кĕрешетпĕр пурте.

Эс пĕччен, тен, хăвна ху,
Хурланатăн хытă.
Тĕрĕс мар сан сăмаху:
Эп санпах-çке пытăм.

Хам та эп мăшкăлпала
Тарăхсаттăм питĕ...
— Юрĕ, юрĕ. Ан кала,
Эп ăнлантăм. Çитĕ.

Йăнăш турăмăр чылай.
Иккĕленчĕ шухăш.
Асаппа тухан çула
Ентĕ тек ан улăш.

Пăнчă пек инçе карап,
Вăл çапах хур пулмĕ.
Пурнăç — тинĕс, ăнланап,
Этем — унăн хумĕ.

1927. Сочи — Туапсе.

* * *

Тавтапуç çуралнă çĕршыва
Тавăрнишĕн ырă та сывах.

Тахçанах çак йывăç кĕпере
Эп курасшăн çуннăччĕ тепре.

Кĕпер урлă каçрăм та — çаран,
Ĕрĕхессĕм килчĕ ман çарран.

Шурути пĕркеннĕ сывлăма
Сирпĕтессĕм килчĕ чунăма.

Сулхăн шыв çăвать йăмра ӳтне,
Тăсăлса выртайăттăм ӳпне.

Сиктĕрмен шерпет пек çăлĕсем —
Сиплĕ, теççĕ манăн ял-йышсем...

Пĕр лаши ула, тепри хăла,
Шăварма анать-мĕн хĕр çăла.

Те палларĕ, те ют сын тӳрри,
Те палламĕш пулчĕ вăл юри?

Янратса кĕçенчĕ ула ут,
Янкăсланчĕ чунăм тепĕр хут

Утланассăм килчĕ ман пĕрле,
Чуп тăвассăм килчĕ сар хĕрне!

1927.

* * *

Мĕнле уяр! Ман ыйхăм çук.
Пĕр сан çинче çак каç ман шухăш.
Юн тунсăхпа вылянă чух
Юмах та, пурăнăç та хутăш.

Эс халь ик-виçĕ хут чипер,
Пăхсан ху пек те, ху пек мар та...
Юрла-ха «Чĕнтĕрлĕ кĕпер» —
Сассу чуна çунатлантартăр.

Юрла-ха. Лăпкă кассăма,
Арман умне аса илем пĕр.
Каç кӳлĕм лĕп тӳлек çырма,
Унта миçе шыва кĕмен-тĕр!

Хăвартăм эп тăван яла,
Хăвартăм, тусăм, хĕрхенмерĕм...
Хирте ак халь ула-чăла,
Йăрансенче — хуралнă эрĕм.

Çурхи шывсем юхса пĕтсен,
Каллех тапранĕ ешĕл курăк.
Пĕртен-пĕрех кил-йыш пĕччен,
Ана каллех эп çукшăн хурлăх...

Юн тунсăхпа вылянă чух
Пĕр сан ҫинчеччĕ манăн шухăш
Юрăпала ҫĕкленнĕ чун
Пурне те ăнкарать халь хутăш.

1927.

* * *

Ман çине пăхса пуçна эс ан пĕк,
Чунна сивĕ сисĕмпе имле.
Ман сана хăватлă талисман пек
Ĕненес килет, шанас килет.

Сивĕ сисĕм чĕрене шăнтать-тĕр,
Анчах вăл хăпартĕ ăс-тăна.
Эп сана халь пуç çапмашкăн хатĕр
Пĕр пăрланнă сисĕмшĕн кăна.

Тытса чарнă вĕри юн таппишĕн
Сума сăвĕ çур тĕнче сана;
Тинĕсре карапсăр эсĕ ишĕн,
Пуç тайтарăн вата Монблана.

Чи мухтавлă сăвăçă-чĕлхеçĕ
Сăмахсем тупаймĕ сан валли.
Пурте, пурте тĕнчере вилеççĕ,
Эс — вĕлермелли те чĕртмелли.

«Ах, Мадоннă!» — теççĕ, куç илмеççĕ,
Ăнланасшăн Рафаэль чунне.
Сан умна çав вилĕмсĕр илемçĕ
Шкул ачи пек тăрĕ ку чухне.

Сан сăнна тумашкăн сăр тупаймĕç,
Сан куçна кӳмешкĕн тĕс те çук.
Сана пурте калĕç: вăл асамăç,
Куçпăван вăл,— тейĕç пăхнă чух.

Ахаль мар хăватлă талисман пек
Эп курап сана ĕмĕтпеле.
Ман çине пăхса пуçна эс ан пĕк,
Чунна сивĕ сисĕмпе имле.

1927.

* * *

Как я хотел себя уверить,
Что не люблю ее...

М. ЛЕРМОНТОВ.

Часран часах хама эп шантаратăп
Сана тек юратмастăп пуль тесе.
Анчах мĕскершĕн-ха ман асăмра та,
Куç умĕнче те — эсĕ... шав эсех!

Мĕскершĕн ман чĕрем сана усрать-ши:
Сан илемне паранниле кăна
Е çав тери таса чунна кура-ши?
Пĕлме пултараймастăп эп ăна.

1927.

* * *

Тулли уйăх — лирикă çулпуçĕ —
Ак каллех сана ас илтерет.
Эс кулатăн, кăмăлу сан уçă,
Йăлтăртатрĕ шур шăл икĕ рет.

Эс кулатăн манăнми, пĕртен пĕр,
Хăвна çеç пилленĕ куллупа.
Кул, выля! Анчах ан иккĕлентĕр
Куçусем тăван сенкер тупа.

Сăвăçăн сăмахĕ сăн-сăпатлă,
Çавăнпа тупа та тĕссĕр мар.
Эп пĕрре çуралнă, пĕрре ватлăп,
Çавăнпаваскатăп та çырма.

Сăввăмсен кун-çулĕ хамран иртĕ:
Этем чунĕ ирĕкленнĕ чух
Шўлкеме-сурпан та, катан пир те
Сăвă чухлĕ кирлĕ пулас çук.

Эс кулатăн, кăмăлу сан уçă,
Мĕншĕнне пĕлетĕп, ан кала...
Тулли уйăх — лирикă çулпуçĕ —
Хутăшайрĕ кайрĕ санпала.
1928.

* * *

Сан ялу — мухтавлă Кушкă,
Ураму сан — Чечен кас.
Тусăм, кам-ши пирĕн Пушкин?
Кам ятне сума сăвас?

Сăввăмăр пит чухăн халĕ,
Сăвăсем çукпа пĕрех.
Пĕр Кĕçтукăн чун хавалĕ
Ялтăртатĕ ĕмĕрех.

Иртнĕ пурнăç сăн-сăпачĕ
Сăхлантармĕ тек пире.
Аталанчĕ урăх каччă,
Урăх хĕр халь Силпире.

Эсĕ ху та ĕнтĕ урăх,
Шўлкеме-тевет çакман.
Сăн-питў шупкалнă, шурă,
Çийўнте çўхе сăхман.

Пир кăнтарăмĕ те мар-мĕн,
Кĕнеке сан умăнта.
Аллу хултăрчă кустармĕ,
Вылянтарĕ кăранташ.

Ахалех сана чĕнет-мĕн
Яванса юхан Кăнна:
Эс унта шыва кĕместĕн,
Хур чĕппи кĕтен кăна.

Эп пĕлетĕп: ушкăн-ушкăн
Саншăн хаклă Чечен кас.
Çапах кам-ши пирĕн Пушкин,
Кам чапне пуçа таяс?

1928.

* * *

Чăвашран сан пекки эп курманччĕ,
Анчах ман пытарма халăм çук:
Хĕпĕртерĕ те чунăм... хурланчĕ
Санпала юнашар ларнă чух.

Сăмаху айĕнче шухăш урăх,
Вăл сана пăхăнтарнă пуль çав.
Çуркунне ешерен йывăç-курăк
Кĕркунне хăртмаллах вăл çулça.

Ĕмĕрлĕх нимĕн те çук-ĕçке,
Çутçанталăк пире — хăна килĕ.
Çитĕнсе çурăлайнă çеçке,
Сана камăн алли татса илĕ?

Асăмра темиçе сăн пур ман,
Кашниех хăйне майлă хитре.
Сан пекки эп çапах та курман,
Сан пекки кунта мар — ĕмĕтре.

1928.

* * *

Сан сăну çине те сулхăн ӳкĕ:
Çумăра вылять хăш чух шевле.
Санпала пиншер чăваш Анюкĕ
Иртнĕ çамрăк ĕмĕрне шеллет.

Куçусем ялан капла çиçеймĕç,
Тутусем те тĕссĕрленĕç, тен...
Ĕлĕкхи пекех санпа эп çепĕç,
Ĕлĕкхи пекех чĕлхем чечен.

Ĕмĕрте пĕрре кăна саватăн,
Пĕрне çеç чунтан хĕртет кăвар.
Ыттисем — е виççĕн, е тăваттăн —
Вĕсем пурте ют, вĕсем эс мар.

Вĕсем пурте сисĕнкĕсĕр сивĕ,
Чĕрене чĕртме пултарас çук.
Пĕр сана ман юррăм пырса тивĕ,
Пĕр санпа тĕлленĕп пĕччен чух.

Эс мана тĕл пулнăшăн ан ӳкĕн,
Эп сана ыранă тахçанах.
Çавăнпа пиншер чăваш Анюкĕн
Сăн-сăпачĕ те санпа танах.

1928.

* * *

Никам та ал сулса юлмарĕ.
Ют куранчĕ таван çыран.
Анчах та эсĕ... манпа мар-и
Çак пăрахут çинче пыран?

Хакла хумастăп кăтартуллă
Илем-эрешсене питех.
Ман хурлăх — ĕненӳллĕ хурлăх!
Тен, халь санпах пуль эпĕ те.

Ятран чĕнсе эс пăшăлтатрăн!
«Пăрахмăн-и? Пăрахмăн-и?»
Сан сăмахна эп хăвăрт татрăм,
Тупамçăм пулчĕ — чуп туни.

Ытарайми, анчах салхуллăн
Тăраттăн эс, каçарсамах.
Мĕн пур халиччеихи кун-çулăм
Вĕçсе вĕлтлетрĕ çав самант.

Сахал унта илемлĕ мусăк,
Пулсан та ӳкĕнĕççĕр мар.
Каçар мана иртнишĕн, тусăм,
Малашлăх ячĕпе каçар.

Эс çеç ăшра, эс çеç... Эхер те
Эс те вĕлт çеç вĕçсе иртсен,
Вара эп юратса пĕтернĕ,
Пĕтернĕ пурăнса та, тен...

Пулма пултараймасть! Эс манăн—
Чĕрен чи çепĕç чĕлĕхĕ.
Туятăн эс, эс ăнланатăн:
Чунăмăрсенĕн пĕр чĕлхе.

Эс — ман ĕçченлĕх, канлĕх, ӳсĕм,
Эс пурăнма хавхалатан.
Эс — çĕнтерӳ. Эс ман чи хӳхĕм
Сăмах. Эс вилĕмсĕрлĕх ман.

1928.

* * *

Я вас любил...
А. ПУШКИН.

Сана саваттăм эп. Тен, халь те
Сӳнмен-тĕр ман ăшра çав вут;
Тен, сан куçу ăна хускатĕ,
Чĕртсе ҫыптарĕ тепĕр хут,

Сана саваттăм эп: пĕр çепĕç,
Пĕр кӳлешӳллĕн тарăхса;
Пĕр сăмахсем пĕтсе килетчĕç,
Пĕр чараймастăмччĕ сасса.

Сана саваттăм эп. Тен, урăх
Нихçан та савас çук ун пек.
Чĕрем çинче çап-çутă хурлăх.
Асапăм çук. Вăл пулмĕ тек.,,

1928.

* * *

Нихăçан юрламăп, нихăçан! —
Тесе хам ăшра эп тупа турăм.
Анчах сан çине пĕрре пăхсан —
Иксĕлми пек туйăнать ман юррăм.

Ăнсăртран, пӳртре пĕр-пĕччен чух,
Эс пурри çинчен аса илсессĕн,
Чĕрене чĕртмесĕр тӳсме çук,
Сăвăпа хыпмасăр тӳсейместĕн.

Алла лекнĕ татăк-кĕсĕк хут
Ним те те мар вĕт ахаль чух пăхсассăн.
Ун чухне вăл — çулăм, вĕри вут,
Ялкăшать, çунать унта ман сассăм.

Саспаллисенче ман юн вĕрет,
Ман юнпа вĕсем çавраланаççĕ.
Салтаксем пекех ĕрет-ĕрет
Сăвă йĕркисем аталанаççĕ.

Эп вĕсенĕн командирĕ пек,
Эп вĕсенĕн ывăнми çар пуçĕ.
Парăнманнине çĕнтерĕпех,
Пăхăннисемпе ман кăмăл уçă.

Хăйсене хăйсем вĕсем хуçа,
Эп çĕнтернĕшĕн парне ыйтмастăп:
Никам умĕнче те хам пуçа
Ытлашши усмастăп та йăтмастăп.

Пĕр сана эп, сана çеç хăш чух
Чĕрене касса памашкăн хатĕр.
Анчах эс ăна йышăнас çук:
Хăвăн та, тен, ытлашши пулать-тĕр.

1928.

* * *

Ăçта пулсассăн та эс халĕ,
Кирек ăçта пулсассăн та,—
Санпа пĕрле ман чун хавалĕ,
Ман юррăм санăн асунта.

Пĕрре çеç мар юратăн, савăн,
Пĕрне çеç мар ыталăн эс.
Анчах пĕрехçи пулĕ санăн,
Асран ярайман пĕрне çеç.

Çынсем усламшăн çеç урассĕ,
Тесе мана эс ан кала.
Ман сан сăнна ялан усрасчĕ,
Илсе каясчĕ хампала.

Çынсем хăйсемшĕн çеç чĕтреççĕ,
Тесе те эс ан ӳпкеле.
Çут тĕнчере пурнать поэзи,
Çавна парне ман кӳмелле.

Парни вăл — хам та, ман савни те..,
Ана пĕлместĕн эс иккен.
Мана халь йывăр, йывăр питĕ;
Чĕремçĕм уйрăлчĕ икке!

1928.

*  *  *

Вăрман çара. Тумхах тупкаталать хире.
Çӳхен пăрланчĕ çырма шывĕ.
Чӳк уйăх çилĕсем саламатла хивре,
Мана халь урăххишĕн сивĕ.

Çанталăк мар шăнтать, шăнтать пĕр эс
çукки:
Сĕм каç та, тăрă кăнтăрла та,—
Умра пĕччен сĕтел е йышлă тус ĕçки,—
Сан патналла эп ăнтăлатăп.

Эс çеç асра, эс çеç... Пур иртнĕ ултава,
Пур сурана манса сан урлă,
Сана эп умăмри çап-çутă çул тăвап:
Санпа пурнать ман пултарулăх.

1928.

* * *

Ак тухрăм эпĕ Атăла та...
Каятăп, тусăм, сывă пул!
Асра сана эп ыталатăп,
Кăкру тавра ман сылтăм хул.

Туятăп акă: вирлĕ-вирлĕ
Тапать сан çитĕннĕ чĕрӳ.
Ăна халь чĕре-тантăш кирлĕ,
Мĕскер вăл сăвăри хĕрӳ!

Тăхта эппин пăртак, ан хуçăл,
Каймастăп эп таçта юта.
Малашлăх ячĕпе чун уçă,
Пĕчченлĕхĕм те çап-çутах.

Тĕреклĕ, çирĕп вăйăм-халăм,
Çанталăк çех пăртак йĕпе...
Шупашкара салам эп калăп
Хам тунсăх тусăн ячĕпе.

1929.

* * *

Хăçан та пулин, пурăнсан-пурăнсассăн,
Манма пуçласассăн, сасартăк пĕрре
Ярин юрласа ман умра уçă саслăн
Чăваш хĕрачи «Чĕнтĕрлĕ кĕпере»,—

Эп ӳкĕп хуйха, эп тӳсеймĕп, эп тухăп,
Куçа пытарса çынсенчен; тухсанах
Ас илĕп уявлă, шăв-шавлă та шухă
Пуçламăш яш кунăмсене, Хусана.

Ас илĕп çав юрă пек хумлă та хӳхĕм
Ман питĕм çумне шăлăнан çӳçсене.
Чĕрем тулли шеллĕм, ӳпкевĕм те ӳкĕм
Сасартăк çав аса илӳпе ӳсĕнĕ.

Ас илĕп апрель тумлавне, шурă çуртăн
Улах пӳлĕмне, ешерен пахчана...
Ĕççийĕ пуçланнă: экзаменччĕ... Куртăн,
Тĕл пултăн ăна — эс хăвна ачаннах.

Ачан янăрать ун сасси те, пĕчченĕн
Путса хамăр йăх кун-çулне шалалла.
Унпа, пĕр унпа иртнĕ кунăм чечен-мĕн,
Ун ылтăн уки чунăма явалать.

Хăçан та пулин—хулара-ши, ялтах-и?—
Пăртак сивĕнсе çитереххĕн, тепре
Ас илĕп сасартăк, яланлăх, йăлтах эп,
Илтсен ăнсăртран «Чĕнтĕрлĕ кĕпере».

Кĕпер чăлт та тумĕ: пусатăн, каçатăн;
Анчах ун айне сăвайланнă чĕре —
Çав юрăриллех — никампа нихăçан та
Тек пусăрнаймасть, ыратать вĕççĕрех!

1930.

* * *

Ан ӳпкелешсем, Сетнер,
Мĕншĕн çынна ӳпкелес?

Ман чун халь çак кĕвве ĕнерчĕ,
Тăван тăпра чĕннипеле-тĕр...
Ун чух кашни пăртак Сетнерччĕ,
Кашни пăртак Нарспиччĕ эпĕр.

Ман пурăнăçăмăн пуçламăш —
Нихçан асран кайми ял шкулĕ.
Мĕн чухлĕ савăнăç, кулянăш,
Хăюлăх, имену мĕн чухлĕ!

Вун иккĕре — вун виççелле-ши? —
Ман сисĕм пуçласа вăранчĕ.
Савниййĕн сачĕсем ем-ешĕл,
Савниййĕн куçĕсем кăвакчĕ.

Эп — чухăн çын ачи, юратнă
Хăюсăр, вăрттăн та салхуллăн.
Мĕн чухлĕ шанчăк эп çухатнă,
Мĕнле кăмăлăмсем ман юлнă!

Мĕн чухлĕ мĕскĕнленнĕ, ахăр,
Хавхаланан вĕри чунпа эп,
Ашра хыпăнтарсан пăлхавăр
Поэзин çăп-çăмăл çункавĕ!

Тасаччĕ ĕмĕт, шухăш çÿллĕ...
Кун-çул пурне те ÿпĕнтерчĕ:
Юратуран асилĕм юлĕ,
Чĕр сисĕмрен — шупка ÿкерчĕк...

1930. Тбилиси.

* * *

Çак самант сан çинче манăн шухăш,
Асăмра сан сассу — ян, çинçе.
Юнăм урнă Кура евĕр шухă,
Лăпланасчĕ — çыранăм инçе:
Çыран — эс, сан çинчĕ манăн шухăш.

Сакартвело [1] хĕвелĕ хĕрӳллĕ,
Хĕвелтен те хĕрӳ — юрату.
Тепĕр çур сехетрен тăрĕ юлĕ
Руставели чĕлхи... Кура, ту...
Сакартвело хĕвелĕ хĕрӳллĕ.

Ытарма çук грузин хĕрупраçĕ
Хĕвеле пула пуль хӳхĕм пит.
Куçусем санăн çулăм упраççĕ.
«Сывă пул,— терĕн эс,— мшвидоби!» —
Грузинла янăрать çак çу касĕ.

Сывă пул, Кетеван, сывă пулччĕ!
Ман пекех çул çинче эс паян.
Курнăçма пӳрмесен — сăвă юлчĕ,
Тĕнчене, тен, вăл тухĕ кайран...
Сывă пул, Кетеван, сывă пулччĕ!

---

[1] Сакартвело — Грузи (грузинла).

* * *

«Кăтра шур пĕлĕтсем тăртаннă,
Çумасть пуль çумăр,— терĕн эс,—
Пуçелĕк пултăр — чăматанăм,
Сан аçамна çие витес.

Айра — лĕпленнĕ сарă хăйăр,
Вăл вĕриленĕ час каллах.
Эпир халь иккĕн-çке, ан хуйхăр,
Тăнла-ха, тинĕс мĕн калать...»

Çапла мана эс йăпататтăн.
Эп — Коновалов евĕрлех —
Пĕлĕтелле пăхса, тăнланăн
Выртаттăм, тусăм, месерле.

...Шавлать, пуплетчĕ Хура тинĕс
Тĕнче çинчен, кун-çул çинчен...
Çук, тавăраймăн ăна тин эс —
Шăвать иккен, иртет иккен.

Юрлать, юрлатчĕ тинĕс хумĕ —
Кĕске такмаклăн, вăрăммăн,
Пĕр хурлăн, пĕр хаваслăн... Ку мĕн?
Ку — ман хавасăм, хурăм ман.

Сĕм кăнтăр касĕ тĕпсĕр тарăн.
Эпир — çап-çамрăк этемсем,
Таçтан тĕл пулнă та, тăванăн,
Выртатпăр шиксĕр пĕркенсе...

Эп маннă эс хĕрне, юлташăм!
Мана, тен, уншăн намăсрах?
Кайран сана эп пач çухатрăм,
Анчах çав кас ялан асра —

Çав пĕр тумтир айĕнче иккĕн
Ача пек чыслăн çĕр касни.
Ах, ма мана, ма халĕ пит хĕн
Ун пек пулма, пĕлместĕн-и?

1930.

* * *

Туллилĕх. Август перекечĕ,
Чĕрĕлтететчĕç вĕршĕнсем.
Хутран лĕп çумăр пĕрĕхетчĕ.
Çĕмел ларатчĕ çĕршĕнсе.

Вăрман. Çăкалăх, хырлăх — хутăш,
Çулланнă йывăç — йывă, тан.
Е яр уçланкă, чăтлăх уртăш...
Çĕршыв — чĕр Шишкин, Левитан.

Сайра сыхланнă пĕрчĕк-пĕрчĕк
Хăмла çырли юлашкисем.
Эс пит хавас, эс питĕ пĕчĕк,
Пăртак тупмашкăн май килсен.

Эс алхасатăн. Ик çырлаллă
Сапак татса мана сĕнен.
«Пĕри, шупки, ку — эпĕ, паллă,
Тепри, хĕрли, ку — эсĕ»,— тен.

Ах, тусăмçăм! Шупки — тасалăх,
Ман ĕмĕт вăл, тулас сĕткен...
Ан хапсăн, куçăм, ан ас, алă,
Теетĕп халь эп инçетрен.

Нумай çырла татса эп илтĕм:
Пĕри — телейччĕ, тепри — шар...
Пытан, ăплан, ман çут асилĕм!
Эп тивĕç мар, эп тивĕç мар...

1933.

## КУÇАРНА ХУШАРАН

Ыйхăм çук. Татах, татах-шим
Хускалса ĕлĕкхисем
Канлĕхе манне татасшăн,
Чăнлăха тĕлĕклесе?

Шалта куç, янравлă сасă,
Хупă кăмăллă, йăваш...
Ма мана сывлатнă ассăн
Çав хĕрарăм, çав чăваш?

Халăх халĕ, иртнĕ чиксĕр
Хĕн-асапĕ — пĕтĕмпех
Курăнман-ши çав сăн витĕр
Кинора кăтартнă пек?..

Чӳречен пĕр куçĕ уçă:
Вĕлтлетет пуçламăш юр.
Çăкасем çара та усăк.
Улать йытă. Уйăх пур.

Лампă. Даль... Графин. Онегин.
Аллă çиччĕмĕш çавра.
Тĕрĕсех пуль çав, коллегăм:
Эпĕр пурте çапларах.

* * *

Пурте — савни те мана, савманни те,
Чунăм тĕпне йĕр хăварнă пулсан,
Пурте паян ман уявăма килтĕр
Чи кăмăлланă тумне тăхăнса.

Ку юлашки ман тулли кĕреке-тĕр,
Тек нихăçан капла хыпмĕ талантăм.
Ларăр кĕрсе, пикесем-чиперсемĕр,
Итлĕр: сиртен пĕрне çеç эп сăхлантăм.

Курăр: ташша пĕрне çеç чĕнтĕм эпĕ.
Пинĕн чĕре алăкне ав шаккаç.
Пушă хирти шывсăр типнĕ тĕве пек
Чунĕ вĕсенĕн те, ман та çак каç.

Шырăр çăл куç, сывлăм-юн пĕрĕхсемĕр!
Сирпĕнтĕр сиплĕх йĕри-тавралла.
Ан ӳкĕн эс, чĕрӳне вĕçертсен пĕр:
Ванĕ те вăл чăмăртанĕ каллах.

Сирĕншĕн, çур тутăра кăна сирнĕшĕн,
Пĕр сывлăшпа çеç сывланă пулсан та,
Е куçăмпа çеç киленнĕ-и — сирĕншĕн
Ман сăвăпа кăпăкланнă пуç-алтăр.

Сирĕншĕн, кантăр кунта тĕлĕкленнĕшĕн,
Каç çывăрмасăр хитре асапланнăшăн,
Пурнăç пăрне сирĕнпе ирĕлтернĕшĕн,
Чăрсăр чуна сирĕнпе тытса чарнăшăн!

Сирĕншĕн ман шерпетле сĕткенсем кĕçĕр
Çак сăвăра сăрхăнаççĕ туп-туллăн.
Мейĕрччĕ савăш курки, ас тивсе ĕçĕр!
Ме çул курки, ăсанан яш кун-çулăм!

Шăппăн шуса çывхарать Вальпурги çĕрĕ,
Шăнк варринче эпĕ — Фауст-асамçă.
Эй, Мефистофель! Эп ырлăх курки ĕçрĕм,
Çак саманта эс яланлăх чарсамччĕ!

1935

## ХĂНАРА

Чӳрече ҫинче чечек,
Ячĕ ун — Бухар кăни.
Эп паян каймастăп тек,
Эп паян — Пӳлер хăни.

Ҫутă куҫлă ҫурт хуҫи —
Икĕ ҫивĕтлĕ инке.
Ҫавраҫа ун хул пуҫҫи,
Ун ури — чипер йĕке.

Ун тевечĕ хĕррипе —
Икĕ ярăм хурт куҫҫи.
Тулăн-шалăн ерипе
Кумкалать вăл — чун уҫҫи.

Йĕрĕлче пек тутинчен
Тухрĕҫ ăшă сăмахсем,
Ҫак ҫынна эп куриччен
Чĕлхемре пулман вĕсем.

Йĕкĕр аврлă чăмра
Йӳҫсе ҫитнĕ мăрсала.
(Ҫав ятпа ку тăрăхра
Ҫӳретеҫҫĕ сим пыла.)

Çимĕсрех тĕспе çиçсе
Чашкăрать тулли курка.
Пăтăпа тулса пиçсе
Ларчĕ ак касман кăркка.

Чавсине хитрен авса,
Инке тытрĕ куркине.
Куçăмран тӳрех пăхса,
Тăчĕ вăл ури çине:

«Тав та чыс хăнамăра,
Пурнăç кайтăр малалла!..»
Тепĕр тапхăр сар чăмра
Чашăлтатрĕ мăрссала.

Çук, каймастăп эпĕ тек:
Эп паян — Пӳлер хăни.
Чӳрече çинче чечек,
Ячĕ ун — Бухар кăни.

1935.

* * *

Юмаххăн кĕтĕн ман пата,
Юмаххăнах тухса каятăн.
Анчах эс, кам пулсассăн та,
Çĕре çитех мана таятăн.

Паян каларăн пĕр сăмах:
«Манпа эсех пыратăн»,— терĕн,
Эппин эпех? Эппин чăнах?
Эппин нимрен те именмерĕн?

Тавах, чиперĕм, тавтапуç!
Эс уншăн хуçăлса аманăн.
Аçта уçсассăн та вăл куç —
Пиллеп ăна: вăл сан, вăл манăн.

Ăна эп курмăп нихăçан,
Вăл манăн чĕлхене пĕлеймĕ.
Кала ăна: хăюллă, тан
Юратуран вăл тĕвĕленнĕ!

* * *

Савниçĕм! Ман анне тăван чĕлхипеле
Ача чухне мана калатчĕ те сăмах,
Сана ман халь çапла, çапла чĕнес килет,
Тăп-тăп кĕлеткӳпе çумма чăмăртасах.

Ман ылтăн çупкăнăм, ман иксĕлми сĕткен!
Санпа иксĕмĕртен калчаланан чуна
Тăртаннă кăкăрна пĕрремĕш хут сĕнсен,
Чĕнсемччĕ çав ачаш сăмахпалан ăна.

* * *

Эс манăн халăхăм çинчен,
Çĕршыв çинчен ыйтатăн, тусăм.
Пăх ман çине: мана пиччен,
Тӳнтер те пĕлтĕн кутăруçăн.

Супан этемлĕх несĕлне
Хунсем касса кĕнĕ тăваррăн,
Истори анисем çине
Шух варвăрсен ятне хăварнă.

Эп — çав тăвар. Пĕр пĕрчĕ пек.
Ман юн кайран нумай пăтраннă.
Пин çул ытла пăлхарччĕ эп,
Унтан мана чăваш ят панă.

* * *

Нумайранпа эп макăрманччĕ,
Паян — вăтанăçăм таçта...
Чĕрем кӳлешӳпе тăртанчĕ,
Улман-улман куççуль çăтап.

Çук, тусăм, çук, Отелло мар эп,
Эс ху та Дездемона мар:
Мĕнле хавас сана эп парăп —
Çаплах асап мана эс пар.

Эс манăн сăнăма пытартăн,
Мĕскер тăватăн эс унпа?
Пĕлетĕп: витĕнĕ сăпатăм
Çурма çултах сивлек хумпа.

Эс ăнланаймăн, ырă тусăм,—
Салхуллă куллăм айĕнчен
Мĕн тилмĕрет ман хурлă куçăм,
Эс ăнланаймăн... нумайччен!

* * *

Мускат пек анăç чӳхенет,
Ялтра-кĕрен мускат.
«Чипер юл, тусăм!» илтĕнет.
Е, çитĕ, ан хускат...

Ачашшăн хум лăпкать кимме,
Эп — хытăрахчĕ! — теп.
Эп хатĕр çакăнта вилме:
Санпа пулаттăм эп.

Асар-писер çил тухтăр-ин!
Тен, кам пĕлет, пире
Кăларĕччĕ пĕр-пĕр дельфин
Ытарайми çĕре.

Сан кăмăллă кĕввӳсене
Пĕрре тăнласанах —
Тӳсеймĕ çурăмĕ çине
Лартмасăр вăл сана.

Мана... Хăварăн-ши вара
Мана ун чух пĕччен?
Юлсассăн — юлашки юрра
Эп юрлăп сан çинчен.

Мускат çăралчĕ хуп-хурах,
Мухмăрлатать мускат.
Юрла эппин эс çав юррах,
Хускат чуна, хускат!

* * *

Тинĕсрен тухать çур уйăх,
Парăс евĕр карăнса.
Курас çук сана эп урăх,
Манас çук çав парăса.

Сулхăн çил вĕрет кас-кассăн,
Хум хăпать те хум çапать.
Асунта юлать ман сассăм,
Ман салхуллă сăн-сăпат.

Çĕр пулсан пĕр ешĕл улăх,
Çын пулсан кăтра путек,
Ахăр, пулмăттăм салхуллă
Нихăçан та эпĕ тек.

Пур-мĕн хăйăрлă пушхир те:
Шывсăр, куракăсăр, шарак.
Еметленнĕ пĕлĕт иртĕ
Çумăрне памасăрах...

Хум-хум урлă, çиле майăн,
Сывлăша вăр-вар уçса,
Сана час вăл илсе кайĕ —
Уйăравçă парăс çав.

Лимон-шыв ӗҫсе, ӗшеннӗн,
Ҫывхарсассӑн Босфора,
Кунталла пӑхса, чеченӗм,
Мана асӑн эс вара.

Хумсене йӑлт хӑнӑхсассӑн,
Чарӑнсассӑн Стамбула,
Ӑшунта сывла та ассӑн,
Кулянмасӑр ал сулсах!..

Тинӗсрен ҫӗкленчӗ уйӑх,
Шыв ҫӗрле те кӑн-кӑвак.
Курас ҫук сана эп урӑх,
Мӗншӗнне пӗлен хӑвах.

* * *

Ак, тинĕс, эпĕр иккĕнех:
Вăл кайрĕ, тинĕсĕм, вăл кайрĕ...
Тен, манăн хурлăх кĕввине
Эс итлеме хавас та мар-и.

Анчах кама калас-ха ман?
Сан хумусем асамлă симĕс...
Эп ас туман, асăрхаман;
Эс ху ăна вăрларăн, тинĕс!

Çапах та маншăн эсĕ — тус,
Мана витнех кун-çул тăварĕ.
Ман пурнăç — тăтăш ăсату...
Вăл кайрĕ, тинĕсĕм, вăл кайрĕ!

1933.

# Хура перкенчек

Ытарайми чипер чечексене
Татса илсе кĕпе умне тиретпĕр,
Татсассăнах çеçки типессине
Ма халиччен пĕлесшĕн мар-ши эпĕр?

## СААДИ ШИРАЗИ.

* * *

Урхамахăм пит канăçсăртан
Эп инçе çула ăна юрттартăм.
Ман умра халь шăрăх Туркестан,
Чей ĕçме кĕрсе кукленсе лартăм.

Чечек чейĕ тутлă та çăра,
Çырла-çимĕç тĕрлĕрен ак янтă.
Кăпăш çеç минтерĕ те хыçра,
Ун çумне эп шухăшлăн таянтăм.

Чей хуçи, чалланнă мăк сухал,
Тинкерсе пăхать мана пĕр тапхăр.
Ман пекки ытла та-мĕн сахал,
Çавăнпа вăл тинкерсе пăхать-тĕр.

Тинкерех, тинкер, япшар хуçа!
Анчах халăх кунталла пит шухă.

Çĕтсе юлнӑ янкӑс сӑвӑçа
Çак çĕрте пĕр эсĕ хапӑл ту-ха.

Чыслӑ, ырӑ санӑн чейхана,
Сывлӑхушӑн чей тултарса парччĕ.
Эс хуçа пулсассӑн, эп — хӑна,
Хӑнаран хуçи писекен марччĕ.

Ирттерсем мана эс тĕпеле,
Унта пурччĕ урӑхла пĕр пӳлĕм.
Унта сан чипер хĕрӳпеле
Курнӑçма эп пулнӑччĕ каç кӳлĕм.

Унта пурçӑн чаршавсемччĕ сан,
Читлĕхре юрлатчĕ сарӑ кайӑк.
Ирттерме хӑймастӑнах пулсан,
Пĕр ӳпкевсĕр эпĕ тухса кайӑп.

Пĕр ӳпкевсĕр... тепĕр кунчченех
Çапла çеç хам ӑшӑмра эп шутлӑп:
Астивмесĕр юлнӑ кучченеç
Çиме лартнӑ çимĕçрен те тутлӑ!

* * *

Пĕлтерсем мана эс, караванçă:
Камшăн çак пуянлăх тиенет?
Кам валли ку мамăка аран çеç
Утмăл тĕве çакрĕ ик енне?

Тен, Багдад таран каймашкăн тивĕ,
Эс унтах утасшăн-и çуран?..
Шахразадă явнă çичĕ çивĕт,
Çиччĕшне те пурçăн хăюран.

Тен, çулу Тегерана çитерĕ,
Вăл кунтан пит пулмĕ те инçе.
Риза-Шах керменĕ пит чипер-и?
Риза-Шахăн сарă хĕр миçе?

Вĕсене пĕлетĕп эпĕ лайăх,
Ан пытар, ан илĕрт те ан тун:
Вĕсем пурте тыткăнри сар кайăк,
Хура чатăр — савăнăçсăр тум.

Е пурне те вăл пĕр пек саватъ-и?
Е чăнах та пулĕ тетĕн-и?
Тахçанах çĕре кĕнĕ Саади
«Çут тĕнче илемĕ — хĕр» тени?

Сăвăçсемшĕн Перçси халь те капăр:
Роза, перççĕк, имĕш, апельсин...
Анчах пур-тăр çав унта, çук мар-тăр,
Кун çути курасшăн кĕçĕн çын.

Çавăнпа каçар, караван пуçĕ,
Санпала çул тытмăп эп унта:
Розă-перççĕк кăмăла, тен, уçĕ,
Хура чатăр — хурлăх поэта.

* * *

Ашхабад тăрринче çутă çăлтăр —
Пăхсан камăн чунне савăнтармĕ?
Ман савнин куçĕсем йăлтăр-йăлтăр;
Ашхабад тăрринче çутă çăлтăр,
Вăл çапах вĕсенчен çутă мар-мĕн.

Эп пĕлместĕп: те слива, те иçĕм
Пахчана çав тери илĕртеççĕ.
Мĕнпеле танлашать-ши савниçĕм?
Эп пĕлместĕп: те слива, те иçĕм,
Те вăл тин пиçекен тутлă перççĕк.

Ак вăл, акă çĕршывăн çăтмахĕ:
Хĕр арки çиййĕнче выртса кан та —
Сан чĕрӳ ыратмашкăн пăрахĕ,
Ак вăл, акă çĕршывăн çăтмахĕ! —
Тесе калĕ ун чух кирек кам та.

* * *

Савнӑ тусӑн ҫепӗҫ пӳрнисем
Муталаҫҫӗ манӑн кӑтрама.
Ан муталасамччӗ, ан тивсем,
Унсӑрах ман пуҫӑм пӑтранать.

Хумханать ав ватӑлнӑ чинар,
Эс пӗлместӗн ҫавӑ мӗншӗнне:
Сан тусу ларать те юнашар —
Инҫетри такамшӑн ӗшенет.

Кам сӑнне усрать вӑл асӗнче,
Кам-ши юлнӑ ку йӑваш ачан?
Ах, инҫе вӑл, тусӑмҫӑм, инҫе...
Курас ҫук ӑна эс нихӑҫан.

Сан пек кӳрнеклӗ те чечен,
Анчах чатӑр мар-ҫке, тутӑр ҫех..
Е тепре ӑна эп куриччен
Вӑл пулса юлсассӑн пуш чечек?

Пушӑ мар та авӑ — кӑн-кӑвак
Йӑсӑрланчӗ ҫурӑлнӑ сирень.
Татса пар мана эс пӗр сапак,
Асӑнмалӑх эп ӑна тирем.

* * *

Хамаспюрăм, савнă Хамаспюр!
Эс пĕлместĕн — мĕн вăл шурă юр,
Эс пĕлместĕн — мĕн вăл çил-тăман,
Нихăçан эс кĕрĕк тăхăнман,
Хамаспюрăм, савнă Хамаспюр!

Эп çуралнă сулхăн çурçĕрте,
Çавăнпа ас илтĕм юр-кĕрте.
Çавăнпа чĕрем те ман пăртак
Лăпкăрах тапать-тĕр кăкăрта.
Эп çуралнă сулхăн çурçĕрте.

Мĕн калас-ха манăн, мĕн калас?
Тултаратăн пулĕ мăссалас,
Хăналатăн пулĕ хăнана
Е хăвна тăвам-и эп хăна...
Мĕн калас-ха манăн, мĕн калас?

Ах, илемлĕ пирĕн кĕреке
Сыхласа пулать-ши тĕреке?
Темех мар та çак йăваш эрех —
Ӳсĕртен мана эрехсĕрех.
Ах, илемлĕ пирĕн кĕреке!

Çухатмарăм пулĕ-çке тăна? —
Çаврăна пуçларĕ чейхана,
Тултарса лартайнă пиала
Тӳнсе кайрĕ, ӳкрĕ аяла...
Çухатмарăм пулĕ-çке тăна?

Хамаспюрăм, савнă Хамаспюр!
Инçетре ман тепĕр тусăм пур.
Сан пекех вăл çамрăк та вĕри,
Тен çунать-тĕр маншăн ун чĕри,
Хамаспюрăм, савнă Хамаспюр!

* * *

Уйăх çак каç асамăç,
Тек çăлтăрсем асаймĕç:
Кам вĕсене сӳнтерчĕ —
Паллă ăна çын терчĕ.
Уйăх çак асамăç...
Темшĕн мана халь намăс.

Тусăмçăм! Эс-и? Леш-и?
Кам çумĕнче ирĕлес-ши?
Пурĕ пĕрех мана та,
Саншăн кăна пĕр мар-тăр.
Тусăмçăм! Эс-и? Леш-и?
Тахăш чуна илешĕ.

Чим. Нимĕскер те ан чĕн,
Тин çăлтăрсем пытанчĕç,
Ав юлашки йăр шурĕ,
Сĕм пĕлĕте йĕр турĕ.
Чим. Нимĕскер те ан чĕн,
Тен, юлашки вăл манччĕ.

Хам та пĕлместĕп халĕ:
Тахăш малтан улталĕ?

Темĕн телейĕм пӳрĕ,
Тахăш манпа чăн тӳрĕ?
Хам та пĕлместĕп халĕ —
Тем ыранхи кун калĕ?

* * *

Капет-Даг хыçне хĕвел пытанчĕ.
Пахчана эп тухрăм уçăлма.
Нихăçан та кунашкал пулманччĕ —
Кăшăлларĕ шухăш пуçăма.

Нихăçан та паянхи пек тарăн
Кулянса курманччĕ ĕлĕкрех.
Чуна çывăх «мĕскĕн» те «мăнтарăн»,
Пурăнатăп хурлă тĕлĕкре.

Кăмăллă эс маншăн, лăпкă Ази,
Юрататăп сулхăн пахчуна.
Хĕрĕсем те хĕтĕртсех пăхаççĕ,
Çапах темшĕн çунмаллах çунап.

Тусăм, тусăм, Туркестан илемĕ!
Юррупа пулин те йăпатсам.
Ман юрра эс сахал мар итленĕ
Е татах юрлам-и эппин хам?

Инçетре, лере ман çĕрĕм-шывăм,
Унта пурччĕ сан пекех пĕр хĕр.
Эп кайсассăн эсĕ мана шырăн,
Анчах уншăн халĕ йĕмĕпĕр.

Кăкăру сан — чăмăртаннă мамăк,
Пӳ-сийӳ — тӳп-тӳрĕ кипарис.
Нихăçан та эпĕ сана манмăп,
Чăвашла пĕлместĕн пулсан — сис.

Тăхăнса курман эп пурçăн-пархăт,
Тегеран халачĕ маншăн мар.
Анчах эп те ыйткалакан мар-ха
Ăрăскал çуккишĕн макăрма.

Сан арку çинче ман ăрăскалăм,
Сан куçу — эп тилмĕрнĕ тивлет.
Эс мана «эп санăн» тесе калăн,
Ман çапла кăна калас килет:

Нихăçан та пулас çук ман мулăм,
Кунта «санăн» тетерет укçа.
Сан валли усратăп эп пĕр хулăм —
Тинкерсе пăхан хура куçа.

Çавăнпа, санран эп уйрăлсассăн
Ман çинчен эс юрласа ярсан,
Аякран, тен, илтĕнĕ ман сассăм:
— Эсĕ ман пулсассăн, эп те сан...

* * *

Тӳпере ҫăлтăр нумай,
Ярăнаҫҫĕ йăр та яр.
Лар-ха, тусăм, ман ҫума,
Тӳпере ҫăлтăр нумай,
Лар-ха — иксĕмĕр шутлар.

Ҫамрăк уйăх — шăп ҫурла,
Вăл вырать шур пĕлĕте.
Савăн, тусăмҫăм, юрла!
«Ҫамрăк уйăх — шăп ҫурла»,—
Тесе юрлăп эпĕ те.

Эс чăнах ĕнтĕ ача,
Анчах хам эп миҫере?..
Сана парĕҫĕ качча,
Эс чăнах ĕнтĕ ача,—
Парĕҫ ватă имшере.

Аҫу илĕ саншăн мул,
Илĕ чаплă караван.
Мана калăн: «Сывă пул!»
Аҫу илĕ саншăн мул,
Эп мĕскер ыйтам санран?

Уйăх тулнă каç пулсан —
Пулĕччĕ вăл ман чалма.
Тен, мана та аçу сан,
Уйăх тулнă каç пулсан,
Пултараймĕччĕ чарма.

Анчах уйăх вăхăтчен
Санпа маншăн тулас çук.
Эс те, эп те пĕр-пĕччен...
Çамрăк уйăх вăхăтчен
Улталать те çав хăш чух.

* * *

Мăссалас пек вĕрекен сĕткенĕм,
Ахалех эппин сăрхăнса юх...
Ачаллах сана эп ĕненеттĕм,
Анчах эс калатăн халь: «Аюх!..»

Ах, мĕскершĕн каламастăн хыттăн,
Ма кулса калатăн эс ăна?
Мулăм çук пулсассăн, хам эп — ылтăн,
Хам кунта хисеплĕ эп хăна.

Е вăл саншăн нимĕнех те мар-и
Сăвăра эп çулăмпа çунни?
Чăвашсем-и е туркмен-тутар-и,—
Пурте Ази тăвĕсен çынни.

Çавăнпа çак ешĕл Хĕвелтухăç
Яланах туртатчĕ ман чуна.
Вăхăт çитĕ: пурте пĕр йăх пулĕç,
Халлĕхе кашни хăйле çунать.

Кашни сыншăн хăй çуралнă çĕрĕ
Пахарах пуль çавă тĕнчере;
Анчах эс кала-ха, Перçси хĕрĕ:
Камшăн халь тапать-ши ман чĕре?..

Хĕрелес-и манăн, ӳкĕнес-и
Е каллех ĕнентĕм-и сана?
Е, умна выртса йĕрсен те, эсĕ
«Аюх!» çеç теесшĕн-и мана?

* * *

Уйăхран эп ыйтрăм: ма эс, уйăх,
Тĕксĕмленнĕ тивĕçсĕр? — тесе.
Вăл каларĕ: сана пуснă хуйăх,
Çавăнпа сĕмлерĕм хам тĕсе.

Çăлтăртан эп ыйтрăм: ма эс, çăлтăр,
Ярăнатăн, терĕм, йăр та яр?
Вăл каларĕ: кăмăлу çуталтăр,—
Ни ачаш ан пул эс, ни хаяр.

Шăпчăкран эп ыйтрăм: ма эс, шăпчăк,
Юрламастăн, терĕм, юрруна?
Вăл каларĕ: сан чĕрÿ пит шăпчĕ,
Хускатма хăймарăм эп ăна.

* * *

Паян темшĕн Капет-Даг салхуллă,
Ун çине пăхсассăн ху пуç усăн.
Мĕн шутлать-ши чикĕри çак улăп —
Эс пĕлместĕн-и, юратнă тусăм?
Паян темшĕн Капет-Даг салхуллă.

Шухăшпа касăм-ха эп ун урлă,
Хурассан çĕршывĕн ешĕл сачĕ...
Пурнăçра телейсĕр те хĕн-хурлă
Фирдоуççи сăвăçпа Саади...
Шухăшпа каçатăп эп ту урлă.

Эс Саади юррине пĕлен-тĕр,
Çĕр çинче вăл тĕрĕслĕх шыранă.
Юрласа кăтарт-ха, чун килентĕр,
Чуна уçтăр сан тăван Иранă.
Эс Саади юррине пĕлен-тĕр?

Манпа чух ан хуйхăр та ан ютшăн,
Час ак сирĕлĕ хура пĕркенчĕк.
Ав хĕвел те пĕр самантлăх — шӳтшĕн —
Пĕлĕтпе сан евĕрлех пĕркенчĕ.
Манпа чух ан хуйхăр-ха, ан ютшăн.

Эс Саади юррине мансассăн,
Сана хам эп юрласа кăтартăп.
Тен, танлашĕ уннипе ман сассăм,
Тен, ман юрă та сана ют мар-тăр,
Эс Саади юррине мансассăн.

* * *

Шав чĕвĕлтетет сар кайăк...
Каç. Каç пулсан та лайăх.
Эс шантарсаттăн: «Пырăп...»
Каç. Каç пулсан та ырă.
Кĕтĕп пăртак та — кайăп...
Шав чĕвĕлтетет сар кайăк.

Ах, кĕçĕрхи çанталăк!
Хупмăттăм эпĕ алăк.
Хупмăттăм эп чӳрече те —
Çил-шăпăрлан йӳтетĕ.
Ах, кĕçĕрхи çанталăк!
Пулмĕ-ши вăл çулталăк?

Ман куçăмран эс ан пăх,
Сывлăм куççулĕ ан тăк.
Уйăх пире сыхлать-тĕр,
Халь юнама вăл хатĕр.
Ман куçăмран эс ан пăх:
Уйăх манран та антăх.

Ан ӳкĕтле, Наадă,
Эп тахçанах шанатăп.

Ассӑн сывланӑ сасӑ
Камӑн вӑл, сан пулмасӑр?
Ан ӳкӗтле, Наадӑ,
Пурӗ пӗрех манатӑн...

* * *

Тантăш-тусăм, ма сывлатăн ассăн?
Е сĕм чатăр çеç таса тивлет?
Мана темшĕн, сан çине пăхсассăн,
Тухъяпа тевет аса килет.

Вĕсем маншăн кăмăллă та капăр,
Туркестан Нарспийĕ эс пулсам!
Ан тив, пуçăм ман пӳкле çухалтăр,
Эп çапах та Сетнерех пулам.

Çак çĕрте пĕр эсĕ мана çывăх,
Пĕр сана эп хатĕр итлеме.
Анчах çут тĕнчешĕн пысăк çылăх
Пытармашкăн пӳрнĕ илеме.

Мăхаметăн пулнă йышлă арăм,
Вăл кăларнă чатăр-паранша.
Паян тин эс вĕсене ан парăн,
Коранне те паян тин ан шан.

Çакна çеç ан манччĕ, Хамаспюрăм:
Эпĕр пурте — шанакан çеçке.
Кама кирлĕ тупăкра çак юрă?
Никама та кирлĕ мар-ĕçке!

Ах, мана сĕм чатăр — чĕрĕ тупăк
Э пĕрех-и саншăн каçпа ир?
Çĕр айне кĕрсессĕн кусна хупăн,
Çĕр çинче тархасшăн ăна сир.

* * *

Хурассан çĕрне эп çитеймерĕм,
Кĕреймерĕм чаплă Шираза.
Шаганэ мана савса чĕнмерĕ
Чĕннĕ пек леш сарă вырăса.

Ал тăссан çитес пекехчĕ Перçси
Капет-Даг сăртне хăпарнăçем.
Емĕте ачашшăн илĕртеççĕ
Чăвашра курман чечекĕсем.

Кĕп-кĕрен çеçкеллĕ олеандăр
Хупăрлать юратнă мăшăра.
Перс пики, ан тив, санран вăтантăр,
Уншăн эс пĕрре те ан хăра.

Ан хăра, санпа вăл лармасассăн
Сатри симĕс чатăр айĕнче.
Пĕччен чух кĕтсе сывла эс ассăн,
Вара тин илемлĕ çут тĕнче.

Вара тин эс туйăн та ăнланăн
Ма унта кинжал нумаййине,
Ма хăюсăр питлĕ чипер Лалăн
Куçĕсем пăхмаççĕ сан çине...

Хурассан çĕрне эп çитмесен те,
Кĕмесен те чаплă Шираза,
Нумай куртăм, савăнтăм, кӳрентĕм
Çĕр çинче телейлĕх шыраса.

* * *

Мĕскер калам сана юлашкинчен,
Ансăртранах юратнă Ашхабадăм?
Кичем те хурлăх, хурлăх та кичем...
Мĕскер калам сана юлашкинчен
Е эп йăлтах ĕнтĕ каласа патăм?

Е сан валли ман çамрăк чĕрере
Юлмарĕ пĕр ăшă сăмах та урăх?
Хăçан килсе курайăп-ха тепре,
Хăçан ирхи çӳçенчĕк сенкере
Ĕлĕкхи пек савса эп юрă хурăп?

«Сыв пул!» тени кăмăлăма хуçать...
Чăнах та курмассах эп уйрăлап-и?
Мĕн пӳрнĕ малашне пĕччен пуçа:
Телей-и маншăн алăкне уçать,
Е тыткăна хăварĕ хумлă Каçпи?

Мана халь пурĕпĕр... Эп хамшăн мар.
Çухалнисемшĕн куçăма шăлатăп...
Вĕсемшĕн хатĕр эп выçма, шăнма,
Анчах та хăрăк, тĕпренен шăмма
Чĕртеймĕн куççульпе те, юнпала та.

Каçар хурланнă сассăма, каçар,
Ансăртранах юратнă Ашхабадăм...
Манассăм çук эп çак уяр каçа.
Мĕнле хурлантарсан та сăвăça,
Хаваслăх ытларах мана эс патăн.

* * *

Ашăма хыптарса çунтаран,
Ĕмĕтре ыталанă Наадă!
Сан куçна пĕрре çеç куракан
Урăха пăхас çук никама та.

Сыва пул, Ашхабад, сывă пул,
Курăнми пуличчен алă сул!

Капед-Даг тĕтрипе пите çу —
Паянах-и, халех-и, ыран-и...
Телее те тупайрăм, те çук,
Те ăна кăлăхах эп шыранă.

Сывă пул, Ашхабад, сывă пул,
Курăнми пуличчен алă сул!

Ан хӳхле, эп паллан каракаç,
Уйрăлан çул çӳреншĕн ан усăн.
Юлашки сăмахсем татăлаç...
Те аппан тутисем ку, те тусăн?

Сывă пул, Ашхабад, сывă пул,
Курăнми пуличчен алă сул!

* * *

Юлашки сехет эп санпала,
Пăхса юл, савниçĕм, пăхса юл,
Чăмăрта мана эс, ытала,
Вăтанса хĕрелтĕр саксаул.
Юлашки сехет эп санпала.

Пăхса юл, савниçĕм, пăхса юл,
Ыррине те, усалне те кур:
Тĕрлĕрен пулать илемлĕ чул,
Хăш чухне вĕсен те суйи пур.
Пăхса юл, савниçĕм, пăхса юл.

Чăмăрта мана эс, ытала,
Пĕçерен ӳте асна илсем...
«Юратап» тесе те ан кала,
Пĕр сăмахсăр эп ăна сисем.
Чăмăрта мана эс, ытала.

Вăтанса хĕрелтĕр саксаул,
Унта манăн нимĕн ĕç те çук.
Ытала, чуп ту та — сывă пул!
Эс питне витмесĕр пынă чух
Вăтанса хĕрелтĕр саксаул.

Юлашки сехет эп санпала:
Кӑмӑла туртать тӑван ҫӗршыв,
Тунсӑхларӗ чунӑм Атӑла,
Аякран килет пек хыр шӑрши...
Юлашки сехет эп санпала.

* * *

Малалла-ха пурнăç, малалла,
Ман тĕлтен çанталăк çурма-çутă.
Ман пурне те, ахăр, курмалла:
Кӳлешӳ те пулĕ, çураçу та...
Малалла-ха пурнăç, малалла.

Ман тĕлтен çанталăк çурма-çутă,
Илĕм-тилĕм ир пек çамрăк эп.
Шуррине хурисĕр курма çук-тăр,
Пылакки йӳççисĕр çук, пĕлеп.
Ман тĕлтен çанталăк çурма-çутă.

Ман пурне те, ахăр, курмалла,
Çавăн пек туятăп хама хам эп.
Ырлăх-шырлăх пултăр çурмалла,
Кам пĕлет: тен, йывăрах йăтатăп...
Ман пурне те, ахăр, курмалла.

Кӳлешӳ те пулĕ, çураçу та.
Ӳкĕнӳ те кышлĕ чĕрене.
Юррăмпа çынна эп юрас çук-тăк—
Çурални те кăлăх тĕнчене.
Кӳлешӳ те пулĕ, çураçу та.

Малалла-ха пурнăç, малалла.
Эп пăртак чăваш ятне çĕклесшĕн.
Ман юман пулса кашламалла,
Хунавран эп тивĕç пиçĕхмешкĕн.
Малалла-ха пурнăç, малалла...

1926, юпа — 1927, ака, Ашхабад.

# КАНТАР КЁВВИСЕМ

* * *

Горизонтра хура тăхлан пек,
Вăта çĕр — ешĕл сенкер пек,
Умра — темле шупка... Çапла эп
Курсаттăм тинĕсе ирпе.

Туапсерен тухасшăн пуйăс
Шав шыв хĕррипеле шăвать.
Хальччен курман пулсассăн, туй эс
Çак пархатарлă çĕршыва.

Вăрманлăх. Ешĕл, ешĕл, ешĕл...
Сăрт, ту... Тем анлăш паласа
Такам юри лӳчĕркемен-ши
Хăйпе савнин айне сарса?

«Ах!» — теççĕ çамрăк хĕрупраçĕ,
«Ах!» — теççĕ ырнă арăмсем.
«Ах!» — тет ватти, вĕтти... Мана çеç
Çахал «ахпа» чун пĕрĕнсен.

* * *

Вакун чӳречинчен пăхсах эп —
Сисмен те — çитнĕ Сочине.
Пĕрремĕш пальмăсен лапсакĕ.
Курзал. Буфет. Авто чĕнет.

Паллана çурт-йĕр, йывăç-курăк
Аса илӳ хӳтернипе,
Мана сĕмлерĕ çăмăл хурлăх
Хулан ир кӳлĕм тĕтри пек.

Нумай пăнчăсенчен пĕри çеç
Ку ман маршрут пунктирĕнче.
Анчах çак пăнчă чикĕриччĕ,
Вăл йăмăх хĕрлĕн çырăнчĕ.

Эс ар, анчах — ача: тĕнче те,
Çынсем те чыслă, пĕт-пĕтĕм.
Çапла туятчĕ пуль венчетĕн
Кунне ĕненекен этем.

* * *

Умра тӗрленчӗ кунӑм-ҫулӑм,
Тӗрри ула-чӑла, чӑпар.
Пӗр сӑлтавпа ӑна ас турӑм:
Вӑл манӑн та... ман ҫеҫ те мар.

Улт-ҫич ӗмӗр тӗлленнӗ хыҫҫӑн,
Сасартӑк куҫ уҫса пӗр ир,
Мӗн пур пытанчӑк халлӑн, выҫҫӑн
Вӗҫтертӗмӗр чуна эпир.

Ҫӗнле пӑсланчӗ ҫӗр тивлечӗ:
Ман халӑх маннӑ е курман
Кӗтессине курас килетчӗ
Хӗвел раснах паха чух ман.

Мӗнпе илемлӗ кашни утӑм,
Мӗнле чун туйнӑ тӗнчене —
Йӑлтах эп ӳкересшӗн пултӑм
Чӗрӗлекен чӗлхем ҫине.

* * *

Эп çирĕмре. Мана «талантлă
Пуçлавçă» тетчĕç. Ас тусан —
Çак урамсем тăрăх саланнă
Кил-çуртсăр çамрăклăхăм ман.

Тăхта, такси! Çак хăна килĕ
Пĕр сăн кăларчĕ ман ума.
Ăçта вăл? Чĕрĕ-ши е вилнĕ?
Пĕлсен эп хатĕр тем пама.

Пĕрремĕш хирĕçлев ку манăн
Пултарупа юратура.
Шўтле пек халь. Ун чух вăл шавлăн
Çĕкленчĕ тăвăл пек хура.

Епле туртатчĕ çав хĕрарăм!
Анчах эп пултăм айванни:
Эп унпала кайма тумарăм,
Халь, ак, тен, лайăх кайманни...

* * *

Эп юрататтăмччĕ пĕртен-пĕр
Çĕршыв çак аслă тĕнчере.
Ăçта пулсан та, тĕттĕм эпĕ,
Пĕр уншăн тапĕ ман чĕре.

Пĕлместĕп, темĕншĕн апла вăл:
Ĕмĕтĕмпе çеç ку енчен
Каçсан та, ĕмĕрлĕх ман Атăл
Куçран çухалнăн туйăнчĕ.

Ун тăмлă сăрчĕсем, вăрманĕ —
Хăй майлă çав тери хитрен,
Чуна нихçан йăлăхтарманăн
Тухса сăнланчĕç çĕнĕрен.

Ун ĕмĕр канăçсăр хум шавĕ,
Çулталăкри тăвата сăн...
Мĕнпе çакна ун чух улшам эп,
Эп — ирĕккĕн тĕнче касан?..

* * *

Паркра пиншерĕн çутă хурт
Вĕçет, çунать, хĕлхемленет.
Мĕнле пĕр сассăр бал-ши ку?
Кам ташлатать-ши вĕсене?

Банан çулçи тем ас тума
Ашак хăлхи пек усăнать.
Аçтан кăларчĕ ман ума
Ут уйăх касĕ ку сăна?

Яштак кипариссем пĕр рет —
Хураллама тăратнă пек.
Тавралăх канлĕн тĕлĕрет
Тӳлек хумсем лăпканипе.

Канах, халал ĕçсен çынни!
Кан, домнăçă. Тырпулçă, кан.
Пĕр маншăн халь канма сĕнни
Вилме хушнипеле пĕр тан.

* * *

Ман ыйхăм çук. Мĕнле уяр!
Чĕрем, атя — çак кантăк евĕр —
Эпир иксĕмĕре уçар,
Уçар та хапăллар: кĕрсемĕр!

Атя-ха, çак стакан çинчи
Магноли чечекне шăршланăн,
Каçхи хавхалану тĕнчин
Вĕрилĕхне туяр чĕр халлăн.

Ĕç мар вăл — сăн ÿкернĕнех,
Фонографпала сас ÿкернĕн,
Хумсем хуллен хÿтернине
Сăвва ним çук çĕртен кÿртсессĕн.

Ĕç мар, поэт, çанталăка
Этем кăмăлĕсĕр курмашкăн:
Хумсем, хуртсем, банан, стакан —
Мĕн пурĕнче хам чун пур маншăн.

* * *

Пĕччен, пĕчченçĕм кĕçĕр урă!
Йыхравлă тинĕс хĕррине
Фокстрот хушшипеле джаз урлă
Эп пăкă евĕр пĕрхĕнеп.

Ташлать, юрлать хыçра «Ривьера».
Çынсем флиртлаççĕ, юратаç.
Манне кăна чуна тивмерĕ
Çак ытлашши те юрлă каç.

Ман çеç ĕнтĕ — ялан çапла-тăр:
Мĕн ыратни çинчен çынна
Калам тесен те калаймасăр
Чĕлхесĕрлес пулать чăна.

Ман çеç ĕнтĕ, пур ăпăр-тапăр
Этем асапĕ-телейне
Уртмахласа çакса, «яра пар!»
Тесе хама хистемелле.

* * *

Хумсем, епле сире эп тунсӑх!
Епле эп ӑнланап сире!
Анчах эп ӳкӗнмӗттӗм — хумсӑр
Пулсан пӑртакҫӑ ман чӗре.

Эп ӳкӗнмӗттӗм, ма тесессӗн
Ҫав хумӑн сӗлтӗшне пӗччен
Сирсе ямашкӑн май килмест-мӗн
Кӗске кун-ҫул тӑрӑшшӗнче.

Хумсем, хумсем... Хисеп-тӗсепсӗр,
Пӗри унтан, тепри лерен...
Пӑтранчӑклӑн ҫитетӗр эсӗр,
Хумсем, ҫыран хӗрринерех.

Ӑҫта ҫыранӑм ман? Пӗлместӗп.
Анчах чун-тинӗс варринче
Ҫуралнӑ хускава тем тӗс те,
Тем тӗссӗрлӗх те варӑнчӗ.

* * *

Эй, халь ҫав ӑшӑк, вараланчӑк
Йӑла тӑм-юшкӑнлӑхӗнчен
Калла ишсе кӗрсе кайсанччӗ
Ачалӑха сывхариччен!

Епле таса, епле вӑл ырӑ!
Шала, шала, ӗмӗтӗмсем!
Чӑмса ҫитсе чӳхенӗр, пырӑр,
Ыхлаҫ [1] пулма вӗренӗрсем.

Шала, ман ирӗк юррӑм, витӗр
Курнан хумсем хушшинелле!
Санпа, мехел мӗнле ан килтӗр,
Пайтах-ха пирӗн ишмелле.

Ман чарӑнас килмест, хам умӑн
Иртнисемле, ҫурма ҫулта.
Пуриншӗн те вӗсемшӗн туллӑн
Юрласчӗ ҫӑлӑннӑ чунтан.

---

[1] Ыхлаҫ — тӳрӗ кӑмӑллӑ.

* * *

Çын тивĕçĕ хăпарнă тапхăр
Ӳсен пархатара, пĕлеп,
Мĕльюн та çуррăн халь туятпăр
Эпир чăваш чĕлхипеле.

Çĕршывăмăрăн, самананăн
Вут чулĕ пек тĕрекĕнчен
Хĕлхем пĕрхĕнтересчĕ манăн
Чакма-сăмахăмсемпелен!

Шап-шурă кăпăк тек кустарнăн,
Çăва-çăва, вак чул-чăла,
Ман тĕрлĕ йăнăшсем, пуçтарăн,
Тасал, чӳхен, çара çанлан.

Ишсем, чĕре, хăюллăн, харсăр,
Курса маяк пек çул-йĕре,
Вак хумлăн айккăн пăрăнмасăр,
Ишсем, çĕклен эс çӳлерех!

* * *

Паян вăл Çеçпĕл сăвви пек:
Кăшт хурлă, тарăн, тап-таса.
Выртать куç умĕн савнипе —
Пĕлĕтпеле — ыталаша.

Пăхсан уйлаяс çук: таçта
Ун тĕпĕ, тахăшĕ тӳпе.
Те пĕлĕт тинĕсе çăтать,
Те шыв путарнă пĕтĕмпе.

Тӳлек. Киммӳ çинчех ту каç.
Хумсем, ыттахальтен çеç, тек
Чăшăлтатса кусса тухаç
Сава вистенĕ çункăç пек.

Вĕсем çемçе çеммипеле
Кӳреççĕ канлĕх: илтрĕн пĕр —
Ытарайми итлес килет,
Лăпланнăçемĕн... вĕçĕмсĕр...

* * *

Эп таврӑнӑттӑм халь яла.
Кӗр пултӑрччӗ. Йӗпе-сапа.
Шапарнӑ ҫинчӗк улӑм. Сӗм.
Каҫ-каҫ анне халап калать,
Мана аван ҫав халаппа,
Ҫунат хушаҫҫӗ хулӑмсем.

Ҫав тӳсӗмлӗ хӗрарӑмӑн,
Ҫав пурнӑҫ пуснӑ пирӗштин
Чунне чухласшӑн эп питех.
Кӗвве тӑсать вӑл вӑраммӑн,
Хутран-ситрен хӑй чӗрҫиттин
Аркипеле питне витет.

Халичченех сыхланнӑ ак:
Ялан, хут ҫийӗн пуҫ пӗксен,
Эп ҫав сасса тӑналнӑ пек...
Ак тинӗс хускалать пӑртак,
Чупаҫҫӗ кӑпӑк-путексем,—
Эп канлӗ, лӑпкӑ аннепе.

Эп тин кӑна ҫуралнӑ пек,
Хӑлхамӑн ҫепӗҫ ҫурхахне
Пӗрремӗш чӗвӗ перӗнет.

Йěке-йěрек юрлавěне,
Ăсан та хултăрчăн анне
Кěрет ман тěпсěр чěрене.

Ак тинěс кăтăрма лăхать,
Çил улшăнать. Эп шав тӳлек.
Эп инçетрен хама чěнетěп:
Йăлт парăн урă ăслăха;
Хам чурăс сисěмпе пӳлеп
Илемлě ěнерӳшěн эп.

Эп таврăнăттăм халь киле.
Кил-вутăм хӳттинче каллах,
Калаçнă-савăшнă хутран
Ман шутсăр тапратас килет —
Пит хистенмесěр, канмалла —
Пěр пысăк, сăвăллă роман.

* * *

Ак эс хӑҫан иккен Хура,—
Сывлан синкерлӗн, вӑрттӑн, ассӑн,
Ак эс хӑҫан хӑвна кура —
Кӑшӑл татас сӑра пек каскӑн —
Йӳҫен, шавлатӑн, ахӑран,
Ман ямбсенчен тухса чарасшӑн.

Ах, тинӗсӗм! Кӗр ман пата,
Кӗрсем ҫак уҫӑ кантӑк витӗр,
Ман чунӑм халь те санпа тан:
Уҫса пӑхсассӑн хум та ҫил-тӗр;
Анчах никам, никамшӑн та
Вӑл курӑнмасть ак кӗҫӗрхи ҫӗр.

Инҫе те мар ав пӑрахут,
Вӑл тин ҫитсе пӑрахрӗ якӑр.
Савать-и, хаярлать-и хум —
Сӑпка пекех силлет пӗр тапхӑр.
Маначчӗ пристань, пӗреххут!
Ӑҫта чӗрем ман якӑр ятӑр?

Ӑҫта ҫав Юрату текен
Улах утравлӑ хӳтӗ гавань?
Ҫук! Тивӗҫ мар ман пеккисен

Тармашкăн самана пăлхавĕн
Тăвăлĕнчен. Чăнах иккен:
Коммунăсăр кама эс савăн?

Шантарччĕ, тинĕс: юратса
Эп тăранманшăн, ĕлкĕрменшĕн —
Ман паянхи мĕн пур тăса
Ĕмĕтĕмсем килес йăхсемшĕн
Упранасса; ман тархаса
Шантар телей туса чĕртмешкĕн.

Ах, тинĕс, тинĕс! Эп сана
Выртсан та вăранса тăнлаттăм;
Ирпе те шуçăм хыпсанах,
Мана эс туслăн ыталаттăн;
Хавасчĕ эпĕ сан сăнна
Хĕрӳ хĕвеллĕ кăнтăрла та.

Чипер юл, тусăм! Пехилле
Çапах мана пĕрре савмалăх.
Мĕнле пулсан та ман телей,
Эп пулăттăм чунпа сан халлă.
Пайтах çак ĕненӳпеле
Ман канăçсăр асра эс шавлăн.„

Прощай, свободная стихия!
А. ПУШКИН.

* * *

Тăхлан тӳпе. Горизонтра
Шевле виртлешкелет. Çил çук.
Çур çухрăм пулĕ çыранран
Выляççĕ шухă дельфинсем...
Эс тĕлĕрен. Лар эс, анра,
Хускавсăр ялкăшать куçу,
«Чипер юл, Сочи, ырантан!
Чипер юл, тинĕс!» — тенĕçем...

Çук, эпĕ килĕп-ха тепре,
Тепре çеç мар, нумай-нумай...
Пĕр ĕмĕт: таптăрччĕ çаплах
Поэзи ирĕккĕн, тӳртен.
Ман канăçа пĕлмен чĕре
Нумайранпа выртать сан май.
Хăватлă шыв! Мĕнпе чаплам?
Мĕнле тавтапуçа кӳртем?

Савап сана эп, тинĕсĕм,
Кирек ăçтан вĕрсен те çил,
Саватăп тĕпсĕр шăнкăрта,
Саватăп урнă аçапа.
Хуран, кăваккăн, симĕссĕн

Çине-çине, си хыççăн си,
Сывпуллашуллăн ман пата
Тăварлă хум çитсе çапать...

Ăнлантăм поэта. Е ун
Сиксе вĕрен чĕрипеле
Тĕрме-патшалăхра чăтас?
Вăл туртăннă аяккалла.
Çĕр çул хыçра. Эп — ирĕк чун,
Пĕлместĕп акă нимĕнле
Тĕрме те, сăнчăр та. Çак сас
Тупа пек тухтăр — эп калап:

Мĕнле шывпа юхсан та эпĕ,
Савап, мухтатăп яланах
Сана, ман иккĕмĕш анне пек
Çĕршывăм, санăн ялавна!

1927—1931.

# Хамăр ялсем

[illegible]

[illegible]

[illegible]

## УНЯХВИ

Уняхви старик тесессён,
Асăма килет — йăваш,
Хăнчăр куçлă, пĕчĕкçеççĕ,
Кăптăрмăш кăна чăваш.

Хырăç-марăç татайманшăн,
Торгисем туса, ялан
Выльăх-чĕрлĕх е хуралтă
Тустаратчĕç кив ялтан.

Уняхви старик юлмастчĕ
Нихăçан та торгирен.
Уй чӳкне, ĕçке те, ахăр,
Вăл ун чухлĕ çӳремен.

Чиркӳре — пулсан пĕр-иккĕ
Пулнă пулĕ ĕмĕрте:
Çуралсан та авлансассăн,
Урăх вăл кĕмен-тĕр те.

Ну, торги тесен, таçта та
Кайса кĕрĕччĕ çав çын.
Эсир ыйтăр халь: куштан вăл
Е сутуç-усламăç-им?

Çук, пĕр шăрпăк та унта вăл
Туянман; хурал пӳртне
Шăп кăна кĕрсе тăратчĕ
Тĕксĕм алăк сыппине.

Кăн-кăвак пӳртре пĕр сасă
Чыхăнса калать вара:
«Аллă. Утмăл. Утмăл пиллĕк...
Кам хушас тет ытларах?..»

...Çитмĕл. Чарăнчĕ. Хушмаççĕ.
Пĕри çав самант хушши
Куç хĕссе ӳсĕркелет кăшт:
«Уняхви ӳстермĕ-ши?..»

«Сакăрвуннă!» — тетчĕ хыттăн
Уняхви çын хушшинчен.
Пурте лах кулса яратчĕç,
Кулманни — старик пĕччен.

Хăйпе хăй йăлăхса çитнĕ
Мыскараçă этемле
Йăтнă аллине салхуллăн
Вăл усатчĕ çĕрелле.

* * *

Юлашки хут ас тăватăп
Ак çапла Уняхвие...
Уняхвийĕн пӳрчĕ вата,
Хуçипе пĕр çулхиех.

Пур харам пырсен тымарĕ
Тĕпренех кăкланнă çул

Ялăн власĕ сутткаларĕ
Тĕрлĕрен хуралтă, çурт.

Уняхви, ас ту, ан юлтăр!
Туйипе кăштăртатса
Вăл куллен пыратчĕ, кукăр
Чĕлĕмне паклаттарса.

Тăчĕ те старик мăнаçлăн
Евитлерĕ пĕр кунне:
«Туянтарăр Лариванӑн
Улт кĕтеслĕ хыр пӳртне.

Хамшăн халь ĕнтĕ тарамччĕ,
Анчах ман пит аякран
Таврăнать пулас-ха каччă,
Çитрĕ çырăвĕ паян.

Эп çухатнăччĕ, мăнтарăн,
Ывăл тухнă паттăра.
Хаçатра сăнне çаптарнă,
Курнă пулĕ хăвăрах.

Хăй те çырнă: «Атте,— тенĕ,—
Илтĕм орден та митал...»
Колхозсен йышне ĕçченĕн
Тăрăшмашкăн суннă хал.

Кĕркунне, шăпи кӳрсессĕн,
Авлантарăп тетĕп те...
Намăс-çке-ха кин кĕртмешкĕн
Хамăн çĕршĕннĕ пӳрте.

Эпир мар халь йăпăх-япăх:
Акă, янă-ха Якур...
Ну... туйне ташлаттармалăх
Хаман та ĕç кунĕ пур...»

Уняхви старик кăларчĕ
Хĕвĕнчен хăй енчĕкне;
Пур кун-çулшăн шаплаттарчĕ,
Тарăхса, сĕтел çине.

Кулакан никам пулмарĕ.
Ĕлĕк чух шӳтпе кăна
Йăпанма этем пултарнă,
Халь — туянчĕ чăн-чăнах.

Кам пĕлет: тен, ĕмĕр-ĕмĕр
Ĕмĕтленнĕ вăл çакна...
Вырăнне лартать, атьсемĕр,
Пур çынна та самана.

1935.

## ШУШКА

Пурччĕ пĕр Маркки пичче,
Ак епле вăл вилнĕччĕ.

Выçлăх пулчĕ çав çулне,
Йывăр килчĕ халăха.
Ват Маркки çăка пӳртне
Çисех ярайманччĕ-ха.
Патне çитнĕччĕ, анчах
Илекен пулман пачах.

Выçă ларнă виçĕ кун
Питĕрсех вăл хапхине.
Пĕлтерес килмен пит ун
Ял-йыша хăй выççине.

Намăс пек шутланă, тен,
Ĕмĕрхи çĕр ĕçлекен:
Çăкăр ту та ĕмĕрне —
Кур-ха эс çав хурлăха!
Тен, шутланă урăхла...
Кам пĕлет çын кăмăлне.

Ак хайхи Маркки пичче,
Пĕр ирпе тăрса, çуран

Ытлари пасарёнчен —
Ултă-çичĕ çухрăмран —
Тем сутса йӳнеçтерсе,
Мунчала çине тирсе,
Илсе килнĕ-мĕн килне
Шушкă пĕр кĕренке пек;

Çакнă та путмар тĕлне
Выртнă та... тăман вăл тек.

«И! Шушки те пур иккен!
Маркки тантăш ерипен
Хĕл каçатчĕ-ха...» — тесе
Тирпейлерĕç ватăсем.

Чăваш çеç ман шутпала,
Пултарать вилме çапла.

1938.

## ТАВЛАШУ

Сарамат пичче — ман хурăнташ,
Чăннипе ун ячĕ урăхла:
Пирĕн, темшĕн, пурсăмăрăн та
Икĕ ят мĕн авалтанпала.
Чиркĕве пит ăшшăн курмантан
Пулса кайнă пулĕ çаплалла.

Çарăмсан таврашĕн вăрманне
Ман ăру хăй йĕрĕхĕсемпе
Вырнаçни — пĕр виççĕр çул патне.
Хут çине ӳкмен пĕр саккун пек
Янăранă: «Ан çĕрт йăх ятне!» —
Шеп-и, мар-и ку — шарламăп эп.

Анчах пуп тĕне кĕртме пырсан,
Пирĕн харсăр аслă асатте,
Çил çунатлă ăйăр утланса,
Урнă пек кустарса çитнĕ те
Тĕн шывне, йĕнер çине тăрса,
«Йыт кулли» туса хăварнă, тет.

Парăнми çав киреметçĕсен
Сыпăран сыппа, йăхран йăха
Тухнă витĕмлĕ чĕлхеçĕсем,

Юмаха юптарнă пит паха,
Такмака, сăвва-юрра тесен —
Тĕлĕнтернĕ пĕтĕм халăха.

Сарамат пичче вăл шăпăрçă,
Пурччĕ унăн пĕр кĕвви: илтсен —
Витрине лартса ташлатчĕçĕ
Шыв ăсма анан чипер кинсем,
Пурччĕ ун тепри — макратчĕçĕ,
Сăпкари ача пек, ваттисем.

Çамрăк чух вăл тапратсан вăййа,
Ăнсăр пулнă, теççĕ, хăш этем:
Арăмсен (те чăн ку, те суя)
Салтăнатчĕç имĕш саррисем;
Сар хĕр пусĕ тăрриччи тухъя
Сиккелетчĕ, тет, итленĕçем...

Сарамат хапхи панчен сайра
Татăлатчĕ урапа-кӳме.
Чапĕ кайнăччĕ йĕри-тавра,
Аякран килетчĕç тилмĕрме.
Унсăр пуçланмастчĕ пыл-сăра,
Унсăр туй сикмен, хĕр хӳхлемен.

Калаçатчĕç: вăл пăлан ĕнин
Хăмпинчен хăпартнă шăпăрне,
Алтăрпа ярса тултараймми
Мăйрака вăл лартнă какăрне;
Ăмăрт кайăк çунаттин шăмми
Хунă имĕш чĕлĕх кĕпçине.

Ĕмĕрне ирттерчĕ ĕçкĕре.
Сарамат шăпăр калать тесен —

Пур тухатмаш та сиксе чĕтрет,
Пăхаймасть туйра ун куçĕнчен,
Пăсаймасть вăл каччăпа хĕре,
Хăтарать çав вăйăç синкертен.

Лăстăр çеç силлет кăтра çӳçне,
Хыпчăкне хăяккăн кăларса,
Палт перет хăмпа мачча çумне,
Хăй ĕçет, кăшт сывлăш çавăрса;
Яш пăхать те курайман çине —
Кăн хытса каять леш хăраса.

Юнашар кĕпĕрнерен пĕрре
Чĕннĕ пĕр чăваш пиччемĕре.
Пулнă имĕш çав кĕпĕрнере
Тӳсме çук хăватлă та хивре,
Çулсерен питрех тĕлĕнтерен
Урăм-сурăм шăпăрçă тепре.

Чĕнекен чăвашĕ вĕсене —
Сараматпала çав ăстана —
Тавлаштарнă имĕш пĕр эрне,
Туйĕн чапĕ кайнă таврана.
Сарамат çĕнтерне-çĕнтернех,
Мухтанать унпа вăл яланах.

Халь çав манăн шăпăрçă тăван
Ватăлса килет кунран-кунах.
Хăй çапах юлмасть-ха уявран,
Ĕлĕкхи шайпа вăлт-валт кăна
Каçăртать те кăкăрне, унтан:
«Ну, карчăк,—тет,—яр-ха пĕр кана!»

Хăвармасть вара вăл карчăкне,
(Ачисем пулман шереметсен).
Çапла акă пĕлтĕр кĕркунне,
Тырă-пулă пуçтарса кĕрсен,
Илсе килчĕç пирĕн ял клубне
Пианинă, кĕмсĕртеттерсе.

Çав тери «тамашана» курма
Ял-йышсем клуба ĕлĕкхинчен
Пырса тулнăччĕ раснах нумай,
Районти çынсем те пур иккен,
Студентсем те, çулла каннă май,
Каяйманччĕ хăшĕ çав кунччен.

Сарамат та, карчăкне ертсе,
Хăмпине чиксе сăхман хĕвне,
Пынă-мĕн клуба мĕштĕртетсе
Вăйлă тырă-пулă уявне.
Малтан пулчĕç докладсем-мĕнсем,
Вара вăйă турĕç каçхине.

Юрăсем юрларĕç пĕр кана
Çамрăксем-ватсем килĕштерсе,
Сăвăсем каларĕç аванах
Хамăр ял хастар сăвăçисем.
Председатель куç хĕсрĕ мана:
«Эс ан шухăшла пĕччен тесе!»

Ташлама тапратрĕç унтан ак:
Пукан пысăкăш ача кăна
Ларчĕ те — пĕр вальс, пĕр краковяк
Çĕмĕрет анчах пианина.
«Вихтĕр. Музыка вĕренет-няк...» —
Терĕ, «кам?» тесен, пĕри мана.

Çавăнаççĕ пăрчăкан хĕрсем
Сарамат пичче пĕр кĕтесре,
«Ташă, ташă» тесенех, вĕрсе
Хăмпине хăпартрĕ чиперех,
Пианинă сассине илтсен —
Вырăнта пулмарĕ ват чĕре.

Хулара вĕреннĕ йĕкĕтсем
Çаврăнса шăваççĕ йăр та яр,
Пĕр шултран утса, пĕр вĕтетсе,
Варкăшса илеççĕ вăр та вар,
Хĕрсене çĕн ташă вĕрентсе
Авкаларĕç, хуçрĕç — майлă мар!

«Чăвашла ташласчĕ те пăртак,—
Тет пĕри, кăшт кăмăлсăрланса,—
Сарамат пичче кунта-и çак?
Калăр халĕ иксĕр ăмăртса!
Вихтĕр хамăр ял-çке, как-никак
Сума сутăр хамăр колхоза...»

Ак «Линка-линка» та «Шур аппа»
Ячĕ Виктор пианинăпа.
Сарамат пуçларĕ Викторпа
Ăмăртмашкăн чаплă шăпăрпа;
Тăрăшса вĕрет, ура тапать,
Хушăран сĕтет вăл такмакпа:

Карчăк, карчăк, карчамас!
Карта урлă каçаймасть;
Шăпăр, шăпăр, тесенех —
Ури çĕре çакланмасть...

Тухрĕ-çке кĕрнеклĕ Сăпанюк —
Сараматăн карчăкĕ — çиççе;
Кайрĕ-çке юхса, сĕрсе, хăш чух
Пилĕкне тытса та ал сĕлтсе;
Ларт тулли курка — тăкăнас çук
Унăн пуçĕ тăрринчен ӳксе.

Сарамат вĕрет хăмпа, вĕрет,
Пĕркеленнĕ пичĕ тăртанса
Клуб çинчи хăмач пек хĕрелет.
«Вăл сăрне памасть-ха иçмасса,—
Теççĕ ваттисем,— ха, илтерет!..»
«Старикки тĕреклĕ-ха, таса...»

Анчах Виктор вăрттăн йăл кулать:
Пианинă шăпăр мар, ничче!..
Ун пӳрни шăши пек чупкалать
Хура-шурă чĕлĕхсем çинче.
Хупланать кив шăпăр, хупланать,
Аран çеç вăл илтĕнет çинçен.

Шăпăрçи вĕрет, тармакланать,
Урине тапать, çӳçне силлет.
«Курас марччĕ-ха сан мăшкăлна!» —
Тет хăй ăшĕнче; кĕç çӳлелле
Печĕ хăмпине вăл мачча на,
Печĕ те... тытмарĕ тек калле.

«Иртнĕ! — терĕ Сарамат.—Пулмасть.
Илсе кай, ачам, Шупашкарах,
Музее эс пар çынсем кулма
Манăн намăс курнă шăпăра.
Шур çӳçпе паян эп сан умна
Тайма пуçăн тайăлса тăрап.

Аллă çул каларăм шăпăра,
Аллă çул ташлатрăм чăваша.
Халиччен никам та таврара
Çĕнтерсе курманччĕ тавлашса.
Сан хурру пулас-ши-ха вара? —
Тенĕ шухăш çунтарать ăша.

Мăшкăла тӳсмешкĕн çук вăй-хал,
Шалт тĕнче кулли ку, шутласан.
Анчах эс, çапах та, хамăр ял,
Ху та кăшт вĕреннĕччĕ манран.
Ман кĕвве те сыхлăн çакнашкал
Хатĕрпе, тен, манăç пуласран.

Яр, эппин, янрат çут тĕнчене!
Пил-пехил сана авалхи пек...
Пирĕн иртнĕ... тунă хамрăнне...»
Терĕ шăпăрçă пит ерипе.
Тар шăлам пек усрĕ те пуçне —
Куççульне вăл шăлчĕ çаннипе.

Пианинă шав кĕмсĕртетет,
Пĕр качча çаклатрĕ Сăпанюк,
Старике йĕкĕлтесе иртет,
Сарамат кулать: «Ах, ăçтиçук!»
Унăн-кунăн пăхкаларĕ те
Пĕр хĕре куç хыврĕ: «Кил, Наçтук!»

Пианинă шав кĕмсĕртетет,
Çамрăк-кĕрĕм туй та çуй тăвать.
Иртсе кайрĕ пулĕ çур çĕр те —
Автана илтмест ни яш, ни ват.
Савăнать ял-йышăм, хĕпĕртет,
Çук ăна тытса чарас хăват!

1936.

## КАРПА ВАÇУКĚ — ПĚВЕВÇĚ

Кам илтмен? Карпа — пěвевçě,
Чаплă çын вăл тахçантан.
Тěпчесе ыйтса килеççě
Ун патне таçтан-таçтан.

Кил-картишě пушă, чухăн,
Хура пўрт те çěр урай;
Хатěр-матěрě те çук ун,
Тарçăра çўрет пěрмай.

Амăртса ăна тытаççě
Ик пуян — пěвев хуçи.
Урăх çук ун пек ăстаçă:
Пурçăн пек тухать сўс çип.

Нихăçан вăл чикнě хутăр
Шупкалмасть улачара.
«Чěлхине пěлет-тěр, пур-тăр...» —
Теççě арăмсем вара.

Йўçěтет краска вăл, имěш,
Пěр тымар сěткенěпе.
Пултăр хěрлě, пултăр симěс —
Çěтěлсен те çěнě пек.

Анчах хăй, Карпа Ваçукĕ,
Юратмасть улачана,
Тăхăнмасть вăл: пур-и, çук-и —
Туянать пасартанах.

Çăпата сырмасть нихçан та,
Сăхманпа курман ăна.
Шăлавар, пиншак ун, атă —
Тăтăр хăть пĕр сум кăна...

Çўç кастарнă. Сухал хырнă.
Пысăк мар. Хура, хыткан,
Утмăла хăй çывăхарнă,
Нихăçан та авланман.

Ĕçиччен — хăйне хуçа пек,
Пуçтаруллă, чыслă çын.
Пĕр ĕçсен, каять ун чапĕ,
Япăхать вара саççим.

Хĕрнĕçем хĕрсе, пĕртен-пĕр
Тажмакне вăл ян ярать:
«Чăвашсем пулса çитетпĕр!
Чăвашсе-ем!» — тет вара.

Çав сăмах янрать пит уççăн
Аслă калăм эрнинче.
Çаруран та çара пусăн
Ял касать Ваçук пичче.

Пиншакки, атти-масарĕ
Саклатра пĕр-пĕр тĕлте.
«Чăвашсем пулатпăр! Парăр
Мухмăра шкаликлĕх»,— тет.

Старике параççĕ пурте,
Вăл тӳлет çур пус таран.
Лăплансассăн мухмăр хурчĕ,
Хăй çыннах ятлать кайран:

«Мĕскĕн! — тет,— ĕçсе ярать те,
Йышĕ кĕлĕмçе ерет.
Ман хыçран кайма юрать-и?
Эп пĕччен çут тĕнчере!»

Çакăн пек Карпа портречĕ.
Эп ăна курман, çапах
Яланах пуçра çӳретчĕ
Ял ас тунă сăн-сăпат.

Хальччenex аса илеççĕ,
Манăнман пĕччен Ваçук:
«Чăвашсем пулар-ха»,— теççĕ
Пичĕке пуçланă чух.

Эп калап хама: сăна-ха,
Вăрăм е вăл кĕскерех —
Кашни çыннăн хăй сăмахĕ,
Хăй юрри пур тĕнчере.

Чун çĕкленнĕ пек пулсассăн,
Емĕрех пĕр сăмаха
Çав пĕвевçĕ тем каласшăн
Тарăхса кăшкăрнă-ха?

Ял-йышсем халь шӳт тăваççĕ:
«Тав сана, Карпа!» — тесе,
Ваттисем сăра тăкаççĕ,
Кăмăлтан хисеплесе.

1939.

## УХИМЕ ИНКЕ

Ухливан лавкка хуҫин
Пурлăхне пайлаҫҫĕ,
Пасарти пек пулнă ҫын,
Кĕр те шав тăваҫҫĕ.

Раскулачить тăвиччен
Маларах пытарнă
Виҫ арча ҫĕр айĕнчен
Халь тупса кăларнă.

Хăшĕ атă туянать,
Хăшĕ тум, пир-авăр:
«Шĕкĕлчер-ха пуяна,
Туса панă хамăр!»

Ухливан хуҫа текен
Шултăра китахчĕ.
Вăл чылайăшне чеен
Чĕрĕлле ҫăтатчĕ.

Ял вăта ҫĕрне, сăрта,
Чул лавкках лартсаччĕ...
«Пурҫăн тутăр ак тата...»
Терĕ председатель.

Ай, тутри! — шарать куçу,
Варкăшать тем анлăш,
Ниçта кайса кĕме çук,
Пирĕн ял кадарăш.

Вутăн-хĕмĕн пĕрхĕнет,
Çӳçисем чĕтреççĕ.
Хĕр-упраçĕ пĕр-пĕрне
Кăлт та кăлт тĕртеççĕ.

Пуç çине, кулса, юри
Тытрĕ председатель:
«Ухливан мăшрин тутри,—
Пит сайра çыхатчĕ.

Ухиме инке, илех.
Хаклă пулмĕ, татăн.
Çитĕнсе ӳссе килет
Ик хĕр харăс санăн».

Ухиме инке илме
Хăяйман пек пулчĕ.
«Кĕркунне те тӳлĕн, ме!» —
Терĕ колхоз пуçĕ.

Счетовочĕ хушрĕ: «У!
Халь çĕрме пуян эс.
Улт çĕр кун! Çых пурçăн ху,
Хĕрӳсем туянчĕç».

Ухимен арçынĕ час
Вилчĕ: сывах марччĕ.
Сак тулли ача-пăча
Вăл тăкса хăварчĕ.

Тăлăхскер инке вара
Пĕчченех тертленчĕ:
«Çын ачисене ара
Кам юп курĕ?» — тетчĕ.

Каластарчĕçĕ ăна,
Вăтăрта кăначчĕ.
«Каймăп,— терĕ,— хамăн ак
Çитĕнет ман каччă».

Ачисемпелен çапла
Мĕскĕн йăпанатчĕ.
Тасатать, çăвать, саплать,
Ар ĕçпе ванатчĕ.

Хушăран вăрçать, йĕрет,
Хушăран кулатчĕ:
«Чимĕр-ха, нуша, пĕрре
Çитерех кулачă!..»

Кӳлепесĕр тумтирпе
(Мĕн çакланнă — çавă)
Курăнатчĕ вată пек
Хăйĕнчен чылай вăл.

Халь, кулса, кăшт вăтанса,
Çыхрĕ те вăл пурçăн —
Пичĕ тăрăх ярăнса,
Хыпрĕ йăмăх шуçăм.

Пурте пăхрĕç ун çине,
Шав шăпланчĕ харăс.
Мĕн тери вăл хитрине
Хăшĕ тин сăнарĕç.

Пурнăç пуснă хӳхĕме
Ăнланса шеллерĕç:
«Ас тусамăр, Ухиме
Çĕнĕ çын пек!» — терĕç.

1939.

## ЙАКĂНАТ

Те эсир сăнанă çак? —
Ку чухне ват стариксем
Пĕлми пулчĕç канăçа,
Иç ларасшăн мар сĕнксе.

«Авалхи чăваш эп,— тет
Йакăнат пичче хăйне,—
Мана ĕнтĕ киремет
Хăй те маннă ахăртнех.

Тахçанах кĕнекерен
Тухрăм пулĕ ĕнтĕ те,
Çĕр те тунсăх та пире,
Кун пĕтмен, мĕн тăвăн!» — тет.

Йакăнат хуртсем пăхать,
Çăвĕпех вăл утарта.
Вăрман пирĕн пит паха,
Ун пекки тек çук-тăр та.

«Пырса кур-ха... курорта,—
Тет старик вара мана,—
Сывлăш уçă, тупата,
Пыр-ха, шăллăм, хăнана».

Кайрăм эп хайхи тепле
Хурт ăсти патне пĕрре.
Сап-сар улăм шĕлепке
Çаврăнатчĕ ĕшнере.

Шĕлепке хĕррисенчен
Хĕлĕх питлĕх карăнать,
Хурчĕ уйăрнă иккен,
Илĕртет старик ăна:

Сĕрме купăс каласа
Сыртарасшăн хăтланать.
Хурт çуриййĕ, чăнласах,
Хурама çине сырать.

«А, килех! — тет Йăкăнат
Хĕлĕх питлĕх витĕрех,—
Санпалан эп тахçанах
Калаçасшăнччĕ пĕрре...»

«Мĕн апла?» — «Тем мар ытлах...
Мускавра пултăм-çке-ха...
Ну... начар сынна, паллах,
Чĕнмĕç ĕнтĕ выставка.

Мухтанать ку,— ан тесем:
Ман вăрман колхозĕнче
Улт уралла йышăмсем
Калама хал çук ĕçчен.

Пур утарçă тĕлĕнет.
«Ăрăмçах эс, ахăрах,
Хурт чĕлхи пĕлетĕн»,— тет
Пĕр юлташ мана вара.

Чĕлхи унăн пур та-ха,—
Тетĕп эпĕ шахвăртса...
Мĕн чĕлхи! Алла пăхать.
Тирпее савать, чыса.

Хурчĕсем ман, ху куран,
Сĕрме купăс сассине
Юратаççĕ. Нихăçан
Эп тартман уйăрнине».

Йăкăнат хурт çурине
Алтăрпа ăсса ярать
Виç кĕтеслĕ пуркине,
Хăй çапла калать вара:

«Уншăн-куншăн сăмах çук.
Еç ăнать-ха пĕр тăтăш.
Ху пĕлетĕн ĕлĕк чух
Юрăсем юрлаттăм кăшт.

Сĕрме купăс кукрашки
Шай пыратчĕ ĕлкĕрсе.
Ял-йышсен такмак-ташши —
Пурте эп ĕнернисем.

Савăнни те пур-тăрах
Вăрăм ĕмĕр тăршшĕнче,
Çапах хурлăх ытларах
Сĕртеретчĕ сĕркĕче.

Пуянсен туйне чĕнсен,
Кĕреке умне тăрса,
Вăйă-кулă çеммисем
Янраттартăм купăса.

Килĕме çитсен, курап —
Ларать йышăм усăнса.
Чăлана çакса хурап
Йăлăнтармăш купăса.

— Еçкĕрен ĕçке çӳрен,—
Тесе арăм ӳпкелет,—
Ачасем паян çимен,
Мĕн кӳретĕн-ха киле?

— Кĕреке юлашкине
Парса ячĕç ак чиксе,—
Тетĕп те, ачасене
Валеçетĕп татăксем.

Çывăраççĕ мĕскĕнсем,
Кăшт чĕре сури туса.
Хĕрĕнкĕ ĕмĕтĕмсем
Хĕтĕртеççĕ купăса.

Эп илетĕп чăлантан
Ĕмĕрхи юлташăма.
Тин пуçлап чунтан-вартан
Хампа хам сăвăлашма.

Йынăшать хĕлĕх, йĕрет
Вăрăм çĕрĕн варринче.
Ыратать, сурать чĕре,
Ют пек уншăн çут тĕнче.

Пĕр никам та çав сасса
Итлемерĕ манăнне:
Çыншăн — пултăр савăнса,
Сан тертӳ ăна мĕне!..

Ак еплеччĕ, шăллăм, ман
Елĕкхи шăпам-тӳпем.
Тултарсам кăмăлăма —
Çĕнĕ юрă итлесем.

«Пархатар юрри» тесе
Калама пулать ăна.
Е çак хурт пӳртне кĕрсе,
Е кунтах — тăнла кăна...»

Йăкăнат пичче пăртак
Купăсне ĕнерчĕ те,
Сĕм вăрманĕ шăпăртах
Пĕр самант ăна кĕтет.

Тĕрелерĕ купăса
Вăл сухал айне вара.
Вăрман урлă янраса
Юрă кайрĕ çĕршывра.

1939

## ПАРХАТАР ЮРРИ

Сархаякан вăрман çулçине
Епле ешĕл усрас кĕркунне?
Çыру пĕлмен çынна иртнине
Кам тавăрса парас куç умне?
Никам та мар, тăван, ним те мар,
Такмак хутаççине халь салтар.

Пĕр хум çитсе ишет теприне,
Епле тупас вĕçне-хĕррине?
Асаçăрсем асап курнине
Кам каласа парас ку чухне?
Никам та мар, тăван, ним те мар,—
Такмак хутаççине халь салтар,

Усрав сар кайăк пек юррăма
Усраттăм чи кайран юрлама.
Анчах кун-çул вĕçне пĕлме çук,
Юрла çунат ÿсе çитнĕ чух!
Епле такмаклас мар, юрлас мар,
Куç туллиех пулсан пархатар?

Ялта ялпуç пулса юлтăм эп,
Хамран ватти ĕнтĕ çук-тăр, теп.
Анчах пурнăçăма мĕншĕн-ха

Тин пурăна пуçланă пек халь?
Мĕншĕн тесен халь тин, ĕлĕк мар,
Куратăп эп, тăван, пархатар.

Çĕр варринче тухса картишне
Пайтах тинкернĕ эп тӳпене:
«Кăвак хуппи уçсам ман тĕлте»,—
Тесе кĕлтунă сив пĕлĕте.
Çук, уçăлмарĕ вăл яр та яр,
Çук, тăкăнмарĕ çав пархатар.

Вун çиччĕмĕш çулта кĕркунне
Тин куртăмăр кăвак хуппине.
Аçа çапса кисренчĕ тĕнче,
Тасалчĕ çĕр çав вут ăшĕнче:
Тивĕççĕре çунтарчĕ пушар,
Тивĕçлине кӳрет пархатар.

Умри-хыçри тĕтреллĕ чухне
Мĕнпе йăпатмалла çын чунне?
Паттăрсене пайтах кĕтрĕмĕр,
Ват улăпа татах чĕртрĕмĕр:
Пур усала ватса чăл та пар
Вăл кӳрĕ, терĕмĕр, пархатар.

Чăн Улăпĕ иккен Мускавра
Выртать Кремльпеле юнашар.
Вăл вилнĕ-мĕн, анчах ун тавра
Никам çĕнтерейми вăйлă çар —
Ун паттăр партийĕ — тăнă кар!
Пĕр çавăнтан килет пархатар.

Ман харсăрлăх, ман вăй, хал-хавал
Аçтаччĕ вăл кун чухлĕ авал?

Эп çамрӑкчӗ, анчах чӗмсӗр чун
Ват супнӑ пек йӳтетчӗ ун чух.
Эп ватӑ халь, анчах эп хастар,
Хастарлатать мана пархатар.

Кун-çул ани яка йӗтем мар,
Ыр ут та пултарать такӑнма.
Çитмен ӗмӗтсене çитерсен,
Тикӗсленет кун-çул та иккен.
Мана тек нимӗн те кирлӗ мар,
Эп мӗн курни — йӑлтах пархатар.

Эп куртӑм хурине, шуррине,
Халӑхӑмӑн хисеп пуррине,
Тутантӑм уйранне, хӑймине,
Ӑнлантӑм чӑнлӑх çеç вӑйлине.
Итлекене çавна ӑнлантар,
Чӗрем кӗвви-çемми, пархатар!

1939.

# ТАНТАШСЕМ

Ик старик тĕл пулчĕçĕ,
Сыпнă иккĕш те, куран;
Шăппăн çĕлĕк илчĕçĕ,
Алă тытрăçĕ унтан.

Тинкерсе пăха-пăха,
«Пит аван-и» вырăнне,
«Эс халь те вилмен-и-ха?!»
Терĕç харăс пĕр-пĕрне.

«Ара эп сана шеллеп,—
Тет пĕри,— пĕччен епле?»
«Эп те çав кичем пуль теп
Пĕчченex кайма»,— тет леш.

Лăх-лăх кулчĕç ватăсем:
«Эх, аван та пурнăçĕ,—
Сайралаççĕ тантăшсем,
Ватăлатпăр пулĕ çав...

Ас тăватни Порт-Артур
Патĕнчи тамашана?
Илме илчĕç те, ай тур,
Вĕри килчĕ тăшмана!..

Ну вăрçрăмăр та вăрçа!
Эс митал та çав çулне
Илтĕн-ха вĕт, пур-и çав?
Çаккалатни ку чухне!»

«Те юрать, те юрамасть,
Тетĕп-çке те... праçникре
Çаккалап-ха. Урама
Пит тухман. Килте, пӳртре».

«Çак эс, тух эс урамах,
Кĕвĕçтер çамрăксене.
Тĕнче паттăрсăр тăман,
Пĕлччĕр пирĕн йышшине!

Хам эп Ворошиловран
Ыйтас тенĕччĕ-ха та
Тепĕр хут илме çара,—
Ывăлсем кулаç тата.

Кĕçĕнни ман шăп лере —
Хамăр çапăçнă тĕлте.
Леш яппун каллех пĕрре
Кăшт ашкăнкаланă, тет...

Шухăшлап та — темĕншĕн
Мансăр ĕç тухмасть пекех...»
«Иртнĕ пулĕ, тантăшăм!»
«Иртнĕ тетĕн? Эк, инкек!

Е миталсăрах çĕре
Выртмалла пулать-тĕр-и?..
Атя-ха, пӳрте кĕрер,
Астарам юр-ай сăри...»

Чĕнсе кӳртрĕ хăй килне
Пĕр старикĕ теприне.

Чĕнекенĕ — Сар Миккен,
Пахалăх инспекторĕ.
Леш — утар ăсти иккен,
Кӳршĕ ял, Чăм Нестерĕ.

Хирĕç пулчĕ тараса
Умĕнче ват карчăкĕ:
«И! Старик! — тет,— ара сан
Куç-пуç алчăранă-çке.

Ялта ятлă çын пулса
Пурăнатăн ху çапах,
Кăшт пĕлесчĕ намăса
Инĕçпехтăр пуçупа.

Пуçлăхсем тем калĕçĕ,
Халь вĕт çимĕк те çитмен».
«Чим-ха, карчăк, ман ĕçе
Ан пĕл-ха эс,— тет Миккен.—

Çимĕкчен-ха тем пулас!
Паян кун — Пĕрремĕш Май,
Ĕç уявĕ, как калас,
Вăхăт сан кăшт чухлама.

Мĕн тĕшмĕшленетĕн эс?
Инĕçпехтăр мăшрине
Ку пĕрре те килĕшмест...
Яр-ха нӳхрепе кине».

Ик старик кĕрекере
Калаçаççĕ тĕрлĕрен.
Анчах тухмĕç йĕркерен,
Çав илемлĕ ватăсен.

«Акапуç тытма ансат,
Алтăрна тытма вĕрен:
Ан хуплатăр вăл ăса!» —
Тенĕ çав мĕн ĕлĕкрен.

«Начар çеç улпут та, тусăм,
Апат умĕн пĕр черкке
Яратех, тет... пирĕн çук-им?!
Тулли мар-им кĕреке?

Ку чухне улпучĕ — хамăр:
Юрлă-варлă халиччен,
Хуртлă-хăмăрлă тăратпăр.
Тав сана!» — тет Сар Миккен.

«Сав мана!—тет Нестĕр тантăш,—
Пурăнатпăр-ха ара.
Колхозăмăр сан та, ман та
Чапа тухрĕ таврара...»

Стариксем кăшт хĕрнĕ те,—
Сара кин шав ĕçтерет.
Ывăлин ачи пӳрте
Пĕр хаçат илсе кĕрет.

«Асатте! — тет хĕрлĕ галстук
Çыхнă сарă пионер.—
Эп сана хыпар калас-тăк —
Еçмĕн урăх ĕмĕрне».

«Мĕн апла?» — «Сана ĕҫченшĕн
Медаль панă. Ак хаҫат.
Алă пуснă хăй Калинин».—
«Ан калаҫ! Чăнах-и ҫак?

Асса тух-ха тепрер кăкшăм,
Кин, кун пек телейпелен!
Ку — Калинин тантăшшăн
Пултăр!» — терĕ Сар Миккен.

1940.

# ЭЛТИВАН

Элтиван старик, ял пуçĕ,
Тăхăр вунă тăххăртан
Иртнĕскер, кăçал хур пулчĕ:
Вилчĕ кайрĕ ăнсăртран.

Яланах умра халь çав сăн:
Шур сухал, кăвак сăхман;
Пуçĕнче пĕр сар ялккас ун,
Йăваланăскер çăмран.

«Шĕлепке» теме пулать те,—
Çук, усрать авалхине.
Сăхманне вăл «япламат» тет,
Кам пĕлет мĕн сăмахне!

Элтиван хуралçă, тетчĕç
Хăйне эп ас тăвасса.
Емĕрех вăл ирттеретчĕ
Уй хапхи панче ларса.

Тыр вырма çын кустарать-и,
Хăнана е пасара —
Пуç тайсах уçса яратчĕ
Элтиван пичче вара.

Ял-йышсем-и, ют ялсем-и,
Юлан ут е урапа —
Вăл пурне те кăмăлçемсĕн
Асататчĕ ырăпа:

«Çӳрес сулăр çăмăл пултăр,
Çитес çĕрĕр сывăх пултăр,
Лайăх таврăнăр!» — тесе
Кăларатчĕ пиллесе.

Урапа пăти тухасшăн
Лăканса пырать пулсан,
Шаккатчех вăл, сăнасассăн,
Аллинчи туяпалан.

Ваттисем мухтатчĕç: «Ахăр,
Качака та халиччен
Каскăн шухăшлăн тухман-тăр
Элтиванăн хапхинчен...»

Выльăхсем алла кĕрсессĕн,
Яла юр хӳсе кайсан,
Тек хупмастчĕ çуркуннесĕр
Хапхине ват Элтиван.

Тапă, мăйкăч хатĕрлетчĕ,
Каркалатчĕ серепе.
Хĕлĕпе мĕшĕлтететчĕ
Тĕрлĕ кайăк йĕрĕпе.

Анкарти тăрăх килетчĕ
Пĕрер юс çака-çака.
«Сунарçи çапла-çке,— тетчĕ,—
Каяймастăп аякка...»

Каçпала тулатчĕ халăх
Ун патне «суя суйма».
Пур старикĕн юптармалăх,
Чăн сăмахĕ те нумай.

Тĕрĕкпе вăл вăрçнă пулнă,
Элтиван пичче — салтак.
Асăнмалăх чĕлĕм юлнă,
Ун пек чĕлĕм çук ялта.

Тĕрлесе пĕтернĕ, шурă,
Пӳлĕм-пӳлĕм кĕленче;
Чăпăкĕ пĕр аршăн çурă,
Кипарис йывăççинчен.

Тĕтĕмĕ тухать шыв витĕр,
Пĕртте, имĕш, йӳçĕ мар.
Чашкăратчĕ вара чиксĕр,
Каснă-лартнă сăмавар.

Кил хуçи пĕр-иккĕ селĕм
Сывласа илетчĕ те,
Çаврăнатчĕ чаплă чĕлĕм
Йĕркипе пĕтĕм пӳрте.

Ватă паттăр тапрататчĕ.
Хăй курни-илтни çинчен.
Хĕрнĕçем хĕрсе, яш каччăн
Такмаклатчĕ хушшинчен:

«Саркамăшри тĕрĕксем
Чĕлĕм туртса выртаççĕ:
— Кунта вырăс салтаксем
Килес çук-ха,— тееççĕ.

Çав самантрах вырăссем
Пересçĕ те çитеççĕ,
Чĕлĕмçĕсем — тĕрĕксем
Юн пĕрĕхсе тараççĕ...»

Вилчĕ хай хастар такмакçă.
Колхозсем чăмăртансан,
Сăнаса пăхсан пăртакçă,
Кĕнĕччĕ вăл колхоза.

Вăл каларĕ: «Çитрĕ тапхăр.
Куртăм сакăр самана,
Пурăнса ирттертĕм, ахăр,
Виç-тăвата патшана.

Выльăх-чĕрлĕхĕм — пĕр анчăк,
Эп тытман ут чĕлпĕрне,
Хай ĕмĕрĕнче ман карчăк
Кукленмен ĕне айне.

Килĕм-çуртăм — хурал пӳртчĕ,
Кив капан — халап-юмах.
Пĕтĕм ырлăх чĕлĕм пурччĕ,
Вăл та шăтрĕ, хăямат!..

Çитрĕ тапхăр, тетĕп эпĕ,
Халăхран епле юлам?
Колхозра этем хисепĕ
Хăпарать, куратăп хам.

Пĕчĕк чух пире хистетчĕç:
Йĕре-йĕре ĕçлекен
Кула-кула çиет, тетчĕç,
Халь пăхан та — тĕлĕнен.

Утса мар, ларсах акаççĕ,
Пилĕке хуçмасть çурла.
Ку чухне ӳсен хĕр-каччă
Еç тăвать юрла-юрла...

Çитрĕ тапхăр. Кунăм-çулăм
Нумаях юлман та ман,
Кам пĕлет, тен, кирлĕ пулăп...»—
Терĕ вата Элтиван.

Колхоза кĕни сасартăк
Урăхлатнăччĕ ватта.
Ун шайне тăмашкăн çамрăк
Йĕкĕт кирлĕччĕ ялта!

Сăмаха пит вакламасăр,
Ерипе, хăй мелĕпе
Темĕн чухлĕ кăпăр-капăр
Еç тăватчĕ хĕлĕпе.

Е явать турта пăявĕ,
Е шăналăк йĕпсисем
Хатĕрлетчĕ, тулă лавĕ
Йышлă пуласса сиссе.

Армана та, витене те
Çаврăнатчĕ кунĕпе,
Хăй аллипеле пурне те
Хыпаласшăн çуннă пек.

Çур енне, машин сарайĕ
Ремонта хапха уçсан,
Тракторсем панче сайра эп
Элтиван сăнне курман.

Вăл пăхатчĕ пиг вăраххăн,
Чĕлĕмĕ сӳнитченех,
Урăм-сурăм урхамахăн
Вутлă куçĕсем çине.

Кам пĕлет ун чух ун пуçĕ
Мĕскерпе сĕмленнине,
Кам пĕлет мĕн чухлĕ йӳçĕ
Асилӳ вĕркенине!

Тĕл пулатчĕ председатель:
«Элтиван пичче, мĕн хал?
Эс çак пирĕн чухлаканччĕ.
Тырă пулĕ-ши кăçал?»

«Хĕлĕмĕр тăманлă. Хулăн.
Пур шанмалăх, шăллăм, пур.
Килĕшет вăл, хурăн-хурăн
Хирсенче выртсассăн юр...»

Çуркунне, çĕршыв типсессĕн,
Элтиван пичче вара,
Тырăсен халне пĕлесшĕн,
Çавăрнатчĕ хир тавра.

Тем сарлакăш, пĕр йăрансăр
Ешĕл уçăм пуссипе
Вăл çӳретчĕ васкамасăр
Танлăн, çĕрĕн хуçи пек...

Вилчĕ пирĕн ват чухлавçă,
Районтан пĕр çын килсен
«Ветеран» тесе хăварчĕ
Элтиван пичче çинчен.

«Мусăкпа пытарăр,— терĕ
Элтиван хăй,— салтакла.
Çĕр çинче çуран çӳрерĕм,
Асанам — машинпала».

Пăртак сывлăш çавăрсассăн,
Вăл каларĕ пит хуллен:
«Чĕлĕме хампа хурсассăн
Лайăх пулĕччĕ-и, тен...»

Ваттисем пĕрер хăй хыççăн
Черетпе ĕмсе илсен,
Чĕлĕмне хураççĕ чысăн
Хăй çумне чун тухиччен.

Улт уралла тупăк кӳчĕç,
Лартрĕç тăрăх сак çине.
Чаплă ĕмĕрлĕх кил-çурчĕ,
Тунă хăй вăй пур чухне.

Лартрĕç, пăхрĕç, шăлкаларĕç:
Шыв та юхас çук, паха!
Шăппăн пăшăлтаткаларĕç:
«Чунĕ пур-и?» — «Пурччĕ-ха...»

Куçне хупнă та, мăнтарăн,
Сывласа выртать вăл ав.
Чун тени шалта-çке, тарăн,
Пит хĕнпе тухать пуль çав...

Ак минтер çинче хăяккăн
Кăшт шутарчĕ те пуçне,
Вăл каларĕ пит вăраххăн:
«Çитеймерĕм çĕр çулне...»

Ӳрӑх нимӗн те чӗнмерӗ.
Анасланӑ пек пулса
Карӑнса пӗрре илейрӗ —
Чунӗ кайрӗ тин тухса.

Хатӗр пулнӑ-мӗн тирпейӗ,
Тупрӗҫ акӑ ҫавӑнтах:
Пир, тӑла чӑлха, кӗпе-йӗм,
Супӑнь, ҫӗлен ҫип — йӑлтах.

Авалхи йӑлапа ҫурӗҫ
Ыраш уламӗ ҫинче.
Тумлантарчӗҫ те шӳт турӗҫ:
«Каччӑ пек эс, ӗмпичче!»

Чӗлӗмне тапак тултарчӗҫ,
Енчӗкне чакмакпала
Авӑ та вут чуль хуртарчӗҫ,—
Хатӗр ҫын инҫе ҫула.

Ҫыннӑн ӗҫӗ виҫӗ кунлӑх
Хӑй вилсессӗн те юлать:
Виҫҫӗмӗш кунне тин унӑн
Пуҫӗпех каяс пулать.

Старике те васкатмарӗҫ:
Ҫӗр хута та кун каҫа
Ваттисем тирпейлӗ ларчӗҫ,
Шӑкӑл-шӑкӑл калаҫса.

«...Ҫитмеллех ҫитрӗ-ши кунӗ?
Кай енчеччӗ те хӗвел...»
«Ҫитрӗ пулӗ те — ял чунӗ
Ял-йыша ҫапах та шел».

«Çавă-çке те... чараймастпăр:
Чăн çĕрте ĕнтĕ этем...»
«Элтиван пичче, каян-тăр,
Пире ан ӳпкелесем...»

Грузовик çине хурайрĕç
Çĕр çулхи ветерана.
Сакăр купăс ячĕç харăс:
«Çăлтăр витĕр çул курнать...»

Элтиван пичче юратнă
Пуринчен те çав юрра.
Хăй иккен ăна юрланă
Салтакра, таçта ютра.

Кӳршĕ ял ăсти, ун варлă
Тусĕ, шăпăрçă Саврук
«Ĕрçерум кĕвви» каларĕ
Шăтăка антарнă чух.

Ахăртса та, макăртса та,
Пĕр йĕртсе, ĕсĕклетсе,
Кĕвĕлерĕ вăл, чи вată
Тантăшне хисеплесе.

Хушăран, хăмпа вăр-веррăн
Ывăтса яра-яра,
Куç пăван асамăç халлăн
Калаттарчĕ сывлăшра.

Тупăка антарчĕç. Лартрĕç,
Çырусем картса, юпа.
Тăприне сиксе таптарĕç
Путмасса кĕрпе-çурпа.

Шăпăрçă Саврук, темскершĕн,
Сухалне çыртса вара
Виççĕ çаврăнчĕ пĕр шеппĕн
Вил тăпри йĕри-тавра.

«Пархатарлă çынччĕ,— терĕ,—
Çăмăл пултăрччĕ тăпри!
Ӳчĕпе шăммин ун çĕрĕ,
Ырă ячĕ юлтăр-и...»

Чăн: çынна х у р а л ç ă тетчĕç,
Ĕç пăрахăç мар, çапах
Хушамачĕ мĕскĕн пекчĕ,
Кӳренӳллĕччĕ. Анчах

«Элтиван хапхи» теессĕ
Халь ялти пĕр хапхана.
Хăй çинчен ĕнтĕ пуплессĕ
В е т е р а н тесе кăна.

1940.

## ЮЛАШКИ

Карантай Матви пурнатчĕ
Емĕрхи ячĕпелех.
Янăравлă хушамачĕ —
Мăн аслашшĕн пехилех.

Анчах тикĕссĕн пымарĕ
Ун кун-çулĕ ку чухне.
Кăшт кăна вăл çухатмарĕ
Хăйĕн тĕп хушаматне.

Пĕтĕм ялĕ колхозланнă,
Карантай Матви кĕмен.
Тем майпа, тем шутпалан вăл
Тăрса юлнă пĕр-пĕччен.

Агитаторсем килетчĕç
Районтан, Шупашкартан;
Калаçатчĕç, витеретчĕç
Пухура-мĕнте ялан.

Çав-çавах, хисеп тăвусăн,
Çĕр те виçĕ килĕрен
Пĕр килли Матви «инхусăн»
Шутланатчĕ çулсерен.

Счетовод тĕртсе илетчĕ:
«Мĕн чăваш пуçупалан
Пĕчченле пурнатăн? — тетчĕ,—
Пĕрлешесчĕ сынпалан.

Хăçанччен эп çырăп саншăн
Уйрăм список сводкăра?!»
«Кĕрĕп-çке,— тет леш йăвашшăн,—
Колхоз тармĕ-ха ара...»

Ӳкĕтлетчĕ хурăнташĕ:
«Хушамат ятне яран!
Мĕн пĕччен эс, мур курасшĕ?!
Пурăн хамăр йышпалан.

Санпала ĕçсе-çиме те
Лайăх мар, хăвах чухлан:
Çулсерен эс пĕрĕнетĕн,
Тăвансем — çĕрме пуян!»

«Вăл çапла та...» — текелетчĕ
Карантай ун пек чухне,
Хăй сухапуçпех чĕретчĕ
Хытса кайнă анине.

Председатель ӳкĕтлетчĕ,
Ӳкĕтлетчĕç ял-йышсем.
«Кĕмелле те халĕ...» — тетчĕ
Карантай иккĕлешсе.

Тепĕр чух перетчĕ тӳррĕн:
«Çыпăçатăр çын çумне!
Çыннăн хăйĕн ăсĕ пур ун,
Тем пулас-ха малашне?..»

«Мĕн малашĕ? Çирĕм çул кĕç
Пуранатпăр колхозра.
Час уявлĕç! Юрă юрлĕç,
Эс — пĕччен... мĕнле вара»?

«Халь пĕччен те... ĕрчеттерĕ
Саманамăр, тен, кайран...»
«Маяна юлатним?» — терĕ
Пĕри шăппăн хыçалтан.

Сăмах çыпăçрĕ те ларчĕ,
Хăпартсан та хăпас çук.
Карантайăн хушамачĕ
«Мая» пулчĕ çавăн чух.

«Хăш Матви?» — тесе ыйтсассăн,
Ун çинчен пур таврара
Калаçатчĕç пĕр çăварлăн:
«Леш... Мая Матви ара...»

Çын колхоз марне пĕлсессĕн
Ют ялсем те хăш чухне
«Мĕн маяматвиленетĕн?» —
Тенĕ, имĕш, пĕр-пĕрне.

Çавнашкал çын ячĕ кайнă,
Асăнсассăн пĕрмаях
(«Карантай» теме те маннă!)
Шав Мая, Мая, Мая...

Матви карчăкĕ кӳреннĕ,
Ун пăртак турти кĕске:
«Маяна, старикĕм, — тенĕ, —
Чăх айне хураççĕ-çке!..»

Унченех упăшкипе вăл
Урлă-пирлĕ пулнă та,
Çавăнтан вара çил-тăвăл
Çавăрттарнă кил-çурта:

«Пурăнмастăп! — тенĕ карчăк,
Хĕрĕх çул мăшăрлăскер,—
Колхоза кĕмешкĕн чарчĕ,
Халь ав куртăмăр мĕскер!

Чăх айне хурсан-хурсассăн
Çăмарта,— пĕлетĕне? —
Пăнтăхса каять, курмастăн
Намăсу мĕн терине.

Час «Чăх ай Матви» темешкĕн
Пуçлĕç акă ухмаха.
Лайăх пулĕ тем илтмешкĕн
Ват пуçпа çав сăмаха?

Пурăнмастăп!.» — тенĕ карчăк,
Шарт хупса пӳрт алăкне.
Унтан уçнă та сасартăк
Шăнтнă янă мăшăрне:

«Колхоза кĕретĕп!» — тенĕ,
Вара кӳршĕ ачине
Вăл çыртарнă заявлени,
Утнă канцелярине.

Мĕн тăвайăн, мĕн ĕçлейĕн:
Ут чĕлхен ун шăмми çук,
Карчăк юмăç пулнă, тейĕн,
Тарăхса ятлаçнă чух.

Пĕр ик-виçĕ кун иртсессĕн
Матвие — ăçта илтен —
Ял-йышсем «чăх ай» темешкĕн
Тапратаççĕ ерипен.

Çивĕч-çке çав çын сăмахĕ:
Çитсе тиврĕ — вырт та вил!
«Хăш Матви?» — тет пĕр амакĕ.
«Леш ара.. Чăх ай Матви...»

Сарăлать хайхин камичĕ
Касăран касса ялта.
Ют ялсем те — ăçта килчĕ —
Сĕтĕреççĕ çав ята.

«Мĕн, Чăх ай Матви пек, эсĕ
Халь те колхоза кĕмен?..
Мĕн чăхайланатăн?» — теççĕ
Теприсем, хĕрсе çитсен.

Кам пĕлет: тен, çыннăн ячĕ
Пур республикă урлах
Сарăлса чысран каятчĕ,
Анчах тухрĕ урăхла.

Юбилей туса ирттерчĕ
«Амăрту» колхоз çав çул.
Инкесем ирех икерчĕ
Чашкăрттарчĕç, сĕрчĕç çу.

Ватăрах кинемейсем кĕç
Сĕрчĕç кăпăклă сăра.
Стариксем сим пыл симлерĕç
Утара çывăхарах.

Пĕр эрне малтан, çав майăн,
Мухмăрларĕç ирсерен.
Хăш-пĕрин куçне комбайн
Карап пек курнатчĕ, тен.

Шăп колхоз уявĕн кунĕ
Матвие те ир-ирех
Хыпар турĕ Макçăм кумĕ:
«Пыр-ха, кум, хайхи çĕре...»

«Аван мар, кум,— терĕ лешĕ,—
Янтине кӳпме çӳрен,
Тейĕ халăх, ӳпкелешĕ;
Пыраймастăп, ан кӳрен».

«Пирĕн пĕтмĕ! Председатель
Хăй каларĕ йыхăрма».
«Ну, апла тесен, татахчĕ...
Карчăк тем калать-ха ман?»

«Çӳç-пуçна пуçтар пăртакçă,
Сухална та тураман.
Çын çинче çын пек пуласчĕ,
Мĕн шăлна йĕрселаран?

Лантăш супăнь пурччĕ манăн,
Ме, питне çу, упăте!..»
Хăртрĕ-хăртрĕ те хăй майлăн
Хушрĕ карчăк: «Час ут теп!»

Юбилей, колхоз уявĕ,
Кĕлтĕр-келтĕр çĕрте мар:
Пахчара кĕрлет ун шавĕ,
Çĕнĕ сад ӳсет катмар.

Улмисем те пулкаланă
Çамрăк-çамрăк йывăççен.
Чиесем пур, хурлăханăн
Хуп-хурах-мĕн тĕмĕсем.

Шыв хĕррипеле питомник,
Шалалла — кăшт сăртарах —
Лартнă радиоприемник.
Пĕтĕм халăх ун тавра.

Кĕреке сĕтелĕ тунă,
Пĕрре мар-ха, темиçе.
Сак-тавраш та лартса тухнă,
Ашлă пăтă час пиçет.

Пичĕке кустарса анчĕç
Стариксем утар енчен.
Кашнине курка тыттарчĕç,
Куркисем — шур кĕленче.

Йăкăнат пичче, утарçă,
Купăсне ĕнеркелет.
Юрăççем тăрса тухаççĕ
Пĕр енне йĕркипеле.

Гимнастеркăллă яш каччă
«Слава» орденĕпелен.
Çав пулать-мĕн председатель,
Çав сăмах калать иккен.

«..Çирĕм çул éнтĕ пурнатпăр
Пĕрлешсе ял-йышсемпе.
Çĕр ĕçне туса пыратпăр
Кĕнеке вĕрентнĕ пек...

Ахаль мар калана пулĕ:
Пĕччен çын сурать — типет,
Халăх сурĕ — тăвĕ кӳлĕ.
Çав сăмах тӳрре килет...»

«Вата çын пек калаçать ку,—
Терĕç хăшĕ,— эккей, э!»
«Кум, сана та кăшт хыçать ку!» —
Терĕ Макçăм Матвие.

«Йăнăшрăм, ушипкă пултăм»,—
Терĕ леш, пуçне хыçса.
«Тӳрлетме пулать-тĕр, кумăм?» —
Терĕ Макçăм «Тепле çав...»

«Тав сана-ха!» — терĕ Макçăм.
«Тав, ĕçех!» Леш малалла:
«Эс вулав çуртне хальхаççăн
Çӳреместĕн пулмалла?

Хаçатсем халь пĕлтереççĕ:
Польшăра, Болгарире
Колхозсем тăваççĕ, теççĕ,
Халăх илнĕ. тет, çĕре.

Ну, пире тесессĕн, пана
Çак çĕре ĕмĕрлĕхех.
Вăй эпир, эпир, тăванăм,
Тав сана-ха!» — «Тав, ĕçех!

Йăнăшрăм, ушипкă пултăм,
Пăсрăм хамăн пурнăça.
Ял-йышран хăйпăнса юлтăм.
Халь кĕрсен те... тепле çав...»

«Кăмăлу пулсассăн — туххăм!»
Макçăм кум сăмах илет:
«Ак кунта ман Матви кумăм
Колхоза кĕресшĕн»,— тет.

«Заявлени çыртăр»,— терĕ
Председатель, хăй чеен
Халăха пăхса йĕрлерĕ
Кулакан куçсемпелен.

«Халăх хирĕç пулмасассăн,
Йышăнатпăр, тен, тӳрех?»
«Кĕтĕрех,— терĕ пĕр сасă,—
Мĕн хусах хур пек çӳрет...»

Матви карчăкĕ кăлт тĕртрĕ
Чавсипе упăшкине:
«Тăр, калаç ĕнтĕ ху,— терĕ,—
Е çĕн ят илтес тетне?!»

Матви кăшт ӳсĕркелерĕ:
«Ара, халăх, ĕнтĕ эп
Каярах юлтăм та,— терĕ,—
Хапăлах пулсан — кĕреп.

Йăнăшрăм, ушипкă пултăм:
Сухапуç-кĕлмĕçпеле
Маташса çак куна куртăм,
Пултăрах вăл эртеле,

Тен... паранкă çурма юрĕ...
Заявленине ăна
Макçăм кум та çырса хурĕ,
Леçсе парăп паянах».

Ĉчетовочĕ кăчăк туртрĕ
Хуратутлă ачана,
Хăлхинчен каларĕ — хушрĕ:
«Чуп-ха!— терĕ вăл ăна,—

Телефонпалан мĕн ту та
Района халех пĕлтер:
Çĕр процент халь «Амăрту» те,
Ăнланатăн-и? Вĕçтер!

Сводка панăччĕ... Хуратчăр
Уйрăм списокне пачах.
Колхозра тесе кăтартчăр
Çак... Матвей Агапăча».

Вăл каларĕ хытăраххăн
Юлашки сăмахсене.
Карантай Матвийĕ танлăн
Пăхрĕ карчăкĕ çине.

Мĕн кăна тесе чĕнмерĕç:
Пĕр «мая», пĕр «хусах хур»,
Пĕр тата «чăх айĕ» терĕç,
Çын чĕлхи вăл — çилĕм, мур!

Çыпăçсан — саваламасăр
Хăйпăтаймăн ĕмĕрне.
Çав сави... сави вăл — хамăр
Яланах ун пек чухне.

Ахаль мар пуль çав пуплеççĕ
Кая юлнă çын çинчен:
Çынран мар, муртан юл, теççĕ,
Ĕлкĕрес пулать иккен.

Пур çĕрте те пурăнаççĕ
Этемсем эртелленсе.
Шур курак пек курăнаççĕ
Ку чухне пĕччен çынсем.

Çавăнпах-и, тен, сăхаççĕ
Сăмахпа унашкала.
Коммуна пĕччен сухаçă
Кĕреймест ман шутпала.

Карантай Матвин те ячĕ,
Тен, республикă урлах
Сарăлса чысран каятчĕ,
Анчах тухрĕ урăхла.

Халь ăна куç умĕнче те,
Курман чух та — пĕрех май
Ячĕпе чĕнеççĕ ĕнтĕ:
«Кам тавраше?»— «Карантай!»

«Хăш Матви?»— «Матвей Агапчă!»—
Тет хай счетовод вара.
«Миçе кун?» — «Шăп вăтăр пачĕ
Тăрăшса çак уйăхра».

Ансăртран кăна хăш тапхăр
Çăмăл чунлă шăл йĕрен
Каласа хурать тăрлавсăр:
«Тухрĕ-им чăх айĕнчен?..»

Унашкал пĕр мыскараçă
Тĕл пулать вăл ялсерен.
Анчах хытă хăтăраççĕ
Ваттисем çавна илтсен:

«Пулнă — иртнĕ. Çын — ударник.
Ма шăла йĕрес халь тин?
Урăх вăл яла култармĕ,
Ятне ямĕ. Хамăр çын!»

1949—1950

# СИКТЕРМЕ

## ЯЛАМА

Сиктĕрме! Савса сиктертĕн
Ешĕл-симĕс сăпкунта.
Малтанхи хавасăм, тертĕм,
Хура-шурăм — йăлт кунта.

Пĕвĕм-сийĕм аталанчĕ
Пурлă-çуклă çимĕçрен.
Йăлтăртатрĕ пĕчĕк шанчăк,
Чунăм çукчĕ сӳнесрен.

Ас пуххa çынна тухмашкăн
Ĕмĕтлентĕм ачаран.
Пĕр ура пусси те маншăн
Çăмăл марччĕ ку таран.

Ансата эп вĕренменччĕ,
Пуш сăмах та авăртман...
Пит çӳхеччĕ пирĕн енчĕк,
Ăна ылтăн хăпартман.

Пăхăр чĕлĕм кĕркеленĕ,
Чакмапа вут чуль пĕрле,
Авăпа табак çӳренĕ
Е темех (сиктĕрмелле).

Çавччĕ мул. Çапах ун хакĕ
Тăнă ылтăн тĕшшине.
Халь те эп туятăп акă
Тивнĕ ăвă шăршине...

Ватăлап та ку тăруçăн,—
Упранать-ха ял хевти.
Сиктĕрмеçĕм! Тайăл, пуçăм,
Сан хура çĕрне çити!

1957.

## НЕСЕЛ

Эпир тутар çĕршывĕнче пурнатпăр,
Виç чĕлхепе пĕлетпĕр калаçма.
Анчах унта та пур-мĕн Улăп паттăр,
Пĕр çавăнпах чăваш теп эп хама.

Çеçен хирпе мал еннелле каюçăн
Канмашкăн ларнă Улăп асатте,
Çăпатине силленĕ те кануçăн
Ик мăн тĕме туса хăварнă, тет.

Çав ик тĕме хушши шăп пилĕк çухрăм,
Унта вырнаçнă пирĕн Кивĕ Ял.
Ял пуçĕ пулнă Питтăпай. Ман юррăм
Пуçлантăр çавăнтан эппин кăçал,

Питтăпайăн ачисем
Ялан симĕс atăллă,
Питтăпайăн кинĕсем
Ялан кĕмĕл сулăллă,
Питтăпайăн хĕрĕсем —
Шĕлтĕр укçа умĕсем.

Çапла юрланă çичĕ ял сынни —
Пĕр тымартан хунанă чăвашсем.

Ик-виç çĕр çул хушши суйн-чăнни
Пăтрашнă самана пăтрашнăçем.

Мускавшăн вăрçă вăрçнă чăвашран
Пуçланнă Питтăпайăн ăрăвĕ,
Хаяр Иван пехилĕ ун ялан
Усраннă, тет,— аслашшĕн çырăвĕ.

Араманух Лексей патша чухне
Хăй те хут илнĕ Питтăпай турхан.
Халичченех усраççĕ ун хутне:
Патша ал пуснă, тенине, куран.

Тавра ялти тав-шавлă ĕçсенче
Хăвăлĕнчен кăларнă çав хута.
Пĕр пек тăман пулин те çут тĕнче,
Ни хураха лекмен вăл, ни вута.

«Хăмла татмашкăн, мăйăр пуçтарма,
Сăка сӳмешкĕн — ирĕк» тенĕ хут.
Йĕри-тавра кашланă сĕм вăрман,
Павак сĕрленĕ, çыртнă кукăркут.

Ял-йыш ĕрченĕçем, кăк кăкласа,
Пăри акса тĕшленĕ, вырнă вир.
Пурна-киле пĕр несĕл çич касса,
Çич турата пайланнă-мĕн эпир.

1948.

## ЯТСЕМ

Ваттисем çапла пуплеççĕ:
Шар çурса сĕм вăрмана
Юлан ут кустарнă, теççĕ.
Вырăс курнă та ăна:
«Эй, чăваш, пит ан васка!
Шапку, шапку потерял!»—
Тенĕ-мĕн. Вара ШАПКА
Ятлă пулнă, тет, пĕр ял.

Тепĕр çыннăн, хăраса,
Лаши ĕрĕхнĕ тĕлте
Пулса кайнă ХĂРАТА,
Çав ятпах ял халĕ те.

Теприсем — аваллăхра
Хула пулнă вырăна
ХУЛАТУ ятпа вара
Тухса ларнă ыр кăна.

Тепĕр йăхĕ, тавралла
Çын тулса капланнă май,
Пăрăнать вăрманалла,
Çавăнпа пулать ПĂРНАЙ.

Икĕ ялĕ çав тери
Иртнине аван пĕлет:
Анатрипелен Тури
ПИТТАПАЛЬ хисепленет.

Ултă ялăн варрине,
Сиктĕрмелĕх çĕмĕртсем
Йăвă ӳснĕ çĕр çинче.
Ларнă манăн СИКТЕРМЕМ.

1948.

## СИКТЕРМЕ

Сиктĕрме! Сиктĕрмесем!
Ěмĕрхи лĕкĕртисем! [1]

Йывăр пулнă çав ăнманă
Ĕлĕкхи хура шăпа.
Сыхлансан эпир сыхланнă
Урăм-сурăм кулăшпа.

Кам кăна килсе ан лектĕр
Сиктĕрме кассисене —
Йĕплесе тирсе илнех пĕр
Халăх «çичĕ ютсене».

Хырăç-марăç пуçтарать-и
Йăтăнса килен кантур,
Пупĕ çылăх каçарать-и,—
«Кучченеç» пурне те пур.

Хулăпа чĕн пушă айĕн
Парăмне таткаласан,

[1] Лĕкĕрти — кулса тăрăхлама юратакан (Сиктĕрмере).

Темĕн тĕрлĕн, темĕн майлăн
Хăртнă çын сăмахпалан.

«Кăсăя» тесе виртленĕ
Ахаль мар пĕр тиеке,
«Чĕмере» тесе питленĕ
Пĕр пупне те ĕлĕкех.

Ял-йышсен те ячĕ иккĕ
Яланах пирĕн патра.
Каласа хурать те вичкĕн
Çат çыпăçтарать вара.

Сиктĕрме! Сиктĕрмесем!
Ĕмĕрхи лĕкĕртисем!

Çĕршывне вĕсем пит хытă
Юратаççĕ, ку чăнах.
Тавлашма-тума ан тытăн,
Аяла пулатăнах.

«Шупашкар вăл пуç хула та,
Эс мана унпа ан чыш,—
Сиктĕрме те каях мар-тăр!» —
Тет вара пĕр-пĕр ял-йыш.

«Эпĕр хамăр та столица
Таврари вуник яла.
Пĕр шкула кăна эс илччĕ —
Вунă çуллăх япала!

Пульнитса мĕне тăрать-тĕр!
Çирĕм-вăтăр çухрăмран

Халăха вăл пуçтарать те,
Мĕн мана эс юптаран!..

Чăнласах та: каçлă-ирлĕ
Эп тухатăп та хире —
Йĕлтĕр йĕрĕ урлă-пирлĕ
Пур ялтан килсе кĕрет.

Сумкă çакнă, малаххайлă
Ачасемпеле хĕрсем
Ярăнаççĕ вунă класлă
Шкулалла пар пек хĕрсе.

Çав йĕрсем, кăпт сĕмленсессĕн,
Маншăн рельссемпе танах...
Пултăрах — сиктĕрмесенĕн
Пуç хули те, пултăрах!

1948.

# ПИТТАПАЙ ÇЕРЕМĔ

Чăвашра нумай ун евĕр
Катасем, уçланкăсем,
Çырмасем, варсем пĕлетпĕр,
Иртнине аса илсен.

Паллă çынсене пытарнă
Акăш-макăш чыспала.
Хăшĕ ырă ят хăварнă,
Хăшĕ тухнă усала.

Усалне те, ыррине те
Хисепленĕ пĕр танах:
Пĕри пулнă Киреметĕн,
Тепри — Пӳлĕхĕн, паллах.

Выльăх руснă, аш пĕçернĕ,
Тăкнă кĕмĕл те нухрат.
Сăрине, пылне ĕçтернĕ
Этемсем мулне кура...

Чăвашра нумай ун евĕр
Асăнмалăх вырăнсем.
Питтăпай çеремĕ тетпĕр
Эпĕр те, сиктĕрмесем.

Виç çĕр çул суха тивмесĕр
Выртнă çав кăлкан ана.
Пирĕн вата асаттемĕр
Çавăнта иккен канать.

Çавăнтах-и, тен, пăхсассăн,
Ун лаши те, хĕçĕ те.
Çичĕ ял ăна хавассăн
Асăнатчĕ çав çĕрте.

Çимĕкре-мĕнте, хĕр-каччă
Мăшăрланиă тапхăрне,
«Çĕнĕ çын парни» çакатчĕç
Питтăпайăн пуç вĕçне.

Ваттисем унта хыватчĕç:
«Пултăр,— тетчĕç,— тутлăхра!»
Турамсем татса тăкатчĕç
Ун пĕччен тăпри тавра.

Çамрăксем хĕвеле майăн
Юрă-сăвăсемпеле
Çаврăнатчĕç — Питтăпайăн
Ашшĕ çĕрĕ еннелле.

Çĕрпўрен-мĕн килнĕ вата
Асаттемĕр Питтăпай.
Çавăнпа тĕп чăвашра та
Хурăнташ пире нумай.

Кĕрлĕ-çурлă, кайăк-кĕшĕк
Иртнĕ чух калла-малла,
«Салам калăр!» — тетчĕç хăшĕ,
Ал сулса Чăвашалла.

Хальчченех манма пĕлмеççĕ
Пĕр чĕлхеллĕ çынсене:
«Атăл урлă несĕл» теççĕ
Автономирисене.

Хăнана та кайса курнă
Унталла-мĕн хăшĕсем.
Ахаль мар «Канаш» ят хунă
Колхозне те çав вĕсем.

Сăнасан — каях юлмаççĕ
Питтăпайăн йăхĕсем:
Клубĕнче «Айтар» лартаççĕ,
Çырăнаççĕ хаçатсем.

Курăнать «Чăваш Коммуни».
«Хамăр та чăваш та-ха,—
Тет этем,— пĕлес пĕр чунлă,
Хамăр кăмăллă йăха».

«Ячĕ те «Коммуна» авă,—
Тет тепри кăшт тинкерсен,—
Пархатар пурах-тăр çавă
Атăл урлă тăвансен».

Ачасем «Ялав» сиреççĕ
Кас вулав çуртне кĕрсен,
Сăвăсем çырса илеççĕ,
Пăхкалаççĕ картинсем.

Атом бомбине шыраççĕ:
«Кĕлетки, тен, пулĕ ун?..»
Хиросимăшăн хăртаççĕ:
«Шурă Çуртăн хура юн!»

«Аптраман тавраш» вулаççĕ
Килĕрен киле чĕнсе.
Хăйсене унта тупаççĕ
Енерхи салтак çынсем.

Чĕлхине тиркекелеççĕ:
«Хамăр ял та хăй, ай-хай...
Вирьялла çырать кăшт,— теççĕ,—
Çавăрасчĕ хамăр май...»

Виç çĕр çул сухаламасăр
Выртнă пирĕн çереме
Сухала пуçларĕ трактор,
Çĕр тапратрĕ çĕнелме.

Хирĕç сас та илтĕнет-мĕн,
Хăшĕн чунĕ ыратать:
Ял пуçне çу иртнĕçемĕн
Хисеплет вăл, юратать.

Эс конфликтшăн хĕпĕртетĕн,
Драматург,— кунта килсем:
Ак вĕсем — чăваш трагедин
Çырăнман сыпăкĕсем.

Эп калатăп: пурлă-çуклă
Турамсем таткаличчен,
Мăй таран кашлатăр тулă
Питтăпай тăпри çинче!

1948.

## ЕНЧЕ

Енчĕ пушмак, шур чăлха...
Халăх юрри.

Пултарнах çав Питтăпайĕ:
Çирĕк айĕн, çĕмĕрт айĕн
Юхнă пĕчĕкçĕ шыва,
Лăпкăн куç хыва-хыва,
Енчĕпе вăл танлаштарнă,
Енчĕ ят хурса хăварнă.
Те шывех ун пит таса
Выртнă витĕр курăнса,
Те çынни кăшт сăвăç чунлă,
Сăвăç ĕмĕтлĕ пек пулнă?..
Енчĕ-терĕш Чăвашра
Тупăнман-çке-ха ара:
Тарăн тинĕс тĕпĕнче вăл,
Путнă кимĕ çумĕнче вăл,
Тĕрлĕ рак хуранĕпе
Усранать ĕмĕртенпе.
Кăларсассăн — ярăм-ярăм
Шăрçалать ăна хĕрарăм,
Енчĕпе пушмак-тавраш
Ĕмĕтре тĕрлет чăваш.
Енчĕпе тĕнче касаççĕ,
Тинĕс урлă та каçаççĕ.
Парнене, кучченеçе
Çӳретеççĕ çав енче;

Уншăн вăрçă тапратаççĕ,
Чун сутаççĕ, пуç тataççĕ.
Ăшă тинĕс хумĕсем,
Паттăр арăн юнĕсем,
Пурнăçпа туллин киленнĕ
Пикесен çитмен илемĕ —
Ак мĕн пысăкăш тĕнче
Пирĕн шывăн ятĕнче.

Пултарнах çав Питтăпайĕ!
Ырлăха-и, шырлăха-и,
Пĕр поэт çуралмаллах
Пулнă пуль ку тавралла.

1948.

## КУН ЙЕРКИ

Эп календарĕн листине
Касах хуратăп çавăрса:
Тăрсассăнах ир-ирхине
Çĕн кун çĕнеттĕр ман ăса.

Куллен эп, Петĕр ĕмпӳ пек,
Ыран мĕскер тумаллине
Çырса хуратăп йĕркипе,
Числа лартсах хăрах енне.

Ак мартăн саккăрмĕшĕ. Ман:
Юр хырмалла, вут çурмалла;
Унтан алла кăшт кантарма,
Кăнтăрлаччен ман çырмалла.

Вулав çуртне те çитмелле
Хаçат-журнал пăхкалама,
Унтан ял пуçĕсемпеле
Тивет пулас-ха калаçма:

Арман шăнса ларни çинчен,
Трахпункт мĕскершĕн ерипе
Мĕшĕлтетни çинчен хиврен
Сӳтсе явасчĕ йĕркипе.

Унтан ак литкружок шкулта
Анатрипе тури пирки
Чӗлхе тав-шавӗ тапратать...
Ӳссех пырать ман кун йӗрки.

Пӑртак кансассӑн, каҫпала,
Хӗрарӑм кунӗ ячӗпе
Ман «Натали» вуламалла ..
Ҫаплах, хӗл те каҫатӑп эп.

Ҫапла, сухал хырма мансах,
(Тен, ку та пысӑк шар-тӑр та)
Ҫӗклесшӗн хамӑр колхоза
Ӗҫлетпӗр, кам мӗне ӑста.

1948.

## ЧĔПСЕМ

Сап-сарă чĕпсем
Ешĕл курăк çинче.
«Леггорн, виандот»,—
Тет хуçи, савăнса,

Мĕнле сăмахсем!
Ĕмĕрне те илтмен.
«Шултра çăмарта,
Самăр аш» тени ку.

Хăлат явăнать
Кăн-кăвак тӳпере.
Автан кăрласа
Пĕлтерет ун çинчен.

Хăрах куçĕпе
Вăл пăхать çӳлелле.
Чăл-пар саланать,
Сарă ушкăн чупса.

Паранкă ăшне,
Помидор айнелле
Кĕрсе йăпшăнать
Сар сăмса, мерчен куç.

«Шимп-шимп» тукалать,
Тĕрĕслет пĕр-пĕрне.
Хуллен... хулленрех
Илтĕнет шиклĕ сас...

Сап-сарă чĕпсем,
Çӳрĕрех ирĕкре:
Автан сыхра чух
Сире тивмĕ хăлат.

1949.

## ПУЛТАРАХЧЕ ТЕЛЕЕ

Вашăкрах шыв хĕррипе —
Чăкăт пек кăмпа.
Сар хĕр утрĕ нӳхрепе
Сарă кăкшăмпа.

Асса тухрĕ туллнех
Кăпăклă сăра.
«Пултăрахчĕ телее!»
Терĕм эп ăшра.

1949.

## «ТИКИ-ТИКИ»

Вăтакасра сап-сарă хĕрача
«Тики-тики» тет шурă хурсене.
Вăл хапхаран курать халь хур анчах,
Ашталанать кӳртесшĕн картишне.

Мăнтарăн пулăшать ĕнтĕ киле,
Есле пуçланă пиллĕк-уллтăрах;
Çап-çавракка кăвак куçĕпеле
Чăр-чăр пăхса илет ютшăнарах.

Вăл вулĕ-ха ӳссен çак сăввăма,
Хăйне паллаймĕ: йышлă ун пекки.
Эп пурăнап çавсемшĕн савăнма.
Ăçта-ши халĕ ман «тики-тики»?..

1961.

## ВИҪШЕР ЙЕРКЕН

Пăх чĕрӳне...
ДАНТЕ.

I.

Пĕрремĕш ас тăву ман — хуран айĕ,
«Апап!» тесе юнарĕ те анне.
Ҫат сыпăҫрăм хам ларнă вырăна эп.

Анне тухса уттарчĕ шыв патне.
Ларатăп сак ҫинче. Ҫулла. Яр усă
Умри пĕр чӳрече урам енне.

Вута пăхса тинкернĕ шиклĕ куҫăм.
Апап — мĕскер вăл? Чĕрĕрех кăвайт
Шăрт-шарт тăвать ҫунса
кăварланусăн.

Эп пит ҫав ялкăшан кĕрен-кăвак
Япалана анса тытса пăхасшăн,
Анчах анне сăмахĕ куҫ пăвать.

Кĕтӳ кĕртет. Пӳрт умĕпе вăраххăн
Чаркаланса утаҫҫĕ ĕнесем.
Сĕнккеҫҫĕ сурăхсем анранă халлăн.

Пуҫне чиксе, кăшт ӳсĕркелесе.
Тусан. Хĕвел анса пытаннă, ахăр.
Ларап кĕтмен пекех ҫын килессе,

Такăрлăкран тухайрĕç симĕс, капăр
Паллана витресем сулкаланса —
Эп кăшкăрса та ятăм чăтаймасăр:

«Анмарăм!» — терĕм мăнкăмăлланса.
«Маттур, маттур!»—тесе чӳрече умĕн
Анне иртет, ман пуçăмран шăлса.

Ун пек хаваслăх нихăçан тек пулмĕ:
Темскер пултарнă пек сикет чĕре.
Халичченех асра çав сисĕм хумĕ.

Ун чух эп пулнă пулĕ виççĕре.

II

Юрлаттарса пур шăтăк-шăхăра,
Çил, мечĕт тăрринчи санкрав асан пек,
Хăй сассине илтмесĕр шăхăрать.

Урайĕнче урхамахсем касап эп
Сӳсе пăрахнă пушăт хуппинчен.
Манран инçе атте-анне асапĕ.

Çăка хăма çинче пĕр вĕçĕмрен
Урхамахсем юмахалла юртаççĕ,
Ури çĕре лекмен пекех вĕсен.

Эпваскатап, хистеп тата пăртакçă:
Часрах, часрах — аяккарах кунтан
Çил çунатсем çине ларса тарасчĕ!

Тем çуллĕш ту, мăн тинĕс, сĕм вăрман
Тĕрлет, хăй пĕлнĕ пек, айван ăс-пуçăм,
Курать вăл аçтаха та арăслан.

Кутник панчен тĕпелелле чупуçан,
Сак хĕррине сасартăк перĕнсе,
Чăл-пар ванать пĕрремĕш çута шуçăм.

«Авланиччен тӳрленĕ-çке!» — тесе
Анне, ман юнлă сăмсапа куççуллĕ
Пите шăлса, каллех туртать сӳсе.

Мĕнле илемлĕ, вăйлă çын! Мĕн чухлĕ
Ачашлăх унăн çĕмĕрт куçĕнче!
Çавна эп пуçласа туятăп пулĕ.

Пăхап куçа илместĕп ун çинчен.
Сĕвем тăсса анан йĕке, тӳнмесĕр,
Урайĕнче ташлать ик-виç хутчен.

Анне юрлать: çырла татать чипер
хĕр..
Аçта-ши вăл? Курасчĕ çав хĕре.
Е манăн аннерен те вăл чипер-тĕр?

Ун чух эп пулнă, ахăр, пиллĕкре.

III.

Эп пулнă пĕр ача. Пĕччен те чурăс
Ӳсме тӳр килнĕ. Кӳршĕ хĕр Праски
Мана астукалалă — лайăх юрăç.

Садра выртатчĕ хурама каски.
Кăмпа шăтатчĕ. Эпĕ шăвараттăм.
Çиеттĕмĕр каска кăмпи яшки.

Каç-каç пĕччен тула тухма хăраттăм:
Тем тĕрлĕ усала та тĕселе
Йĕри-тавра çӳренĕ пек кураттăм.

Вĕренекен ачасемпе пĕрле
(Вĕсем çуллен ик-виççĕн пурăнатчĕç)
Хавасчĕ кĕнекеллĕ сĕтеле.

Саспаллисем асамлăн курăнатчĕç.
Тӳсме хал çук туртатчĕ кăранташ,
Шур грифель тем пултарнăн
туйăнатчĕ.

Хутран çав япаласене йăваш,
Хаюсăр алăпа, пĕр ним чĕнмесĕр,
Тыткаласа пăхаттăм эп кăшт-кашт.

Саспа вулакана, куçа илмесĕр, —
Пĕр ун çине, пĕр кĕнеки çине
Пăхса итлеттĕм эп куç пăвнă евĕр.

Çапла хам тĕллĕнех çыру мĕнне
Чухла пуçларăм эп пăртак-пăртакçăн,
Çул уçрăм тĕлĕнтермĕш тĕнчене.

Пĕрре, атте-анне туя кайсассăн,
Улах хĕр-пикисем юрла-юрла
Тĕрленĕ хыççăн çыврăма выртсассăн,

Чĕвен тăрса утса эп вăрăлла
Пĕр хĕр пуçелĕкĕ патне çывхартăм,
Минтерĕ айĕнче лекет алла

Палланă кĕнеке... Вăшт-вашт
кăлартăм,
Мăч-мач çунан чĕп куç пек çутăпа
Пĕр сывламасăр вулама тапратрăм.

Тăван чĕлхем! Ку эс-и? Юн тапать.
Чĕре сиксе тухас пекех кĕртлетрĕ.
Ашра тĕвĕленет таса тупа:

Умри мал ĕмĕтсем — чăваш Сетнерĕ,
Чун туртăмĕ — Нарспи çак тĕнчере!
Çĕрĕпелех ман ыйăхăм килмерĕ...

Ун чух эп пулнă пулĕ çиччĕре.

1932.

# ÇУЛЛАХИ КАÇ

В. К.

Шур пĕлĕтсем шăваççĕ анăçа —
Пĕри пулать лаша, тепри тĕве..
Кун иртрĕ. Тăрса юлчĕ манăçа
Никамшăн палăрми пур вак-тĕвек.

Ял-йышăмсем ĕçлерĕç уй-хирте.
Анне тăрмашрĕ кил ăш-чиккине;
Эп килнĕ хăнана, вăл хĕпĕртет
Чун патĕнчи пĕр ĕмĕт çитнĕ пек.

Çеремлĕ картишне ларать сĕтел,
Сĕтел çине сар кăкшăм вырнаçать.
Хӳме çуракĕнчен каçхи хĕвел
Кĕрекене сентел тĕспе сăрлать.

Эпир сăра ĕçетпĕр тав туса,
Эп кил-çурта сунатăп перекет.
Анчах ман урăххи килет аса,
Куç умĕнче йăлт урăх кĕреке...

Анне сисет. Вара эп сан çинчен
Ирĕксĕрех кала пуçлап ăна.
Ĕçетĕп те — куркамăн тĕпĕнче
Куратăп санăн тунсăхлă сăнна.

Эс — ман хăймаланса йӳçен сăра,
Эс — ман тулли куркам, ман вăй
кӳрен!
Санран килет телейём пурнăçра,
Чĕрем сана чăнне калать, ĕнен...

Пӳртçи тĕлнех ак хыпрĕ Çич çăлтăр—
Ĕçсе ӳпĕнтерейнĕ алтăр пек.
Ан тив, çаплах кунçул та çутăлтăр,
Хур кайăк Çулĕ пек ялтратăр тек.

Шав тăсăлать-ха пирĕн калаçу:
Тӳлек уяр! Ăçтан халех выртан?
Умра икерчĕ, тăвараллă çу,
Умра мухтавлă, ĕмĕрхи шăрттан.

Вăл, ахăр, астăвать Аттилăна,
Ăна тутаннă Чингисхан, Тимур;
Хаяр Иван юратнă, тет, ăна...
Шăрттан! Ун хăйĕн кунĕ-çулĕ пур.

Сып-сывă та сĕтеклĕ хальчченех.
Сыв пултăр малашне те вăл эппин!
Çĕршер çул витĕр çитнĕ кучченеç
Кĕрекерен вăл тухмĕ паян тин...

Вăрах пырать-ха пирĕн калаçу.
Таçта пытанчĕ уйăх ывăси.
Эпир иксĕмĕрех, никам та çук:
Анне те эпĕ — каскăн йăх асси.

Ак Алтăр-Çăлтăр та çавăрăнать,
Атăлалла тăсать хăй аврине.

Тытсам эс, тусăм, тытса чар ăна,
Астив савса сĕнен тав куркине.

Мĕнпе эс йăпанатăн-ши çак кас?
Санран хыпар та çук, чиперĕмçĕм!
Кунти лĕп çил вĕçсе çитсен кас-кас,
Мана эс асăнса илмерĕн-шим?

Епле пулсассăн та, паян сана
Пуриншĕн те чунтан эп тав тăвап.
Никам та мар — пĕр эс, пĕр эс кăна
Мана тытса çыртартăн çак сăвва.

1946.

## САПКА ЮРРИ

АТНЕРЕ.

Сӗм вӑрманӗ каш та каш,
Сулхӑн ҫилӗ ваш та ваш,
Эс ан ҫуйӑх, ан ҫухраш,
Ҫывӑр, пӗчӗкҫӗ чӑваш!
Урупа ан тапкалаш,
Аллупа ан ҫапкалаш,
Аннӳпе эс ан тавлаш,
Ҫывӑр, Аптраман тавраш!
Ӑшӑ ҫумӑр чаш та чаш,
Ӳс, калчам, ҫӗклен эс яш,
Ҫӳлерен ҫӳле кармаш,
Ҫывӑр, пӗчӗкҫӗ чӑваш!
Юлташпа эс пул юлташ,
Усалпа эс ан паллаш
Тӑшманпа ан пул йӑваш,
Ҫывӑр, Аптраман тавраш!
Ырӑспа та тӑванлаш,
Тутарпа та эс туслаш,
Пурте — пирӗн хурӑнташ,
Ҫывӑр, пӗчӗкҫӗ чӑваш!
Малалла утсан — малаш,
Каялла юлсан — каяш,
Чӑн ҫултан эс ан аташ.
Ҫывӑр, Аптраман тавраш!

1948

## ТĂВАТА ХУРАН

Тăвата хуран пахчăрта,
Пĕр тымартан ÿстернĕ пек.
Тăваттăн ÿснĕ хăвăр та,
Ăçта эсир? Йĕр те çук тек.

Атте-анне пире пиллет
Кил-çурт тытма та мул пухма.
Çĕршыв пире парать тивлет
Урхамахла пуçа ухма.

Çĕрмешкĕн лартнă шалчасем
Тапса сикеççĕ тĕкмерен.
Ял-йыш сайра куран сăнсем
Мĕн чухлĕ пирĕн килсерен!

Ытти тăван-пĕтенпелен
Пире кив куç кĕски айне
Çакаççĕ те, хăна килсен
Мухтанкалаççĕ хăш чухне:

«Ку ывăл манăн — Мускавра,
Ку — Хусантах, леш пит инçе,
Сайра çырать те ку хутра,—
Чей янă-ха кучченеçе...»

Çапла атте-анне вара
Йăпантарать чунĕсене.
Тăвата хурăн пахчара —
Тăват ача пек вĕсене...

1947.

## КĔРХИ КĔРЕКЕ

1.

Юман та хыврĕ юлашки тумне.
Шанать каю. Хĕвел шупка çамкаллă.
Сӳнессĕнех çунан кăвайт умне
Кукленнĕ çын пек лăпкă çутçанталăк.
Кĕрхи çителĕк, кĕрлĕх, перекет!
Çĕр тутлăхĕ тапать кирек ăçта та.
Ял-йышăмпа тулли курка йăтатăп,
Килсеренех кĕр-шавлă кĕреке.

2.

Çунах, вучах вутти, шартлат та çун...
Кĕскет вăрăм çĕре, пусланă юррăм...
Хавхаланса вĕриленет ман юн,
Çăмахсерен сăрăлтатать çан-çурăм.
Йӳçех эс, кăпăклан, пылак сăра...
Юлташăмсем! Эсир ăçта пулсан та,
Паян сире ытарайман пĕр тантăш
Хутран хутах калать: тав пурсăра!

3.

Ăçта халь эсĕр — Атăл хĕрринче
Е Мускавра мана аса илетĕр?
Туркменире ĕçетĕр вĕри чей

Е Грузире мана курка пиллетӗр? —
Тавах! Мӗн авалтан сӑвӑҫсене
Тӑванлантарнӑ ватӑлми пӗр сисӗм:
Х ӑ ю л ӑ х. Камӑн чунӗ унтан писӗ,
Ҫавна тӗнчемӗр манӑҫ ҫеҫ сӗнет.

4.

Ан ҫӳрӗр тимлӗ пуҫӑра чиксе;
Хӑюллӑ пулӑр, пулӑр чӑрсӑр,
харсӑр.
Пӗр пӗрчӗрен пин пӗрчӗ ӗрчетсе,
Еҫлер-ха пӗр ывӑнасса пӑхмасӑр.
Пире сӑхлантараймӗ «леш» тӗнче:
Кунтах ҫӗр ҫул таран, ӗххӗм темесӗр,
Пурнар-ха: тек усрамасан чипер ҫӗр —
Сыв пултӑр пирӗн шухӑш ҫӗр ҫинче!

5.

Поэт каланӑ: чи вӑйли — этем.
Пурин хуҫи те — ҫын. Апла пулсассӑн,
Ан тив, упранччӑр манӑн юррӑмсем,
Емӗрӗме тӑсма пултартӑр сассӑм.
Кашни хӑй сӑнарне хӑвармалла,
Кун-ҫул ани ҫавсемпеле пуян та.
Никамшӑн та телей ан пултӑр янтӑ:
Алт, туп, кӑлар, шыра та хӑвала!

6.

Пӗр пурнӑҫ пирӗн ҫутӑ тӗнчере.
Ҫаплах, мехел ҫитсен, пӗр вилӗм килӗ.
Ӳсес ӑру-йӑхсем пире пӗрре
Хӗссе кӑларӗҫ халӗ: вырӑн кирлӗ!
Анчах унччен, тантӑшӑмсем, унччен

Эпир пурне те ас тивмешкĕн тивĕç.
Кун-çул çăкăр-тăварĕ хире-хирĕç:
Чысне курсан, тертне те ху çĕклен.

7.

Юхан çырма пулсассăн пурнăçу,
Эс ху шывна тыткалăн перекетлĕн.
Эс калăн: икĕ хут эп пурнас çук;
Кирек епле юхсассăн та, лекетĕн
Пĕр пысăк Ĕмĕрлĕх шыва; çапах
Эп — чи хастарлă самана этемĕ,
Çурма çултах типсе-хухса пĕтем-и?
Ишесчĕ-ха, çитесчĕ ман таçтах...

8.

Эпир халь çирĕм-çирĕм пиллĕкре,
Анчах мĕскер курмарĕ пирĕн ĕмĕр!
Ик-виçĕ ĕмĕрте те ĕлĕкрех
Курман ăна тăван асаттесемĕр.
Ăçта халь кисренмест тӳре-шара?
Мĕн чухлĕ трон турпас пулса саланчĕ,
Епле çĕнелчĕ çĕрĕн сăн-сăпачĕ,
Епле тасалчĕ сывлăш çĕршывра!

9.

Тантăшăмсем! Мĕскер тытсассăн та—
Руль, карттă, циркуль е, ман пек,
перо-и,
Сире эп ăшшăн асăнап ялта,
Эсир вăл — пирĕн самана геройĕ.
Хăçан сире хăналăп? Чи пахи —

Çĕн юрă пулĕ. Кăлăх, куç илмеççĕр,
Çул çинелле пăхатăп: çук, килмерĕр.
Çук, уçăлмарĕ пирĕн ял хапхи.

10.

Телейлĕ çул сире! Ан тив, паян
Ман çутă ĕмĕтлĕ кĕрхи уявăм,
Мĕнпе ман сассăм сывлăхлă та ян,
Мĕнпе сывлать поэт, мĕнпе пуян вăл,
Мĕнпе вăл вилĕмсĕр ыранхи кун —
Ан тив, мĕнпурĕ сире шанчăк патăр
Пулмашкăн витĕмлĕ, пулмашкăн
паттăр,
Вара... вара ахаль çунман çак чун!

1932.

## АВТАНРАН АВТАНЧЧЕН

1.

Кил-çурт илемĕ сар автан
Виç тапхăр хыттăн авăтсан,
Тăратăп ăшă ыйхăран,
Пăхатăп тĕксĕм кантăкран.

Кĕренĕн-саррăн хыпăнать
Ир шуçăмĕ пăртак тăрсан.
Ӳсет, ӳсет, йăмăхланать;
Унтан таçтан Анаткасран,

Пасарнă йывăç леш енчен,
Кусса тухать хĕвел çатми.
Шăнса пăрланнă кĕленче
Ылтăнланать ытарайми.

Тем евĕр йывăçсем çинче
Нихçан курман-илтмен чечек
Эрешленет куç умĕнче
Таçти асамлă тĕнче пек.

Час, тулăн-шалăн çӳрӳпе,
Пӳрт сивĕнет. Тухатăп эп.
Поэт хушса хăварнă пек —
Юман вутти çурса кĕреп.

Туратлă, шăн вут сыппине
Çапсассăн — пуртă ыткăнать.
Çапан, çапан çине-çине
Хĕрсе çитен те — тыт кăна!

Çырма ларсан çапла малтан:
Перо шумасть, сăмах витмест.
Чуна çĕн ĕмĕт çутатсан —
Тытса кăна пыратăн эс.

Турпас сикет йĕри-тавра,
Çуркамĕ — сăвă йĕрки пек...
Юман вутти кăмакара,
Сăвви — сĕтел çинче типет.

Тĕпел кукри таврашĕнче
Анне пĕрмай пĕшкĕнкелет.
Куймак чашларĕ (икерче
Çапла каласçĕ пирĕнле).

Унтан сĕтел çине ларать
Çутатнă сарă сăмавар.
Кунта эпир тутарларах —
Чее ĕçетпĕр шĕвĕ мар.

Вара, умри хыр туратне
Тĕллетĕп те эп куçпала,
Перо тытап вĕри алла...
Уçатăп сăвă тетрадьне.

2.

Кашлать хыр йывăç... Юр купи
Казбек тӳпи пек туйăнать.

Ун урлă телефон юпи,
Йăмралла Енчĕ курăнать.

Унта, юрпа пăр айĕнче,
Эп ачаран таптанă йĕр.
Тем анлăш тинĕс те Енче
Тăраймĕ-тĕр, тăраймĕ-тĕр.

Унта çӳренĕ ман шăпа
Чĕркуç таран йĕм тавăрса,
Сапланă пушăт алапа
Вăл пулă сĕрнĕ тăрăшса.

Ик-виçĕ кăртăш е мулюк
Курсассăн çĕтĕк алара —
Унран паха телей те çук,
Лаша та кирлĕ мар вара.

Унта çу кунĕнче çичшер
Шыва эп кĕнĕ çулсерен.
Çӳç типнĕ-типменех ишсе,
Чăмса алхаснă тĕрлĕрен.

Тăвата тинĕс тăварне
Ӳтпе астивнĕ хыççăн тин,
Çырмам мĕнле илемлине
Туятăп эп паян туллин.

Йăмри те çавă, шывĕ те,
Ĕмĕртенхи тăван илем.
Эпир хурсем кĕтнĕ тĕлте
Çĕкленнĕ ферма витисем.

Каç-каç унта вар хĕррипе
Пырать, тет, кашкăр-кашаман.

Путек-çатак макăрнипе
Шăлне хăйрать çав çĕр çăтман.

Анчах йĕри-тавра хӳме.
Йытти вĕрме чарăнсанах
Сиксе тăрать те — итлеме
Тухать хуралçă хăвăртрах.

Пăшал кĕрĕслетсе каять.
Тукмак хӳре хăтăлайсан —
Шăши кăварĕ пек çунать
Ун выçă куçĕ аякран...

Унта сысни нăриклетет,
Ени, пăрушĕ сас парать.
Çĕршывшăн мул та перекет
Колхоз ĕçченĕ пуçтарать.

Унтах, çав Енчĕ хĕрринче,
Арча пек чыслă мăн çуртра,
Эртеллĕ ĕçĕн штабĕнче
Эп пултăм çакă вăхăтра.

Пăхатăп пĕр стени çинче —
Куратăп Иванов сăнне,
Пăхатăп эпĕ теприне —
Тукай тухать ак куç умне.

Пĕр тантăш чаплă поэтсем,
Хальхи ял пуçĕсемпеле,
Авалхине çĕре чиксе,
Канаш тăваççĕ-мĕн пĕрле.

3.

Кашлать-ха хыр. Эп çыркаларăм
Харам пулман автан сасси.
Ĕç — ман телейĕм. Манăн парăм —
Ялан чăнне кăтартасси.

Чăнни йăлтах уявлă мар-ха:
Пайтах пӳрт çийĕ улăмран,
Тăхăнаймастпăр пурте бархат,
Шĕшле те музее паман.

Анчах çав çинчĕк улăм витĕр
Йăлт урăх пурăнăç тапать.
Урамĕсен ятне çеç илĕр —
Унта та вĕр-çĕнĕ шăпа.

Ак пирĕн кас. Темле салхуллăн
Янратчĕ: «Хыçалти урам».
Халь ун ятне çывăхаруçăн,
Эс Пушкинăн ятне куран.

Çаплах: пĕрремĕш çĕнĕ пӳртĕн
Кĕтессине, хăма çапсах,
Поэт пагне çырса сăн кӳртнĕ
Тасти ял хĕрринчи касса.

Пыран-пыратăн та куратăн:
Е телефон юпи ларать,
Е радио кашти — Мускавăн
Хумне тытасшăн кармашать..,

Çăпатаçи те урăхланнă:
Шĕшлĕпеле чаваланса

Ларать-ларать те, хӑй хутланӑ
Балкан ҫинчен хушать сӑмах.

«...Ак пирӗн ҫиччӗмӗш ноябрь
Пур халӑхпа чысланӑ кун.
Пӑлхарӑн — тӑххӑрмӗш сентябрь,
Ҫав кун патши тӗп пулчӗ ун.

Хам пултӑм Софире, хам куртӑм,—
Тет ват салтак кӳршисене,—
Аван ҫынсем. Вӗсен те туртӑм —
Раҫҫей енне, Мускав енне...»

Ҫапла йӑли тухман тум айӗн
Сӗнни ӳссе аталанать,
Ӳссе ҫитсессӗн вӑл — хӑй майӗн
Ҫӗнетӗ пирӗн йӑлана.

Мирте Мирун пур, тенӗ евӗр,
Ялта Якку пур, тенӗ пек
Ҫӗн кӗреке те (сискелетпӗр!)
Лекет кив кирӗк тӗлӗпе.

Хӑш чух эпир ютла пуплетпӗр,
Асаттесен йӑлипеле:
«Ку — хамӑн, ку ман мар»,— теетпӗр,
А пирӗн «хамрӑн» темелле.

Хӑш чух пӗр шухӑш ҫеҫ: кун ирттӗр.
Еҫрен васкатпӑр килелле.
Хӑш чух — бригадир мар — ҫур литр
Шута илет ӗҫе-хӗле.

Каласҫӗ: вӑрҫӑ пулчӗ, теҫҫӗ.
Хӑш чух килте ларнисемех
Ҫав анлӑ кӗҫҫепе витеҫҫӗ
Вӑтанӑҫсӑр сӑмсисене.

Анчах ҫак вӑрҫӑн чӑн салтакӗ
Пит ытлашши сӑмахсӑрах,
Хӑрах куҫпа пулин те, акӑ
Ял тытӑмне тытса тӑрать.

Вӑлах, пӗр ватӑ ҫын каларӗш,
«Ялти коммунистсен асли».
Ҫавсем ҫинче колхоз маларӗш,
Ун пархатарлӑ пуласси.

Ҫавсем, фронта васканӑ евӗр,
Пусаҫҫӗ анлӑн, сарлака,
Ҫӳлтен хушассине кӗтмесӗр
Юсаҫҫӗ пӗтӗм шӑйрӑка.

4.

Хӗрсе кашлать ват хыр... Хӗреҫҫӗ
Пуҫри хускалнӑ шухӑшсем.
Сӑввӑмсене пырса кӗреҫҫӗ
Тӗрлӗ шӑпаллӑ ял-йышсем.

Ав ӗнерхи танкист. Пӗлетӗп:
Яра-куна вӑл хуп-хура,
Выртать ӳпне те, месерле те —
Сиплет аманнӑ трактора.

Совет разведчикӗ ав халӗ
Сӳсмен ҫӗлет, йӗвен йӗслет.

Кăкри çинче Берлин медалĕ
Хуллен кăна чĕтренкелет.

Ав — харсăр санитарка пулнă
Чипер пике больницăра.
Вăл гимнастеркăсăр,— шур тумлă,
Хĕреслĕ тутăрлă сестра.

Çартан килейнĕ хĕр сасартăк
Сасси пурне сисет иккен:
Мускавалла уçасшăн алăк,
Пуплет вăл Барсова çинчен.

Хăй халлĕхе, клубра каç-каçăн
Аккордеон тăсса ярсан,
Янраттарать те кассăн-кассăн,—
Хĕллех чечек те шăпчăк сан!

Унтан вăл, тантăшне чĕнет те,
«Подгорный!»— тет купăсçине.
Вара çав кĕвĕпе ĕнтеççĕ
Хăюллă вырăс ташшине.

Вĕсем Европă çĕрне виçнĕ:
Румынин саплăк анисем,
Германин сарă хăйăр витнĕ
Уй-хирĕ, Венă рашчисем —

Йăлт юлнă ассенче. Анчах та
Çак пĕчĕк шывлă Сиктĕрмех
Вĕсемшĕн ĕнчĕ те, ахах та,
Ытарайми ĕмĕрлĕхех.

Вĕсем пĕлеççĕ: çакă ялăн
Ирхи кăвак тĕтĕмĕсем,
Мĕн пур тăван çĕршыв сывланăн
Мăкăрланаççĕ çĕкленсе.

Вĕсем пĕлеççĕ: çак уй-хирĕн
Йăрансăр-йĕрсĕр курнăçĕ —
Татти-сыпписĕр пурнăç пирĕн,
Тăван çĕршывăн пурнăçĕ.

Вĕсем пĕлеççĕ: вата Улăп
Тĕми çинчи хурал юпа
«Ялан çĕршывăн сыхĕ пулăп!» —
Тесе кунта тăвать тупа.

5.

Ак иртрĕ кун та... Хыр кашлать.
Хăçантанпа ăна паллап эп!
Ун айĕн чарăнми юхать
Асаттесен юмах-халапĕ.

Хăш каç унта темле мулсем
Иеленсе çунаççĕ, тетчĕç.
Кĕреçепе вара сынсем
Чи çур çĕр тĕлĕнче йĕрлетчĕç.

Хăш чух çав хыр тавра хĕрсем
Уяв калаççĕ сассăр, тетчĕç.
«Вĕсем — хĕр халлĕн вилнисем», —
Тесе пире ĕнентеретчĕç...

Кашлать, кашлать хыр тĕрлĕрен...
Эпир вучах чĕртсе яратпăр.

Кăварĕ шăранса çитсен,
Шала паранкă кустаратпăр.

Тăвар сапса, уйран сыпса,
Çиетпĕр «тăлăплă паранкă»
Хăюсăр лампă мăчлатса
Сÿни-сÿнми сывлать аран кăшт.

Анчах улт-çичĕ çухрăмра
Электр тенĕ çутă пур, тет.
Ăна çак пилĕк çуллăхра
Эпир ялта курасшăн пурте.

Çав ĕмĕт çитнĕн сывăха
«Чĕп кусĕпех» сăмах йĕрлетĕп.
Урамалла пăха-пăха,
Ыранхине курса ĕçлетĕп.

6.

Кашлать ик юплĕ кукăр хыр.
Çил çурçĕртен вĕрет хаярrăн.
Ыран каллех юр хыр та хыр —
Черетлĕ физкультура манăн.

Ак кутсăр-пуççăр вĕçтерет...
Хăй кăмаки çинче ĕшеннĕн
Анне пăртак ÿсĕркелет,
Мăрье улать такам хĕненĕн.

Аманнă, çĕмрĕлнĕ ура
Вăрçа-харçа ас илтересшĕн —
Сурать, пĕр вĕçĕмсĕр сурать,
Ниçта кайса кĕре пĕлместĕн.

Анчах, хӑй ҫутине кура,
Сержант килсе кӗрет каҫ кӳлӗм,
Хам пек тӳлек, хам пек хура,
Хам пек аманнӑ ҫын, ман кӳршӗм.

Вара, вӑл ҫӑлтӑр йӗрӗллӗ
Малаххайне хывса хурсассӑн,
Пуҫлатпӑр хамӑр евӗрлӗ
Салтак тамашине пӑртакҫӑн.

«Пантера», «Фауст» сӑмахсем
Аса илет хастарлӑ снайпер.
Курман этемсене кичем,
Эпир — асӑнсанах чухлатпӑр.

Вӑл перчеткеллӗ аллине
Мӑйран кӑкарнине сӑнап та —
Манап ура ыратнине:
Ӑна, тен, ман пек мар асап-тӑр.

Эпир чӗнместпӗр ун ҫинчен,
Шав малаллах ӗмӗтленетпӗр.
Ӗмӗтленни ҫитеймесен
Тепри ҫитерессе пӗлетпӗр.

7.

Хыр шав кашлать. Ман патӑма
Кӗрсе ларать хисеплӗ ватӑ.
Питтӑпайран пуҫлать сӑмах
Манпа ҫав ҫын кирек хӑҫан та.

Тулти ҫил юррипе пӗрле
Янрать ун ылтӑн пек сӑмахӗ.

Çак таврари Шелепилле
Ăна куратăп яланах эп.

Мĕн чухлĕ мул çав ватăра!
Мĕнле вăл хаклă та паха та!
Сăхап, сăхатăп эп вара,
Çĕр çумăр сăхнă пек сăхатăп.

Эпир калаçнă хушăра
Пырса кĕрет пĕр шкул ачи.
Мана хăй тетрадьне парать
Çав саккăрмĕш клас сăвăçи.

Саспах вулатăп сăввине.
Хăюсăрскер, пуçне чикет те,
Çĕлĕкĕпе хуплать питне:
«Кайран чăрманăр-ха, çитет»,— тет.

Вара эпир унпа пĕрле
Ямбне-мĕнне виçсе пăхатпăр
«Пĕри сÿнсен тепри кирлех»,—
Тесе пăртак шÿт тукалатпăр.

Çур усă сас йĕрки çинчен
Пуплетпĕр самаях чиперрĕн...
Çав икĕ ÿсĕм хушшинче
Хама эп туйăнап кĕперрĕн.

Юхан кун-çул кисретнĕçем
Ан тив, пĕрре сăвайăм вантăр,
Эсир, каçса ĕлкĕрнисем,
«Сыв пултăр пурнăç!» янăратăр.

Поэмăсем — сайра юпа,
Сăвви-хăми те пит сайра пек.
Анчах ан манăрччĕ: юнпа
Цементласа ăна сарап эп.

Пĕлетĕп пуринчен малтан:
Кĕперĕм чĕнтĕрлĕ пулмарĕ,
Анчах ун урлă каçакан
Курманнине курма пултарĕ.

Лере, малта чечен çыран
Малта вăл чĕнтĕрлĕ-чечеклĕ
Ванми кĕпер: тӳпе таран,
Хĕвел таран сире вăл çĕклĕ.

Эпир хĕне çĕнтернĕрен —
Çав чĕрĕ асамат кĕперĕ
Çĕр пин ерешлĕ тĕрĕрен
Çеçке те çимĕç çитĕнтерĕ.

Унта та пĕлĕç чăвашла:
Вăл çывăх. Пулăр хатĕр, хапăл.
«Çулçи çупать, улми ташлать»
Тени пулсассăн — çавăнта вăл.

Эп хунă каштасем çине
Хăюллăн пусăр, каçăр урлă.
Вара эп халь юрланине
Çĕклентерсе туйри пек юрлăр.

8.

Хыр шав кашлать. Пӳрт-çурт, хурлатă
Хуралчĕ. Вăхăт çывăрма.

Инçе Шупашкара куратăп,
Куратăп çывăх çыннăма.

Хам ăшăмра ăна калатăп
Хальччен тухман сăмахсене.
Ытараймасăр ыталатăп,
Тасалăх, çăмăллăх сĕнеес.

Атя, атя манпа пĕрле,— теп,—
Çӳлтен çӳле, малтан мала.
Эп санăн суранна тӳрлетĕп,
Манне эс сиплĕн хупала.

Хупа кăна! Тумлам илсессĕн,
Эс тинĕс тавăр халăхна.
Тасалтăр, çăвăнтăр тирпейлĕн
Унта вăл, тав туса сана.

Çӳлтен çӳле! Хыпса çунсан та —
Чи çӳллĕ тӳпере сӳнер.
Сан çуттупа тепри хускантăр —
Тата паха, тата чипер.

Малтан мала! Ирхи хĕвелĕн
Мал енченех-çке тухасси...
Хыр кашламасть. Сĕм кас шĕвелнĕ.
Тулта каллех — автан сасси.

1948.

## ВĔРЕНТЕКЕН

Н. Я. ЯКОВЛЕВАНА

Çанталăк кĕввине пăхмасăр
Ял хавалне сăнанă тапхăр
Хăш чух çул май, хăш чух ятнех
Кĕретĕп эпĕ ун патне...

Вăл сакăр вунналла çывхарнă
Пĕр аллă çул класра вăл ларнă —
Ман яланах хисеплекен
Асран кайми вĕрентекен.

Эп пынă кун вара уяв ун.
Тăван çĕршыв тăрах нумайăн
Çӳреççĕ унăн «ачисем»,
Хăй ак ялтах. Хăш чух кичем...

Ун пӳрчĕ çумĕпе каç-каçăн
Çыру валеçекен утсассăн —
Итлет вăл, тинкерсех итлет:
Хапха сасси пулмасть-и? — тет.

Чăнах, чăнах та уçрĕ мар-и?
Хăш хуларан-ши? Кам хыпарĕ?
Мансах каять ывăннине,
Часрах шырать вăл куçлăхне.

Пăхать. Камран иккенĕ — паллă:
Пĕр çирĕм çул палланă алă,
Пăртакçă улăшăннă халь,
Эппин, манман, ас илнĕ-ха!..

Çунат ÿссен çапла çав эпĕр:
Йăва тĕлне те пит пĕлместпĕр.
Атте-анне те ют пек, тен,
Мĕнех вара вĕрентекен!

Анчах вĕсем, эпир пырсассăн,
Пире чи хаклипе чысласшăн,
Чунне татса пама хавас,
Епле манас, епле манас!

Ак ман çума таянчĕ карчăк,
Чĕнмесĕр ал тутри кăларчĕ...
Кăшт сывлăш çавăрсассăн тин
Сăмахĕ тупăнать хайхин.

Ятран чĕнейрĕ — эп ĕнентĕм:
Каллех вăл ман вĕрентекенĕм.
Вăл «эс» тет, эп — «эсир»... Вара —
Тытман сĕтел çитти сарать.

Сăмаварне чĕртсе ярать вăл,
Мĕн пур чысне ума лартать вăл,
Çак çавракa сĕтел тавра
Мĕскер вĕçмен-ши ман пуçра!

Пăхам-ха çавăрăнса. Хĕллеччĕ...
Çук, çук... ку, ахăр, çуркуннеччĕ:
Сăрлана урайне йĕпе,
Таканлă çăпатасемпе

Капăртатса кĕрсе ларатпăр.
Тургенев. «Бежин луг» вулатпăр.
Ана пире вĕрентекен
Хăех куçарнă-ха иккен...

Унтан пире вăл Короленкăн
«Вут çутине» вулатчĕ лăпкăн,
«Малта çапах та — вут çунать!» —
Тени хальччен çĕклет чуна.

Унтан сасартăк çĕнĕ шанчăк —
Нарспи тухйи умра вутланчĕ.
Унпа хăш чух вăл çĕрĕпе
Шкулта ларатчĕ пирĕнпе.

Ун муфтине ăçтан манайăн?
Эпир хĕрсе вуланă майăн,
Пуçне хуллен сулла-сулла,
Çĕклетчĕ пирĕн кăмăла.

Шавлатчĕ Константин таланчĕ:
Ват Михетер те тупăнатчĕ:
Ват Тăхтаман та классенче —
Вун пиллĕкри ачасенчен.

Нарспи-Сетнершĕн пурте çуннă,
Шăпа ямашкăн хатĕр пулнă.
Çав мăшăрта (ăçтан пĕлен?)
Кăшт хамăра та курнă, тен.

Вĕрентекен çавна чухланă,
Пуçламăш ĕмĕте çул панă.
Унтан çул тытнă унпала
Эпир пĕрремĕш журнала.

Унтан... унтан, ман çамрăк сассăм
Кĕрхи автан пек янрасассăн,
Çавахчĕ — çав вĕрентекен —
Мана ĕмĕтлентерекен.

Калас килет ăна: ял-йышăм!
Тăван йăхпа тăван çĕршывшăн
Тепре çуратнăшăн пире —
Тавах сире, тавах сире!

Кам чунĕ сирĕн аллăр витĕр
Тухман-тăр? Кам аса ан илтĕр
Çак пурнăç тинĕсĕ çинче
Эсир тыттарнă ишкĕче? [1]

Çав йышлă ушкăнра кам çук-тăр:
Учитель, агроном та тухтăр,
Çыравçă, генерал, артист...
Пуриншĕн те ыр ят та чыс!

Пуриншĕн те калап эп халĕ:
Кун-çулăра ирттерĕр канлĕ,
Эсир акни çилпе вĕçмен —
Шăтать, ÿсет вăл кунсерен.

Хăш чух, тен, кăмăлăр та юлнă:
Эпир ачаччĕ, шухă пулнă.
Ӳпкев ан тăвăрсам пире...
Тавах сире, тавах сире!

1948.

---

[1] Ишкĕч — кĕсмен.

## АМĂРТАВА

Сап-сарă кĕрĕксемпелен
Ят-сумлă ял-йышсем лараççĕ,
Ăçта мĕн акмалли çинчен
Агрономпа канаш тăваççĕ.

Хĕрсе çитсен калаçура
Уй-хир планне тупса килеççĕ,
Министр пек сара-сара
Пуклак пӳрнисемпе йĕрлеççĕ.

«Кунта урпа акас пулать,
Ку сăмсаха пăрçа-и, вир-и...
Кăна кантарăпăр... Тулла
Ак çакăнта»,—тет бригадирĕ.

«Вара вĕт Ĕнчĕ леш енче
Ик çул çĕртме пулать!»—тет сасă.
«Апла тӳрре килмест... нелçе!»—
Тет агротехникĕ пăхмасăр.

Чĕлĕмсене пакка-пакка
Çамка тирĕсене пĕреççĕ.
«Ку виçĕ пусă мар патька!»—
Тесе пĕрне-пĕри тĕртеççĕ.

Хыпар килет Алтай енчен:
Унта хăватлă тырă-пулшăн
Çынсем çĕкленнĕ, тет, иккен,
Ăмăртмалла ĕçлет, тет, ушкăн.

Тата, ав, кӳршĕ районрах
Çĕрĕç геройĕсем ĕрчеççĕ.
Çынтан юлас килмест, паллах:
«Эпир — сиктĕрмесем-çке!» — теççĕ.

Сиктĕрмесем — пуçтах вĕсем,
Сиктĕрмесем — мухтанчăк халăх.
Анчах халь мухтанас тесен —
Колхоз чысне çĕкле мухтавлăх.

Унта вăл, тăрăшсан, ырри,
Унтан пур мул та, перекет те.
Тăрăшмасассăн — караври,
Колхоз ятне кăна çĕртетĕн.

Çавăнпалах халь ял-йышсем
Хĕрсе канаш туса лараççĕ,
Мĕнле çĕрте мĕнле этем
Ĕçлессине те палăртаççĕ.

«Ман пултăр ĕçченсен звени,
Эп вăтăр центнер пуçтарасшăн.
Наян вăл Пуçăн Матĕрни!»—
Тет сар хĕр, спискине пăхсассăн.

«Мĕскер тăвас çак Плакипе!
Хирте ман ташă-им е вăйă?
Парсассăн парăр Хĕлипе...»—
Тет тепĕр харсăр звеньевойĕ.

«Вĕçри Альтюк, Ехрем Анни...
Кусем хастар выраççĕ. Пырĕ.
Чĕкеç пур ак — парне илни...
Кусемпелен çĕнтерĕп. Çырăр».

«Ара, Курак Хвеклин ĕçне
Стена хаçатĕнче тиркенĕ!»
«Тиркенĕ те... тен, малашне
Яла култармĕ вăл, тӳрленĕ...»

Çапла хаяр тишкерӳпе,
Ним пытармасăр, çĕнĕ халлăн,
Мĕн пур Совет çĕршывĕпе
Амăртăва тухать ман ялăм.

1948.

## ХЕЛЛЕХИ ИР

Вут чулĕ сапнă хĕлхемле
Йăлтăртатать тип-тикĕс юр.
Шур хут çинчи пăнчăсемле —
Сайра пĕр тилĕ йĕрĕ пур.

Кайсан-кайсан çул хĕрринче
Куян туй тунă çĕрĕпе,
Тирпейлĕ сăвăç — сăввинче
Пĕртен пĕр сăн шыранă пек.

Хир çап-çара. Юр тытакан
Юртан хытарнă хӳтлĕхсем —
Редактор тус мухмăрпалан
Пуçхĕрлĕ лартнă «кайăксем».

Колхоз йĕтемĕ сылтăмра.
Çапса пĕтернĕ кĕркуннех.
Вăл темĕншĕн ас тутарать
Шупашкарти Пичет çуртне.

Лере — кĕлет, халь «клупинкке»
Тет хăшĕ темĕне пула:
Тулли тĕш-тырă, аминкке!
Ман пуç пулиниччĕ çаплалла.

Унтан чылай, чылай инçе
Тракористсен вакунĕ ав
Тăват кусатăран çинче
Шăнса ларть пуш сăввăн шав.

Лере мăн Улăп тĕмĕпе
Хурал юпи курнать таçтан.
Курнайăттăм эп çакăн пек
Хам çакăнтан куçса кайсан...

1948.

## КУШАК

Аннен барометрĕ — кушак:
Вăл юпана тăрмаласан —
Тăман тухать, йăвалансан —
Çанталăк ăшăтать пăртак.
Эп сан çинчен шутлатăп та,
«Те эс мана саватăн çак,
Те çук?» — тесе аптрап кунта.
Ăçтан тупас-ши пĕр... кушак?

1948.

## САЛПАРАН

Кунёпех юр парӑлтатрӗ —
Ҫерҫи пуҫӗ пек шултра.
Каҫпала шӑнтса та лартрӗ,
Шанчӑк пурччӗ уяра.

Шур упа пек лӑпсӑр-лапсӑр
Пӗлӗт килчӗ те таҫтан —
Асрӗ кайрӗ тепӗр тапхӑр
Кутсӑр-пуҫсӑр ҫил-тӑман.

Астӑрах вӑл — хулӑн явлӑк
Ҫыхнӑ ват хӗл-асанне:
Ман умра ҫапах — тухъяллӑ,
Ҫутӑ куҫлӑ ҫуркунне...

Аппӑн-тӗппӗн, тӑйлӑк-тайлӑк
Уткалать тулти этем.
Шӑлтӑртатрӗ кӗҫӗн алӑк,
Ҫил ачи уҫасшӑн тем?

Ав чупса кӗрет шап-шурӑ
Карташне, пусма ҫине.
Пӑлтӑрта юрлать вӑл юрӑ,
Тытрӗ алӑк хӑлӑпне.

Çил улать уланăçемĕн,
Кĕнчеле арлать анне,
Çул çинчи иртен-çӳреншĕн
Çунтарать вăл чĕрине.

Карăнса илет ун пичĕ,
Йĕкине чарать алли.
«Утăмран маяк ларинччĕ
Аташса çĕтен валли...»

Асăнать илти-илтми вăл
Çул инкекĕ нушине,
Чухлаймасть — пĕртен пĕр ывăл
Емĕрех çул çинчине.

Чухлаймасть вăл: ман кăварăм
Çынсене ăшăтнипе,
Тен, эп хам шăна пусларăм,—
Чун сасартăк кӳтнĕ пек...

Шур упа пек лăпсăр-лапсăр
Пĕлĕт килчĕ те тăстан —
Асрĕ кайрĕ тепĕр тапхăр
Кутсăр-пуссăр çил-тăман.

Астăрах вăл — хулăн явлăк
Çыхнă ват хĕл-асанне:
Ман умра çапах — тухъяллă,
Çутă кусла çуркунне!

1948.

## ТЕТЕМ

Тӳлек. Марье тӗтӗмӗсем
Тӳп-тӳрӗ хӑпараççӗ;
Мана темскер ас илтерсе,
Çӳле-çӳле каяççӗ.
Куймак шӑрши кӗрет: çынсем
Çӑварнине чысласçӗ.

Вӗри шывпа пӑшӑхласа
Пичӗкесем чӳхеççӗ;
Çӑка пылне ӑса-ӑса
Симлеççӗ, йӳçӗтеççӗ;
«Тавтапуçах ку колхоза!»—
Тесе ӗççе-çиеççӗ.

Пӗр-пӗр ватти мана курсан,
«Тавсси, ял-йыш, тавсси,— тет,—
Алхасрӑмӑр алтӑрпалан,
Халь пӳрнески те çитӗ.
Пӗрле пурнатпӑр-ха, тӑван,
Пире çав хаклӑ питӗ».

Йӗс чӗлӗмне чаваласа
Хыпать вара хӑяккӑн,
Вут чуль çине «уне» хурса

Чакма çапать хăватлăн:
«Пурнасчĕ-ха, электритсă
Çутса курасчĕ манăн!..»

Вара, вутне сулла-сулла
Кăшт амалантарсассăн,
Хăй чĕлĕмне, кула-кула,
Чĕртсе ярать вăл танлăн.
Прометейрен тăван пулас
Ку çын! — тесе пăхатăн.

1948.

## ӐР ТАШШИ

Арăм çук — парăм çук,
Хуньăм çук — хуйхăм çук.
Пуç тавра шухăшласан —
Санран савнă çыннăм çук.
Тух, тух, тух, тух!

Çул çук, йĕр çук,
Ни урапа, ни çуна.
Вун çич çулхи хĕр çук,
Ăшăтайăп-ши чуна?
Тух, тух, тух, тух!

Ах чух, эпĕр чух,
Йĕкĕт чух, хĕр чух,
Икĕ чун пĕр чух,
Пӳрне тулли çĕрĕ чух!
Тух, тух, тух, тух!

Ух!!!

1948

## ВАК ХЕРРИНЧЕ

Вак хĕрринче пăрланнă килĕ
Выртать хăяккăн ӳпĕнсе.
Çине тăрса вĕрен ир çилĕ
Шăпах лăпланчĕ тĕлĕнсе.

Шурăтнă чĕкĕнтĕр пек хĕрлĕ
Вĕлтлетрĕ çара çанлă хĕр;
Пăсланчĕ сăмавар манерлĕ
Кӳрнеклĕ, çыпăçуллă, кĕр.

Ун çурăмĕ çинче пĕр çулçă.
Чупса пырса вăл хăвăртрах
Вакран шыв ăсрĕ те — йăл кулчĕ,
Чаш! — ячĕ пуçĕ тăрăхах.

Çине тăрса вĕрен ир çилĕ
Шăпах лăпланчĕ тĕлĕнсе.
Вак хĕрринче пăрланнă килĕ
Выртать хăяккăн ӳпĕнсе.

1948.

## ЕМЕРХИ

Сар ҫӳпҫе пек тулли уйăх
Тухрĕ Тукасран.
Сиктĕрме хĕрне пĕр каччă
Ҫаклататть, куран.

Пăшăл-пăшăл пăшăлтатрĕҫ
Пĕр пӳртре хĕрсем;
Юптара пуҫларĕҫ тĕрлĕн,
Каччăсем кĕрсен.

«Счетовод кунта-и? — терĕ
Пĕр хитри, ҫинҫи,—
Кĕҫĕртен колхозăн йышĕ
Чакнă темеҫҫи?...»

Кантăк умĕн тĕрĕлтетрĕ
Тимĕрлĕ ҫуна...
Ыр сунар, эппин, атьсемĕр,
Икĕ яш чуна!

1948.

## СЫВĂ ТАР, ХĔВЕЛ!

Эрешлĕ юр хăрпăкĕсем
Ман пăрлă кантăкăм çине,
Хуçкаланмасăр хĕвĕшсе,
Лараççĕ шăппăн ирхине.

Хĕвел пуçланă ĕнтĕ халь
Çĕршывăм тăрăх çӳреме.
Тăманлăхра вăл пăнчăхать,
Кĕресшĕн мар ман пӳлĕме.

Тĕрĕссипе калас пулсан —
Кичем хĕвелсĕр ирпеле
Хĕвел! Вăл çеç сума суса
Тĕнчемĕре кăшт тирпейлет.

Тен, çавăнпах эп чи малтан,
Ĕçсем вырнаçиччен кĕвве,
Таса чĕреллĕ ямбпалан
Калатăп: сывă тар, хĕвел!

1948.

## ХĔРАРĂМ ТАНТĂША

Çамрăклах çĕре кĕрсе
Иккĕ вилнĕскер çинчен.
ЭДГАР ПО

Пĕрремĕш те юлашки хут
Сан пахчунта эп пултăм пулĕ.
Мана чĕнсе кӳртсеттĕн ху.
Кĕркуннепеччĕ ку. Каç кӳлĕм.

Пуçламăш сарă çулçăсем
Ӳкетчĕç шухăшлăн, салхуллăн.
Улмасăр ват улмуççисем
Сĕнксе ларатчĕç темĕн пулнăн.

Мĕн пулнă? Хурт та сĕрлемест.
Халех вĕллесене кам кӳртĕ?
Пăрахăç та элес-мелес
Ларать асларусен хурт пӳрчĕ.

Эс хăррăн пăхрăн айккалла:
«Мĕн пулнă, тен? Шалчамăр тулнă!..»
Ун чухнехи сăмахпала —
Сире-мĕн раскулачить тунă.

Каникулран кайманччĕ эс,
Эп кайăк-кăвакал переттĕм,
Ялти улшăнăва тĕпчес,
Кĕрешĕве сăнас-ха, теттĕм.

Унтан вара сана курман.
Эс Мускавра вӗренсе тухнă;
Качча та кайнă-мӗн кайран,
Çынсем пекех ачаллă пулнă...

Сасартăк çитрӗ ак хыпар:
Эс вилнӗ çакăнса, ял-йышăм!..
Ӳпкелеме эп тивӗç мар,
Чӗремӗн сăмахне çеç йышăн.

Паян эп санăн дневникне —
Пӗр шухăш çырнине — вуларăм:
Манпа аташнă иккенне
Пӗлсе, эп ӳкӗнтӗм, хурлантăм.

Эп санăн çырăвна усрап.
Унта эс шав ӗмӗтленетӗн...
Ху — темӗскершӗн — ман асра
Патна ями тӗрӗленеттӗн.

Çампа кӗмен-тӗр пахчуна...
Сан каранна пӗвӳ хаяррăн
Çӳçентерет халь ман чуна,
Анчах сана мӗскер? Эс кайрăн...

Сана тек ним те кирлӗ мар,
Эп тивӗç, тантăш, пурăнмашкăн.
Эп тивӗç — эсӗ юрлайман
Юрра халь саншăн юрламашкăн.

Кӗрхи сархайнă çулçăсем
Ялан сана аса илтерӗç.
Анчах салхулăха сирсе,
Эп сан çинчен каласшăн тӗрӗс.

Эс лăпкă çынччĕ тĕнчере,
Истори тăвăлĕ кăраччĕ.
Пире, санпа иксĕмĕре,
Вăл икĕ çул çине кăларчĕ.

Сан вăхăтсăр тĕмескӳне
Хăврăлтарать-тĕр çил ку тапхăр.
Пĕлместĕп эпĕ ун тĕлне,
Пĕлсен те шыв сапаймăп, ахăр.

Аслаçусен тăпри çумне
Тирпейленсе эс выртаймарăн,
Çĕн садăн çĕнĕ çимĕçне
Тутанмалла эс пулаймарăн.

Эп ас тăвап: çав кĕркунне
Хуçса пĕтернĕ, суранлатнă
Çара улмуççисем çине
Пăхса эс хытă хурланаттăн.

Пĕлетĕп: сад айăплă мар.
Хуçаканни — чура-ха, тарçă.
Çапах... кăклантăр кив тымар!
Санпа пире çав ютшăнтарчĕ.

Кăклантăр çĕрнĕ тунката,
Кăмпаланса муртайнă никĕс!
Паян хытта юлсассăн та,
Тăпра ыраншăн пултăр тикĕс.

Пиншер çулхи выртан каска,
Мăкланнă, пăнтăх, йăваланчăк,
Çĕр çумĕнчен хăпса васка,
Хĕвелпелен эс саваланччĕ!

Çĕрме пилленĕ шалчасем,
Укăлчана сӳтсе тухсамăр!
Нихçан, нихçан ман юрă-çем
Пулаймĕ канăçлăхпа сапăр.

Аваллăх хăнчăр куçĕпе
Мăч-мăч пăхкаличчен — пĕр те пĕр,
Тĕнче пуçламăш кунĕ пек,
Çанталăка тĕтре пĕркетĕр.

Çав тĕтререн хĕрӳ хĕвел,
Çут çăлтăрсем чăмăртансассăн
Тин пурнăçа савни — пит шел:
Тăрăшмалла чăмăртамашкăн.

Тивлетлĕ — кам курсах тăрать
Вĕсен çулне, çитес тĕлне те.
Ун пек этем пулать сайра.
Анчах вăл пурччĕ. Эс пĕлетĕн.

Ун ячĕпе çак самана
Кĕрет историе мухтавлăн.
Вăл турĕ çын санпа мана.
Ыттишĕн — айăпăмăр хамрăн.

1936.

## ЛАШАСЕМ

Кам ачи-пăчи, хăш ывăл
Выляман-тăр лашалла?
Манăн çав лаша вăййи вăл
Пуçлансаччĕ ак çапла.

Çулăм — виççĕ е тăватта...
Иккĕ çеç пулман пуль те?..
Тĕлĕкри пек ас тăватăп:
Тăрăх сак çинче атте

Çăпата хуçса ларатчĕ,
Канкаланă хушăран
Лашасем туса паратчĕ
Татăк-кĕсĕк пушăтран.

Чӳрече патне лартаттăм
Эпĕ çав лашасене,
Тĕлĕнсе пăхса тăраттăм
Аякран вĕсем çине.

Пурте пур: парка хӳри те,
Чанк хăлхаллă пуçĕ те;
Урисем те çăмăл питĕ —
Çитмелле тасра çитех.

Нихăçан упран илемлĕ
Теттесем курман эп тек.
Çавăнтан вара иленнĕ
Лашана эп темĕн пек.

...Эп пасар-тавраш юратрăм.
Ма теоен унта ялан
Тĕрлĕрен лаша кураттăм.
Ас тăвап пĕрне паян.

Пасарта курса паллатăп
Сут тăван тутар туса,
Шăварма илсе анатăп
Лашине эп пĕр пуса.

Пусĕ-мĕнĕ илĕртмен-тĕр,
Утланса анни паха.
Пынă пуль йĕнерчĕк евĕр,
Чи çӳлтен пăха-пăха.

Улача сытми çĕкленнĕ
Чĕркуççийĕнчен çӳле.
Ик çинçе ури хĕстернĕ
Лашана кĕлешчелле.

Чĕлпĕрне вăл карăнтарнă,—
Мăйне автăр урхамах!
Йăлăхтарнă пулĕ тарлă
Суха учĕ, ахăрах...

..Кăруççел килсе тухатчĕ
Ерминкке вăхăтĕнче;
Умлă-хыçлă ут юртатчĕ,
Çаврăнатчĕ ун çинче.

Эп сиксе утланнă йăр-йăр
Хуп-хура çилхеллине.
Кам калас мана çав ăйăр
Ма Отелло ятлине?

Çăварне карса çав тĕрлĕ —
Кĕçенес пек — ыткăнать.
Ун тути таврашĕ хĕрлĕ,
Куçĕ вут пек,— тыт кăна!

Чăмăртанă эп, мăнтарăн,
Пӳрнесем шураличчен...

Ăçтарах çитсе антарăн,
Шухă ут, çак çĕр çинче?

1957.

## АННЕНЕ

Çитĕ, çитĕ-çке, аннем, ан хуйхăр,
Йĕкӳне чарсах эс ан ахлат.
Сан ĕшеннĕ ват чĕрӳ те туйтăр:
Читлĕхре вăй илеймест хăлат.

Кăмăллă мана çак канлĕх килĕ,
Çак тĕпел кукри, çăка сĕтел...
Ăшăрах пек хамăр енĕн çилĕ,
Çутăрах пек хамăрти хĕвел.

Анчах эс çапах мана ан йыхăр,
Ан чĕрке ачашлăхпа чуна.
Çуната халь тин усмашкăн йывăр:
Вĕçмесессĕн ыратать çунат.

Ан сарах эс маншăн çемçе вырăн,
Мамăках минтер ан хур мана.
Шурăмпуçĕпе тăрса ан сырăн
Йăли тухнă шурă сурпанна.

Эй, аманнă пирĕшти мăнтарăн!
Пĕчĕкрех чухне (халь мар, халь мар):
«Ватăлмалăх кунăмра кантарăн»,—
Теттĕн пулĕ ĕненсе... Каçар.

Кăмăлна санне тултараймарăм,
Каснă чĕлĕ çыпăçмасть калла.
Гатăлми сан умăнта ман парăм.
Тен, çĕрех те кĕрĕп унпала...

Çитĕ, çитĕ, теп, аннем, ан хуйхăр,
Йĕкӳне чарсах эс ан ахлат.
Сан чĕрӳшĕн халь йăпанăç пултăр —
Çӳлерен-çӳле вĕçен хăлат.

1930.

## СЫВ ПУЛЛАШУ

Ачаран ар тунă вырăн,
Час кураймăп, сывă пул!
Асатсам мана эс ыррăн,
Ман умра пĕртен-пĕр çул.

Çулăм йывăр, çулăм вăрăм,
Виçейместĕп çухрăмпа.
Çĕклейми çĕклем эп йăтрăм
Ансăр пилĕк-çурăмпа.

Пăрахмасăр та ĕшентĕм,
Пăрахма та халăм çук
Шăрăхне те, сиввине те
Тӳсмелле çул кайнă чух.

Вĕркелет аптранă анчăк
Ытахаллĕн, сых ятне.
Упранинччĕ çутă шанчăк,
Çитесехчĕ тĕл патне.

Аллăма хăйех çакланчĕ
Яланхи юлташ — туя.
Темшĕн чун пăртак хурланчĕ,
Темĕскер каллех туяп...

Ачаран ар тунӑ выра̄н,
Час кураймӑп, сывӑ пул!
Ӑсатсам мана эс ыррӑн,
Ман умра пӗртен-пӗр ҫул.

1948.

# Асла чӗре



## ЛЕНИН

Ленин! — Туртса карӑнтарнӑ хирлӳ
Ухӑ ярса вӗҫтерет инҫете.
Ту хушшинче шартлатса ҫӗмӗрлӳ —
Тӳрӗ перет сӑрт салтакӗ ҫӳлте.

Ленин! — Сӑртран-тӳперен чул анать
Ҫур туне харӑс ишсе антарма,
Е шыв сикки шаркаса ыткӑнать
Тырӑ-пулла шӑрӑхран хӑтарма.

Ленин! — Хура пӗлӗтсем хушшинчен
Ялтӑр! тӑвать те хӗвелӗн ури —
Янк ҫуталать таврари пур тӗнче,
Йӑлт курӑнать — ҫывӑхри, аякри...

Ленин! — Чечен сӗрме купӑс, вӑлах—
Маршлӑн утма хистекен параппан.
Пӗр йӑпатать, пӗр ҫӗклет кӑмӑла,
Тусшӑн вӑл — тус, тӑшманпа вӑл—тӑшман.

Ленин! — Ача йӑл кулли, тӗлӗпе —
Кулӑ каҫса кайнӑ пек янӑрать.
Асӗ — пророкӑн, таса ӗмӗтпе
Пур этеме те хӑй май ҫавӑрать.

Ленин! — Ун шухăшĕн вăйĕпеле
Вăйлă эпир пурăнан самана.
Аслă пĕр ĕмĕт унпа çитмелле:
Çын тытмалла тĕнчене, Çын кăна!

1960.

## ÇАК КУН

Кулленхи пекех ăсанчĕ
Хĕллехи çак кун.
Шартлама та çил-тăманччĕ.
Хусантаччĕ ку.

Пирĕн шкул концерт тăвасшăн
Хамăр йышпалан.
Пĕр-ик юрă юрласассăн,
Çĕтрĕ сас паян.

Клубран тухрăмăр салхуллăн,
Ним чĕнмесĕрех...
Пурнăç чаръннă пек шкулăн.
Ыратать чĕре.

Пĕр-пĕрин çине пăхмарĕç
Ачасем темччен.
Çĕрĕпех çывăраймарĕç:
Тăлăх пек, пĕччен...

Вырăнсем çинче лараççĕ
Хăй çутмасăр... Тен,
Çапла тул çутăлтараççĕ
Халь нумай çĕрте...

Чунăм! Тĕрĕс çул çыравçă
Пул çакăн пек чух:
Лăплану, ак мĕн шыраççĕ,
Анчах çук вăл, çук!

21—22. I. 1924.

## ПЫТАРНИ

Тӳсме ҫук сивӗ! Аслӑ Ленин
Вилнишӗн хуйхӑран хӗвелӗн
Ӑшши тек тавӑрӑнмӗ тейӗн.

Анчах эпир ҫара пуҫах,
Хураллӑ ялава усса,
Тинкертнӗ малалла куҫа.

Эпир шанатпӑр: ӑшӑ килӗ,
Ҫӗре тӗнчипелех ҫурхиллӗн
Ешертӗ ҫут хӗвел пехилӗ.

Вӑл Ленин — ҫав хӗвел, ҫав ҫур.
Куҫ хупрӗ вӑл, анчах вӑл пур.
Салют... Сыв пул, Ильич! Хур, хур...

24. I. 1924.

## МИÇЕМĔШ ХУТ

Миçемĕш хут çак сулхăн чул пÿрте,
Калпак хывса кĕретĕп йышпалан?
Миçемĕш хут пуçа тайса иртеп
Чи çывăх, чун панчи шухăшпалан?

Ку кĕлĕ çурчĕ мар. Эп кĕлĕç мар.
Сăвап е çылăх — маншăн пуш сăмах.
Ма халĕ вăл ыттисенчен катмар?
Ма ун хуçи туртать мана çаплах?

Этем вăл. Ак сăлтав. Ху пек этем.
Ху пек. Анчах эс унсăр суккăр пек.
Çулна-йĕрне унпа тĕрĕслесем,
Иккĕленни пулсан — ан пултăр тек.

Ак мĕншĕн эпĕ ун патне кĕреп,
Тесе утап чуа сарнă лаптăкпа.
Пăхап: пиншер этем кĕтет черет,
Яштак чăрăшсене тăман лăпкать.

Хĕрелнĕ пĕлĕт çĕр çутипеле.
Кив Кремлĕн ăмăрт кайăкĕсене
Шуйхаштарса, мĕн пур тĕнчипеле
Тĕпĕçтăвком ялавĕ чÿхенет.

1930.

## МУХТАВ АСЛĂ ЛЕНИНА!

Тĕнĕрен хĕвел кĕрсе курман,
Çутатман,
Кĕреке туман пире хăна...
Çутă, тутă пурнăçшăн чунтан
Мухтав аслă Ленина!

Пирĕн юрă тĕнчене тухман,
Янраман,
Макăрашнă çырмара кăна,
Халь йĕри-тавра вăл кайрĕ ян:
Мухтав аслă Ленина!

Саплăк пекчĕ тупăшсăр ана,
Выç ана,
Хыт хура хупланăччĕ ăна.
Халь йăрансăр тулă хумханать!
Мухтав аслă Ленина!

Хамăр ял та ютчĕ хушăран,
Тарăхсан,
Вăрмана тартатчĕ самана.
Халь пире пур халăх та тăван,
Мухтав аслă Ленина!

Кунсерен ҫӗршыв хӑватланать,
        Асланать,
Ырлӑхне сарать пур таврана.
Ҫӗр чӗлхе пӗр саслӑн янратать:
Мухтав аслӑ Ленина!

1940.

## ЛЕНИН ПИРЕНПЕ

...Ун чух та çаплах шартламаччĕ,
Хĕвел катăлатчĕ шăнса.
Анчах аслă хурлăх хăвачĕ
Сасартăк чĕртсе вутлантарчĕ
Чуна, кăмăла та ăса.

Ачаччĕ эпир, ас тăватăп:
Тăратпăр тулта, вут хурса.
Тен, митинг пырать виç-тăватă
Сехет те. Кĕме асăнман та,—
Эпир маннă пур градуса.

Пĕр Ленин асра, пĕр çав хурлăх
Кăвар пек ăша çунтарать.
Куç хупнă иккен паттăр Улăп,
Мĕн тăвăп эп унсăр, кам пулăп? --
Çак шухăш кашнин пуç тавра.

Анчах çавăнтах эс сисетĕн:
Çав паттăр — тăпра валли мар.
Куçпа курнăнах ĕненетĕн:
Çаплах чĕрĕрен чĕрĕ Ленин
Утать санпала юнашар.

Çаплах ун алли, ун ялавĕ
Пире çавăтать малалла.
Хаяр çавра çил е хум шавĕ,
Шыври вăрттăн чулăн ултавĕ —
Пире ним те мар унпала.

Хăватлă та вилĕмсĕр Ленин
Вăл пирĕншĕн компас, виçе.
Кашни утăмах эпир меллĕн
Унпа чухласа тĕрĕсленĕ,
Тишкернĕ унпа пур ĕçе.

Иртейрĕç кунсем, çулсем иртрĕç
Ĕçпе кĕрешӳ вутĕнче.
Çĕршыв карапне çиле хирĕç
Пайтах хум ватса ишме тиврĕ,
Вăл халь те çаплах хум çинче.

Карап пуçĕнче халь те Ленин,
Ун чаплă ялавĕ вĕçет.
Мĕнпур тăшмана çĕнтермешкĕн
Тăван çĕршыва пехилленĕн
Пире малаллах вăл чĕнет.

1942, январь.

## РАЗЛИВ АСА КИЛЕТ

Урай сарри çинчен утса
Эп кĕтĕм ун кабинетне.
Сĕтелĕн кнопкине пусса
Вăл йыхăрчĕ референтне.

«Ман час сăмах каламалла,
Хатĕрлесем... материал».
Хăй уткалать калла-малла,
Куç-пуçĕ ялкăшать йăл-ял.

Тухса ăсанчĕ леш часах:
Вĕреннĕ, хăнăхнă тахçан.
Çырать вăл ун валли сăмах
Чи юлашки пăнчи таран.

Эп урăх сăн курап: ўпле...
Сĕтел те çук. Пур тунката.
Çапах этем ĕçлет... Епле,
Епле ĕçлет-ха вăл тата!

Эп шухăшлатăп: кам алли,
Кам тăнĕ-пуçĕ-ши вара
Пухса çитерне ун валли
«Материал» çав Разливра?

1955.

## ЛЕНИН

Çĕршер те пиншер çул хушши ĕмĕтленнĕ
Тĕнче ĕмĕтне хăвăртрах çитерме
Хăватлă пĕр парти ӳстертĕн эс, Ленин.
Çĕклерĕн мĕнпур ĕçлекен этеме.
Вăйлатрăн алла, ăс-хала эс вăратрăн,
Çунат хушса патăн чуна, кăмăла.
Чура сăнчăрне касса татрăн, аркатрăн,
Этемлĕхшĕн хыврăн чăн çул малалла.

Таçти халăхсем те, çĕрсем те, çулпуçĕ,
Маяк пек кураççĕ сӳнми чăнлăхна.
Мухтавлă пĕр Ленин! Сассу пулчĕ уçă,
Мĕнпур çут тĕнче илтсе юлчĕ ăна.
Хаяр кĕрешӳ чарăнман-ха, пырать вăл,
Кивви ал йăтсах парăнмасть çĕннине.
Анчах çĕнĕ çурт çитĕнет, хăпарать вăл,
Эс хутăн Ильич ун çĕрми никĕсне.

Кун-çулăн сулмаклă кӳми нихăçан та
Пĕччен паттăрсен вăйĕпе çаврăнман.
Чи аслă этем, халăха эсĕ шантăн,
Ним чапсăр çынна паттăрпа куртăн тан.
Хура пӳртсенчен, фанзăран, ӳплерен те

Хăпарчĕ ĕç йышĕ сана ĕненсе.
Куллен эс, Ильич, вĕсемпе çĕнтеретĕн,
Санпа пусмăртан çăлăнаççĕ çынсем.

Çĕршер те пиншер çул хушши ĕмĕтленнĕ
Этемлĕх курасшăн хăйне улăпла.
Хăватлă пĕр парти ӳстертĕн эс, Ленин,
Çитертĕн тĕнче ĕмĕтне унпала.
Пире парăнать çутă кунлă малашлăх,
Усмастпăр эпир çĕнтерӳ ялавне.
Тума пулнине тăватех аслă халăх,
Никам та пӳлеймĕ ун аслă çулне.

1955.

## ЛЕНИН ÇУЛĔПЕ

1.

Мускав кĕрлет. Çĕршыв чĕри пек уççăн
Еçлет вăл кунĕпе те çĕрĕпе.
Туятăп эпĕ, ун пульсне тăнлуçăн:
Çĕр юнĕ çĕнелет çав чĕрепе.
Кĕрлет Мускав, янрать вăл çĕр чĕлхеллĕн:
Еçлет çĕршывăм паттăр улăп пек.
Хăй партипе пĕрле утать вăл меллĕн,
Утать вăл аслă Ленин çулĕпе.

2.

Делегатсем хĕрсе канаш тăваççĕ
Мухтавлă Кремлĕн çутă çуртĕнче:
Пĕрне сӳтеççĕ, теприне яваççĕ,
Ним пытармасăр, халăх умĕнче.
Президиум тĕлне Ильич сĕкленнĕ —
Шап-шур залри шур мрамор кӳлепе.
Тăрать вăл шăппăн, тинкерсе итленĕн,
Курать: пыраççĕ Ленин çулĕпе.

3.

Хĕрет-и хурçă е кермен хăпарчĕ,
Тĕртен пир-авăр е метро алтан —
Пурне те эс хавхалантартăн, парти,

Кашни ĕçре коммунистсем малта.
Туни — нумай, анчах пит каппаймастпăр,
Калан сăмахăмăр вут чулĕ пек:
Тулли телей тумасăр çырлахмастпăр! —
Эпир утатпăр Ленин çулĕпе.

4.

Акатпăр тырă-пул, ĕне сăватпăр,
Тухатпăр чикĕре хурал тăма,
Çыратпăр сăвăсем, карап тăватпăр,
Алла илетпĕр чăрсăр атома,
Çăлтăрсене пăхса ил ментеретпĕр:
Лутраланать ăс-халшăн çӳл тӳпе,—
Пурне те миршĕн, халăхшăн ĕçлетпĕр:
Эпир пыратпăр Ленин çулĕпе.

5.

Кам инçетри çĕршывсенче улаххăн
Итлет кунтан каланă сăмаха,
Кам, иртнине аса илсе, сулмаклăн
Питлет хĕç суллакан вăр-хураха,
Кам пирĕнпе пĕрле калать хăюллăн:
«Хура вăя çул памăп, пӳлĕп эп!» —
Çавна та асăнатпăр ырă чунлăн:
Çав çын утать халь Ленин çулĕпе.

6.

Куç умĕнче Тольятти, Ибаррури,
Торез та Ульбрихт, Живков, Цеденбал...
Каллех аса килет мана пĕр юрă —

Чуна çĕклен «Интернационал».
Съезда хупичченех ăна хăватлăн
Тăрса юрласчĕ кăмăл тулнипе...
Тĕнчен пуласлăхне курса тăратăн,
Çывăхарать вăл Ленин çулĕпе.

1956.

## АСЛĂ ЧĔРЕ

«Чĕмпĕр. Совдеп председательне. Чăвашсен учитель семинарийĕсен председателĕсене мĕнле йĕркепе, мĕнле условире суйлани çинчен телеграфпа пĕлтерĕр. Мана Иван Яковлевич Яковлев инспекторăн — чăвашсене наци тĕлĕшпе çĕклессишĕн 50 çул ĕçленĕ тата патша влаçĕ хĕсĕрленине чылаях тӳссе курнă çыннăн — кунçулĕ интереслентерет. Яковлева хăйĕн пĕтĕм пурнăçĕн ĕçĕнчен уйăрас пулмасть тесе шутлатăп. Халăх Комиссарĕсен Канашĕн председателĕ ЛЕНИН.

Ленин чĕри, шухăшĕ пекех, аслă пулнă.

КЛАРА ЦЕТКИН.

Революци ĕнтĕ пулнă
Таçта шавлă Питĕрте.
Хăш çĕрте кая вăл юлнă,
Хăш çĕрте тин çеç иртет.

Пысăк-çке Раççей çĕршывĕ!
Улахрах шыв кукринче
Кив карап юласшăн сывă
Çил-тăвăл лăпланиччен.

«Пăтăрмах-пăтрав тек уртăр —
Пулкаланă ун пекки!

Ну, Керенский тарнă пултăр ,
Шаннă пултăр ун пăкки.

Çул ыттин те пулмĕ такăр,
Пит тухаймĕç çиеле.
Тӳсмелле пулать кăшт, ахăр,
Раççейре вăл — Раççейлех.

Лев Толстой граф пуçĕпе те
Мĕн хăтланчĕ те ара!..
Пулĕ шăрăх та, йĕпе те,
Выçлăх, мур йĕри-тавра.

Çĕтĕкпе çӳресе курăн,—
Халлĕхе йĕп тыт, сапла.
Çавăн пек мехелĕ туррăн,
Самана палли çапла...»

Çавнашкал йăпанкаланă
Сехĕрленнĕ кив тĕнче.
Революци шуххăн, анлăн
Утăмланă çĕр çинче.

Чарăну пулмасть. Ав Ленин
Куçнă, теççĕ, Мускава.
Çав хыпар çитсе çĕкленĕ
Чĕмпĕрти Яковлева.

Иван Яковлевич пулнă
Çитмĕл çул тултарнă çын.
Хăш-пĕр тусĕ-йышĕ шунă —
Тарнă ĕнтĕ. Тарĕçин!

Кайччăр. Умĕссичен хыçĕ!
Йывăр, имĕш? Çамăл мар.
Чăвашсем вĕлермĕç выçă,—
Вăл вĕсемшĕн тăкнă тар.

«Кам вара эп: пуп тавраш-и,
Çĕр улпучĕ-и тарма? —
Тет хăйне вăл.— Кăларасшăн
Эп çутта халăхăма.

Шăп ак аллă çул хисепĕ
Лăш курмасăр тăрăшап.
Кирлĕ мар-им ĕнтĕ эпĕ
Ку чухне хам чăваша?

Совет влаçĕ туса хучĕ
Семинари шкулăмран.
Халь — эп мар тет унăн пуçĕ:
Çитрĕ хут комиссартан.

Чăвашсем хăйсем пăтратнă,
Элекленĕ те, куран.
Мĕн тăвайăн-ха, мăнтарăн,
Шăлсăрланнă арăслан?

Чухласах пĕтерейместĕп:
Хам вĕрентнĕ ача-пча
Хама хирĕç. «Вată эс!» — тет
Пĕр вунсаккăрти ача.

«Кивĕ!»— тесшĕн хăй, мошенник,
Куçĕнчен пăхсах пĕлеп.
Чи ăста вĕренекенĕм...
Ак, этăк-итак, епле!

Вырăсран уйрăлассишĕн
Калаçаççĕ тет иккен.
Вырăс — тинĕс! Епле ишĕ
Пирĕн кимĕ пĕр-пĕччен?

Уйрăлсан ăçта каяс-ха?
Ун çинчен шутларăр-и?
Е эпир пĕр-пĕр Аляска?
Çук, эпир — Раççей варри.

Шăв та шав ялан, кĕр те кĕр...
Тен, Тургенев калашле,
«Ашшĕсемпе ачисем-тĕр»,
Çав чăрмав-тăр малашне?

«Парти, парти» текелеççĕ,
Хăйсем пурте ман шкултан —
Тĕрлĕ партишĕн кĕрлеççĕ:
Большевик, эсер... ăнлан!

Манăн ĕмĕрех пĕр парти:
Пур Раççей тата чăваш.
Аллă çул умра шкул парти.
Аллă çул... Мĕнле малаш?

Алексей Иванăч, ывăл,
Вăл та акă хĕрĕхре.
Халлĕхе чипер-ха, сывă...
Мускава чĕнет пире.

Тымара çăлмашкăн йывăр,
Ыратать-çке, Лёля, пит!
Сирĕн ĕнтĕ хăвăр йышăр,
Урăх аршăн, урăх шит.

Аслă вырăн, аслă ирĕк
Сĕнчĕç ĕлĕк те. Çавах
Шӳтлесех юлмашкăн тиврĕ:
Кайăкне кура йăва.

Питĕр те мана чĕнетчĕ,
Мускавран та пулчĕ сас.
Çак асран тухма пĕлместчĕ:
Чăвашсемсĕр мĕн тăвас?

Эп хура пӳртре çуралнă,
Вăйăм-халăм пĕтиччен —
Çав пӳртсем ĕнтĕ çутална,
Тенине илтесшĕнччĕ.

Эп çĕртен пуçларăм, ыльăм,
Тăпраран, çăпатаран.
Кушкă пулчĕ ман Афинăм,
Пантеонăм — Чĕмпĕр ман...»

Ват инспектор кантăк витĕр
Пăхрĕ шкулĕн картишне.
Ав ун юлашки йăви те,
Хатĕрленĕ сых ятне.

Иккĕшин валли те тунă,
Çавăрса çитерне шеп:
Хăй виççе алттарса хунă
Цементланă ирĕк склеп.

Кам çак пурăнăç сĕткенĕ
Типиччен хăйне çапла
Чыслă вырăн хатĕрленĕ —
Çав ӳпкевсĕр пулмалла.

Камăн ĕмĕрлĕх кил-çурчĕ
Курăнать куç хупиччен,
Кам ăна кĕрсе те курчĕ —
Çав телейлĕ çĕр çинче...

— Кăш тухса çӳрем-ха, амăш,—
Терĕ вăл хăй мăшăрне...
Ăшă çил вĕрет вăш та вăш,
Асатса Сĕве пăрне.

Ачасем кăшкăрашаççĕ
Çывăхри çыр хĕрринче,
Кураксем кăраклашаççĕ
Çӳçепе тирек çинче.

Шур сухаллă, шĕлепкеллĕ
Çын утать туяланса.
Илĕртет апрель хĕвелĕ,
Канăç çук хастар ăса.

Çуркунне! Тем ас тутарчĕ:
Илья Николаич... Ун
Кĕçĕн ывăлĕ çуралчĕ
Çакăн пек пĕр ăшă кун.

Мункунченччĕ-ши? Çапла-тăр.
Аллă çул та пуль калла...
Аллă мар-ха, хĕрĕх саккăр...
Чăн: шăп çак вăхăталла...

«Çав Владимир, çав Ульянов
Ӳсрĕ куçăм умĕнче.
Халь вăл — Ленин! Кам шутланă? —
Тет старик хăй ăшĕнче.—

Мускава вăл куçнă, теççĕ.
Питĕрте те ывăл ман,
Мускавра та... Тен, пĕлеççĕ.
Тен, пĕрне-пĕри манман?

Ашшĕ-амăшне пăхсассăн,
Ырă кăмăллă пуль теп.
Пит сăпайлăн та йăвашшăн
Ас тăватăп ăна эп.

Ашшĕ куç хупсан та пычĕ
Чи малтан вăл ман пата.
Пиччĕшне çаксан та... Килчĕ
Хĕн курма ăна пайтах...

Ачаран вăл пит ĕçченччĕ,
Пулăшатчĕ амăшне.
Пĕр арçын юлса, пĕчченçĕ
Чун кĕртетчĕ кил-йышне.

Халь патшалăх пусĕ пулчĕ,
Ав мĕн майлă самана!
Курманни чылай çул тулчĕ,
Астăвать-ши вăл мана?

Вăтăр çул та иртрĕ пулĕ...
Ашшĕ тусăм пулнă та,
Урăхла пуль çав кун-çулĕ
Çамрăксен ку яхăнта.

Хăй яшах та мар та ĕнтĕ...
Хам чăваш ĕçĕпеле
Сĕкĕнес пулсассăн, тем тет?
Мечелне те пĕлмелле...

Ывăла çырса ярсассăн,
Шыраса вăл тупĕ, тен...»
Вата çын сывларĕ ассăн
Пĕтĕм кăкăр тĕпĕнчен.

Çав кунах чунтан — курасшăн,
Калаçасшăн чĕререн —
Çырупа пĕлтерчĕ ашшĕ
Ывăлне инкек çинчен.

Аслă ывăлĕ — профессор —
Мускавра, Волхонкăра,
Пит ăна-кăна пĕлмесĕр,
Пурăнать çав хушăра.

Çыруне илсен вăл курчĕ:
Ашшĕне асап чăнах.
Кремльтен пит çывăх çурчĕ,
«Кайăп,— терĕ,— ыранах...»

Ак хайхи манми апрелĕн
Çирĕммĕш кунне, ирпе
Алексей Иванăч меллĕн
Тухрĕ хăйĕн еккипе.

Голофтеев хуçа килĕ
Пăхса юлчĕ хыçĕнчен:
Çавăнта хваттер вăл илнĕ,
Хуçи тарнă пуль унччен.

Ав историк çав ир кӳлĕм,
Çав вун саккăрмĕш çулта,
Нихăçан манмаслăх ӳлĕм
Кремĕле иккен утать.

Хăвăртах çитсе кĕретĕн
Халăх Комиссарĕсен
Канашне. Анчах черет-мĕн,
Питĕ йышлă кĕтекен.

Председателе курасшăн
Пурте кирлĕ ĕçпеле.
Çук, профессор, тăхтаймастăн:
Лекцие ĕлкĕрмелле.

Яковлев çырса хăварчĕ
Ленина пĕр пĕчĕк хут,
Ун секретарьне тыттарчĕ:
«Килĕп,— терĕ,— тепĕр хут».

Иван Яковлевич терчĕ
Мĕнлине çырса кĕскен,
Ильича аса илтерчĕ
Ал пусса вăл хăй çинчен.

Вăхăт пур-ха кăшт. Уттарчĕ
Вăл хваттерĕ патнелле.
Кĕчĕ çех — шăлт-шалт тутарчĕ
Темле çын кĕлипеле.

Кивĕрех салтак пушмакĕ,
Шупкарах обмоткăпа,
Френч пекки... Чăнах салтак-и
Е ахаль вăл çав тумпа?

Тинкерсе хуçи сăнарĕ,
Хăнăхсассăн куçĕсем:
— Половинкин, эсир мар-и?
— Эпĕ,— терĕ леш этем.

Половинкин пуранатчĕ
Голофтеев çуртĕнчех.
Таçта, тем ĕçре тăратчĕ,
Калаçмастчĕ-ха питех.

Халь профессора кĕтет-мĕн
Шарламасăр кил-йышне;
Ак утса кĕрет йĕркеллĕн
Унпала кабинетне:

— Каçарсамăр-ха тархасшăн,
Эпĕ Ленин патĕнчен,
Хушрĕ вăл çыхăнтармашкăн
Халь сире хăйĕнпелен.

Шăнкăртаттармашкăн ыйтрĕ,
Эп чĕнем-ха номерне...—
Алексей Иванăч тытрĕ
Телефонĕн кĕпçине.

Вăй питти хăй, ача ашшĕ,
Хăй — итлерĕ пăлханса.
Акă кăмăллă та ăшă,
Тахçанах паллашă сас:

— Алексей Иванч! Каçарăр,
Чăрмантартăм пулĕ теп.
Тен, халех килме пултарăр?
Сире кĕртĕç... Эп кĕтеп...—

Хăвăрт таврăнчĕ профессор,
Сисеймерĕ çитнине.
Кремльте, черет кĕтмесĕр,
Кĕчĕ вăл Ильич патне.

Темĕскер Ильич çыратчĕ
Хăй сĕтелĕ хушшинче.
Курчĕ. Тăчĕ. Алă пачĕ.
Йăл кулса пур чунĕнчен.

Хăмăр кусĕ йăлтăр-ялтăр
Ялкăшать, çиçет ăшшăн:
— Мĕн тăвам? Тума эп хатĕр
Иван Яковлевичшăн.—

Пуç тайса профессора вăл
Лартрĕ хăйĕн çывăхне;
Кусĕнчен пăхса, пит хапăл,
Шăп итлерĕ сăмахне.

Ес çинчен ыйтса тĕпчерĕ,
Академиксем çинчен...
— Çăмăл мар-ха, йывăр,— терĕ,—
Сывлăш çавăрăпăр, тен...

Мир ал пусрăмăр. Мĕн калĕ...
Пин çулхи кив кирĕке
Тасатать истори халĕ,
Хăвăр та историк-çке.

Ахăртнех хальччен пулманччĕ
Кун пекки, ас тăвăр-ха?
Чăн истори тин пуçланчĕ,
Ку хускав — вăрахлăха...—

Чĕмпĕре вăл асăнсассăн,
Шухăша кайса пăртак,
Сывласа илейрĕ ассăн:
«Тен, курнăçаймăпăр та...

Пăр тапраннă пулĕ ĕнтĕ
Атăлта та Сĕвере...
Çĕр çинче ăçта çитсен те,
Чун туртать çав Чĕмпĕре».

Ун çуралнă кунĕ акă
Ырантан тепĕр кунне:
Тултарать вăл хĕрĕх саккăр,
Тахçанхи кĕрет чунне.

— Çавăнтах, эппин, хисеплĕ
Сирĕн аçăр, çав çуртрах?
Ĕçлесех тесен — тĕреклĕ
Пулĕ-ха çулне кура?

Сывлăх сунăр...— Ленин илчĕ
Председатель блокнотне,
Хăй аллипеле вăл çырчĕ
Телеграммă ун çине.

Вуласа хăех кăтартрĕ
Йăл кулса вара унтан,
Кĕтесе вăл çырса лартрĕ:
«Ярса парăр хам шутран».

«Хам шутран». Епле вăл çывăх
Курнă çав «чăваш ĕçне»!
Мĕн тери сăпайлă çынлăх
Вырăнаçнă чĕрине!

Чĕмпĕре вара — Совдепăн
Председателĕ патне —
Шаклаттарчĕ морзе шăппăн
Аслă Ленин сăмахне.

Кам пĕлмест, кам вуламанччĕ
Халиччен çав сăмаха?
Вăл юмах пулса саланчĕ
Чăвашра яланлăха.

Улăп вăйлăн та асамлăн
Хушрĕ вăл пире çунат.
Нихăçан ăна манаймăн,
Юррăн кĕчĕ вăл чуна.

Калаçать сурпанлă карчăк,
Кĕреке ватти пуплет:
«Ленин! Çав пире хăтарчĕ,
Çавăнтан килет тивлет.

Ленин! Çав пĕлтерчĕ мар-и
Çĕнĕ пурнăç тутине?
Ленин! Çав сӳнме памарĕ
Пирĕн йăлтăр çутине:

— Иван Якăльча ан тивĕр! —
Терĕ тĕрлĕ пуçтаха,—
Патша чух вăл тӳснĕ йывăр,
Ырă тунă халăха.—

Кушкăсем Якку Иванĕ,
Яту юлчĕ тĕнчере.
Ленин пулчĕ упраканĕ,
Тав ăна мĕн ĕмĕре!»

Тĕрлĕ кĕвĕллĕ çак сасă
Сарăлать ламран лама.
Лăпланать вăл каса-касă
Çĕнĕрен амаланма.

Юмахри пĕр Феникс-кайăк
Хыпса çуннă та, кайран
Кĕлĕнчен чĕрĕлсе кайнă.
Эпир çав кайăкпа тан.

Пире вут тĕртнĕ, çунтарнă,
Вĕçтерес тесе кĕле.
Çĕнĕрен эпир çуралнă
Революципе пĕрле.

Ним инкекĕ, ним амакĕ
Сарăплаймĕ тек ку чух:
Аслă Ленин чăн сăмахĕ
Нихăçан та сӳнес çук...

Чĕмпĕрте, пăрсем кайсассăн,
Çав вун саккăрмĕш çулта
Сывах мар вăт çын хавассăн
Сывласа ярать шкулта.

Ун килне пĕр ир хай çут ĕç
Комиссарĕ патĕнчен
Урăхла пакет ак кӳчĕç,
Хут чĕтрет ун аллинче.

Куçлăхне часрах çаклатрĕ,
Таянса выртса вулать,
Хăй сисмесĕрех ахлатрĕ,
Кĕç йăл-йăл кула пуçлать.

Пĕлчĕ: килнĕ телеграмма,
Ленин кĕнĕ ун хутне.
Халатне пĕркенчĕ.— Мама! —
Чĕнчĕ хăйĕн карчăкне.

Тăчĕ, утрĕ, ним пулманнăн,
Машăрĕн пӳлĕмнелле:
— Мама! Ак хайхи Ульянов!
Савăнăç пире, телей!

Ас тăвать, манман Владимир —
Тусăн кĕçĕн ывăлĕ.
Халь пире никам та тивмĕ,
Пĕтмĕ ĕмĕр ĕç-хĕлĕ!

— Пит аван. Анчах эс ырнă,
Ан хускат ытла хăвна,—
Тет хуллен Екатерина
Алексеевна ăна.

— Ырă пуль, çапла пуль, ахăр,—
Тет старик, куçне шăлса,—
Еçлесси нумай та мар-тăр,
Канлĕх пулĕ, иçмасса.

Тăрмашатăп пит вăрах-мĕн,
Кам пĕлет: тен, аташап...
Ну, Володя... вăл пăрахмĕ,
Вăл пăрахмĕ чăваша! —

Классене тухса кĕресшĕн
Ватă çын ăшталанать.
Тен, хыпар вăл пĕлтересшĕн,
Систермесĕр тумланать.

Аллă çул авал тĕлленнĕ
Тĕлĕк çаврăнтăр чăна.
Яш Володя пулчĕ Ленин.
Алă пачĕ-çке ăна!..

Пăлтăрне вăл тухнă хушă
Курчĕ акă халь татах:
Пĕр шăхличĕ, вăрăм пуҫă,
Хуҫса хунă ҫăпата,

Шĕшлине те чиксе лартнă
Сарă пушăт хушшине.
Тахҫанах, тахҫан вăл ҫакнă
Асăнмалăх ҫаксене...

Вăл кĕтӳҫĕ пулнă мар-и?!
Ах, пайтах унтан вара
Пĕлĕш-тантăша хупларĕ
Тараватт хура тăпра!

Ҫăмăл марччĕ сĕтĕрмешкĕн
Вăрăм пушă кунĕпе:
Шăрăх, ҫумăр... лӳшкенетĕн,
Ҫапату-чăлху йĕпе.

Ют турам вăл питĕ йӳҫĕ,
Эс ăна ҫăтса пăх-ха!
Унтанпа...— каллех кĕтӳҫĕ,
Урăхла кĕтӳҫĕ халь...

Ку тата йывăртарах-мĕн,
Вутсăр вут хыпать ăша...
Ленин, Ленин... Вăл пăрахмĕ,
Вăл пăрахмĕ чăваша...

Шур сухаллă, шĕлепкеллĕ
Ҫын тухать туяланса.
Уйрăмах вăл халь тирпейлĕ,
Ҫутă куҫĕ тап-таса.

1960.

# Пулчĕ вăрçă

## ХАЮЛЛАН МАЛАЛЛА!

Ăçта пулсан та эп —
Çĕршыв манпа пĕрле.
Пĕлетĕп, ĕненеп:
Эпир çĕнтермелле.

Çĕр халăхлă çĕршыв
Пĕр ĕмĕтпе тăрсан,
Юлма ан асăн сыв,
Антăхакан тăшман!

Тĕсех сана эппин!
Эпир малтан тивмен.
Анчах ĕнтĕ халь тин
Каçару çук пиртен.

Эпир курманах мар
Вутне те çулăмне.
Тăвар пек витнĕ тар
Пур пирĕн йăхсене...

Ăçта пулсан та эп —
Çĕршывăм манпала.
Пĕрех йыхрав илтеп:
Хăюллăн малалла!

1941, июнь.

# ФРОНТПА ТЫЛ ПЕР ПУЛСАН— ҪЕНТЕРЕЙМЕ ТӐШМАН

Вӑрҫӑра та ӗҫре
Сыхлар ирӗк ҫӗре.

Тӑрӑшар улӑпла
Пӗтӗм халӑхпала.

«Пирӗн ял лӑпкӑ-ха»,—
Теме ҫук ӗнтӗ халь.

Бомбӑсем ӳкиччен
Шухӑшлар фронт ҫинчен.

Кашни сыхнӑ кӗлте
Фронта ҫирӗплетет.

Кашни чикӗм утах —
Тӑшмана таната.

Паранки те фронта
Кирлӗ бомбӑпа тан...

«Пирӗн саваӑт тӳлек»,—
Теме ҫук ӗнтӗ тек,

Ма тесессӗн ку чух
Фронтпа тыл хушши ҫук.

Кашни ӗҫлӗ самант
Парӗ ҫӗнӗ снаряд.

Кашни хурҫӑ татти —
Тӑшмана хирӗҫ штык.

Мӑлатук ҫапнӑҫем
Арканаҫҫӗ ютсем.

Ҫап тата хытӑрах,
Ан асайтӑр хурах!

Фронтпа тыл пӗр пулсан —
Ҫӗнтерейме тӑшман;

Хӑй, тӗпрен кӑкланса,
Пуҫне ҫийӗ чаҫах.

1941.

## ТАВАН ÇĔРШЫВШĂН, ИРĔКЛĔХШĔН, ЧЫСШĂН

Çуллен çулах паянхи кун пире
Çурхи кун пек илемлĕ туйăнатчĕ,
Кĕркуннехи сĕм пĕлĕт витĕрех
Пĕр пирĕншĕн хĕвел йăлтăртататчĕ;
Хавасланса тапатчĕ пур чĕре,
Тивĕçлипе пур халăх саванатчĕ.

Кăçал çав çутă савăнăç çумне
Капланчĕ пирĕн тăвăлланнă çилĕ.
Уявăмăр иртет çак кĕркунне
Хальччен илтмен кисревлĕ аслатиллĕ.
Çук килĕшӳ: хăй чĕртнĕ вут ăшне
Тăшман хăй вăрăнса кĕлленĕ, вилĕ,

Историн сарлака ани çинче
Тĕл пулчĕç икĕ вăй: пĕри ăнманă,
Юнланнă çĕçĕ ун çăварĕнче,
Вăл ирĕклĕ малашлăхăн тăшманĕ.
Теприн — тĕнче телейĕ аллинче,
Çавна ӳкермессе вăл хĕç хăйранă.

Этемлĕх çулĕн факелĕ пулса
Çунать хĕрлĕ ялавĕ ман çĕршывăн,
Çавна нихçан сӳнтермесе шанса

Кунран кун çĕнĕ паттăр тухрĕ йышлăн.
«Мухтав сире!» янрать сума суса
Хăй парăмне тасан тултарнă çыншăн.

Тăван çĕршыв, ытарайми çĕршыв!
Хĕçпе эс сыхланса ĕçпе сиплентĕн.
Юнпа, тарпа шăваранса эс сыв,
Хăватлă улăп пек ӳссе çĕклентĕн.
Чĕремĕре паян эс хурçă хыв
Хăрушă тăшмана касса чикмешкĕн.

Йыхравлăн, хытăрах янратăр сас:
Тăван çĕршывшăн! Ирĕклĕхшĕн!
Чысшăн!
Арканнă хуласемшĕн тавăрас,
Çаратнă ялшăн, кашни çуннă килшĕн,
Таптанă тырăшăн — тура та кас
Каппайчăксем таричченех пуçиллĕн!

Тăван çĕршывшăн! Вăрçăри — хĕçпе,
Танкпа, самолетпа та, тупăпа та...
Килти — ырми-канми хăй ĕçĕпе
Мĕн кирлине пурне те туса патăр.
Тумпа, çăкăрпала та çимĕçпе
Çĕнтерĕве часрах вăл хăвăртлаттăр.

Чăн ирĕкшĕн! Тăшман çĕнес пулсан,
Ан ман, юлташ: чăваш-и эс, тутар-и—
Пистерĕ вăл сана халăхунтан,
Чĕлхӳ-çăварупах сăнчăрлаттарĕ,
Сăмах уçтармĕ ху сăввупалан,
Çĕр питĕнчен ятна та хураттарĕ.

Чыса сыхласшăн! Пирĕн хĕрсене
Пусмăрçăсем тискеррĕн мăшкăллаççĕ,
Ачаллă, йывăрлă арăмсенне
Кăкрисене касса чиксе çураççĕ...
Хисепсĕр юн, куççуль пире чĕнет:
Часрах ним хĕрхенмесĕр тавăрасчĕ!

Пĕр утăм та ан пусчăр малалла!
Европа тăрăх «çĕнтерӳллĕ маршшăн»,
Хăравçă сутăнчăксене пула,
Иртет пулсан фашизм, кунта виç
аршăн
Тăпра та лекмĕ — çунтăр вутпала!
Кĕлне вĕçтертĕр çавра çил хаяррăн!

Паян ак çирĕм пиллĕкмĕш çула
Кĕрет çĕн эра. Пур тĕнче тинкернĕ
Эпир тăратакан вăя-хала.
Хăçан ултав тĕрĕслĕхе çĕнтернĕ?
Пирте вăл çĕнтерӳ, пиртех пулать,
Эпир халь шанчăкĕ пур халăхсенĕн.

1941, ноябрĕн 7-мĕшĕ.

## ВИÇЕ ЫВАЛ

Ăмăрт кайăк пек виç ывăл
Пĕр атте-анне
Ÿстерсе парать çĕршывăн
Ăшă аллине.

Чи асли танкпа çӳрет-мĕн,
Сар вăталăххи —
Утпала, ăна тесессĕн —
Çук утран пахи.

Кĕçĕнни — тин пĕчĕкçеççĕ,
Тин ачаччĕ те! —
Кĕçĕнни ĕнтĕ вĕçевçĕ,
Пуринчен çӳлте...

Ăмăрт кайăк пек виç ывăл
Пĕр атте-анне
Ăсатать тăван çĕршывăн
Çапăçу хирне.

«Мĕн калам-ха? — терĕ ашшĕ
Аслă ывăлне, —
Ачаран машин-таврашшĕн
Хыпараттăн эс.

Йывăçран эс самокаткă
Туса пăхрăн ху.
Палласах тĕл пулнă акă
Халь сана танку.

Тыт эппин ăна тĕреклĕн,
Çĕмĕрттер унпа,
Салатсам çав хурахсенĕн
Ушкăнне чăл-пар!...»

«Улттăрах эс ут утлантăн,—
Тет вăл теприне,—
Йĕнере ытараймастăн,
Ахăр, хальччен ех.

Ыткăнах эппин хаяррăн
Эс тăшман çине:
Кас, тура та таптаттар ун
Каталла пуçне.

Ан тухайтăр тек вăл чĕрĕ
Çак хĕвел айне...»
Вара ашшĕ пехиллерĕ
Кĕçĕн ывăлне:

«Эс юмах пит юрататтăн
Çын вĕçни çинчен.
Ĕмĕтӳ ак çитрĕ санăн:
Ху ĕнтĕ вĕçен.

Пуринчен çӳле çĕклентĕр
Хурчăку паян.
Çăхан ушкăнĕ чĕтретĕр,
Эсĕ çывхарсан.

Пиччӳсем санпа мухтанчӑр,
Ҫӗр ҫинчен пӑртак
Кӗвӗҫсе пӑхса сӑначчӑр
Пур самолёта.

— Пирӗн шӑллӑм мар-ши ҫавӑ?—
Теччӗр савӑнса,
Тӑшмана таранласа вӑл
Ҫулӑм хыптарсан.

Аҫӑр савӑнтӑр пӗр харӑс
Виҫҫӗрпе те тан.
Хӑшӗнчен хӑшне ытарӑп?
Пурте хам юнран...»

Пехиллерӗ ашшӗ ӑшшӑн
Виҫӗ ывӑлне.
Амӑш чикрӗ пӗрер кӑшӑл
Чӑкӑт ҫул ҫине;

Пӗр шӑрттан касса валеҫрӗ,
Чикрӗ йӗппе ҫип.
«Кучченеҫӗм ҫакӑ,— терӗ,—
Ӳпкелемӗҫ-и...

Салтака каюҫӑн ӗлӗк
Ҫавра чӑкӑтсӑр
Кӑлармастчӗҫ... Халӗ тӗрлӗ
Тӗшмӗш вырӑнсӑр.

Кирек мӗн пулсан та ӗнтӗ —
Чӑкӑтпах пиллеп:
Ырӑ-сывӑ килччӗр, тетӗп,
Каялла киле...»

Ăмăрт кайăк пек виç ывăл
Пĕр атте-анне
Асатать тăван çĕршывăн
Çĕнтерӳ çарне...

1941.

## ЫТАРАЙМИ СЕСТРА

Аслишĕн — йăмăк эс,
Кĕçĕннине — аппа.
«Вилес е çĕнтерес!» —
Тесе тăван тупа.

Тĕнче курман хаяр
Тăшман куçать, куçать...
Хурçăпала кăвар
Çути ӳкет куçа.

Кăмăлăмăр хытать,
Пĕлетпĕр çилленме.
Юн! Тавăру! Йытта
Сун йытă вилĕмех!

Ытаraйми сестра!
Пĕрле пур хур та шар.
Ялан эс çывăхра,
Ялан эс юнашар.

Аллу çинче йăтса
Тухан аманнине,
Винтовка та тытса
Перен тăшман çине.

Ачалăх вăхăтне
Маннисене, пире,
Анне ачашлăхне
Асилтерен тепре.

Е, ăнсăртран инкек
Тăвăлланса хăр-хар
Эс ху тавăру пек —
Ним хĕрхенми, хаяр.

Ун чух хĕпĕртесе
Сан çинелле пăхсан —
Эпир çĕнтерессе
Татах, татах шанан.

Ытарайми сестра!
Эпир çĕнтермеллех.
Куçсем умне тăрать
Хальччен пулман телей.

Пур вăрçă-харçăран
Киле кайма тухсан,
Хастарлăхшăн, тăван,
Еçченшĕн тав туса,

Ялав пекех сана
Йăтса çитерĕпĕр,
Юрăпала ятна
Савса чĕнтĕрлĕпĕр.

1941.

## АХМЕТ ДЕЛИЕВĂН МАТТУРЛĂХĔ

Кавалерист Делиев
Разведкăна тухать.
Штаба тăшман «чĕлхийĕ»
Тытса килес пулать.

Ахмет — узбек ачи вăл:
Юлан утпа çӳрет.
Çĕрти пекех, хăть çывăр
Йĕнер çинче тӳрех.

Паллах, халь ыйхă тарнă,
Вăл маннă ун çинчен.
Епле пĕрер тăшман ун
Тытас тул çутличчен?

Ларать засадăра вăл
Пĕр-пĕчченех. Çĕрле.
Хăпарчĕ уйăх авă,
Кăшт юр вĕçтеркелет...

Сăнарĕ вăл, итлерĕ:
Сас-чĕвĕ çук. Пăхать —
Пĕр нимĕç офицерĕ
Юланутпа пырать.

Чылай инҫе унран вăл...
Утланчĕ те Ахмет,
Офицера ҫил-тăвăл
Пекех ак хӳтерет.

Вĕҫтерчĕ леш, хăравҫă,
Пере-пере тарать.
Хăй йĕнерне пăртакҫă
Йĕпетрĕ, ахăрах...

Ик юлан ут пыраҫҫĕ
Хаяр ăмăртура.
Тусан пек тустараҫҫĕ
Ларса ҫитмен юра.

Кăшт лăпчăннă Делиев,
Тапать утне, хистет...
Йăл уйăхăн шевлийĕ
Пĕр шпор ҫинче ҫиҫет.

Ахметăн урхамахĕ
Ҫĕмрен пек ыткăнать:
«Чухлап, чухлап хамах эп,—
Тет пек вăл,— тыт кăна!»

Тарать, тарать хăравҫă...
Анчах Ахмет та ман
Ҫитсех пырать... ҫывхарчĕ...
Чи татăклă самант!

Танлашсанах, кĕҫ-вĕҫҫĕн,
Йĕнерĕ ҫинченех,
Ярса тытать ҫав вĕҫкĕн
«Ариеца» узбек.

Ҫăлса илет, караппăл
Тыркас ҫĕкленĕ пек,
Ҫыхмасăрах вара вăл
Хурать ăна хăйпе.

Кустарчĕ акатуйăн
Каччи «парнепелен».
Куҫ хĕсрĕ вăрттăн уйăх
Шур пĕлĕт хушшинчен.

«Маттур, Делиев!» — тенĕн
Вăл туйăнчĕ ăна.
Ахмет тĕрĕс-тĕкеллĕн
Ҫитерчĕ тăшмана.

«Маттур, Делиев! — терĕҫ
Штабра та Ахмета,—
Джигитчĕ эс, ку тĕрĕс,
Халь эс — г е р о й тата».

1941.

# ШИРШОВ КОМСОМОЛЕЦАН ПАТТАРЛАХЕ

Виç салтакăмăр хытă аманнă,
Ӳксе юлнă çырма хĕррине.
Вĕсем выртнă çыран халь —
тăшманăн,
Каçарасчĕ часрах вĕсене.

Кимĕ çук. Кĕркунне шывĕ сивĕ.
Хĕн ишме юн тăкан вăйсăра.
Тус туса — чирлĕ вăл е вăл сывă —
Пăрахма юрамасть вăрçăра.

Комсомолец Ширшов, ним
чĕнмесĕр,
Хулпуççи çине хучĕ пĕрне.
Шăннине никама систермесĕр,
Ишсе каçрĕ вăл хамăр енне.

Теприне те çаплах вăл каçарчĕ,
Юлчĕ виççĕмĕш леш çыранта.
Ентĕркерĕ Ширшов, кăвакарчĕ,
Анчах сикрĕ шыва хăй татах.

Юхан шыв варрине ишсе çитрĕ,
Кӳтсе кайрĕ йăлт, шăнăр туртать...

Тăхлан пульă таçтан килсе тиврĕ,
Вăл çапах та ишет, вăл тухать.

Вăй çитет суранланнă маттуран,
Суранланнă çыннах çĕклесе,
Каçма виççĕмĕш хут çырма урлă
Кĕрхи сивĕ хумпа кĕрешсе.

Хăтарать Ширшов виç паттăра та,
Анчах хăйшĕн кăна çавнашкал
Ишме тивнĕ пулсан — шантаратăп —
Çитерейменччĕ вăл тек вăй-хал.

1941.

## АРАМ ПЕТРОСЯН

Вăл лекнĕ тыткăна. Вăл коммунист.
«Чĕлхе» тăвасшăн пулнă-мĕн унран.
«Вилсен те ху çĕршывунтан
ан пис!» —
Тесе хăйне хистенĕ Петросян.

Ана асаплантарнă тĕрлĕрен:
Çӳçне çăлса кăларнă унăнне,
Кастарнă кăкăрне çĕçĕпелен,
Тумлатнă сивĕ шыв пуç тӳпине...

Пурне те пĕр ответ: «Çĕршывăма
Нихçан та сутмăп, улăштармăп эп!»
Пӳрмен пулсассăн урăх пурăнма,
Вилме пĕлес пулать чăн паттăр пек.

Анчах та пурăнма çуралакан
Ытараймасть çак чĕрĕ пурнăçах.
Ана вăл юрататъ чунтан-вартан,
Тӳсен асап та, терт те — уншăн çав.

Арам çуралнă пурнăçшăн, паллах,
Çампа вăл хăраман та вилĕмрен.

Мĕн пурнăç ман, çĕршывăм
çук пулсан?!
Çĕршывăмпа эп чĕрĕ ĕмĕрех...

Ăна тыттарнă тимĕр кĕреçе,
Алтмашкăн хушнă шăтăк хăй валли.
Хураллама ефрейтора кĕçех
Тăратнă, ывăнсан палач алли.

Сасартăк Петросян, чĕр çиçĕм пек,
Çапать те сулăнса-вайăкласа
Ефрейтор пуçĕнчен кĕреçепе —
Лешь «ах!» та тееймерĕ, иçмасса.

Унтан Арам гранатă сыххине,
Хăйĕнченех туртса илнĕскере,
Часрах салтать те — тăшмансем çине
Йĕри-тавра тĕлле-тĕлле перет.

Вара вил офицерăн кĕсйинчен
Вăл кăларать хăйĕн партбилетне.
Çав самантра ăна тирет иккен
Пĕр пульă урине, тепри — пуçне.

Арам çав перекен офицера
Сиксе ларса пăвать карланкинчен.
Ку пулнă юлашки. Унтан вара
Шăвать вăл хамăр еннелле пĕччен.

Çул майăн нимĕçсен снаряд
складне
Шартлаттарса çурса вăл хăварать.

Унта тепре амантнă-мĕн хăйне,
Çапах та çитнĕ. Халь те вăл
строй ра....

Аçтан, кам панă-ха çав пĕр çынна
Ун чухлĕ вăй, ун чухлĕ чĕр хăват?
Хăй тирĕшĕн вăрçман вăл: хăй шанан
Тĕрĕслĕхе сыхланă, çĕршыва.

Эпир пурнатпăр аслă шанчăкпа:
Шăла çыртса тӳсме тивет хăш чух,
Анчах çав шанчăк ялкăшать çаплах,
Нихçан та чĕрере вăл çӳнес çук.

Коммунă ялавне сăнсăрласа
Нихçан та усал çук эпир пуса.
Ахалĕн мар çак татăклă вăрçа
Кашни кĕретпĕр большевик пулса.

1941.

## ПАМАСТПĂР ИРĔК ХУЛАНА!

Нева хаяррăн хумханать...
Ан ур, тăшман, ан антăх:
Памастпăр ирĕк хулана
Нихçан та! Никама та!

Илемлĕ, чаплă çурт кермен,
Пахчи, музейĕ, шкулĕ —
Мĕн пурĕ хамрăн ĕмĕртен,
Ялан вăл хамрăн пулĕ!

Çĕршыв пек анлă, сарлака
Хулан кашни урамĕ
Çĕклет ялавăн çăлакан
Çулпуç ятне, курап эп.

Хăватлă броневик çинче,
Çĕнтерĕве пилленĕн,
Тăрать вăл хăйĕн хулинче —
Алне çĕкленĕ Ленин;

Тăрать çĕршывăн чунĕ пек;
Вăл бронзă мар, вăл чĕрĕ;
Тăрать йыхрав пек, ĕмĕрех
Çак выранта вăл тăрĕ...

Нева хаярран хумханать...
Ан ур, тăшман, ан антăх;
Памастпăр ирĕк хулана
Нихçан та! Никама та!

1941, июль. Ленинград.

## ЕПЛЕ ЧĂТАТЬ-ШИ ÇĔР СИРЕ?!

Нимĕçсем Киевра еврейсене — арçынсене, хĕрарăмсене, ачасене — 52 пин çынна асаплантарса вĕлернĕ.

Хаçатсенчен.

Юнпа тулса вĕрет чĕре,
Шăнăçаймасть капланнă çиллĕм. .
Тĕнче ылханĕсем!
Çынçиенсем! Çын кĕлеткиллĕ
Шакал-гиенăсем!
Епле чăтать-ши çĕр сире?!

Эсир ют çĕршыва килсе
Апла иккен «йĕрке» тăватăр:
Пăшалсăр çынсемпе,
Арăмсемпе эсир-мĕн паттăр,
Тата — ачасемпе...
Эх, намăссăр кĕççе питсем!

Епле истори куç умне
Халь курăнăр эсир йнманă
Тискерлĕхĕрпелен?
Пĕлетĕр-и мĕн чухлĕ панă
Эсир хĕсĕрлекен
Еврей ăс-халĕ тĕнчене?

Эйнштейн, Маркс, Гейне халӑхӗ,—
Тӑшман епле кӑна ан уртӑр,—
Вӑл пурӑнӗ ялан.
Кунта пӗрремӗш хут ак пурте
Чӑнтан ӑна таван,
Пурин пекех ун танлӑхӗ.

Пӑрахмӑпӑр эпир ӑна.
Пӗлетӗп эп: ҫӗршывсӑр халӑх
Тӑван ҫӗршыв тупсан —
Вара вӑл пуринчен те хаклӑ,
Унтан пахи ҫук сан,
Вӑл саншӑн аннӳпе танах.

Эпир те ӗлӗк, тансӑрсем,
Ҫуралнӑ ҫӗрсенче те юттӑн
Ҫӳреттӗмӗр сӗнксе.
Анчах Октябрь кунӗ ҫутӑ
Телейшӗн халь сиксе
Вӑрҫатпӑр ак вута кӗрсе.

Мӑшкӑллаттармӑпӑр тӑван
Халӑхсене. Час тулӗ шалҫӑр,
Юнпа кӳпен орда!..
Ҫынна хальччен пулса та кашкӑр
Тытман-ха сӑнчӑрта,
Тытаймӗ те вӑл нихӑҫан!

1941.

# СӲТЕК ГИТЛЕР УХМАХХИН СӲТЕЛЕН СУЯ ÇАМХИ

Пант! пант! пант! — пуш параппан
Пантлататчĕ Берлинран:
«Ростова çĕнтертĕмĕр!
Унталли Совет çарне
Пĕтĕмпех пĕтертĕмĕр,
Тек пыраймĕç вăл енне...
Чаплă Клейст генерала
Пуç çапсах тав тумалла...
Ростоври сынсем пире,
Савăнса, йĕре-йĕре
Кĕтсе илчĕçĕ», — тесе
Павраштатчĕç нимĕçсем.

Анчах акă ик кунтан,
Хĕрлĕ Çар çав Ростовран
Каппаян вĕçкĕнсене
Пăскăртса хуса ярсан,
Ак епле халь илтĕнет
Берлинри пуш параппан:

«Пант! пант! пант! Большевиксем —
Саккуна пĕлмен çынсем.
Нимĕçсен тылне кĕрсе
Кĕрешӳ вут-кăварне

Чёртме хушнă-мĕн вĕсем
Хулари пур çынсене...
Тĕнчери ыр йăлана
Совет çĕрĕ пăхăнмасть.
Çар парсан та хулана,
Хула халăхĕ памасть.
Ростова, Хĕрлĕ Çар мар,
Хула халăхĕ хăех
Туртса илнĕ...» (Пантлаттар
Параппан шăтичченех!)

«Куççульпе кĕтсе илен»
Хула халăхĕ апла
Хăй пăшал тытать иккен,
Ку тата мĕн япала?
Тутлах мар-им нимĕçе?
Пирĕншĕн — çав кирлĕ çеç!
Халăхпа большевиксем
Пĕр сăмахлă иккенне
Тĕрлĕ Геббельс йышшисем
Пĕлмен мар та ку чухне...
Анчах çав суя çăмхи,
Сӳтĕк Гитлер ухмаххи,
Çав ултав лачакине
Кĕрсе ӳкнĕ çĕр çăтман...
Халиччен ун пеккине
Çут тĕнче илтмен, курман.

Юрĕ. Пултăр. Пултăр-ха:
Ростов халăхĕ, калар,
Çарсăрах çав хураха
Тапса сирпĕттĕр калла...
Юрĕ. Пултăр. Пăшал мар:

Тивнĕ, тейĕпĕр, чукмар...
«Харсăр» та иккен вара
Леш Клейст ятлă генерал!

Пант! пант пант! — пуш параппан...
Параппанне çапакан
Пархатарне курĕ-ши?
Курĕ, курĕ ытлашши,
Час кăтартăпăр ăна...
Çак Ростовăн тамаши
Халь пуçламăшĕ кăна,
Малалла-ха ăш-пăшши!

1942.

# ТАВАН МУСКАВШАН

Пурне те хамăр кил пек çывăх эс,
Мускав, Мускав — çĕршывăмăр чĕри.
Сан ятупа вилес е çĕнтерес,
Тесе тупа тăвать курни-пĕри.

Хальччен сана ĕмĕтĕнче савса
Пурнакансем, паян карах тăрса,
Нихçан сан ялаву усăнмасса,
Кĕреççĕ саншăн татăклă вăрçа.

Мускав, Мускав! Сана итлет тĕнче,
Пур ĕç çынни сана сунать вăй-хал.
Тĕреклĕ Кремлĕн çӳллĕ тӳпинчен
Çаплах янрать «Интернационал».

Вăл янрĕ яланах. Тупăпала
Хуплаймарĕ ирсĕр çын çиен ăна.
Ярса пусмассерен тупăкалла
Тĕртет истори юнлă тирана.

Кам хĕç çĕклет — çав хĕçренех пĕтет.
Ун пек мухтанчăксем пулманах мар...
Тĕрĕслĕхе касаймĕ нимĕн те,
Вăл тĕрĕслĕх — санра, Мускавăмăр!

1942.

## ÇАЛТАР

Ман чатăран шăтăкĕнчен
Пăхать пĕр çăлтăр каçсерен.

Шанас килет: ман çăлтăр вăл,
Манран инçе ан юлтăр вăл.

Ăçта пулсан та эп — часах
Мана вăл тупăр шыраса.

Вакун чӳречинчен пăхса,
Мана вăл ятăр ăсатса.

Палаткăра е окопра
Манпа вăл пултăрччĕ вара.

Разведкăна е хурала
Манпа вăл тухтăр каçпала.

Эп аманса ӳкес пулсан,
Мана вăл пăхтăрччĕ куçран.

Тăраймаслах хурсан пуçа,
Çав çăлтăр хуптăр ман куçа.

Куҫа вӑл хуптӑр та манне,
Каллех хӑпартӑр тӳпене.

Пӗрне-пӗри тек туламан
Ҫынсемшӗн ялкӑштӑр ялан!

1942.

## АННЕНЕ

Каçсерен сывлатăн ассăн,
Асăнман çĕр çук.
Таврăнмассăн, таврăнмассăн
Туйăнать хăш чух...

Сан таса сĕтне эп манмăп
Нихăçан, анне,
Мĕншĕн йăпшăнмăттăм мамăк
Çунату айне?

Анчах халь пурне те мар-и —
Ывăла, хĕре —
Куçран пăхрĕ, ыталарĕ
Пĕр анне пире.

Вăл — асаплă та суранлă,
Çапах ĕмĕр сыв
Эпир иксĕмĕр çуралнă
Сарлака çĕршыв.

Çав аннешĕн кĕрешмешкĕн,
Пăшала, туппа
Чуп туса, эпир пиншерĕн
Турăмăр тупа.

Çав аннешĕн ăнсăртран эп
Пуçăма хурсан,
Чăн, вара тек таврăнаймăп,
Айăп ан тусам.

Ачаран эс вĕрентеттĕн,
Лайăх ас тăвап:
Амăшне хисеплесессĕн —
Ĕмĕрлĕх сăвап.

Хĕрлĕ пурçăн ялав айĕн
Чĕркуçленнĕ чух
Туйрăм эп: çĕршывсăр халь-мĕн
Пур аннем те çук.

Чап, хисеп кирек хăçан та
Çав çĕршыв ятне:
Çав ятран ман ят та, сан та,
Асăмри анне!

1942. Сталинград фрончĕ.

## МУНЧА ШАРШИ

Хурӑнлӑхран мунча шӑрши кӗрет,
Чӑваш мунчи шӑрши.
Ай-хайччӗ, ҫапӑнасчӗ те пӗрре!
Хӑҫан кӗрӗпӗр-ши?

Хӑҫан Ҫавал, Пӑла, Сӑр хӗрринче
Тар-кирӗке ҫумран
Ура тупанӗ чул пек хӗриччен
Сӗвелӗпӗр, хӑҫан?

«Час, лейтенант юлташ, аякрах мар,—
Тет пӗр салтакӑм ман,—
Паян епле кӑтартрӑмӑр-ха шар,
Пусмассерен тӑшман!..»

Каҫ кӳлӗм тупӑ ахӑрчӗ тепре.
Пӑшал тӗрӗслесе,
Чӑваш калать: «Пар ӑшшине шепрех!
Тӗп пулччӑр эсрелсем!»

1943. Брянск вӑрманӗсем.

# ПОЭТ ТАПРИ ÇИНЧЕ

Чăваш мухтавĕ выртакан
Юман юпаллă тĕмеске
Мана туртатчĕ аякран,
Анчах пулмарĕ çул кĕске...

Остер таврăш тирекĕсем
Тĕреннĕ янкăр пĕлĕте,
Тăшмансене хӳтернĕçем
Çитертĕм хамăн ĕмĕте.

Пăртак лăпланнă самантра
Эп кĕтĕм пушă пахчана.
Çерем ешереймен тăпра
Салхуллăн курăнчĕ мана...

Тăванăм! Атăл хĕрринчен,
Сана ялан савса тăран
Управлă халăх чĕринчен
Салам çитертĕм эп паян.

Каçар мана: вучах чĕртсе
Асăнаймастăп пылпала.
Пистолетран виç хут персе
Сыв пуллашатăп санпала.

Мерттес Шевченко Амăшне!
Вăл кăкăр пачĕ Çеçпĕле.
Тупа: ун ирĕк канăçне
Эп сыхлăп, сыхлăп хĕçпеле!

1943.

## САЛАМПИ

Телейсĕр савăшăн пĕртен-пĕрех калчи...

БАЙРОН.

Нумаййăнччĕ вĕсем — хура,
кăвак кусли...
Китай çĕршывĕнчен Суоми таранччен
Чăваш ăрăвĕсем кĕшĕлтетсе куçни
Курнатчĕ çав пĕр мар куççен
сăнарĕнче.

Нумаййăнччĕ вĕсем—асли те кĕçĕнни,
Танни те тан марри ман çул
тăрăшшĕнче.
Анчах илтмерĕ, çук, илтмерĕ эп
чĕнни:
Вăл пулчĕ аякра, эп юлтăм пĕр-пĕччен!

Кăна эс чухлама пултарас çук халех,
Кайран пит ăнланма, тен, пулмĕ те
кирлех:
Илем те, чăнлăх та пырать улăшăнса.

Ун чух... ун чух поэт, куçран
пăхса хĕре,
Хăй халăхĕн чунне шыранă илемре...
Санра халь ман ăна тупасчĕ, иçмасса!

1943. Тулă çывăхĕнче.

## ЭЛКЕРЕ — ВĂРÇĂ ХИРЕНЧЕН

Нумай-и пурнăçăм, сахал-и,—
Пăхассăм çук калла-малла.
Сана тытма эп тивĕç алă,
Салтак пиччемçĕм, салтакла.
Пĕрре килет этемшĕн аллă,
Пуртех çитеймĕпĕр алла.

Вут-çиллĕ, кĕллĕ-хĕмлĕ тапхăр!
Ăша çунтармăш самана!
Кам юнлă чӳклеве юраттăр?
Сана вăл тунсăх е мана?
Анчах вутран ӳсет çĕн паттăр
Чармашкăн юхакан юна.

Сĕм пĕлĕт витĕр тавракурăм
Уяррăн çĕкленет умра.
Ăна эп халь мухтаймăп юррăн,
Ман юррăм — м а л а л л а! у р р а!
Ăна çĕклет ман пилĕк-çурăм,
Çывăхартать ман ал-ура.

Курап, курап çĕршывăн аслă,
Тулли, паха кĕрекине.
Куратăп халăхăн пуласлăх

Ытарайми кӗнекине.
Шанатăп ăшшăн та хаваслăн
Куçран пăхса пуплессине.

Эп çирӗм çул сана пӗлетӗп,
Ачаранпах сан умăнта.
Хальччен пулса хаяр çиле те
Вӗртмерӗмӗр хушшăмăрта.
Салтакăн фляги̇не çӗклетӗп
Пӗччен халь саншăн эп кунта.

Тавсси, поэт! Пуçламăш пусăм
Ман çеç те мар сан чӗр çинче.
Паян сан уявна эп, тусăм,
Чыслатăп вăрçă хирӗнче.
Анчах, ăçта пулсан та пуçăм,
Ман чунăм Атăл хӗрринче.

Десна та Сож, Нева та Днепр...
Мӗнле шыв урлă эп каçман!
Кашни хума вăрçса илетпӗр,
Илемлӗ пур тăван çыран.
Çапах та Атăл шайлă тепӗр
Шыв-шур курман эп ку таран.

Тахçан, сӗм авалах ят панă
Чăваш хăй чӗлхипе ăна.
Унта çуралнă-çке, тăванăм,
Вилес килет унта кăна.
Унта эп юрата пуçланă
Асран кайми Российăна.

Салтакчӗ эп. Историк куçӗ
Ялхахланатчӗ тӗтӗмпе.

Куҫа ҫеҫ мар, чуна та йӳҫӗ
Пулатчӗ, тен, вăхăчӗпе.
Анчах пӗр шухăш — хамрăн
ку ҫӗр! —
Тени ҫиҫетчӗ ҫиҫӗм пек.

Курап, курап ҫӗршывăн аслă,
Тулли, паха кӗрекине.
Куратăп халăхăн пуласлăх
Ытарайми кӗнекине.
Итле, тăван йăх, паттăр саслă
Ывăлусен кӗввисене!

1944. Польшă.

## ПАВЛО ТЫЧИНĂНА

Пĕр вичкĕн квинтинă, пĕр çирĕп
терцинă
Пулса сан сассу çĕкленет.
Салтак пек пырать пирĕнпе халь
Тычина.
Приказ юрă пек илтĕнет.

Музей ишĕлет, сад çунать...
Бомбă, минă
Çĕре пĕлĕте кисретет.
Анчах нихăçан вилес çук Украина,
Юрри пĕтмĕ ун ĕмĕрте.

Çут шуçăм çинче халлĕхе юн куратăн,
Хаяр тавăру юррине эс юрлатăн:
«Клаас! Сан кĕлĕ çунтарать чĕрене!»

Хăватлă Тарасăн таса амăшне
Эс йывăр кунра пăрахмарăн,
Чăн ывăлĕ пек ыталарăн.

1944

## МИЦКЕВИЧ

Юнлатнă Польшăмăн вĕри куççулĕпе
Ман çилĕллĕ сăввăм сăнчăрăра пат таттăр!

А. МИЦКЕВИЧ—
«Вырăс тусăмсене».

Бук урлă каçсанах, поляк çĕршывĕнче,
Кĕретпĕр пĕр яла... çурт çукчĕ
ялĕнче...
Унта мĕн курнине эп манмăп
виличчен,
Картинă кивĕ те — çапах куç умĕнче:

Çыр хĕррине пăхса, шап-шур
старик пĕччен —
Çаратнă, тăлăхскер — тăратчĕ
кĕл çинче:
Тертрен хăтарасса вăл кĕтнĕ
тахçанччен,
Ун ĕмĕтне сыпма пыратпăр Бук енчен.

Çунтарнă пĕтĕмпех. Поэт сăнĕ кăна
Сыхланнă теплерен. Вăл курнă пек
мана.
Эп ун çине пăхса чĕнмесĕр
иртеймерĕм:

— Мицкевича салам, тăван
саламĕ! — терĕм.—
Сан çилĕллĕ сăвву, патмар
çар сынни пек,
Телейлĕ Польшăшăн утать
халь пирĕнпе.

1944, июль, Польша.

# ОРДЕН

## 1.

Эрнешер сухал хырмасăр,
Çывăрмасăр талăкшар,
Тăшмана хĕссе пыратпăр
Таччăн, çуммăн, юнашар.

Шурă çуртлă Украинăн
Ешеркке черешнисем,
Мĕн кăтартнă сире мина,
Бомбă, тупă етрисем!

Хуçнă, чĕлнĕ, турпаслана,
Симĕс çулçă типшĕрет.
Сар мерчен пек сапаланнă
Çырла-çимĕç тип çĕре.

Чиесем лараççĕ капăр,
Илĕртеççĕ: кил, çисем...
Мина çурăлчĕ те — шапăр
Тăкăнаççĕ пиçнисем.

Вĕллене лекет вăр-варрăн
Пĕр осколок, куртăмăр,
Сĕрлесе тухать хаяррăн
Хыпаланчăк хурт-хăмăр.

Çыннисем çинчен мĕн калăн?
Çав вĕлле хурчĕсем пек
Хаярланнă чун хаваллăн
Виç çул тӳснĕ пĕр инкек.

Мĕн çын мулĕ çичĕ ютшăн!
Сăхнă-сăхнă та яла —
Халь эпир хĕссе пыруçăн,
Вут тĕртсе таратъ калла.

Ав Европăна «çĕнтернĕ»
Сăрă-симĕс автомат.
Хул айне кĕлте хĕстернĕ,
Сывламасăр ыткăнать.

Вĕлтлетет кача пăталлă
Атă тĕпĕ вăрăлла.
Вăлваскать — тата пĕр аллă
Çурт тĕртесшĕн пулмалла.

Чарăнса вутпа хăмсарчĕ
Хĕрринчи лутра пӳрте.
Çав самант пĕр автоматчик
Хураха ăса кĕртет.

Сулкаланчĕ, ӳкрĕ ак вăл
Шурă пӳрт кĕтессине.
Аллинче сӳнет ун факел
(Ыраш улăм тессине...)

2.

Уйăхшар ура салтмасăр,
Мунчине-мĕнне манса,

Хăвалатпăр, хăвалатпăр
Тăшмана хавхаланса.

Мĕн вăл вырăн? Кăшт хăяккăн
Пистолет ТТ çинче
Тĕлĕрен те — кăларатăн
Планшетна пуç айĕнчен.

Сăрт, çырма, кĕпер... — Йĕрлетчĕ
Куç вăраннă-вăранман.
Мĕн тери хаяр трагеди
Пытарать пĕр-пĕр вăрман!

Ак хайхи, вăрçсан-вăрçсассăн,
Буг текен шыв хĕррине
Пырса тухрăмăр хавассăн—
Ик патшалăх чиккине.

Шыв леш енĕ — Польшă çĕрĕ,
Шыв ку енĕ — хамăрăн.
Тĕтĕмпе тусан сĕмлерĕ
Пĕлĕте хăп-хăмăррăн.

Кашни пусăм, кашни аршăн
Кўпрĕ чĕрĕ юн ĕçсе.
Чикĕ урлă ярас маршăн
Пуç хураççĕ нимĕççем.

Юнпала пусаççĕ алă,
Гитлера тупа туса:
«Польшă — нимĕç çĕрне алăк,
Каçармастпăр вырăса!»

Кунĕпе вĕçет июлĕн
Сар тусанĕ, çавранать.
Хăпарать тĕтре каç кӳлĕм,
Нӳр çапать пур таврана.

Кунĕпе те, çĕрĕпе те
Артиллери ахăрать.
Ансăр каçă мар ку,— тетĕн,—
Тĕпĕ-йĕрĕсĕр ахрат.

Анчах пирĕн пур пĕртен пĕр
Тăшмансем пĕлмен меслет:
Хĕн килсессĕн — А т ă л! — тетпĕр,
Çавăнтах вăй-хал кĕрет.

Шур çилхеллĕ Атăл хумĕ
Кăтăрать куç умĕнче.
Вăрçă хыççăн, вăрçă умĕн
Такмаклатпăр ун çинчен:

«Астăвар тепре, атьсемĕр,
Аслă, вилĕмсĕр чапа.
Сталинград ятне çĕртмесĕр,
Тăшмана шепрех çапар!»

3.

Кам мана ĕнентересшĕн —
Юрă вăл тӳлек, тесе?
Музă, тупă ӳхĕрсессĕн,
Чĕлхине тĕвлет, тесе?

Вăл пыратчĕ çулăм витĕр
Маскировкăпа шуса,

Окопа кĕретчĕ шиксĕр
Керз аттипелен пусса,

Çамкине пĕрсе пăхатчĕ
Куçăмран вăл сăнаса,
Умне çакнă автомачĕ
Тинкеретчĕ Анăçа,

Хĕвелпе çунса шуралнă
Хăй пилоткине хывсан,
Курса юлнăччĕ суранлă
Тăнлавне эп ăнсăртран,

Арçынла кастарнă çӳçĕ
Кĕççеленнĕ кăшт кăна.
Вăл калатчĕ: «Çĕнтерӳçĕ
Тивĕç санăн юрруна,

Ыран мар, халех пул хатĕр,
Туп эс кирлĕ кĕвĕсем:
Чăн сăмах тăва хускатĕ,
Пăслантарĕ тинĕсе.

Туп, кăлар эс витерӳллĕ,
Чĕрене тивен сăмах.
Çав сăмах, тен, кĕрсе юлĕ
Ĕмĕр-ĕмĕр асăнма.

Ку сахал: хĕçпе пул тивĕç
Сăмахна эс хăвăнне.
Юррупа та сана виçĕç,
Ĕçӳпе те малашне

Пултăр тамăк, пултăр вилĕм —
Çĕн те каç эс леш енне!..»

Ак мĕскершĕн эпĕ илтĕм
«Хĕрлĕ Çăлтăр» орденне.

1945.

## АС ИЛӲ

И. ИВНИКЕ

Ас тӑватӑп: вилнӗччӗ поэт...
Шупашкар урамӗсем тӑрӑх
Унӑн ӑшӑ, ҫепӗҫ сӑвви пек
Ҫурхи ҫил ҫӳретчӗ иртӗнмесӗр.
Тирпейленӗ тупӑк умӗнче
Хулӑн сасӑллӑ Иван Мучи
Пантеон кирли ҫинчен пуплетчӗ.
Тепӗр ҫын поэтӑн сухалне —
Чирлӗ чух ӳстернине — ас турӗ:
Руставели евӗрлӗччӗ, терӗ.
Виҫҫӗмӗш — ман тусӑм, ҫывӑх тусӑм—
Ар пуҫпа ӗсӗклесе йӗретчӗ...
Мана йывӑрччӗ сӑмах хушма,
Тӑвӑлса тӑртаннӑ хурлӑха
Ҫемҫетме куҫҫулӗм те тухмарӗ.
Тӑшмана, вӑрҫа, хура вӑя
Ылханса хӑварнӑ ырӑ шӑллӑм
Хӑй ӗҫне пуҫлайнӑн курӑнчӗ.
Кӳренсе вара эп аса илтӗм
Ҫавнашкал ҫурма ҫулта хур пулнӑ
Темӗн чухлӗ халӑх ывӑлне.
Ун чухне ят тухнӑ сынччӗ эпӗ,
Пристаньре кӗтетчӗҫ салтаксем,

Çавăнпа çĕре кĕресскере
Çамкинчен чуп турăм чи малтан:
Сип-сивехчĕ, вилнĕччĕ поэт!
Эп — вилĕме хирĕç тухса кайрăм...

1945, май.

## ШИНЕЛЬ

Кӑвайт хӗлхемӗ вӗтеленӗ,
Тӑхлан та тивнӗ аркӑран.
Тӑп-тӑп шинель, салтак шинелӗ,
Эс шӑппӑн ҫакӑнса тӑран.

Анчах ҫав шӑплӑхра мӗн евӗр
Тав-шав, инҫе ҫулсем, тупа!
Тӑван ҫӗршывӑмӑр-аннемӗр
Пӗркеннӗччӗ пуставупа.

Шинель! Айри тӳшек те пултӑн,
Ҫири вителӗк те эс ман.
Лӳшкентӗн ҫумӑрпа та, ҫунтӑн
Хӗвелпеле те — аптраман.

Чылай туссем выртса та юлчӗҫ
Санпа яланлӑх чӑрканса.
Ҫав паттӑрсем чару пек пулчӗҫ —
Нихҫан тек юн тӑктармасса.

Шинель! Чапна пӗлсе пӑхатӑп
Еҫ хушшинчен эп сан сӑнна.
Эс хӳтӗ, шанчӑклӑ, паха та,
Ансат манаймӑп эп сана.

Санпа аса килет кӗрхи ҫӗр,
Кӑвар пек пӗлӗт, ҫунӑ хир.
Юн шывӗ урлӑ, ҫулӑм витӗр
Каҫсаттӑмӑр, шинель, эпир.

Ялта мӑръесем ҫеҫ ларатчӗҫ
Хура юпа пек юнаса.
Ларатчӗ кӑмрӑкланнӑ сачӗ
Уксах-чӑлах пек йӑлӑнса.

Шинель! Эс ӗнтӗн, эс хуралтӑн,
Тасалтӑн та эс юрпала.
Часрах тӳлек ӗҫпе пурнасшӑн
Санпа эп тӑтӑм хурала.

Ват салтакпа, вӑл темӗн те пӗр
Курнисене чунтан-вартан
Хисеплесе калаҫнӑ евӗр,
Эп калаҫатӑп санпалан.

Эс хӳтӗ, шанчӑклӑ, паха та:
Часран часах халь сан ҫине
Эп шухӑша кайса пӑхатӑп,
Мухтавлӑ, тӳсӗмлӗ шинель!

1952.

## ÇĔНТЕРӰ

Çĕнтерӳ! Паян мар вăл çуралчĕ,
Çук: «Аврора» туппин залпĕпех
Кĕрхи Питĕр çинче вăл çуталчĕ,
Шар çурса, аслати çапнă пек.

Броневик тăрринчен тăснă алă
Çул кăтартрĕ пире ун патне.
— Ленин! — терĕмĕр те, асăнмалăх
Чĕрене çыртăмăр ун ятне.

Çĕнтерӳ! Днепрпа Волхов шывĕ
Çĕр çинчех çăлтăрсем çутиччен,
Магнит ту ăшĕнчи тимĕр — шĕвĕ
Чугун-хурçă пулса юхиччен.

Горькири заводран минутсемĕн
Çĕн машинă куçса тухиччен,
Мускаври метропа пин-пиншерĕн
Каллĕ-маллĕ этем хутличчен

Яланах пирĕнпе пултăн эсĕ,
Ç ĕ н т е р ӳ — çĕмĕрен пек сăмах
Атăл çуннă çула асилес-и?
Эс унтаччĕ — кашни окопрах.

Çав çултан, çĕршыв шанчăкĕ свĕр,
Хытăран хытăрах янăрать
Тĕнчене тĕлĕнтернĕ пĕртен-пĕр
Нихăçан манăçми Сталинград.

Сталинград. Вут, тусан, йӳçĕ эрĕм.
Ишĕлет çӳл тӳпе, çĕр чĕтрет.
Çын кăна чĕтремен. Чĕтремерĕм
Эпĕ те — тимĕрччĕ пирĕн рет.

Ĕмĕрте тĕрлине курма килĕ,—
Сарлака тетпĕр ун саккине.
Анчах кам, кам манран тытса илĕ
Вутлă Атăл чĕрин таппине?

Вăл — юнра. Кирлĕ чух вăл вăранĕ.
Икĕ пинмĕш çулсем хыçĕнчен
Сталинградăн патвар ветеранĕ
Хăй патне пин-пин çын пухĕ, тен.

«Мĕнпеле çиеле тухрăр? — тейĕç
Çутă куçлă яшсем ун чухне, —
Штыка штык, туппа тупă, хĕçе хĕç
Хирĕç тăнă-çке-ха пĕр-пĕрне...»

Аслă тĕрĕслĕх! Акă мĕскерччĕ
Хул çумне чĕрĕ вăй хушакан.
Ни сивви, ни выççи, ни чун терчĕ
Хутлаймарĕ пире унпалан.

Пуç усми ветеран, çирĕм пĕрмĕш
Ĕмĕре çитсе кĕнĕ салтак!
Тав сана! Сан яту çĕрте çĕрмĕ,
Хăвăнне эсĕ тунă йăлтах.

Тав сана, ни граната, ни пульӑ
Ҫӗнейми пӗр ҫарти тусӑм ман!
Тен, сан ҫурӑм ҫинче ҫыртӑм пулӗ
Йӗп-йӗпе окопри сӑввӑма.

Тен, санпа траншейра каҫӑн-ирӗн,
Кукленсе тӑп-тӑвӑр хушӑка,
Пӗр хуран пӑттине эпӗ ҫирӗм,
Шӑлнӑ пек ҫуласа кашӑка.

Тен, санпа, ҫӗрӗпе куҫ хупмасӑр
Ракетсем ҫуннине сӑнаса,
Эп ҫӗклентӗм ирех, сансӑр-мансӑр
Ҫӗнтерӳ ҫуккине ӑнланса.

Тав сана, Сталинград ветеранӗ!
Канлӗ пултӑр сан тимлӗ чӗрӳ.
Санпала юнашар вӑл чысланӗ —
Ҫиҫӗм куҫлӑ таса Ҫӗнтерӳ.

Ҫӗнтерӳ! Плащпалаткӑ уртса вӑл,
Каскӑ айӗн пӑхса ҫивӗччӗн,
Пычӗ — тӳсӗмлӗ, тертлӗ, те савӑк —
Атӑлтан Рейн хӗрне ҫитиччен.

Тӑхланпа хурҫӑ айӗн пӗр шиксӗр
Вӑл ҫул тытрӗ Берлинваррине.
Ерпе мир ялавне ҫулӑм витӗр
Вӑл хӑпартрӗ рейхстаг тӑррине.

Паян кун тава тивӗҫлӗ паттӑр
Нефть уҫлать, тӑрмашать шахтӑра.
Ҫеҫен хир варринче те куратпӑр,
Тайгара та эпир паттӑра.

Сарă хăйăр çинче ешĕл йывăç
Ӳссе ларĕ, хумханĕ вăрман.
Тарăнланĕ кӳлли, юхан шывĕ,
Гранитпа карлăкланĕ çыран.

Мускавран, Хусантан, Урал урлă —
Инçетри Çĕпĕртен, кăнтăртан
Çĕн ăста, çĕн машинă, вăй-пурлăх
Ăсанать Атăлпа аната.

Ман республикă та — Атăл çĕрĕ:
Шупашкар, Куславкка, Çĕмĕрле
«Сталинград!» терĕ. «Куйбышев!»
терĕ,
Еç вĕрет, шăранать, кĕр-кĕрлет...

Çĕнтерӳ! Тĕнчери çак пĕртен-пĕр
Емĕрлĕх тăвакан çурт-йĕре —
Коммунизм кил-çурчĕ вăл тетпĕр,
Ун тӳпи курăнать халь пире.

1951.

# Тилли юрри-сем

* * *

Мехел тени мĕскер тени пулать?
Ыйтсамăр çумăр пĕлĕчĕсенчен:
Мĕн-ма вĕсем кăвак уярпала
Юхаççĕ çăвăнмасăр тахçанччен?
Мехел çитмен.

Мехел тени мĕскер тени, тăван?
Ыйтсамăр кайăк хур ушкăнĕнчен:
Мĕскершĕн вăл пайтах шурамăкран
Вĕçсе иртет, анмасть картипелен?
Мехел çитмен.

Мехел тени мĕскер тени иккен?
Ыйтсамăр пахчари улмуççирен:
Ма ун çеçки, чăмăртансах çитсен,
Тепре çĕр каçатех çурăличчен?
Мехел çитмен.

Апла мехел тени мĕскер ĕнтĕ?
Ыйтсамăр сĕрме купăс каччинчен:
Мĕн-ма патнех-патнех çитсессĕн те,
Пусмасть вăл хĕлĕхне пўрнипелен?
Мехел çитмен.

Мехел çитсессĕн, çумăр ярăнать,
Çунатлă чун çӳлтен çĕре анать,
Чечек папки илемлĕн çурăлать,
Йĕркипелен юрри те юрланать —
Мехел çитсен.

* * *

Пиллĕкĕнех эпир, ай, пĕр таван,
Пилĕкех те пилеш пĕр тымартан.

Чи кĕçĕнни те аслă пехилли
Эй пултăм-çке, ăру асси Тилли.

Çуралнă эп матур, ӳсен сатур
Атте-анне ачашлĕх нĕрĕм пур.

Ватсем сума сумалăх тăнăм пур,
Хĕрсем вĕчĕрхенмелĕх сăнăм пур.

Çуралнă эп çурхи чĕрлĕхпелен,
Кĕрленĕ эп кĕрхи кĕрлĕхпелен.

Чĕкеç вĕренттĕр калаçма, тесе
Йăтса тухман мана пиелесе:

Улт уйăхра эп ураланнă, тет,
Тăххăралла — чĕлхе кăларнă, тет.

Çуралнă эпĕ уйăх хăпарсан,
Ял пуç автан шăп çур çĕр аватсан.

Çунса вылянă çăлтăр тӳпере,
Хур-кайăксем çул тытнă çурçĕре.

«Сунарçă пул эппин!» тесе эпи
Кăвапана тивертнĕ ух йĕппи.

Ăру ăрăскалне эп пĕчченех
Тĕпекпеле çуралнă тĕнчене.

Тĕпекĕме куштарнă та манне —
Çӳпçе тĕпне пытарнă ыр анне;

Унпа пĕрле пытарнă вăл юрра
Çавна тупса эп халь кĕвве хурап.

Сĕвем çумне сĕвем тиреп сăмах,
Пĕр сăмаххи — мерчен, тепри — ахах.

Шăрçа пек юрă ярăмĕ вара
Пĕр сыпăксăр юхать çавра-çавра.

* * *

Шурӑмпуҫсем килеҫҫӗ шуралса,
Ват асаннем ларать пуҫ тураса.
Шурӑмпуҫран та шурӑ сурпанне
Тирпейлӗн сырӑнать ыр асанне.

Вут ҫутипе вылять пӗр чӳрече,
Анне ҫӳрет тӗпелӗн кукринче:
Вӑл чашкӑрта пуҫланӑ ҫатмана,
Юсман шӑрши кӗрет ман сӑмсана.

Чӗрик туса илет кӗҫӗн хапха,
Тин уявран кӗрет иккен аппа,
Чӗрес илсе ӗне сума ларать,
Унтан кӗтӳ яма тухса каять.

Инке тӑрса тухать шур кӗлетрен,
Шӑлт-шалт кӗвентелет ик шур витре.
Сӑра сапмашкӑн шыв вӑл хатӗрлет,
Лаҫра сӑра хуранӗ тирпейлет.

Хӗвел те тухнӑ, пӗҫертет хытах,
Эп шав ҫыврам пекки туса выртап.
Инкеҫӗм, йӑл кулса, ман пит ҫине
Салтса витет шап-шур чӗр ҫиттине.

15*

Мана тек ним те, ним те кирлĕ мар...
Вун улттӑри ача — эп пултӑм ар
Йӑмӑкӑм çеç, вуникĕ çулхискер,
Шӑналӑк ӑшĕнче пĕр шухӑшсӑр.

* * *

Асаттеçĕм атлас тăхăннă,
Арки-çанни çĕртен сĕтрĕнет.
Эпирех те курас ырлăхсем
Лаша çилхи çине пĕтрĕнет.

Сикс(е) утлантăм тур ут тихине.
Пусрăм кĕмĕл ура пуссине,
Карăнтартăм пурçăн чĕлпĕрне,
Ярăнтартăм Хусан хулине.

Хусанти ăстасем мĕн ĕçлеççĕ?
Йĕнерпелен йĕвен йĕслеççĕ.
Пирĕн атте-анне мĕн ĕçлет?
Пичĕке пуçласа пыл ĕçет.

* * *

Тăват касра тăвата савни,
Тăваттăран пĕри — тур çырни.

Хăшин ятне çырнă-ши турри?
Пĕлес килет-çке ман çав тери!

Хурапала çырни — хурлăха,
Сарăпа-ши савăнмалăха?

Хĕрлĕпеле çырни — кĕрлĕхе,
Симĕспеле-ши çав сиплĕхе?

Тăват касра тăвата варли,
Пĕри кăна хĕве хупмалли.

Хăшне савса хăшне ытарам?
Хăшин пуçне сурпан сыртарам?

Тăваттăш те мерчен тухъяпа,
Илем кўреççĕ-çке уява.

Çĕрти çырла, садри сар улма —
Аçта ĕнтĕ вĕсем пек пулма!

Пӗрне илсен пӗри шел юлать,
Тăваттăшне илме ҫук йăла.

Пӗрне пӗркенчӗкпе пӗркесен,
Тепри пӗркенчӗкне тӗрлесен,

Виҫҫӗмӗшӗ выран сартăр-им,
Тăваттăмӗш ура салттăр-им?

Анчах хăрхăм тăвас хӗрсем мар:
Пӗри — вӗри кăвар, тепри — нар.

Аслурамрин ҫивти астарать —
Сар хӯрине ҫити явăнать.

Вăтакасри вăрттăн йăл-кулсах
Пăхăнтарать мана тӗл пулсан.

Турикасри юрра тапратсан —
Ялта пӗр ҫын та ҫук ҫывракан.

Анаткасрин анратать ташши:
Те юс утти, те акăш ишши?

Ай-хай, ҫухатрăм-ҫке канлӗхе,
Ӳпкевӗм пур турра-пӯлӗхе:

Ма ман юратăва тăватта —
Тăват ҫынна — пӯрмен, тупата?

* * *

Урампа иртсе пыруçăн
Курăнайрĕ тухъя пуç.
Хăрах кантăкĕ яр-уçă,
Кăчăк туртрĕ кăвак куç.

Чӳречи умне пымарăм,
Илтмĕш пултăм чĕннине.
Уçă чикрĕм, юраттартăм
Кĕçĕн алăк кĕлине.

Çитмĕл пуслăх кĕмĕл ятăм
Симĕс атă кунчине.
Шӳт туса атта хывтартăм,
Укçа ӳкрĕ урайне.

«Туй кĕлечĕ мар-çке...» — терĕ
Кăвак куç кулкаласа,
Пĕчĕкçеççĕ хĕр минтерĕ
Çинелле пăхкаласа.

Чутлă-чутлă çивиттийĕ
Чут тумарĕ тамаша:
Сар хĕр салтрĕ чĕр çитти те,
Хам килмерĕм канаша.

Килессех те килмеллеччĕ,—
Ватсене сума сăвап:
Ашшĕ-амăш кĕтет евчĕ,
Юратать çураçăва.

* * *

Шурăмпуçпе вăрантăм ыйăхран,
Шарăлтатса авăтатчĕç автансем.
Аннеçĕм сырăнать иккен сурпан,
Чĕлĕм туртса ларать иккен аттем.

Мăнтарăнсем, ăш ыйхине татса,
Канаш тăваççĕ иккĕш ерипен:
«Хăш ывăла парар-ши салтака?
Май çук пĕрне памасăр пиллĕкрен.

Чи аслине парас — ачи нумай,
Иккĕмĕшне парас — мăшри усал,
Вăталăххи çуртра ăсли самай,
Ун хыççăнхи — авланнă çеç кăçал...

Парсан парар-тăр кĕçĕн ывăла,—
Тесе атте-анне шут турĕçĕ,—
Ăçта кайсан та каччă пуçпала
Хур пулмĕ тĕнчере вăл»,— терĕçĕ.

Вителĕке пĕркентĕм пуç çинчен,
Куççулĕме тытса чарап аран.
Нихçан та манăн шурăмпуçпелен
Вăранас мар-мĕн тутлă ыйхăран!

* * *

Ман тёмескен тăпри типсе çитсен,
Кăкшăмпалан, савниçĕм, кукленсем:
Куç пек тулли тултар ик сар курка,
Пĕрне ĕçсе пĕрне ӳпĕнтерсем.

Юпа сăри туса ĕлкĕрмесен —
Çăл шывĕпе, савниçĕм, пĕрĕхсем:
Хăрма ан парччĕ шăтнă курăка,
Çăвĕпелех вăл выртгăр ешерсе.

Сăра та, шыв та витĕр витмесен —
Куççулĕпе, савниçĕм, витерсем:
Епле, сана савса, эп урăха
Пулам-ха парăмлă çĕре кĕрсен?

* * *

Арăслан пек аттем пур:
Сухал айĕн çитĕнтерчĕ,
Çын сăмахĕ тивейместчĕ,
Ял элекĕ витейместчĕ.

Амăрткайăк аннем пур:
Пĕр çуначĕ çупăрларĕ,
Тепринпе вăл хупăрларĕ,
Йăвине сив çил ямарĕ.

Пĕрхĕт куçлă пиччем пур:
Пиллĕхне вăл çухатмарĕ,
Ман ура çине пусмарĕ,
Хăй те çынна пустармарĕ.

Илĕртӳллĕ инкем пур:
Хăй арки çинче ар турĕ,
Хăй хӳне мана вăл хупрĕ,
Пархатар кăтарттăр турă!

Акăш пӳллĕ аппам пур:
Асăнмалăх туйĕ пулчĕ,
Арчипе ярса чыс кӳчĕ,
Ачине ман ятлă хучĕ.

Шăркалчă пек шăллăм пур:
Улах тăрăх чăмрĕ-ишрĕ,
Урлă-пирлĕ сăмах илтрĕ,
Шалт шăл хушшинче вăл тытрĕ.

Йăпăртан пек йăмăк пур:
Тĕрсĕр енчĕк тыттармарĕ,
Кĕсъерен майăр татмарĕ,
Хĕр сăринчен хăвармарĕ.

Хурчăкапа тан хам пур:
Кунĕн-çĕрĕн юр юрларăм,
Пĕр туйран та эп юлмарăм,
Чуп туман хĕр хăвармарăм!

* * *

Хапха умне тайăлтăм,
Хапăл курки эп ĕçрĕм.

Кил картине тайăлтăм,
Килĕшӳ курки ĕçрĕм.

Пăлтăр умне тайăлтăм,
Пăлчав курки эп ĕçрĕм.

Пӳрте кĕтĕм, тайăлтăм,
Пӳрнĕ курка эп ĕçрĕм.

Сак халăхне тайăлтăм,
Савăш курки эп ĕçрĕм.

Такмакларăм, тайăлтăм,
Тав куркине эп ĕçрĕм.

Кĕрекене тайăлтăм,
Кĕрӳ курки эп ĕçрĕм.

Юр юрларăм, тайăлтăм,
Юрав курки эп ĕçрĕм.

Таш ташларăм, тайăлтăм,
Тăрлав курки эп ĕçрĕм.

Çулăх султăм, тайăлтăм,
Çул куркине эп ĕçрĕм.

* * *

Аслă масар-хăямат,
Утçăм кĕме хăяймасть.
Туй пуç лаши тур лаша
Кукалесе çĕр чавать:
Шăнкăрав шăнкăр тăвать,
Тенкисем чăнкăр тăвать.
Хĕр тантăша-ял-йыша
Кӳме çине çĕклерĕм,
Пĕркенчĕкне сирмерĕм,
Ватсен пилне куклетрĕм.

— Асаттеçĕм, асатте,
Манăн ырă асатте!
Ют çын ачи туйĕнче
Юс тир камсул тăхăнтăн,
Юр юрласа савăнтăн,
Таш ташласа ывăнтăн.
Ачун ачин туйĕччен
Тĕнĕсĕр пӳрт туянтăн,
Хура çĕрпе хуплантăн,
Юман юпа йăтайрăн.

Асаннеçĕм, асанне,
Манăн ырă асанне!

Ют çын ачин туйěнче
Юр пек сурпан сырăнтăн,
Кěмěл хушпу тăхăнтăн.
Хěвеле вăтантартăн.
Ачун ачин туйěччен
Питне пирпе витейрěн,
Çине çерем пěркейрěн,
Çăка юпа çěклейрěн.

Асаттеçěм, асатте!
Асаннеçěм, асанне!
Аркăр çинчи ачăра
Ара çитерейнě чух
Иксěр харăс пултăр çук,
Хурланать-çке манăн чун...
Çăмăл пултăр нӳр тăпра!
Асăнатăп, тайлатăп,
Тулли курка тăкатăп,
Пехилěре ыйтатăп.

* * *

Алла тытман шур ал тутри —
Савнийĕм пурччĕ ман,
Çума çыхман çут пиçиххи —
Савнийĕм пурччĕ ман,
Йĕке кĕмен йĕкĕрĕлче —
Савнийĕм пурччĕ ман,
Пĕр тăхăнман çĕн çĕрĕччĕ —
Савнийĕм пурччĕ ман,
Çип витĕрмен ахах пĕрчи —
Савнийĕм пурччĕ ман,
Хăлха тирмен алка ĕнчи —
Савнийĕм пурччĕ ман,
Мăя çакман тарай çуха —
Савнийĕм пурччĕ ман,
Пуçра пулман мерчен тухъя —
Савнийĕм пурччĕ ман,
Сĕркĕчлемен çĕн купăс пек
Савнийĕм пурччĕ ман,
Тута тивмен шăхличĕ пек
Савнийĕм пурччĕ ман,
Шур тутăрăм хуралчĕ-çке,
Пиççи лекмерĕ пилĕке,
Йĕкĕрĕлчем ман каталчĕ,
Ман кĕмĕл çĕррĕм таталчĕ,

Ахах пĕрчи çухалчĕ-çке,
Алка ĕнчи ванайрĕ-çке,
Тарай çухамçăм тапăлчĕ,
Тухъя мерченĕ таканчĕ,
Çĕн купăс çĕмĕрĕлчĕ-çке,
Шăхличĕм питĕрĕнчĕ-çке...
Пуянччĕ эп Пӳлĕхçĕрен,
Халь чухăн эп кĕлĕмçĕрен!

* * *

Юрлăп кăна, юрлăп, мĕн парăр?
Тарай енчĕк туса парăр-и,
Ăшне ăшă салам ярăр-и,
Тулне пурçăнпала тĕрлĕр-и,
Хĕррипеле мерчен тирĕр-и,
Çакки çумне çĕрĕ витрĕр-и?

Ташлăп кăна, ташлăп, мĕн парăр?
Сахъян пушмак сăрса парăр-и,
Пушмак ăшне пустав сарăр-и,
Тĕпне тĕве тирĕ хурăр-и,
Питне тӳме лартса тухăр-и,
Тӳмисене ĕнчĕ тупăр-и?

Купăсăма калăп, мĕн парăр?
Юр ай сăри ăсса парăр-и,
Юратупа хутăштарăр-и,
Хăла пылпа халлантарăр-и,
Симĕс симпе симлентерĕр-и,
Хул-çурăма хевте кӳртĕр-и?

* * *

Аттеçĕм ман Хусанăн хуçи мар,
Аннеçĕм Питĕрпурăн пики мар,
Эп хам Тилли, пуп хунă ят Çерук,
Ман пек такмакçă таврара тек çук!

* * *

Хăпартăм çӳллĕ ту çине,
Çаврăнтăм пăхрăм ял енне:
Ялти ватсем-мĕн хупахра,
Алси-калпакĕ саклатра.
Пуш кĕленчи умĕсенче,
Сенкер черкки аллисенче,
Чĕлĕмĕсем шăл хушшинче,
Тĕтĕмĕсем урайĕнче.
Пурак тĕпне шаккаççĕ те
Черкки çине пăхаççĕ-çке:
Еçмеллисем — пĕрре сыпма,
Туртмаллисем — пĕр сывлама.
Ан хуйхăрăр, ватсем, сĕре,
Тавăрăрах енчĕкĕре.
Калатăп эп, Тилли, сире:
Ним кӳмесессĕн те пире,
Патша эрех кӳрех тăрĕ,
Табак кимми килех тăрĕ.

* * *

Эй, эсир, чĕлĕмçĕсем,
Тĕнчери кĕлĕмçĕсем!
Хам та эпĕ чĕлĕмçĕ,
Тен, сиртен те кĕлĕмçĕ...
Нушине те курнă çав,
Пулчĕ пулĕ тĕрлинчен.
Пурăнар-ха пурнăçа
Йĕмтĕп çĕре перниччен!
Йĕмтĕп çĕре перĕнсен —
Тапрататпăр çĕнĕрен.

* * *

Усрав акăш пек савнийĕм пурччĕ,
Çамрăклах çĕре кĕрсе хур пулчĕ.
Ун Шур Атăл хăви пек пӳнe
Хурт-кăпшанкă çисе ячĕ пулĕ,
Хура пурçăн пек кăтра çӳçне
Пăрчăкан йăва çаврайрĕ пулĕ.

Ах, савниçĕм! Яла ят ямарăм,
Хĕвĕмри пĕтев пекех упрарăм.
Эп пĕлменччĕ-çке ку иккенне,
Эс кун-çулсăр пуласса пĕлменччĕ:
Туйсăр-хӳсĕр вилнĕ хĕрсене
Эсрел арăмĕ пулать, тееççĕ.

Çавра çил çĕклентĕр, çаврăнайтăр,
Урăм-сурăм тăвăл тăвăллантăр,
Куç курми хура çанталăкпа
Масар пусăхне вĕçтерсе кайтăр,
Йăванайтăр сан çинчи юпа,
Тăкăсах тăпру сан хăлтăлантăр.

Çĕлен пул та шуса тух, савниçĕм,
Чĕкеç пул та вĕçсе кил, савниçĕм,
Чӳрече хашакĕ çине лар,
Манăн хурлăхлă юрра илтсемччĕ,
Çунакан чуна эс лăплантар,
Çунату айне савса илсемччĕ!

* * *

Турта тулли тур ут — тăпăлкка,
Чăмăртанса юртса çул илет.
Пĕччен пĕр пуç, юлсан тăлăха,
Шухăшласа ларса йăл илет.

Ай-хай тăман аллать, шав аллать,
Çул хыттине хуплать кăпăш юр.
Чĕрем ĕмĕтленет малалла,
Савăнăçа хуплать тăтăш хур.

Шăнкăрах та шăнкăр шăнкăрав,
Мĕскер тесе шăнкăртатать-ши?
Итлеп, итлетĕп те ăнкарап:
Тĕлĕнтерет тĕнче тамаши!

Ай-хай çулсем-йĕрсем такăр мар,
Ланккамана лакан миçе хут.
Çапах никам калла таврăнман,
Кашнин хăйне çуна, хăйне ут.

Кашнин хăй çемĕллĕ шăнкăрав
Çул кĕскетсе пырать виртлесе —
Хура шăйăрлана çав янрав
Анса çухаличчен илтмессе...

* * *

Куккук! Куккук! — Вăрман янрать:
Çăки çупать, туйри ташлать,
Тупăлхисем — туй ачисем,
Хурăнĕсем — хĕр çумĕсем,
Çĕмĕрчĕсем — çĕнĕ çынсем.

Куккук! Куккук! — Тилли килет,
Йыттисене ертсе килет:
Вĕшле йытти вĕçсе пырать,
Лĕрке йытти вĕрсе пырать,
Акар йытти ашса пырать.

Куккук! Куккук! Чăнне кала:
Миçе çул эп пурăнмалла?
Миçе мулкач макăртмалла,
Миçе тукмак тулатмалла,
Миçе упа улатмалла?

Куккук! — Пĕр çул. Куккук! —
Ик çул.
Куккук! Куккук!.. Тем чул,
тем чул...
Ытарайми çут тĕнчеме
Сăлтавăм çук ӳпкелеме,
Вăй-халăм çук çĕре кĕме.

* * *

Çӗр палӑрми юр ҫӑвать,
Ҫур килет те юхтарать,—
Ҫамрӑк ӗмӗр ҫавӑн пек.

Йывӑҫ ҫине пас тытать,
Ҫил тухать те вӗҫтерет,
Ҫамрӑк ӗмӗр ҫавӑн пек.

Çӗрле сывлӑм шыв ӳкет,
Ирхи хӗвел типӗтет,
Ҫамрӑк ӗмӗр ҫавӑн пек.

Выльӑр-кулӑр ытларах! —
Тетӗп эп, Тилли, вара,—
Урӑх пулмӑр ҫамрӑк, теп.

* * *

Ай-хай юрлас-юрлас юррӑм пур,
Кӑмӑлӑма хуплать хура хур.
Кӑмӑл уҫҫи —
Хӑмла йӳҫҫи:
Тӗрӗслесем, Тилли, сыпса кур...

* * *

Юрла кăна, юрла, теетĕр те,
Чăн-чăн юррин ăсти эп марччĕ-çке;
Пĕр пикенсе юрла пуçласан —
Каях та мар чăн-чăн ăстаран.

Сакăр вунă сакăр, ай, сăввăм пур,
Тăхăр вунă тăхăр такмакăм пур;
Умăрсене сарса хурам-шим,
Суйла кăна, суйла юрлам-шим?

Кĕрекĕрсем сарă, пылăр хăла,
Юрлайăп-ши чипер ăсăмпала?
Пысăк чысăрсене пăсайсан,
Мĕн калăр-ши эсир, эп кайсан?

Йĕкĕрлĕ те курка, хĕрри чĕнтĕр,
Çине-çинех, тăванăрсем, сĕнтĕр.
Ӳсĕр пуçăм урă уйлинччĕ,
Еçни-çини сĕт кӳл пулинччĕ.

Эппин, шав та тăвар, кĕр те тăвар,
Еçер-çиер, тăван, выляр-кулар!
Никам та ик ĕмĕр пурăнман,
Никам та çук тĕнче тытакан.

* * *

Çĕр те çитмĕл çăка эп касрăм,
Çĕр чăтайми шур пӳрт эп лартрăм.
Пусса улăхмалли пусмине
Хĕрĕх чике пустав сартартăм.
Тытса улăхмалли тыткине
Пилĕк чике пĕлис сăртартăм.
Алăк алпастисен кăмăлне —
Тăпсисене йĕсрен тутартăм,
Пăхăр пăтапала çаптартăм,
Хăлăпсене кĕмĕл хуртартăм.
Кил-вут хуçи хĕрт-сурт кăмăлне —
Вун икĕ кăмака кăлартăм
(Ăшшисене шала хăварсам,
Йӳççисене — тула, хĕрт-суртăм!)
Хĕвелпеле уйăх кăмăлне —
Хĕрĕх те пĕр кантăк кастартăм,
Куç шармалла чаршав картартăм,
Хĕрĕх те пĕр читлĕх çактартăм,
Килен-каян хăна кăмăлне —
Хĕрĕх те пĕр куккук яртартăм:
Сава тăран килес кунхине
Саркаланса куккук авăтать,
Палла тăран килес кунхине
Пăркаланса куккук авăтать,

Хам тăвансем килес кунхине
Харăслатса куккук авăтать,
Ытах ютсем килес кунхине
Ылмаш-ылмаш куккук авăтать;
Каччă-тейĕш килес кунхине
Каçса кайса куккук авăтать,
Хĕри-пăраç килес кунхине
Хĕрсе кайса куккук авăтать,
Ача-пăча килес кунхине
Ахăлтатса куккук авăтать,
Хуçи юптарнине сиссенех —
Çак юрă пек тăпах чарăнать.

* * *

Тарӑн шыва антӑм ӑшӑх тесе,
Мерчен сапакӗсем ӑсӑп тесе.
Мерчен сапакӗсем пулмарӗ,
Юхан юшкӑнчӑксем пулайрӗ.

Эп пурнӑҫ пурӑнма ансат тесе,
Ыр ҫын шутне кӗме часах тесе.
Ыр ҫын ятне илтни пулмарӗ,
Нушам хыҫран пӗр шит юлмарӗ.

* * *

Хӑй чиккине хӗртсе кӑвар сӳнет,
Ан чикӗр урӑх хурӑн хӑййӑра:
Чӳречӗр кӗленчи сенкерленет,
Кӗрхи автан сасси янах ярать.

Кӗрекери ватсем, илтместӗр-е:
Мӗскер калать-ши ҫав автан сире?
«Кун вырӑнне татах ак кун килет,
Кун мар иртет — ҫын ӗмӗрӗ иртет».

Тӗпел кукринчисем, сире тата,
Сире мӗскер калать-ши ҫав автан?
«Еҫчен инкемӗр сырӑнать сурпан,
Эсир — ӗнер сырӑннинех салтман».

Улах ухтарӑшсем, сар каччӑсем,
Сире автан мӗн тет-ха, итлӗрсем:
«Тул ҫутӑлать, киле таврӑнмалла,
Савни ятне ан ярӑрччӗ яла».

Хӗр сӑринчи хӗр-пикесем, тавсси!
Сире мӗн пӗлтерет автан сасси?

«Ула ĕне ĕçесшĕн картара,
Кĕвентĕре ыталăр хăвăртрах».

Сентре çинчи пепекĕмсем, сире
Мĕн тет çав кикрикук, илтетĕр-е?
«Сар инкĕр час икерчĕ пĕçерет,
Вут уççинче çиме ансамăр»,— тет.

* * *

Кăмăлăрсем çемçе — кăпăк пекех,
Чĕлхĕр-çăварăрсем чĕкеç пекех.
Тав куркине ĕçрĕм эп тĕппи,
Çул куркине епле ĕçĕп-ши?

* * *

Вăр-çавракка кăшкар пек уçланка
Кăвайт чĕртсе ярам пĕр авăка.

Выртах, Сарпай, сыхла эс уртмаха,
Çитет унта пире паянлăха.

Вирт каясран йĕри-тавра алтам,
Алтам та ик юман шалча çапам.

Ялккасăмăн тӳпи пек çеç хуран
Çакса ярам эп каврăç каштаран.

Çăка чечекĕн чейĕ вĕриччен
Еçсем татах та пирĕн пур иккен:

Парка тĕпеклĕ кăвакал ами
Выртать уртмахăма шăнăçайми,

Ана, тĕкне татса, ĕнтетĕп эп,
Тăвар сапса, хупах çулçисемпе

Чĕркетĕп те, кăвар ăшне варса,
Ашаласа илеп пăслантарса.

Сĕткенлĕ кайăк ашĕ кĕркунне!
Çуне тумлатрăм çăкăрăм çине.

Çунса хĕрелнĕ кăчăр тукмакне
Кышлатăп, çавăрса енчен енне.

Пуçне шыва паратăп: перекет!
Килес çула тата çĕр пуç ĕрчет!

Пыршисемпе, шăмми-шаккисемпе
Чӳклет ман анчăкăм хăй пĕлнĕ пек.

Хĕвел анса килет. Тӳлек тĕнче.
Çура пылĕпелен ĕçетĕп чей.

Тĕттĕмленет. Сарпай пăхать куçран.
Ун шухăшне чухлатăп эп аван:

«Атя, хуçам, атя — тет вăл мана,—
Вĕçе пуçларĕç, тыт эс пăшална...»

Кĕрсе ларатăп эп хăмăшлăха,
Тăнлатăп ĕмĕрхи шăпăртлăха.

«Нарт!» тет пĕри, «нарт-нарт!» тăвать
тепри...
Хускалнă Çарăмсан, этсемĕри!

Ак саккăрăн, шап-шур мăйлăскерсем,
Ман пуç тĕлнех çывхарчĕçĕ вĕçсе.

Кĕр-рĕс! — Тăваттăн ӳкрĕç месерле.
Сарпай пăшал сассипеле пĕрле

Валт ыткӑнса тухать хӑмӑшлӑхран,
Ишет, чӑмать ӳркевсӗр тарҫӑм ман...

Тупӑшӑма чикетӗп уртмаха.
Еметсӗрленмӗп урӑх, ҫитӗ-ха.

Атя, силлен, юлташӑм, таврӑнар.
Рахмат сана, чӗлхесӗр янавар!

Ыран татах кун килӗ, сыв пулсан.
Рахмат сана, усламлӑ Ҫарӑмсан!

* * *

Елĕк чухне эп хам ĕлĕкчĕ,
Ман пуçăмра сăсар çĕлĕкчĕ,
Çĕлĕкĕмĕн тӳпи — чăн тарай,
Чи тăрринчи çӳçи кĕмĕлччĕ.

Елĕк чухне эп хам ĕлĕкчĕ,
Хура тăлăпăмçăм йӳлеччĕ,
Пилĕкĕмре кĕрен пиçиххи,
Кăкăр ăшши сарă тилĕччĕ.

Елĕк чухне эп хам ĕлĕкчĕ,
Тĕве çăмĕн алсипелеччĕ,
Айра çуна, умра урхамах,
Алра чăмăр чĕн тилхепеччĕ.

Елĕк чухне эп хам ĕлĕкчĕ,
Çĕр çухрăмра та ман пĕлĕшчĕ,
Ваттипеле ват çын, яшпа яш,
Ăçта та ман сăмах тĕллĕччĕ.

Елĕк чухне эп хам ĕлĕкчĕ,
Пăшатан пек куçлă йĕкĕтчĕ,
Кача пӳрнем тулли çĕрĕччĕ,
Кăчăк туртмассерен пĕр хĕрччĕ.

Ĕлĕк чухне эп хам ĕлĕкчĕ,
Телей йĕкĕр енчĕкпелеччĕ...
Шухăшлаĕа пăхсан — пурнăç мар,
Çывармасăр курнă тĕлĕкчĕ.

* * *

Шăнкăр кăна шăнкăр шыв юхать,
Авăр тĕлне ҫитсен ҫавранать.
Тӳлек кăна чĕрем, лăпкă чун
Ҫын сăмахне илтсен тапранать.

Вăшăл кăна вăшăл ҫил вĕрет,
Ман ҫӳҫ пайăркине вĕҫтерет.
Ҫӳҫ пайăрки ҫӳҫе ҫулҫи мар,
Вĕҫтерсем-и хуйха чĕререн.

Кикак кăна кикак хур сасси,
Элле анас ҫĕрĕ шурлăх-ши?
Ăшчик вăркать, кăмăл хуҫăлать,
Элле пурнас кунсем хурлăх-ши?

Элле тивлет тивмен-ши мана?
Элле йывăр кили самана?
Юрла, Тилли, юрла юрруна,
Пĕр ҫавăнта йăпанăҫ сана.

* * *

Ай-хай вăрман кашлать, вăрман кашлать,
Турат çумне турат хушас тет пуль.
Ман кăмăл хуçăлать, чун хурланать,
Хурлăхăма çумашкăн çук куççуль.

Ай-хай çил çаврăнать, çил çаврăнать,
Сар çулçă чалăшшăн вĕçсе анать.
Шухăшламан чухне шухăшăм çук,
Шухăшласассăн пуçăм çаврăнать.

Ай-хай пĕлĕт юхать, пĕлĕт юхать
Ман пуçăмри çаврака çĕлĕк пек.
Иртет иккен кун-çул, асра юлать
Каç сывăрса тĕлленнĕ тĕлĕк пек.

* * *

Тилли кăна Тилли тееççĕ,
Тилли мĕн иккенне пĕлмеççĕ,—
Тил-тил, шарт-шарт ташша янисем
Тилли пулмасть-ха вăл, нянисем!

Хусан кăна Хусан тееççĕ,
Хусан Кирушĕ ман аттеçĕм:
Хула хуçи пулма мул çитмен,
Хуçа тарçи пулма хур витмен.

Майра кăна майра тееçĕ,
Майра-пике тăван аннеçĕм:
Сĕтпе шыва кӳртнĕ пулнă, тет,
Катан пирпе тытнă пулнă, тет,
Пĕрех пике Хусан хулинче!

* * *

Купăсăма калас — шикленеп:
Хĕлĕхĕнчен хĕлхем тухмĕ-ши,
Сĕрен сĕркĕчĕме хыпмĕ-ши,
Сухалăма ярса илмĕ-ши?

Юррăмçăма юрлас — шикленеп:
Çунат çумне çунат хушмĕ-ши,
Вашлаттарса вĕçсе ухмĕ-ши,
Чĕрем тӳпи лутра пулмĕ-ши?

Ташшăмçăма ташлас — шикленеп:
Тавра чăваш тапса сикмĕ-ши,
Çĕр çĕмрĕлсе ванса пĕтмĕ-ши,
Çичĕ ютсен çилли çитмĕ-ши?

* * *

Ут утланса кустартăм улăха,
Хурăнлăхра пытартăм хурлăха.
Мĕн пур хуйха-суйха пуçра тытсан,
Тухма пулать иккен тăр ухмаха.

Мăн Çарăмсан тăрăх çӳре-çӳре
Пĕр ывăçă хăмла та çук хӳре.
Ку тарана çитсе, ватта супса,
Ним пиллеме, туссем, ман çук сире.

Тĕрлех иккен тĕнче, çĕр çавраки,
Ĕмĕр сакки тени, ай, сарлака.
Çак пурнăç тупсăмне тупас тесе
Пĕркеленсе хытать иккен çамка.

* * *

Калăр-ха мана, калăр:
Çак пирĕн куç куран тӳпе,
Çак ӳпĕнтернĕ кăвак алтăр —
Хĕрри вара вăл е тĕпех?
Калăр-ха мана, калăр.

Çак ылтăн çип çăмхи пек капăр
Ытарайми сар хĕвеле
Кам ывăтса ярса пĕр тапхăр
Кустарнă вĕççĕр йĕрпеле?
Калăр-ха мана, калăр.

Хăçан, ăçтан, мĕнле вăй-хал-тăр
Çак ман кукшам пек уйăха,
Нухрат-çăлтăрсене, çак хамăр
Çĕре те чăмăртанă-ха?
Калăр-ха мана, калăр!

* * *

Ниçта ярса пусма аптратăн:
Çыр хĕрринчи сар хăйăр та,
Ана çинчи хура тăпра та
Пулман-ши чунлă, тупата?

Сарайăмра çапатăп кирпĕч,
Сасартăк тăм калать, илтеп:
«Хуллентерех. Юна ан сирпĕт.
Эп — эсчĕ, эсĕ пулăн — эп».

Лаçра сăра сĕретĕп эпĕ
Чипер тыткаллă сар чăма.
Çичче çитсен куркам хисепĕ,
Чăм тус чĕлхе кăларчĕ ман:

«Илемлĕ хĕрччĕ эпĕ,— терĕ,—
Мĕскершĕн халь ман алă тăм?
Ах, эп сана, ватсупнăскерĕм,
Ытарайми ыталăттăм!»

Эп Атăл хĕрринче ларатăп
Ытахальтен чул суйласа.
Пĕрне илесшĕнччĕ — сасартăк
Чул муклашки кăларчĕ сас:

«Эп Улӑп пек ҫарпуҫ чӗриччӗ,
Эп пултӑм курӑк, пыл, упа...
Хӑвар мана, этем, ан тивччӗ,
Уттарччӗ ху сукмакупа!»

* * *

И утар-и, утар-и,
Утар çулне тухар-и,
Тилли пиччĕр кукшине
Уçланкăра курар-и.

Тилли пиччĕр мĕн ĕçлет?
Хурт çури вăл тирпейлет:
Сĕрме купăс каласа
Сыртарасшăн хĕтленет.

Хурт çури нăрлать, нăрлать,
Хурама çине сырать.
Тилли пиччĕр алтăрпа
Пĕрнине ăсса ярать.

Улт уралла янавар,
Янавар та айван мар:
Пит çинче упаленет —
Сăхса хур пуласшăн мар.

Хăмăркка пĕчĕк ĕçчен
Хуçине паллать иккен,
Пыл тăвас тет хăвăртрах
Çăкан шурă çеçкинчен.

Тилли пиччĕр мĕн тăвать?
Пыл тататъ, карас пăрать,
Çичĕ хут симленĕ сим
Хăнисем умне лартать.

Тавтапуç çĕр сĕткенне —
Пыл туса кӳрекене.
Тавтапуç çак çут тĕнчен
Иксĕлми перекетне.

Тав сире, хăна-вĕрле!
Пурăнар ялан пĕрле.
Килес çул та çакнашкал,
Кĕрекемĕр, кĕр-кĕрле!

* * *

Хурал пўртне кĕтĕм хурланса,
Хура халăх ўкнĕ урайне:
Кантур таврашсене йăлăнса
Чакарттарас тет кулăнайне.

Кăлавапа ялпус тĕпелте,
Пашалу пек метал умсенче.
Çĕмĕрт хулли вырттать пĕр кĕлте,
Тиек çырать сĕтел хушшинче.

Ай-хай ырашăм çук, туллăм çук,
Маккарьяран килнĕ мулăм çук,
Тараканран ытла ылтăн çук,
Пул хуппинчен ытла кĕмĕл çук.

Тăсăлтăм та вырттрăм урайне,
Сухалăмпа шăлтăм тусанне.
Çĕмĕрт хулă касрĕ çурăма,
Йывăр шухăш хĕсрĕ пуçăма.

Тĕнче тытан чăнах пур пулсан,
Курать-ши вăл çакна куçĕпе?
Епле-ха çын, çыннах парăнса,
Çак мăшкăла чĕмсĕр тўсĕп эп?

* * *

Тахçантанпах тытман такмака
Тапратмаллах-шим пĕр авăка?
Никрут кĕвви,
Сасси-чĕвви
Хускатрĕçех Тилли-салтака.

Патшамăрăн патвар аллинче
Пурăнаттăм кĕçех аллăччен.
Пăхма йăваш,
Шалта — чăваш,
Чăтрăм сухал чăпарланиччен.

Хăвармарăм халăх кăмăлне,
Хăвартăм-çке пăртак хамăнне:
Эп киличчен
Тантăшăмсен
Ачи-пăчи çитнĕ хăйсене.

Мăн-мăн шыва кĕсмен султăм эп,
Çӳл-çӳл тусем çинче пултăм эп,
Инçе-инçе
Капкас енче
Нихçан кайми юрсем куртăм эп.

Кирек ăçта çитсен те иккен
Нушаллă чун нумай ырринчен.
Çут тĕнчере
Хĕвел пĕрре,
Ăшши пĕр пек тивмест ĕмĕртен.

Инкекпелен синкек—пĕр тĕкел,
Çĕртипелен çӳлтин пĕр мехел:
Парсан паратъ,
Чарсан чаратъ,
Пĕрне—мăйăр, пĕрне — йӳç икел...

Тахçантанпах тытман такмака
Тапратмаллахчĕ пĕр авăка:
Никрут кĕвви,
Сасси-чĕвви
Хускатрĕçех Тилли-салтака,

* * *

Еметĕмсем чĕлĕм тĕтĕмĕпе
Вĕçсе пĕтрĕç сĕвем-сĕвемĕпе,
Шанчăкăмсем курка тĕпне путса
Хупланчĕçĕ шăтман пĕрчĕсем пек.

Ахаллĕн мар калана авалтан:
Турра шансан турат çине тăрнан,
Çынна шансан ху çылăхна хушан,
Кама, мĕне шанас-ха ĕнтĕ ман?

Тарçа шанан хăрах куçпа юлать,
Мăшра шанан сĕм суккăр та
пулать.
Шан йыттуна: ачаш чĕлхипелен
Сан аллуна ултавсăр вăл çулать.

Атя, Сарпай, çемçе юра ашар,
Атя, тăват уралла янавар,
Асан тытса ăшалăпăр та ак —
Хуйхи-суйхи саланĕ чăл та пар!

* * *

Усрав сар кайăк пек юррăм пур,
Ун читлĕхне уçас шутăм пур,
Кайăкăма уçса кăларсан,
Кайран пăшăрханас хурăм пур:

Кам хулпуççи çине ларĕ-ши
Сассипеле савăнтарĕ-ши?
Хуйхи тĕлне пулсан — йăпатса
Çуначĕпе шăлса ярĕ-ши?

Авал пире — ах, тур! — теетчĕç,
Мур-шар тивми матур, теетчĕç,
Шыва ӳксен, вута вăрăнсан
Сарăплами сатур, теетчĕç.

Ку чух эпир кăсăк пулман-ши?
Сухалсене сухăр тулман-ши?
Кăмăл килениччен пурăнса
Макăсмапа мухмăрламан-ши?

Кĕрекерен тухсах ӳкиччен,
Çăпатана кутăн сыриччен
Асаттесем патне ăсансан
Авантарах пулатчĕ-и, тен.

«Ěххěм» темесěрех кăнасчě,
Чěлěм сӳничченӗх шăнасчě,
Унтан ытла — сире каласан —
Чěлхем йăнăшиччен йăнасчě.

Тап-такăрах — ыр ут такăнать,
Пěр тулхăрать — татах çул тытать.
Начар лашан, пěрре такăнсан,
Таканěсем шăлтах тăпăлать.

Хăш чух юр ăстиех йăнăшать,
Пуçне ухса илет — майлашать.
Хăлха çěртекенсем йăнăшсан,
Аса килет вара хай лаша...

Çанталăк çутă мар, çул хура,
Çил-тăманра маяк кам курать?
Пилеш туя çине таянса
Хыпаласа пыран кěрт-юра.

Ěмěтленет этем малалла,
Ăрăскалсем юлать каялла.
Тěнче вăлттаринче вăлтăнсан,
Тата ăçта шăпа ямалла?

Саманисем сакăр тěслě-çке,
Саламатсем виçě вěçлě-çке,
Пěри кăна пире çапăнсан,—
Аюй! — виççěшěпех лекет-çке.

Тӳре-шара ялан тӳрě, тет,
Çěрте патша, çӳлте турă, тет,
Тилли кăна паян ăнсăртран
«Йăлтах вěсем — этем мурě!» тет.

* * *

Улшуçăсем, ай, ут улăштарассĕ,
Улма-чăпар утсем тăпăртатассĕ,
Яш урхамах пек çамрăк ĕмĕре
Аса илсен — куççуль шăпăртатать-çке.

Çăмăлттайсем, ай, çĕлĕк çавăрассĕ,
Йӳн тавара хакла, ай, кăларассĕ.
Иртсе çухалнă çамрăк ĕмĕрсем —
Ним хак парса илме халь çук тавар-çке.

Пусма сутуçисем пусма анлассĕ,
Аллисенче сар аршăнсем выляссĕ.
Кирек ăçта кайсан та тĕнчере —
Пĕр аршăнра тăвата шит, тăванçăм!

Китайĕсем камит, ай, кăтартассĕ,
Пăлат çĕççипелен, ай, куç пăвассĕ.
Эп ыртăм пурнăç камитне курса,
Ķансассăн та пырать мана пăртакçă.

* * *

Карти-карти, ай, кайăк-хур иртет,
Ӳре кайăк-хурне, ай, вăй килет.
Хĕр-ывăл ӳстерсе, ватта супса,
Ача ăспех çĕре кĕме тивет.

Çуралнă эпĕ çарамас иккен,
Ăсанăп эп шап-шур кĕпепелен.
Ан сун мана эс, пуп, леш тĕнчесем,
Ку тĕнчере те ывăннă эп, тен...

* * *

Ай-хай ӗҫмӗттӗм эп, ӗҫмӗттӗм,
Мухмӑра шӳрпе пӗҫермӗттӗм:
Ӳсӗрле ман пуҫӑм ыратать,
Урӑлла хӗвел те сӗм-тӗттӗм.

Урӑях уҫланкӑран иртсен,
Ӳсӗр чӑтлӑхне пытаниччен —
Х ӗ р ӗ н к ӗ текен пӗр кайӑк пур,
Пӑхтарать ялан хӑй куҫӗнчен.

Вара эпӗ ҫамрӑк, эп пуян,
Таракан та ылтӑн вара ман,
Хамшӑн хам эп турӑ та патша,
Тӗнче тикӗс, ҫутҫанталӑк тан.

Ес, Тилли, ӗҫ,— тетӗп эп вара,—
Пӗр курка сим пыл, тепре сӑра,
«Ӑсӑма ӗҫмен-ши-ха?» тесе
Хушӑран юрла пӗрер ҫавра.

* * *

Ай-хай юрлассăм пур та, çук ман сассăм,
Кун-çул ик хут килмест пуль çав, туссем.
Кун-çул чăнах ик хут килес пулсассăн—
Иç вилмĕччĕçĕ ырă улпутсем.

Хĕвел кăнтăрларан пĕр сулăнсан —
Каç пулнăнах вара, каç пулнăнах...
Пурне те пуçтарса шухăшласан —
Иртнех, иртнех, геетĕн кун-çулна.

Чӳречерен кĕрет шуралнă шуçăм,
Тĕлĕреймерĕм те çĕр кĕскетсе.
Ан хуйхăрсамччĕ, пуçăм, ан йĕр, куçăм,—
Çуралнисем те кăлăх-çке,— тесе.

* * *

Итле эс, ыр хĕрт-сурт, вучах ăсти!
Паратăп эп сана пăри пăтти...
Кил-вутăма сыхла, ан сӳнтерсем,
Кăвар çумне кăвар эс ту.
Çĕрле хыпаласа ан çӳресем,
Карчăкăма ан тив, асту!

* * *

Ватăлатпăр пуль, Сарпайăм!
Санăн та куç хупанки
Тăртанса ĕнтĕ сархайнă,
Ман юратнă çум çакки!

Ĕлĕкхи хевтӳ ăçта-ши?
Шăпăрт сасă вăрмантан
Илтĕнсен те — хурт карташĕ
Ян янратчĕ санпалан.

Шантарасшăн та юрасшăн —
Эс мана курмассерен
Тăрăххăн сиксе ачашшăн
Чуп тăваттăн питĕмрен.

Хирпеле эпир пыруçăн
Эс, хавассăн хамлатса,
Путене е карăш хыççăн
Ыткăнаттăн алхасса.

Халь эс лăпкă. Салхулантăн.
Васкамасăр, ерипе
Хӳрӳне суллакалатăн
Кив сехет ывăси пек.

Пĕр-пĕрне аван чухлатпăр:
Аслă куçусемпелен
Ман куçран пăхса хăш тапхăр
Тем калас пек тинкерен.

Кам пĕлет, тен, эс калан-тăр:
«Вилме маннă ку старик!
Пăшалне курми пулсан та,
Куян хыççăн кустари?..»

Савнă йыттăм, вата тарçăм!
Пурнăç — йĕлтĕр йĕрĕ пек.
Шăвăнатпăр-ха пăртакçă
Аслă çулăн хĕррипе.

Аслă çул тăрăх иртеççĕ
Сумлă-муллă упуссем,
Труйккăпа вирхĕнтереççĕ
Хăнтăр тумлă улпутсем.

Эпĕр çĕлĕк те илместпĕр!
Кутсăр-пуççăр тăманта
Çав-çавах питĕрĕнет йĕр —
Йĕлтĕрĕн те, труйккăн та.

Урăм-сурăм тăвăл-вилĕм,—
Ир-и, каç-и,— вăл пĕрре
Капланса хускалĕ, килĕ
Шăлса лартĕ пур йĕре.

Униччен шăватпăр халĕ
Харпăр хамăр халпалан.
Таçта йĕрĕмĕр çухалĕ,
Таçтан килĕ сăлпăран?

Сар Сарпайăм! Иккĕн эпĕр
Йĕкĕрлешнĕ йĕлтĕр пек.
Хăрахшар шăва пĕлместпĕр
Пурнăç хирĕн кĕрчĕпе.

Эс манран малтан вилсессĕн,
Тирӳнтен уртмах туса,
Çакса çӳрĕп эп тирпейлĕн,
Кăвакал-ăсан хурса.

Хам малтан кăнас пулсассăн,
Пур йытта вĕчĕхтерме,
Хушăп сан майна çакмашкăн
Ĕнчĕ куçлă çĕррĕме.

Юрт вара эс куян хыççăн,
Куян пуç кышланă чух
Асăнса ула та хыттăн —
Çавă пултăр ман учук!

* * *

Чие тымарĕнчен пĕр чĕлĕм турăм,
Кăпчанкăран эп аврăм чăпăкне,
Савăнăçпа та хуйхăпа та туртрăм,
Сисмерĕм те кун-çулăм иртнине.

Çăка çăпанĕнчен эп алтăр алтрăм,
Шăтăкласа тĕрлерĕм аврине,
Сирсе сирĕлейми сим пыл тултартăм,
Сисмерĕм те кун-çулăм иртнине.

Вĕренерен эп купăс ăсталарăм,
Хĕр пилĕкĕ пек турăмваррине,
Пĕр савăнса, пĕр хурланса каларăм —
Сисмерĕм те кун-çулăм иртнине.

* * *

Пĕчĕк çеç тăваткăл куçкĕски,
Тума пĕлнĕ те иккен ăсти!
Ир тăрсассăн та тытса пăхаттăм,
Каç выртусăн та тытса пăхаттăм,
Астумарăм, тантăшăм, туймарăм:
Нар пек хĕрлĕ питĕм пĕтĕмпех
Пĕркеленнĕ кайнă пĕлĕм пек.

Урхамах та пуçлă йĕс тура
Пиçиххи çинчехчĕ ман çумра.
Ир тăрсассăн та пуçа тураттăм,
Каç выртусăн та пуçа тураттăм,
Астумарăм, тантăшăм, туймарăм:
Пăрçа лавĕ евĕр çӳçĕмпе
Кукшаланнă юлнă йĕтем пек.

Ик кашта шур чăххăм пурччĕ ман,
Вăтăр икĕ шăлăм пурччĕ ман.
Пăтавкка тулла çыртса йăтаттăм,
Çĕнĕ сӳс тăлла çыртса тататтăм,
Астумарăм, тантăшăм, туймарăм:
Хавшаса каяйнă каштамсем,
Вĕçнĕ аннă шурă чăххăмсем.

Пăсташа тавран куç пурччĕ ман,
Пăхаймастчĕ куçăмран тăшман.
Тинкерсессĕн йывăça хăртаттăм,
Лашама виç çухрăмран паллаттăм,
Кăнтăрла та çăлтăр эп кураттăм.
Шел, вилсен сая каять, мăнтарăн:
Куçăм халь те витĕр çивчĕ ман,
Кама эп пиллем-ши куçăма?

* * *

Ни Киремет, ни Пӳлĕх, ни Хăрпан
Мана хăтараймарĕç ватлăхран.
Кун-çул вĕçне тухатăп эп пĕччен,
Чун сивĕнчĕ пур ырă-усалтан.

Чӳклерĕм чӳк эп, тытрăм ураса,
Пĕтертĕм сум, пĕр puслăх упраса,
Анчах уйăраймарăм халиччен
Турăшпалан пăрахăç турпаса.

Эп куртăм хĕвеле те уйăха,
Эп пĕлтĕм пурлăха та çуклăха.
Мĕскершĕн ман тата юлашкинчен
Чун вăранчĕ çак пысăк хурлăха?

Çуралнă эп çут тĕнчене — рахмат,
Йĕр тунă эп çак çĕр çине — рахмат.
Мĕскершĕн эп, йăлт хăнăхса çитсен,
Пурне те тивĕç харăс пăрахма?

Тĕнче манпа пуйирим ĕнтĕ? — Ай-хай...
Ман хыççăн вăл юра ерим? — Ай-хай...
Мĕн-ма — тăпра кăмпи — эп çĕнĕрен
Тăпра пулмашкăн тивĕç, калăр-ха?

* * *

Ăрăмçăсем ăрăм тунипелен
Вăрăмлатаймĕç ман ĕмĕрĕме.
Асамçăсем асам суннипелен
Аслăлатаймĕç хĕсĕк чĕреме.

Пуп таврашсем пруçвер кăларнипе
Пурĕ пĕрех эп иккĕ пурнас çук.
Мулла шăрçа суса ухăтнипе
Мул хушмĕ ман тустарăннă кун-çул...

Тытам-ха эп сĕрме купăсăма,
Сĕрем-ха эп — сирем шухăшăма.

Шур старикрен тăвам эп кĕрнӳкер,
Кинемейрен тăвам тухъяллă хĕр.

Хĕрĕсене хĕрхи пек вĕçтерем,
Каччисене кисип пек сиктерем.

Ыр курăр, ял-йышсем, хам пур чухне,
Мансамăр пĕр самант пурне-çукне.

Ăçтан пĕлес: тен, эп çĕре кĕрсен,
Вăййи-кулли те пĕтĕ Сиктĕрмен...

* * *

Купăсăмçăм тăвата хĕлĕхрен.
Çак çутçанталăкăн тăвата ен.
Эсир тăваттăн пĕр тăван иккен,
Ывăлăмсем, мĕскер сире пиллем?

Çурхатпалан ĕçсессĕн те çитет,
Пӳрнескепе ĕçсессĕн те пĕтет,
Пĕрле пурăннине мĕскер çитет?
Кала-ха, аслă ывăлăм, итлем.

Иккĕленсе пуçне пĕшкĕртекен —
Ман иккĕмĕш ывăлăмçăм иккен.
Ан иккĕлен: ик юплĕ сенĕке
Пĕрер кĕлтех тиреççĕ, ху пĕлен.

Вăтанăçлăн курка тыттаракан
Вăталăх ывăл мар-ши çавă ман?
Вăта пӳрне — чи вăрăмми, ан ман,
Анчах пĕччен ăна та вăй килет.

Ик хăлхаран тытса чуп тăвакан
Вăл кĕçĕн кĕрнӳкерĕм мар-ши ман?
Ăру асси, ачаш кăна айван,
Пуçу çине çăвăнтăрах телей!

* * *

Ан макăрăр, кил-йышă, маншăн,
Ан макăрăр, тăван-пĕтен,
Ан макăрăр, ыр кӳршĕм-аршăм,
Ял-йышăм, эп çĕре кĕрсен,

Сăпайлă ывăл-хĕрĕм, кинĕм,
Пĕр пурнăçăн пурах пĕр вилĕм,
Пурнатăн чысла — чысла вил.
Пехил!

Эпир пĕр тымартан ĕрченĕ,
Тăван-пĕтен, пĕр йăх сĕткенĕ.
Çĕр çул сунать сире ман пил:
Пехил!

Ыр кӳршĕм-аршăм, Вăтакассăм,
Асăрсенче юлать ман сассăм,
Хушшăмăрта вĕрмерĕ çил.
Пехил!

Ял-йышăм, савнă хура халăх,
Çак çут тĕнче пире хăналăх,
Хăна ăсанчĕ — пушă кил.
Пехил!

Тўван çӗршыв, вӑрман та улăх,
Санран çуралнă, санăн пулăп:
Эс патăн чӗрӗ хал, эс ил.
Пехил!

* * *

Юман хăма çуртартăм, тупăк турăм—
Манран юлакансем чăрманмасса;
Хăма хушшисене сар ăвăс пусрăм —
Кĕрхи-çурхи шывсем сăрхăнмасса.

Ак ĕнтĕ ĕмĕрлĕх кил-çуртăма
Куллен курса тăратăп куçпалан.
Ман шухăш — тĕнчерен уйăрăлма
Тĕнче хамран уйрăличчен малтан.

* * *

Ҫуралнӑ эп чышка чӑмӑртаса —
«Ҫак ҫутҫанталӑк — манӑн!» тенӗ пек.
Вилсессӗн выртӑп пӳрнене сарса,—
Пӗр ывӑҫ пурлӑха та илмӗп тек.

Манран тухман, манпа пӗтмен йӑла:
Пӑрахӑр ҫӗр ҫутилӗх пилӗк пус.
Алтса пытарӑр та, юрла-юрла,
Ташла-ташла салантӑр килнӗ тус!

* * *

Кулать иккен пиртен ҫак ҫутҫанталӑк,
Хӗвелӗ, уйӑхӗ — йӑлтах кулать:
Тепле пӗрре яр уҫӑлать те алӑк,
Ӗмӗрлӗхех шарт хупӑнса юлать.

Ӑҫтан эпир кунта килсе кӗретпӗр?
Ӑҫта тухса каятпӑр? — Кам пӗлет!
Ҫил тапранать—хӑйӑрлӑхра пӗтет йӗр,
Лӳшкентерет — хура ҫӗрте пӗтет...

Нумай ҫухалнӑ пуль йӗр, шутласассӑн!
Этем таптанӑ ӗмӗр хӑй Ҫӗрне.
Ҫапах та эп, хамран килес пуласассӑн,
Хӑварӑттӑм хам ҫӑпатам йӗрне.

«Ытарлӑ калаҫатӑн-и, чӑнах-и?» —
Теме пултарӗҫ тантӑш-пӗлӗшсем.
Мӗн ҫӑпати! Ҫапла пырать сӑмахӗ...
Пӗр юррӑм юлтӑр та — рехмет, теем.

* * *

Элчелĕм çитрĕ. Куçăм хупăнать.
Ан тăкăрсам куççулĕ ман çине:
Чун вырăнне татах чун хушăнать,
Йăлт пушатсах каймастпăр тĕнчене.
Элчелĕм çитрĕ. Куçăм хупăнать.

Ан тăкăрсам куççулĕ ман çине,—
Тăварĕ ларĕ куçăр шăрçине.
Тăвансенчен каймастпăр инçене,
Выртсан выртатпăр хамăр çĕр айне.
Ан тăкăрсам куççулĕ ман çине.

Чун вырăнне татах чун хушăнать,
Тĕкел çумне хăрах килех тăрать.
Çурхи курак пăт-пат курăнкалать,
Кĕрпе каюçăн — пĕлĕт хупланать.
Чун вырăнне татах чун хушăнать.

Йăлт пушатсах каймастпăр тĕнчене:
Вăрман пек йышăм юлчĕ ял çине.
Хĕрхенмелле камалсăр çынсене:
Ют çын хупать вĕсен куçĕсене.
Йăлт пушатсах каймастпăр тĕнчене.

Элчелӗм çитрӗ. Кусăм хупăнать.
Пур ӗмӗт те пӗр харăс сыпăнать,
Мӗн шырани йăлтах халь тупăнать,
Йăлт ывăç тăприне вăл пухăнать.
Элчелӗм çитрӗ. Кусăм хупăнать.

1933—1940.

# Кун-çул тӳпинчен

## АТӐЛ ХӖРРИНЧИ ЮМАН

Пирӗн атте — ват юман.
Ч ӑ в а ш  х а л ӑ х  ю р р и.

Эп чӑнкӑ сӑртлӑ Атӑл хӗрринче
Тӑрри хуралнӑ юмана сӑнарӑм:
Хаяр аслатипе ӗмӗрӗнче
Пӗрре ҫеҫ мар вӑл ҫапӑҫнӑ патваррӑн.

Анчах лаштра ларать хӑй халиччен.
Йӑвантарайми́ҫ: ун тымарӗ тарӑн.
Ҫапла пуплет туйралӑх ун ҫинчен,
Йӗри-тавра карах тӑрса яш ҫаррӑн.

Эс, халӑхӑм, ҫав ват юман пек мар-и?
Шалта сан тымару, ҫемйӳ те йышлӑ.
Мӗнле хӑват сана халь парӑнтарӗ?!

Манра — йӑлт эс пани: ӗҫченлӗх, чыслӑх,
Хаваслӑх, хурланса та илкелӳ...
Юман-аттем! Эп — санӑн йӗкелӳ.

1953.

## ХАЛĂХĂМА

Чĕлхемĕре усранă халăх!
Сан чаплă ывăлу çинчен
Шухăшласассăн, тав тумалăх
Сăмах тупма та хĕн иккен...

Хĕвелтухăçĕнче мухтавлă
Лейли, Меджнун. Европăра
Ромеопа Джульетта паллă.
Эс, халăхăм, мĕнрен кайра?

Нарспин, Сетнерĕн шĕл кăварĕ
Сан илемне, юратăвна,
Сан ирĕклĕ чунна кăтартрĕ
Пурне те, пĕтĕм таврана.

Сана сăнаççĕ те тĕпчеççĕ:
«Пăхма сăпайлă çеç этем,
Чунтан епле пуян вăл!» — теççĕ
Сана телей сунакансем.

Сĕм авалах эс вырăнаçнă
Çак аслă Атăл тăршшĕне;
Кил-çуртлă та нӳхреплĕ-лаçлă,
Тĕреклĕ ларнă çĕр çине.

Вăрман кăкланӑ, пӳрт пуранӑ,
Ерчетнĕ çимĕç те хăмла.
Ятна яман, çĕртмен, упранă
Мал ĕмĕтне, ыр кăмăлна.

«Чăваш ятне ан çĕрт!» Мĕн евĕр
Тасалăх çак сăмахсенче!
Мĕн чухлĕ тӳсĕм, вăй сисетпĕр
Сан пилӳнте, тăван тĕнче!

Миçе чуна çунатлантарĕ
Вутра шăраннă сан чĕрӳ!
Сана ӳксе пуç çапас мар-и
Эпир, сан ывăлу-хĕрӳ?.,

Çултан çулах тăван малашлăх
Хаваслăрах, илемлĕрех.
Иванова çуратнă халăх,
Мухтавлă эсĕ ĕмĕрех!

1955.

## РАҪҪЕЙЕМ

### 1

Буря мглою небо кроет...

А. ПУШКИН.

Раҫҫейӗм Пушкинран пуҫланчӗ.
Хӗлле пӗр хутлӑ чӳрече
Шур илнӗ куҫ пек шуралсассӑн,
Чӑпта сӑрса ашӑклаттарнӑ,
Шалтан пас тытнӑ алӑка
Уҫмассерен сип-сивӗ сывлӑш
Йӑсӑрланса пӳрте кӗрсессӗн,
Юр пуснӑ улӑм пӳрт ҫинчен
Аран курӑнакан мӑрье
Ҫил ачисем йӗртсе ларуҫӑн,—
Таҫта ҫав хӑтсӑр сивӗрен,
Сӑлпӑрантан, пӑртан-шуртан
Алмаз пек ялтӑркка, таса,
Янравлӑ юрӑ туса хунӑ
Аста пурӑннине систтӗм...
Сӗм-тӗттӗм, кутсӑр-пуҫсӑр ҫиллӗ,
Ҫуран тӑманлӑ каҫсене
Ҫӳлти этем аташасран
Чиркӳ хуралӗ чан ҫапатчӗ:
Чи пысӑк чан сасси салхуллӑн
Чӗтре-чӗтре ҫилпе пӗрле
Таҫтах каятчӗ танлатса.
Пит йывӑр мар ҫапать, вӑраххӑн —

Пĕррс, тепре... пĕр вунă хут...
Унтан кăшт тăхтаса тăрать.
Чун сӳ! тăва-тăва илетчĕ.
Тем анлăш çутçанталăкра
Этем вăй-халсăр, хӳтсĕр пек,
Аташнă чун пек туйăнатчĕ.
Чан çапнине илтсен, анне —
Сӳс арласа лараканскер —
Хăш чух хăй йĕкине чарсах
Пăхса илетчĕ кантăкран,
Хаш сывласа çапла калатчĕ:
— Ах, турăçăм! Хирти этем
Маяклă çул тĕлне пулинччĕ,
Çул хыттине вăл çухатминччĕ,
Лаши-çуни пĕр çул тытинччĕ,
Турти пăявĕ татăлминччĕ...
Сĕтел çинчи кĕнекере
Шăп çавăн пек хаяр хĕлехчĕ.
Кӳмеллĕ çунапа такам
Лашисене юр аштарса
Пĕрмай каятчĕ. Вĕçсĕр çухрăм
Ула-чăла юпасемпе
Юлатчĕ тăсăлса. Пĕр шухă,
Пĕр хурлă ямшăк юррине
Çын шăппăн итлесе пыратчĕ.
Ăçта каятчĕ-ши? Мĕскершĕн,
Кĕртне-юрне, çилне пăхмасăр,
Вăл талпăнатчĕ малалла,
Вăл — шăрăх Африкăн чарусăр,
Сиксе вĕрен юнĕпелен
Кичемлĕ Çурçĕрĕн пăрне
Ирĕлтерме пултарнăскер?
Мĕнле элчел! Мĕнле шăпа!

Ăҫта каять? Ăҫта пулсан та,
Эп хатĕрччĕ унпа каймашкăн:
Ун чух — Раҫҫейĕмччĕ вăл маншăн.

2

Я Пушкин просто, не Мусин.

А. ПУШКИН.

Ялтан пĕр вăтăр ҫухрăмра
Писне улпучĕ пурăнатчĕ.
Ятне-шывне астăваймастăп,
Хушаматне те маннă ĕнтĕ,
Мана вăл мар халь кирлĕ-ха.
Анчах пĕр ҫĕр ҫул ĕлĕкрех
Писне шывне пула ят хунă
Ҫав вырăс ялĕ, ҫав Писне,
Вăл пурăннă-мĕн пăхăнса
Граф Мусин-Пушкина. Ҫавна,
Ҫав улпута аса илетчĕҫ
Ял-йышăмсем хаяр юмах пек.
Мĕн пулнă-ха? Улпут хресченĕ
Антон Петров пăлхав хускатнă:
Ҫĕр ял та пулĕ,— сенĕк, пуртă,
Чукмар е вĕрлĕк ҫĕклесе,—
Улпут паҫмисене хăмсарнă,
Ҫав Писнерен хыпар илтсессĕн.
«Антун ҫĕр чăнлăхне пĕлет,
Мăнахвисне вăл хăй вуланă,
Ҫĕр — хамăра! Улпут-тарашшăн
Тар юхтармастпăр урăх, ҫитĕ!
Сан ирĕкӳ, ҫĕрĕҫлекен!»

Çапла хавхаланса çěкленнě
Çынсем уес-уесěпе.
Апраксин генерал хăрушшăн
Пусарнă çав пăлхавăра,
Пăшалсăр çынсене вăл пенě
Пин-пин салтак пăшалěпе,
Штыкпа та сăнăпа чиксе,
Лаша таканěпе таптатнă.
Виле... Аманчăк... Петровне,
Судне-пуçне кěтсе тăмасăр,
Пур халăх умěнче вěлернě.
Вěлерессе вěлернě те,
Тапраннă халăх ěмěтне
Вăл татайман: кěç Лондонра
Çапа пуçланă Герцен «Чанě»...
Ман ялăм-йышăм вуламан,
Илтмен çав «Чан» çинчен ун чух,—
Çырусăр халăх пулнă-çке.
Анчах вăл сыпăран сыппа
«Антун Петрух» çинчен калаçнă,
Хěрхеннě ырă вырăса.
«Пěр мар, атьсемěр, вырăс та,
Улпут хресченěсем пиртен те
Начар пурăннисем чылай:
Йытăпала та улăштарнă
Улпучě вěсене, картла та
Выля-выля яни тем чухлě,
Качча каяс чипер хěре те
Малтан улпут хěве хупать-мěн...
Антун Петрух, çав мăшкăла
Тӳсме пултарайман пирки,
Кунне-çулне те хěрхенмен,
Вăл хура халăхшăн пуç хунă...»

Çаплаччĕ пирĕн ял юмахĕ,
Раççей чукмарĕн пĕр сулмакĕ.

3

Понятна мне времен превратность.

А. ПУШКИН

Атăлпала киле пыруçăн
Миçе иртмен-ши Писнерен?
Вăл халь — Антоновка. Хисеп
Хăюллă вырăс хресченне,
Ун ячĕ юлчĕ таврана.
Чăваш тĕнчи тĕкме çапсах
Уйрăлман ыттисенчен.
Çĕршыв пăтрашнă, çăрăлнă,
«Хĕвел пĕрре те, çĕрĕ — ют»
Тесех тăман-тăр: Атăл тăрăх
Вылянă мул, вĕренĕ юн,
Çĕлĕкĕсем çине — мала —
Сăрланă кашăксем çыхса
Çынсем бурлак пасарне утнă:
Яшки — хуçан, хул вăйĕ — санăн,
Туртатăн кимĕ, кĕрĕшсе...
Çав Писнерен инçе те мар
Пур, тетчĕç, эп астăвасса
Пĕр пĕчĕкçеççĕ вырăс ялĕ;
Ун улпутне те асăнатчĕç,
Вăл пулнă, имĕш, Арăстух,
Мĕнле-ши тĕрĕсрех — пĕлместĕп.
Паллах, ăна эп кураймарăм.
Анчах ман йышлă йăхăмри
Пуçтах ватсем, хивре чĕлхеллĕ
Емĕртенхи лĕкĕртисем,

Кĕрекере хĕрсе çитсессĕн:
«Çав Арăстух хăта патне
Тепре кайса ĕçсен пыратчĕ!» —
Тесе шӳтлетчĕç хушăран.
«Мĕнле хăта? Улпут хăта-и?..»
Вара пуçлатчĕç йĕркипе:
«Ара, эсир курман, пĕлместĕр,
Эпир те халь аран-аран,
Асаттесем каланипе
Асра тытатпăр çаксене —
Майра-çке пирĕн асаннемĕр!
Ăру ами, кил-вут хĕрт-сурчĕ,
Вăл — Арăстух улпут таврашĕн
Çĕрĕçлекен çыннисенчен.
Çĕртен иртсе вăл пурăнчĕ,—
Тесе пуплетчĕç ваттисем,—
Йăлт манчĕ вырăс туррине,
Йăлисене те чĕлхине:
Сурпан вăл сырăна пуçларĕ,
Чӳклерĕ чӳк хăй йĕркипе,
Шыв пек пуплерĕ чăвашла...»
Раççейĕм — тупмалли юмах,
Асамлă, куç пăван хăват!
Ăçтан тупас сан тупсăмне?
Мĕнле сана ăнланмалла?..
Тавах майра асаннене!
Пуçтах чăваш, тĕнче ухтармĕш,
Çитсе кĕрет те Хусана,
Вăрах тăрать-и вăл, сахал-и,
Телейлĕ-и, телейсĕр-и,—
Вăлтса илет çав пикене,
Çав Арăстух çыннин хĕрне,
Килет унпа чăваш ялне.

«Хусан сынни» те «хусансем»
Тее пуçлаççĕ хайхине.
Хушаматланнă та вара вăл
Çырма тапратнă вырăсла:
Казанковсен ратти пуçланнă,
Кайран вăл тулнă çур яла.
Эп, хамăр Çеçпĕл калашле,
«Чăваш тĕнче çывхарнă чух»
Çав вырăсла хушамата
Чăвашлатмашкăн шухăш тытрăм.
Тымарĕ, кăкĕ — киввиех...
Раççейĕм умĕнче ман парăм:
Хăçан сăнланĕ çав хĕрарăм?

4

Дела давно минувших дней...
А. ПУШКИН.

Мĕнле-ши эсĕ, асаннемĕр?
Яту та çук, сăну та çук,
Вил тăприне те сын пĕлмест.
Патша династи мар çав, пĕр-пĕр
Кăптăрмăшрах улпут та мар.
Çĕрĕçлекенĕн хĕрĕ эсĕ,
Çакланнă имĕш Хусана,
Улпут майри умĕнче тăнă
Хĕр-тарçă пуççăн, тĕкĕр пек
Пăхса тинкернĕ пикӳне.
Пăрчăканлах вăр-вар эс пулнă,
Мĕн хушнă — тунă çунтарса.
Анчах чун пăччăн туйăннă,
Вăл туртăннă ирĕкелле.
Кăвак куçпа, кăлкан çӳçпе

Пĕрре эс тухнă пахчана,
Тĕлпулнă ху пек мар хура,
Кăтра та вашават качча.
Вăл вырăсла кăшт перкелешнĕ,
Çăпата мар-мĕн уринче,
Йӳнни пулин те — сăран атă,
Тĕрленĕ кĕпи çийĕн уртнă
Хула пуставĕнчен çĕлетнĕ
Пĕрмеллĕ вырăсла сăхман.
Хусан хуçи пулма мул çук,
Хуçа тарçи пулма — пит хурлăх...
Куç хывнă та сана çав каччă,
Тăр-тăр чĕтĕресе çӳçеннĕ:
Кăвак куçу, юхан шыври
Çавăрăнса тăракан авăр,
Асамлă авăр, тĕпсĕр авăр
Пулса, ăна турта пуçланă.
«Путсан — путам, пĕтсен — пĕтем!» —
Тесе вăл шухăшланă та
Сăмах хушма хăю çитернĕ.
Мĕн илтнĕ эс çав сасăра?
Мĕн курнă унăн кăмрăк пек,
Тăрăхларах куçĕсенче? —
Аçтан пĕлес ман халь ăна!
Пăрахутсем те çӳремен-тĕр,
Пулман та пулĕ-ха вĕсем,
Хывăнайман-тăр чугун çул та,
Çапах пĕр тĕттĕм каç пĕр мăшăр —
Чипер утпа-и, çуранах-и —
Шап-шур хӳмеллĕ Хусантан
Тухса çухалнă. Туп, шыра!
Мĕн туртнă-ши çав чăваша
Хура пӳртсемлĕ хăй ялне?

Мĕн çухатса, вăл мĕн шыранă?
Мĕне шанса эс, асаннемĕр,
Хула пики пуçупала
Таçти çав кăрăм шăтăкне,
Сĕм вăрманти Сиктĕрмене,
Çав кириметçĕсем патне
Пырса кĕмешкĕн кăмăл тунă? —
Аçтан пĕлес ман халь ăна!
«Пиртен вăйли те пур пирте» —
Тесе калаççĕ чăвашсем...
«Хĕве хупсассăн — хĕрĕх çуллăх.
Выртатăр иккĕн — виççĕн тăрăр!..»
Илемлĕ ывăлсем, хĕрсем
Çуратнă кĕçĕн çын, майра,
Ăру юнне çĕнетсе янă.
Ун сарлака хысанине
Тĕреклĕ тунă çутçанталăк,
Ун тав курки пек кăкăрĕ
Çул сиктерсе паха сĕтпе,
Сипетлĕ сĕтпе карăннă.
Çĕртен иртсе вăл пурăнса
Алла çывхариччен çуратнă.
Кăвак куçли, кăлкан çўçли те
Курăнкаланă çуратуçăн;
Каярахпа çурма чăваш,
Çурма славян юнлăскерсем
Кăшт тĕксĕмленнĕ, хăмăрланнă.
Шултра, хĕрӳ хевтеллĕ йыш
Ерчетнĕ ырă мăшăр пилĕ:
Сухаçăсем, сунарçăсем,
Каскалакан ăста çынсем,
Салтак çăкри çиме тивсен —
Патвар, яштак кăрнатирсем;

Шăпăрçăсем, юр ăстисем —
Такам та тухнă йăхăмран...
Майра пикемĕр асаннемĕр!
Сан сиплĕ, канăçсăр юну
Манра пĕр-ик тумлам çӳрет-ши?
Ăçтан пĕлес! — Кăвак тӳпе пек
Кăвак куçу мана çити
Йăлт ирĕлсе пĕтнĕ пулин те,
Юну çук мар-тăр чĕрере.
Тен, çав хистет-тĕр кунĕн-çĕрĕн
Çула тухма, пур таврана,
Пур аслă çутçанталăка —
Çĕрти-çӳлти йăлтах — пурне те
Пурăннăçемĕн ытларах
Курасшăн хыпăнса çунма...
Эй, ятсăр вырăс сар пики!
Сана чĕртме пултарасла
Чи хӳхĕм те чи çепĕç юрă
Юрласшăн ăнтăлаттăм ĕмĕр:
Эс те — Раççейĕм, асаннемĕр!

5

Под небом Африки моей...

А. ПУШКИН.

Пĕр сăнӳкерчĕке пăхатăп.
Пурин те асра юлнă, паллă,
Хай аллă саккăрмĕш çулхи
Уяр тӳпеллĕ Ташкентра
Ӳкернĕччĕ иккен ăна.
Çав кунсенче кирек ăçта та,
Пур чĕлхепе те ик сăмах
Янратчĕ: Ази, Африкă.

Ӳкерчӗкӗм ҫапла упраннӑ:
Виҫ халӑхӑн виҫ ҫыравҫи
Кулса тӑраҫҫӗ юнашар —
Тутар юлташӑм Афзал Шамов,
Эп хам тата пӗр негр ачи.
Ачах та мар та, хамӑрпа
Танлаштарсан — ик хут вӑл ҫамрӑк.
Каҫартӑрах, вулас пулсассӑн.
Ятне те лайӑх астӑватӑп,
Хушаматне те. Аслӑ, вирлӗ
Сӑмах каларӗ вӑл ун чух,
Ӑна ура тӑрса ал ҫупрӗҫ.
Эп каласси ку марччӗ-ха.
Тен, сых ятне, халь вӑл камне
Каламанни те юрӑхлӑ...
Пӗрне-пӗри кӗнекесем
Парнелесе, унпа пӑртак
Сӑмахламашкӑн тиврӗ манӑн.
Сӑнне шӑп ҫавӑн чух ӳкернӗ.
Эпир, тем майӑн, Пушкина
Аса илсе калаҫрӑмӑр.
«Эсир телейлӗ,— терӗ вӑл,—
Ҫав негр юнлӑ поэта
Хӑй ҫырнӑ пек вула пӗлетӗр,
Эп — французла кӑна вуланӑ.
Пире вӑл ҫывӑх хурӑнташ-ҫке,
Хӑйне хӑй Африкӑ ҫынни тет.
Унпа саккунлӑн мухтанатпӑр:
— Начар юнах памарӑм пулӗ! —
Теме ҫӗршывӑм пултарать.
Ӑна хӑйле вуласшӑнах
Ман вӗренесчӗ вырӑсла.
Эсир телейлӗ, раҫҫейсем!..»

Çав негр тусăма ун чух
Парсаттăм эп «Горкăри çурт» —
Пĕр пĕчĕкçеççĕ кĕнеке.
Тăлмач ăна ăнлантарсассăн,
Вăл пӳрнине çĕклерĕ: «Ленин?»
Эп пуç сĕлтейрĕм: «Ленин»,— терĕм
Çын çав ята илтсессĕн, унăн
Ахаль те йăлтăр-ялтăр куçĕ
Прожектор пек çуталса кайрĕ.
Кĕнекене çав тер управлăн,
Асăрханса вăл сиркелерĕ;
Унтан, кăшт шухăша кайса,
Тепре каларĕ шăппăн: «Ленин...»
Ăнланчĕ пуль вăл кам пире
Ытарайми çав Пушкинăн
Хĕвеллĕ, аслă тĕнчине
Кĕртме пултарнине... Раççейĕм!
Австрали, Африка е Ази —
Мĕнпурĕ халь сана шанаççĕ.

1960.

# ЭП — СОВЕТЛА СОЮЗ ГРАЖДАНИНЕ

Чӗррисемпе пыракан

ВЛАДИМИР МАЯКОВСКИЕ.

Ҫавра́ка ҫӗр тавра сахал мар ҫӗршывсем,
Кӗҫӗнни те, асли те тӗл пулӗ.
Ӗлӗкрен-авалтан тӗрлӗ-тӗрлӗ ҫынсен
Хӑй чӗлхи, хӑй йӑли, хӑй кун-ҫулӗ.
Анчах эп хапсӑнмастӑп ютри ҫӗрсене,
Эп кунта кун курса ҫынна ҫитнӗ.
Ак каллех харсӑр сӑвӑҫ сасси илтӗнет:
Эп — Советлӑ Союз гражданинӗ!

Хӑш ҫӗрте эп пулман? Мӗнле тинӗс-ҫырман
Хӗрринче ман йӗрсем курӑнмаҫҫӗ?
Корольсем, патшасем пӑхрӗҫ ман куҫӑмран,
Йӑпӑлтатрӗ баронӗ те княҫӗ.
Тарҫӑсем, чурасем ҫунакан чунпала
Кӗтсе илчӗҫ мана, ирӗк килнӗн.
Вӗсем шаннӑ, ӗненнӗ... Кама шанмалла?
Эп — Советлӑ Союз гражданинӗ!

Ҫав ҫунатлӑ сӑмах ҫӗкленсе янрасан,
Пӗтӗм кивӗ тӗнче сехӗрленчӗ.
Ҫӗр ҫинче е ҫӳлте, е шывра ҫул тытан —
Чӗрене ҫав сӑмах ҫӗклентерчӗ.
Кам пулсан та — сухаҫӑ, шахтер е салтак,

Украинец, чăваш, армянин-и —
Манăн чыс та, мухтав та малтан вăл ак çак:
Эп — Советлă Союз гражданинĕ!

Ман çĕршывăн тӳпи кăвакран кăвакрах,
Хĕрлĕрен хĕрлĕрех ун хĕвелĕ.
Чи пахи, чи хакли — вăл асра яланах —
Танлăхпа çак çĕрте эп телейлĕ.
Коммунизмăн çуртне хăвăртрах тăрлама
Кун-çĕре шăнăçми ĕç эп илнĕ.
Аслă Парти шанать ман чакми вăйăма:
Эп — Советлă Союз гражданинĕ!

## НОЯБРЕН 7-МĔШЕ

Паян эпир пĕр шухăш шухăшлатпăр.
Вăл çĕнĕ шухăш мар, анчах ăна
Çулсеренех тепре татса калатпăр:
Октябрь уçрĕ аслă самана.

«Аврора» залпĕ кĕмсĕртетнĕ хыççăн
Пуçланчĕ çĕнĕ эра тĕнчере.
Çав сасă чарăнман: куллен вăл хыттăн
Йыхрав пек вăратса чĕнет çĕре.

Ăна илтмесĕр тек пултараймаççĕ
Тăшман та, тус та — пĕтĕм çут тĕнче;
Европăри вулкан, вăраннă Ази,
Америкă — йăлт пĕлчĕç ун çинчен.

Сĕм пĕлĕте прожектор пек çурса, вăл
Аваллăхпа малашлăх хушшине
Çапса хăварчĕ вутлă-хĕмлĕ савăл
Хура тăхлан пек сулхăн кĕркунне.

Кĕр — халăх çиллипе хуралнă пулнă.
Унтан вара çак кун пире ялан
Чи çутă, ырă, пархатарлă кунăн
Чуна çĕклет тулли хаваспалан,

Çак кун вăл — пирĕн ĕнену та шанчăк.
Çак кун вăл — çитнĕ ĕмĕт, ăрăскал.
Кăшт ырнă пек пулан е чун хавшанчĕ,—
Ан ман: çак кун вăл — иксĕлми вăй-хал.

Çак кун пĕрремĕш тупă сасси витĕр
Янрарĕ м и р сăмах йĕри-тавра.
Антив, ăна татах тĕнчемĕр илттĕр:
Мир пултăр, тикĕслентĕр нўр тăпра

Çак куншăн чи паха сăмах тупмашкăн
Çĕр çыврман, кун-çул та пулмĕ шел.
Çак кун ĕмĕрлĕхех вăл — саншăн, маншăн,
Пуриншĕн те — хавхалану, хĕвел!

1954.

## АСЛĂ ÇУЛПА

### *(Чăваш АССР 30 çулне)*

Паян эс историн мăн çулĕ çинче
Умна та, хыçна та пăхса тĕлĕнен.

Ç. ЭЛКЕР.

Вăтăр çул... Вăйпитти этем пек
Эс тăратăн, çуралнă çĕршывăм.
Нихăçан та кун пек илемпе
Çĕкленменччĕ эс паттăррăн, сыввăн.

Вăтăрта вăтăр ĕмĕр таран
Ярса пусрăн эс, ирĕклĕ халăх.
Ăс-халу та, мулу та паян
Сахал мар çынсене кăтартмалăх.

Кӳршĕпе, тус-йышпа пĕр канашлăн
Эс ларан кĕреке хушшине.
Чунунти сăмахна эс калатăн,
Асăнан чи паха ятсене...

Вырăспа юнашар кар тăрса,
Вичĕ хут революцие тухрăн.
Сĕм хура пӳртсенчен хăтăлса,
Коммунизм çуртне алăк уçрăн.

Аслă Ленин тытгарнă декрет
Пулчĕ сыхлăх та чĕрĕлĕх хучĕ.
Вăл чăваш кун-çулне ĕмĕрех,
Ылтăнпа çырăнса, кĕрсе юлчĕ.

Кӳршĕпе, тус-йышпа пĕр тăванлăн
Кĕреке умĕнче ларнă чух
Чун панчи сăмахна эс калатăн,
Каламасăр тӳсме те хал çук.

Авалхи сăмахпа каласассăн:
Юхтăр чул, путса лартăр хăмла,—
Çав-çавах вырăсран татаймастăн
Пирĕн чун-чĕрене, кăмăла.

Ак тăвата çĕр çул аслă халăх
Хӳтĕлет пире хăй шăллĕ пек.
Кĕрешӳ, çĕнтерӳ, терт, хаваслăх —
Пурте унăн пĕрле пирĕнпе.

Сывă пултăр çĕнелнĕ Россия!
Аслă туслăхăн çурчĕ — Мускав.
Варкăшайтăр Чăваш çĕрĕ çиййĕн
Пур йăха пĕрлештернĕ ялав!

1950.

## ПОЭЗИ ПУЛСАН...

Поэзи пулсан — ăш хыпса çуннă чух
Вырттса ĕçмелли шыв пек пултăр;
Кашни сăвăпа, савнипе чунпа-чун
Калаçнă пекех, кăмăл тултăр.

Поэзи пулсан — ĕçлесе ывăнса
Сӳсленнĕ ӳте паттăрлаттăр;
Хула-çурăма мунчара çăвăнса
Тасатнăн çынна вăл тасаттăр.

Поэзи пулсан — тӳшекпе-минтерпе
Вырттса каçхине эс вулуçăн
Çĕклентĕр сана хăйвĕçен кавир пек,
Çил çеç варкăшса вĕртĕр уççăн.

Поэзи пулсан — журналсем ун анне
Хĕссе лартиччен вăл пĕр тапхăр
Пĕçерттĕр наборщик аллин тупанне,
Чунна çĕнĕ çулăм хыптартăр.

Поэзи пулсан — вăл мантартăр ĕçке;
Сăвва сыпкăмшар астивсессĕн,
Калатăр этем: «Ку тата тутлă-çке!
Çакна тахçанах астивес-мĕн».

Поэзи — шырав, кĕрешӳ, ăмăрту,
Ача йăл куллиˌ гени тарĕ,
Имçам, юрату, кӳлешӳ, аркату,
Тĕнчемĕр нуши, пархатарĕ.

Поэзи — çĕрти пур йышши сĕткенпе
Хĕвел шевлисен чĕр хăвачĕ...
Эп хам кам пулсан та, йăхран çакăн пек
Поэт тухнине ман курасчĕ!

## КОНСТАНТИН ИВАНОВА

1

Эс — ман пĕрремĕш юрату;

Сассу ачаранпах хистетчĕ:
— Ĕçне тытсассăн — вил те ту! —
Тесе мана каланă пекчĕ.

Эс — манăн туслăх тав курки:
Чанклаттарса ĕçсе яран та,
Тĕпне пăхан: тата çук-и? —
Тумлам таран сăрхăнтаратăн.

Эс — манăн чунăм тĕкĕрĕ:
Самантлăх мухтава ан хапсăн,
Хур савнă ĕçшĕн ĕмĕре,—
Теп эп хама, сана пăхсассăн.

Ыйт хăвăнтан: тăван йăхна
Каламалли пурах-ши санăн?
Пурне пĕлсе çитсен кăна
Кĕсле тытмашкăн эс пултарăн.

Хальччен илтмен çĕн юрă-çем
Тухмасть пулсан, кала ӳпкевсĕр:
Янратăр, тантăш-тусăмсем!
Эп — сирĕн хапăл итлекенĕр.

2

Эс ман пӗрремӗш юрату,
Ҫӗр ҫуннӑ чух та эс манпахчӗ.
Сан халӑх чысӗ пек яту
Тӑхлан шӑтарнӑ сумкӑрахчӗ.

Мухтавлӑ Атӑл хулинче,
Брянск патӗнчи сӗм вӑрманта та
Салтаксене Нарспи ҫинчен
Вула-вула эп савӑнтартӑм.

Пӗрре маршра ҫур сехете
Ларсаттӑмӑр эпир канмашкӑн.
Грузинӗ «Руставели!» тет,
Ун сӑввине вулать хаваслӑн.

Баку ҫынни — Низамипе,
Узбек Навоипе мухтанчӗ.
Украинецсем ерипе
Шевченкӑна юрласа ячӗҫ.

Унтан мӗнпур чӗлхепеле
Янрарӗ «Пушкин!» хӗпӗртевлӗн.
Вӑрҫа кӗрес этем пӗлет:
Вӑл халь ответ тытать тӗнчешӗн.

Чӑваш салтакӗ ҫав тӗлте
Чӑваш сӑввисене итлерӗ,
Патронташне тӳрлетрӗ те
Сасартӑк — «Ивановшӑн!» терӗ.

3

Тумламшăн тинĕс патăн халăха.
Пĕр пĕрчĕ илтĕн — таварртăн капан.
Çул хыççăн çул... çаплах шавлатăн-ха,
Пур аслă çĕршыва тăнлаттаран.

Тăван йăху, сана яланлăха
Савса, ытисене калать: ак ман
Тинкерлĕ куç, ултаалами хăлха.
Пуриншĕн те вăл пултăр паянтан.
Ылханăр унпа шай чуралăха,
Çын тивлетне юратăр унпа тан.

1940—1950.

## ПИРЕН ÇЕÇПЕЛ МИШШИ

Çăлтăрсем — шултрисем, вĕттисем пĕр
канашлăн
Ялкăшаççĕ уяр тӳпере...
Пĕлĕте яр çурса, метеор пĕр самантшăн
Хыпăнать те — сӳнет ĕмĕре.
Çăлтăрсем çуталаççĕ çаплах килĕшӳллĕн,
Анчах лешĕ — мĕн ĕмĕр тăршши
Курнă çын асĕнчен çухалмасть вара ӳлĕм.
Çавнашкал пирĕн Çеçпĕл Мишши.

Тинĕс хумĕ чĕвен тăракан шур çилхеллĕ
Урхамах пек сикет, кăтăрать.
Харсăр кимĕç тухать, çиле хирĕç вăл меллĕ
Киммипе сĕм шыва кастарать.
Ахăрать, мĕкĕрет хăрататать тĕпсĕр авăр:
«Сахал мар пулнă сирĕн йышши!»
Анчах кимĕç ишет, кĕсменне пăрахмасăр.
Çавнашкал пирĕн Çеçпĕл Мишши.

Амăрткайăк вĕçет ĕмĕрхи ту-сăрт урлă,
Тинкерсе вăл пăхать тавралла.
Унăн çулĕ тĕтреллĕ е çумăрлă, юрлă —
Вăл пурне те çĕнсе каçмалла.
Варкăшать, çӳлерен те çӳле ярăнать вăл,

Мал енче — çут хĕвелĕн йăшши.
Вăй кĕртет чăнкă ту, хирĕç çил, аслă тăвăл.
Çавнашкал пирĕн Çеçпĕл Мишши.

Вăл чăваш чĕлхине, юмахри Данко евĕр
Çунакан чĕрипе çутатса,
Çул кăтартнă; вăл шаннă пĕр иккĕленмесĕр
Çĕн чăваш тĕнчене тухасса.
Вăл куран интернационалăн кĕперĕ,
Пур йăхпа та пире тан туса,
Шухăшпа виçейми тӳпене халь çĕклерĕ
Пирĕн ирĕклĕ, харсăр ăса.

Эй, эсир, çамрăксем! Ăмăрт куçлă, çунатлă,
Çеçпĕл чĕннĕ чăваш ачисем!
Эп сире чи çӳлте халь курасшăн çунатăп,
Ĕненсе, юратса пехиллем.
Вăхăт çитрĕ: чăвашăн чĕлхи тимĕр татрĕ.
Туптăр, хăйрăр ăна малалла!
Ыранхи çĕн ăста тĕнчене янраттарĕ.
Çамрăксем! Вăл — сиртен тухмалла.

1949—1951.

## ХАЛĂХ САВĂÇИН УЯВНЕ

Висла шывĕ тăрăх аслати кĕрлерĕ,
Илтĕнми вăл турĕ тупă сассине.
Туй пĕкки пек хўхĕм асамат кĕперĕ
Карăнчĕ шыв урлă, каçрĕ леш енне.

Çĕнтерўллĕ халăх тепĕр пысăк утăм
Ярса пуснă евĕр куртăм эп çавна.
Çавăн чух эс аллă тултарсаттăн, тусăм,
Савăнса асилтĕм инçетре сана.

Кĕрекем çумрахчĕ: флягăна çĕклерĕм,
Сыпрăм, çăкăр çыртрăм, турăм эп тупа.
Анăçа васкарăм, тăшмана йĕрлерĕм
Çухрăм шутне маннă йывăр атăпа.

Хамăр çутă çулшăн, ирĕклĕ çĕршывшăн
Сывлăш çавăрмасăр утрăм малалла.
Ĕмĕрлĕх пĕрлешнĕ тăванла кил-йышшăн
Аллăмран ямарăм тĕрĕс пăшала.

Сарлака Россия, ылтăн Украина,
Хĕм хĕвеллĕ Грузи пулчĕç асăмра...
Казахпа туркменăн, латышпа литванăн —
Пур йăхсен çилли те çунчĕ ăшăмра.

Тӳсӗмлӗ, илемлӗ, чул касан чӗлхешӗн
Чунӑм пулчӗ хурҫӑ, шухӑшӑм — кӑвар;
Аслӑ Ивановшӑн, Ҫеҫпӗлшӗн, Элкершӗн,—
Хамӑрӑн мухтавшӑн ҫапӑҫрӑм хаяр.

Таврӑнтӑмӑр акӑ. Ырӑ кӗрекемӗр
Ян янрать, пурне те хаваслантарса.
Килейменнисемшӗн хурланса илетпӗр,
Сан тавра, пиччемӗр, салтакла тӑрса.

Сан паха ятушӑн, сан таса чӗрӳшӗн,
Халӑх халаланӑ хисепӳшӗн те,
Асапа ҫӗнтернӗ ҫамрӑк ӗмӗрӳшӗн,
Ватӑлми хастарлӑ тимлӗхӳшӗн те —

Тайӑл сана пуҫӑм, тайӑл сана пуҫӑм!
Ҫӗр ҫулччен курасчӗ пӗлӗтпе ҫӗре.
Курӑнми пулсассӑн... сывӑ пултӑр, тусӑм,
Пархатарлӑ шухӑш ӗмӗр-ӗмӗре!

Сывӑ пултӑр пирӗн сассӑмӑра илтнӗ,
Ӗмӗте ӑнланнӑ ҫитӗнес тӑван!
Вӑл пурне пӗлсессӗн, эпӗ, пурнӑҫ ҫитнӗн,
Кулянмасӑр, лӑпкӑн кайӑп ҫакӑнтан.

Вӑл чуна ҫутаттӑр, ӑс-пуҫа пуйтартӑр,
Чӗрене ҫӗклетӗр, ӑшӑттӑр юна;
Кайӑк пек юрлатӑр, аслати пек ҫаптӑр,—
Ҫавӑн пек поэтшӑн эп хыпса ҫунап.

Ӗненеп, шанатӑп: вӑл ҫуралӗ, килӗ,
Час ӑна ӳстерӗ аслӑ самана.
Халӑх чун хавалӗ, унӑн ырӑ пилӗ
Ҫулӑмлӑ, ҫунатлӑ тутӑрччӗ ӑна.

Эй, эп тунсăхланă, ĕмĕтре палланă
Амăрткайăк куçлă халăх юрăçи!
Тайăл сана пуçăм, пил сана, тăванăм,
Пирĕн уява эс ĕмĕр урлă çит.

Шыв-шурсем хумханччăр, сĕм вăрман
кашлатăр,
Чыс тăватпăр пурте хамăр Элкере.
Çĕнĕ йăх шавлатăр, шухăш шухăшлатăр,
Вĕçсĕр пултарулăх пытăр тĕнчере!

**1954.**

# КУН ÇУЛ ТӲПИНЧЕН

В. А. ДОЛГОВА.

Хутар Эрхипĕн ывăлĕ Ваçлей,
Калавçă, сăвăç, тишкерӳçĕ... ç ы н!
Тус-йышупа эп те сунам телей.
Çулсем иртеççĕ, тетĕн? Иртĕçин!

Васкавлă саманашăн хистесе
Юрттартăмăр чĕре çилçунатне.
Вăраннă халăха çĕклес тесе
Шырарăмăр чĕлхемĕр хăватне.

Çырулăх çурчĕ — пысăк япала,
Пĕччен лартаймăн,— юхтăр тек тару.
Кĕрлетпĕр нимери пек йышпала.
Сыв пултăр пĕрлешӳллĕ пултару!

Пĕрне-пĕри шанса, хавхалатса,
Патвар хул-çурăмпа, таса чунпа
Çап-çутă пĕр кермен туса лартсан,—
Çав пулĕ пирĕн ĕмĕрлĕх юпа.

Эппин: ĕçлер-ха çанă тавăрса,
Тус-йыш çинче чăн тус суйла-суйла,
Чĕре урхамахне акатуйла —
Çăварлăх хыптармасăр — кустарса.

Ăс çитĕнсе тулайнă тапхăрта
Таçти-таçти халь курăнать пире.
Кун-çулăн тӳпинчен пăхатпăр та—
Саях яман пек çамрăк ĕмĕре.

Юрт, урхамах! Ан такăн çул çинче.
Малашлăха хĕнпе йĕр хыврăмăр.
Çулланăçем илемлĕ çут тĕнче,
Тĕнче варри — тăван çĕршывăмăр.

1955.

## Н. Я. БИЧУРИНА (ИАКИНФА)

Асаплă ĕмĕрте, пур çутă шухăш
Патша патакĕ айĕнче чухне,
Эс ху çуралнă ял ятне астунă,
Хăвна аран ӳстернĕ ял ятне.

Мĕскер ун чух вăл тӳрĕ пилĕксемшĕн
Бичурино е Шĕнерпуç тени!
Сана вăл илтĕннĕ илемлĕ юррăн.
Эс шухăшланă: эп — çав ял çынни...

Кун-çулăмăр йĕрне йăлтах манмашкăн
Хистех тăнă пулин те самана,
Ялун пехилĕ аякран йăпатнă
Хура пӳртри хăйçути пек сана.

Пĕр каснă чĕлĕ çыпăçаймĕ, тенĕн,
Эс çулсерен куляннă тарăхса:
Тăван йăха эс парăмлă пек пулнă,
Тăван чĕлхемĕре, тăван ăса.

Пĕрремĕш хут çăвар уçса каланă
Чи ăшă сăмахсем — атте, анне —
Умна эрешлесе кăларнă чĕррĕн
Асран кайми ачалăхун сăнне.

Чӗлхе... Пулман-ҫке ӑна ҫул, паман-ҫке!
Ху халӑхушӑн хытӑ кӳренсе,
Вара эс Хӗвелтухӑҫне тинкернӗ,
Хӑватлӑ вырӑс чӗлхине пӗлсе.

Эс Пушкинпа калаҫнӑ куҫма-куҫӑн,
Декабристсемшӗн пулнӑ ҫывӑх ҫын.
Сӗм тӗттӗмре те халӑх ӑсӗ ҫиҫнӗ.
Чӑваш ӑсне кӑтартрӑн эс туллин.

Хӑрушӑ ӗмӗрте ҫӗклерӗн эсӗ
Тӑван Российӑн чӑн ӑслӑлӑхне.
Пур халӑхшӑн та ҫӗнӗрен эс уҫрӑн
Пуян ӑс-халлӑ Ази алӑкне.

1953.

# ТАХТИ

1

Шупашкарта, ялан тав-шав ҫинче,
Пурнатчӗ кăкăрсăр чăваш поэчӗ.
Хӗвеллӗ кун вăл Атăл хӗрринче
Ик шурă качака кӗтсе ҫӳретчӗ.

Ун ҫӳллӗ ҫут ҫамки ăспа ҫиҫетчӗ,
Вылятчӗ шӳт ун типӗ куҫӗнче.
Анчах туяттăм: ҫын ҫав тер пӗччен!
Алла ик аллипе тытса силлетчӗ.

Сархайнă сăн-питне пăхаттăм та,
Аса илеттӗм эп пайтах ята.
Умма тухатчӗ тертлӗ сӗм аваллăх...

Ҫавна пула миҫе вӗри чуна,
Ҫумна ҫунат хушан сăвăҫуна
Пытартăн сарăмсăр, талантлă халăх!

1939.

## ТАХТИ

### 2

Пуç тӳпине курка лартса, ĕçмесĕр,
Тав турĕ вăл, тантăшăмсем, пире:
«Чăваш, грузин, таджик е пушкăрт эсĕр —
Совет — мĕн пур чĕлхепеле пĕрре.

Салам!» — Янрать черкке, юрлать чĕре...
Ун чух Шелепие чыслатпăр эпĕр,
Лахутипе Роллан таран кĕрлетпĕр
Хаваслă, тăкăс çав кĕрекере.

Янк çутăлсан тин пĕтрĕ ĕçкĕ-çикĕ.
Ĕçмен поэтпала пăртакçă иккĕн
Çӳрерĕмĕр тӳлек çыранпалан.

Хĕвел хăпарчĕ ешĕл йăлăмран.
«Пурнасчĕ,— терĕ çын,— кун-çул юлмарĕ...»
Çав сасă халиччен асран тухмарĕ.

1939.

## ÇУРРИ

МИТТА ВАÇЛЕЙНЕ.

Халь тин эп кулянассăм çук пĕрре те,
Умра курса çĕмрен пек йĕкĕте.
Алла та çитĕн, тантăшăм, çĕре те,—
Кама мĕн чухлĕ тивĕçнĕ хевте.

Пасманапа пайланă-и патварлăх,
Мăскал çине хурса кăна-ши çав...
Сăлтав вăл мар: кун-çул мĕнле тăварлă,
Ĕç-пуç мĕн евĕр тарлă — ак сăлтав.

Ир кӳлĕмпе каç кӳлĕмне пĕлмесĕр,
Сӳсмен хывмасăр, вăтăр çул тăршши
Пĕр суханах туртса пăхсассăн эсĕр —
Ай-хай пуçа ухсах юртайăр-ши?

Эпир... эпир юртатпăр-ха, юлташăм!
Çилхи кăна вĕçсе пырать çилпе.
Тăват урин те пĕр кĕвĕллĕ ташă,
Тăват йĕркеллĕ сăвă çемми пек...

Çерем çĕтет çырулăх акапуçĕ —
Тĕрен тивмен чунпа ăс çеремне.
Кайран тухнишĕн çул-йĕр пулĕ уçă,
Малтанхисемшĕн — йывăр ĕмĕрне.

Пиртен малтан пăт-пат кăна сухаçă
Хуратнă лăс кăлканлă парлака.
Пирĕнпеле — карах тăрса тухаççĕ
Вуншар, çĕршер... Анамăр сарлака!

Чăваш уйне Çĕн Кун аки çитсессĕн
Пусланчĕ çав хаваслă сухалу.
Ват Шелепи! Эс Çеçпĕле илтсеттĕн,
Хисеплĕ санăн шурă сухалу.

Пăхса ытарайми савăнтармашкăн
Теприн те çитмеллеччĕ-ха кун-çул:
Яш Кĕçтенттин! Ялан эс тĕкĕр маншăн.
Тивлетлĕ сан таса алмаз куçу.

Тепри... Унпа пĕрлеччĕ ĕç те, çул та,
Тав-шав та шўт, ырлу та хăтăру...
Шупуççынни! Ăçта эс выртса юлтăн?
Сăваплă сан эпир пĕлмен тăпру...

Сухамăр çăмăл мар: тымар та чул-чăл
Шартах хуçать хăш тапхăр тĕрене.
Анчах кам кўлчĕ, тантăшăм, кам кўлчĕ?
Эс ирĕккĕн туртан йывăррине.

Мехел çитмен-ха лăпкăн, вайăн-шайăн
Кўлсе те тăварса сĕнкĕртетме.
Çĕршер çулхи парлак халь ака айĕн,
Тĕнчипеле тăватпăр пĕр çĕртме.

Малтан çуралнăшăн эп ўкĕнместĕп,
Кăшт маларах та çитĕнес темен.
Йăлтах йĕркеллĕ: эп те кирлĕ, эс те;
Çĕре шăп вырăнлă çурать тĕрен.

Иртейнĕ пурнăçăн пĕр сехетне те,
Пĕр самантне те халăм çук манма.
Хури-шурри пурин те пур, пĕлетĕп,
Пурне те курчĕ çур ĕмĕрĕм ман.

Çурри... Анчах çаплах ак, яра кунăн
Сӳсмен хывмасăр, тепĕр чĕрĕкне
Тапса туртасчĕ те,— вара саккунлăн
Тăварăр, салтăр хăмăт чӳлĕкне.

Çурри... Анчах юртатпăр-ха, юлташăм!
Çилхи кăна çинçен шăхăркалать.
Тăват урин те пĕр кĕвĕллĕ ташă,
Пуçне ухса çăрхамçăм çăрхалать.

Атя, ĕçченĕм! Тăпăртат та ыткăн,
Мăкăрлантар тусан йĕри-тавра.
Пĕр ĕмĕт пур: кивви ан пултăр тыткăн,
Этем ан хутăр этемех турра.

Эй-хей! Тĕнчен саманисем те саккăр,
Тамашисем те тăххăр, тенĕ пек,—
Апла та вылянать, капла та тапхăр
Сасартăках уйлаймăн пĕтĕмпех.

Пĕр чăнлăх çеç улăшăнмасть: вăл — халăх
Тата вăл чи мала тăратнă çар,
Ку — пирĕн парти, йышлă ăслă-халлă,
Тĕреклĕ чăмăртаннă пĕр хастар.

Унпа пĕрле ку чух эпир çĕклетпĕр
Пиншер çулхи харамлăх çеремне.
Ун умĕнче эс те пĕр, эпĕ те пĕр,—
Тĕшне кура хаклать вăл çынсене...

Атя, ёҫчен! Турт лав, турт акапуҫӗ,
Пӗтӗрӗнет тӑпра — хура вӗрен.
Ыран тухас тӑваншӑн ҫул-йӗр уҫӑ,
«Туртти пулин, юртти ҫук» темӗ, тен.

Тесен... Эпир юртатпӑр-ха, юлташӑм!
Ҫилхи кӑна уҫ сывлӑш кастарать.
Тӑват урин те пӗр кӗвӗллӗ ташӑ,
Ҫӗре тапса ҫӑрхамҫӑм кустарать.

1957.

# ТЕЗАВРУС ЛИНГВЕ ЧУВАШОРУМ

Н. И. АШМАРИНА асăнса.

Чиновниксем, ним вырăнне хумасăр,
Пире куçран хăртса виртленĕ чух,
«Час сирĕн чĕлхĕре те тĕп тăватпăр!»
Тесе чĕремĕре витернĕ чух
Вĕреннĕ вырăс пур усал вăя
Мухтавлă ырă ĕçĕпе питленĕ:
Чăваш чĕлхи илемлĕ те пуян —
Тезаврус лингве чувашорум, тенĕ.
Çапла ят хунă латинла вăл хăйĕн
Чăваш сăмахĕсен кĕнекине.
Çав кĕнеке—ун пурăнăçĕ, вăйĕ.
Вăл каçрĕ пур патшалăх чиккине.
Çапла чун кӳртнĕ тĕттĕм тĕрмере
Раççейĕн çутă ăсĕсем пире.

1953.

## ÇАЛАМ СОНЕЧЕ

Н. В. НИКОЛЬСКИЕ.

Тахçан-тахçан, ача чухнех,
Сире пĕрремĕш хут тăнлуçăн,
Эсир мана кăтартрăр уççăн
Чăвашăн тӳсĕмлĕ чунне.

Хусанăн хӳмисем çумне
Пуласлăх хăпаратчĕ куçăн,
Çунатланса вĕçетчĕ чунçăм
Часрах тухасшăн ун çулне.

Паян çав кун çывхарчĕ мар-и?
Мĕнпур тăван çĕршывăм тăрăх
Янрать чăваш ăс-халĕ хурçăн.

Эппин — шăтрех, сая каймарĕ
Эсир акса хăварнă вăрлăх.
Тавсси, профессор! Тайăн пуçăм!

1958.

## ЯН АМОС КОМЕНСКИЙ

Сăнне пăхсан — йăваш та ырă кăмăл
Кулатăн ватă вĕрентекенре...
Мĕнле вĕри вут-çулăм, мĕнле тăвăл
Кăларнă çак ăс-хакăл, çак чĕре,
Ун савнă çĕршывне тăшман пуссассăн,
Хăйне вара тĕнче касма тивсен!
Тăван çĕрте пророк эс пулаймастăн.
Анчах ăçта çитмен, мĕскер тӳсмен —
Вăл чехшăн чех чĕлхи упрасшăн çуннă,
Пур халăхшăн чĕлхе алăкĕ уçнă [1].
Чăваш пуçпа эп килнĕскер, туятăп,
Çав аслă алăкран эпир те кĕнĕ:
Умра эп Яковлев сăнне куратăп,
Вăл — çак Коменскийĕн вĕренекенĕ.

1961, Прага.

---

[1] Автор кунта Коменскин Европăпа Азири нумай чĕлхене куçарнă «Чĕлхесем патне уçнă алăк» ятлă кĕнеки çинчен калать.

# ПУЛТАРУ

В. Г. ЕГОРОВА.

Этем вăл хăйшĕн хăй парне.
Нимрен пахи — çак пурнăç. Хамăр.
Анчах мĕскершĕн хăшпĕрне
Çĕре çитех пуçа таятпăр?

Пур пирĕн вирлĕ чĕлхере
Пултар сăмах. Çав пулĕ тупсăм.
Çавна туйтартăн ĕмĕрех,
Вĕрентекенĕм, аслă тусăм.

Калаççĕ халăх хушшинче:
Вăл пултарать, вăл пултарулла.
Çын пур тăвать-мĕн çук çинчен,
Хушать вăл çĕнĕ, хаклă пурлăх.

Çав пурлăха кĕве çимест,
Шăши касмасть, хыпмасть вут-çулăм.
Çав пурлăх муртăхмасть, çĕрмест,
Пĕтмест те,— вĕçĕмсĕр кун-çул ун.

Эпир ăна илем теетпĕр,
Тĕпчевçĕ чăнлăх тет ăна.
Тĕллевĕ ик сăмахĕн те пĕр:
Этем телейĕ. Çав кăна.

Çав пурлăха куллен пухса
Хăш чух çука тăрса юлатпăр,
Хăш чух никам çăвар уçса
Сăмах чĕнменнине куратпăр.

Суя мухтав ярапине
Вĕлкĕштерсен çил хÿрисемшĕн
Эс — пĕтнĕ çын ун пек чухне,
Сана вĕсем шыва тĕртесшĕн.

Анчах, вак хум ассан-ассан,
Шыв лăпланать тулли чара пек.
Шывваррипе саркаланса
Ишет чăн ăслăлăх карапĕ.

Шăв-шав, кĕр-кар та çавраçил
Хирсе лăсканине пăхмасăр,
Хăй ĕмĕтнех тытсассăн çын —
Истори умĕнче вăл паттăр.

Çав ĕмĕт йышлă этемсен
Чунне кĕрсе вырăнаçсассăн,
«Кун-çул час иртрĕ-çке», тесе,
Ма ахлатса сывлас-ха ассăн?

Пĕр çыннăн ĕмĕрĕ — çĕр çул
Е ытларах пулсан та — иртĕ.
Халăхупа эс сапăр пул:
«Вăл вилĕмсĕр, вăл — эп, эпир!» те.

1955.

## БАКЕН

*М. Я. СИРОТКИНА.*

Эс курнă-и? — Çĕрле Атăлпала
Пăрахутпа е кимĕпе каюçăн
Пĕр хупланать, пĕр ялтăрать каллех
Йăваш та лăпкă çутă чĕрĕ куçăн;

Пĕр хум çинче вăл авăсăнкалать,
Пĕр чăмнă евĕр... Руль тытса пыруçă
Ăна аякранах курса паллать,
Вăл сӳнмесессĕн — малалла çул уçă.

Çак пурнăçра çын çутăрах çунасшăн,
Вăл тинĕсри маяк пек курăнасшăн,
Кам тиркĕ пархатарлă ĕмĕте?

Анчах ман асăмра кирек хăçан та
Çав пĕчĕк пăнчă: тĕксĕм çутатсан та —
Вăл çул уçать, вăл вырăнлă çĕрте.

1949.

## О. И. ЫРСЕМЕ

Такам каланӑ: пӗчӗкҫӗ роль ҫук.
Кашни этем хӑйне кура — пӗртен-пӗр.
Нихҫанхинчен те тӗрӗс вӑл ку чух:
Ҫын тивӗҫне ҫӳлтен ҫӳле ҫӗклетпӗр.

Анчах кун-ҫул иртет, ӑна чарма
Тупсах ҫитерейменха сиплӗ турӑх.
Ҫуллен тулса юхать ҫурхи ҫырма,
Этемӗн ҫурӗ пӗрре ҫех — ҫук урӑх!

Мӗн тӑвӑн? Пурнӑҫ пит васканӑран
Ирӗксӗрех ун йӑлине тытатӑн:
Нарспи рольне вылянӑ эс малтан,
Халь ак Сетнерӗн амӑшне вылятӑн.

Тем те кышлать хавшак чӗремӗре,
Ана гримпа сӗрсе лартма май ҫук-тӑр.
Анчах та чун... чун ҫамрӑк ӗмӗрех,—
Юратнӑ ӗҫ кирлине ҫеҫ вӑл туйтӑр.

Хӑш чух, тен, тӗкӗр витӗр тинкерсен,
Сасартӑк ассӑн сывласа яратӑн:
Мӗнле хитре, ытарайми хӗрсем
Пӗрремӗш сцена варринче куратӑн!

Пуртех пымарĕç санăн çулупа:
Чунтан-вартан çунса тăрăшмасассăн,
Искусство таварать. Çапла шăпа.
Унпа ытхальтен хăтланаймастăн.

Тен, урăх çул-йĕр тупрĕç пуль çынсем,
Нумайăшне эпир ятран пĕлетпĕр.
Çапах театр тантăшĕ Ырсем —
Ун чух хыпса çуннисенчен пĕртен-пĕр.

Ачасене — паха ача вăййи,
Качча — савни паха, ватта — ăс-халĕ.
Малтан эс тăхăннă Нарспи тухйи
Искусствăн çамрăклăхĕ пек çуталĕ.

1952.

## ХУДОЖНИКЕ

М. С. СПИРИДОНОВА.

Художник! Эс мольберт умне тăрсассăн,
Сасартăках шăпăртланать ман сассăм.
Куҫа кăна таҫта аяккаллах
Сан картину туртать, туртать ҫаплах...
Мăян йăранлă, ансăр, саплăк-саплăк
Ана ҫинче тар-шурлă та асаплă
Ҫынсем тертленнĕ, тарăхнă ялан.
Эс урăхла сăнсем куран паян:
Вĕҫĕ-хĕррисĕр, тикĕс ылтăн тулă,
Хаваслă питсенче вылять йăл кулă;
Машина ҫăмăллатрĕ ĕҫ-хĕле,
Этем халь ун хуҫи пулма пĕлет.
Ларатчĕҫ ҫĕмелсем сайра маякăн;
Кăшт сывлăш ҫавăрма ўпне, хăяккăн
Е месерле ўкетчĕ тĕм ҫине
Вырса вăй кайнă ҫын авал чухне.
Уй-хирте халь туйăнать уявăн,
Пин алă пĕр вăй пулнине туятăн.
Парка пучах чĕнет те илĕртет,—
Тытса йăваласа пăхас килет...

Палитра, фокус, перспектива теҫҫĕ,
Чылайăш ку сăмахсене пĕлмеҫҫĕ.
Эп те ҫавах. Анчах, хама кура,

Пăртак чухлатăп хурапа шурра.
Ав ăслă куçлă ватă шăпăрçă,
Ав куççăр çын — туяллă сăвăçă.
Эп вĕсене те мĕскĕнĕн курмастăп,
Çук, ирĕк çыннăн тивĕçне туятăп,
Авал пулсан вĕсем вĕçрен вĕçе
Çĕршыв тăрăх çӳретчĕç йĕрсе çеç.
Кив ăстасем ун йышшинче кураççĕ
Таптаннă чун, ыйткалакан хутаçĕ.
Патша калпакĕ е кĕтӳç пушши —
Художникшĕн пĕр, тетчĕç. Тĕрĕс-ши?
Асташăн пĕтĕм çут тĕнче — натура,
Тесе калатчĕ авалхи культура.
Çапах та тĕнчене çап-çутă ир
Кӳресшĕн çуннă-çке ялан эпир,
Çав ырă ирĕн чĕрĕлĕх хĕвелĕ
Çур тĕнчере йăлтăртатать илемлĕ,
Çапах пирĕн куç çав хĕвеле
Часрах курасшăн пур тĕнчипеле.
Çапах художник — самана çынни вăл,
Малашлăх пулмалла ун перспектива,
Çавна туятăп, сан ĕçне курсан,
Çавна эп саламлатăп пур чунтан!

1952.

## СКУЛЬПТОРА

И. Ф. КУДРЯВЦЕВА.

Эп сан патна кӗрсе курмассерен
Халӑхӑма ӗненерех паратӑп.
Ҫав самантрах — калатӑп чӗререн —
Хам ҫырнӑ сӑввӑмсемшӗн вӑтанатӑп.

Ав сан ларать рабочи, ав салтак,
Ав пионер, ӗҫчен пике, ҫарпуҫӗ...
Пӑхатӑп та эп ӑнланап йӑлтах:
Питсем ҫинче ҫын чунӗсем яр уҫӑ.

Куратӑп халӑх савнӑ поэта,
Ҫул иртнӗҫем вӑл ҫамрӑкланчӗ мар-и?
Ӑна халь тӑвӑр, тӑвӑр ҫакӑнта,
Чӑс Атӑл хӗррине вӑл тухса ларӗ...

Сулмакӗ, кӳлепи пур ҫак ӗҫсен,
Тӑмне те ху ҫӑратӑн, йӑвалатӑн.
Ҫапла куҫа курнан, алла лекен
Сулмаклӑ сӑмахсем тупасчӗ манӑн!

1952.

## КИМĔПЕ

АЛЕКСАНДР АЛГАНА.

Аван-ҫке Атăл тăрăх кимĕпе
Ларса тупман сăвва хăваламашкăн!
Епле тӳлек... Кĕтӳ ҫерҫи канашлăн
Каҫ кӳлĕм кантăр шĕкĕлченĕ пек.

Сасартăк йăлăмран тухса йĕпе
Ама ҫилсем пĕлĕт хуса каҫсассăн,
Ну пуҫланать вара! Ҫири кĕпе
Тарпа тăварланать — хума касатăн.

Ăмăртăва тăратăн куҫма-куҫ.
Рифма манса, калатăн: тавтапуҫ!
Ак пурнăҫăн ĕмĕртенхи саккунĕ:

Лăпкать те ачашлать; лăкать, тулать;
Кĕсмен тивсе пӳрнескене юн хӳнĕ,
Анчах ишев тĕреклетет хула.

1939.

# КОМПОЗИТОР ПАТЕНЧЕ

Г. Я. ХИРБЮ кăмăлне.

Çак пĕчĕк пӳлĕме аслăлатать мăн шухăш.
Паха ĕмĕтпелен тухап сан патăнтан.
Эс тупнă кĕвĕсем хастарлă та салху кăшт,
Тӳссе тăвăлнисен кăмăлĕпе пĕр тан.

Сăрнай сассипеле хум-шавлă Атăл хутăш
Йĕрсе те тарăхса пăлханнă авалтан.
Юрра саван çĕре çăвар уçма паман!
Çавна халь ылханса çунать ман тепĕр хут ăш.

Янран илем ăсти! Мĕскер сунам сана?
Хаяр кĕрешĕве çĕкленчĕ самана,—
Юратнă халăхна ăмăрт çунат хушсамччĕ.

Шанатăп хамăрти сӳнми чун хавалне,
Пĕлетĕп: çут тĕнчен йĕркесĕр вăй-халне
Гармони тумалла чăн ирĕк ĕç хăвачĕ.

1939.

# АННЕ

1

Сĕтелĕм тĕлĕнче яланлăх юлтăн.
Пуçу тавра анатрилле сурпан.
Художнике тав туран та ыр сунтăн:
«Хам пек пуль,— терĕн,— ватă,— ватă ав,
куран...»
Суха касси пек таран пĕркеленчĕк,
Çат тытнă тутуна яланхи пек,
Ик куçхарши хушши раснах йĕрленчĕ,—
Унта пайтах пытараннă инкек.

2

Эс кайран та — кил-çуртăм юлчĕ пушă.
Пĕрре кăна çĕр каçран çĕн килте.
Хăнăхаймасăр хăшкăлтăм пĕр хушă:
Ытла сасартăк пулчĕ! Тем кĕтеп...
Тин мар-и кӳршĕ-аршăпа эс лартăн?
Тин мар-и-ха пăлхар тусăмсене
Дунай юрри савса юрласа патăн,
Тав куркине сулса енчен енне?

3

Кил-çурт хӳттийĕн, ырă пирĕштийĕн
Кăштăртатса çӳреттĕн ерипе.

Пиçиххийӳ çинчи çăра уççийĕ
Хуллен ак халь те чĕлтĕртетнĕ пек...
Эс ĕçлемесĕр пурăнма пĕлмерĕн:
«Ват йывăç ларнă халлĕнех хăрать,
Çапла вилсен аванччĕ маншăн»,— терĕн.
Çав ĕмĕтӳ сан çитрĕ, ахăрах.

4

«Çынна йăлăхтарса епле выртайăн?
Виç кунлăх çеç пулинччĕ ман чăрман»,—
Тесе калаттăн. Виççĕмĕш кун кайрăн.
Шав çумăр çурĕ, лӳшкентерчĕ шав...
«Ыр çын вилсен ялан çапла вăл»,— терĕç.
Çавна сăнанă, имĕш, ваттисем.
Пĕлместĕп эп: те тĕрĕс мар, те тĕрĕс,
Анчах сана начар темен çынсем.

5

Эп сан çулна çитеймĕп: сывлăх урăх...
Пĕртен-пĕрӳ — пулмарăм йăх асси,
Таса юнпа çуратрăн, çирĕп турăн,
Хамран килетчĕ пуль упранасси.
Хамран-ши? Ах, апла кăна пулсассăн!
Анчах çанталăк гĕрлĕ çаврăнать:
Хăш чух, ирпе хĕвел йăл-йăл кулсассăн,
Каçпа сип-сивĕ çумăр ярăнать...

6

Мана ырра шанми туни те пулчĕ...
Çав хурлăхлă, хĕрхӳ самантсенче
Санпа кăна ман кӳтнĕ кăмăл тулчĕ,
Санпа кăна илемлĕччĕ тĕнче.

Ялти пӳртри тĕпелччĕ-и, хула-и,—
Сан кăмăлу пĕр пекчĕ яланах.
Пусăрăнаттăмччĕ çавна пула эп,
Эмел пек сиплĕччĕ тăван сăмах.

7

Сăмаварна чĕртеттĕн те кас кӳлĕм —
Ларатчĕ юрласа сĕтел çинче.
«Кăшт каласар-ха,— теттĕн,— тахçан ӳлĕм?
Çулу-йĕрӳ ялан çапла инçе...»
Мĕн куç пăвнă сан ывăлна çав шай?
Инçеччĕ çав, инçеччĕ, çывăх марччĕ,
Ялан вăл тăвалла тапса хăпарчĕ,
Пĕр утăм та пусмарĕ тăва май.

8

«Пĕрре çуралнăскер пĕрре вилетĕн,
Анчах эс пурăна пĕл пурнăçа!» —
Тесе хутран-ситрен мана питлеттĕн.
Пĕлме... пĕлме пит йывăр пулнă çав.
Те пĕлтĕм пурăнма, те пĕлеймерĕм?
Хальччен мĕскер активнĕ—йăлт паха:
Хăй майлă сиплĕ пыл, хăй майлă — эрĕм,
Тата мĕн курасси, ай, пур-ши-ха?

9

Тахçан ача чухнех эс вĕрентеттĕн,
Саспаллисем палла пуçласанах:
«Ӳссессĕн хура халăхшăн тăр,— теттĕн,—
Çыру тесе йăхна ан мансамах».
Сана итлеттĕм ун чухне йăвашшăн,

Хура-шурра ăнланнă-ăнланман...
Мĕн те пулин тăвайрăм-ши чăвашшăн?
Ăна хăй калĕ халăхăм кайран.

10

Шухăшласан — шухăшăм тем чухлĕ,
Аса илсессĕн — темĕн те асра.
Пĕр тикĕс килмесен те çын кун-çулĕ,
Чун яланах усратăрччĕ ырра.
Шăлтăртатмасăр пулмĕ чашăк-тирĕк,
Анчах ăша ан лектĕр хура юн.
Сан пек пуласчĕ тӳсĕмлĕ те çирĕп:
Хура юна çĕнтертĕр ырă чун.

11

Хăш чух кĕл тунă евĕр калаçаттăн:
«Çĕре кĕресчĕ куçлă та пуçлах...»
Сакăр вунна çити чĕнтĕр çыхаттăн!
Куçу сӳнмерĕ, хупăнчĕ вутлах.
Çӳçне касаттăм, чĕрнӳне иртеттĕм,
Çуса та кăларттăм килте чух,—
Çулланăçем илемлĕччĕ, аннеçĕм,
Сан пек никам та маншăн пулас çук.

12

Уявсенче икерчĕ пĕçерсессĕн,
Çынна активтереттĕн савăнса.
Салхуччĕ эс, çав кун çын кĕмесессĕн:
«Килмерĕ сĕт майри те иçмасса»,—
Тесе вара кӳрше кайса чĕнеттĕн,
Пĕри пулмарĕ — килтĕрччĕ тепри:
«Çатма шăрши кăлартăм та кăшт,— теттĕн,—
Çисе пăхсам... çĕнехчĕ те çĕпри...»

13

Тусӑмсене ятран пӗлсе тӑраттӑн.
Пӗр пысӑк ялччӗ саншӑн Шупашкар.
Митта Ваҫлейӗн сӑввине тӑнлаттӑн,
Ларса юрлаттӑр иксӗр юнашар.
Ак эс те, вӑл та ҫук ӗнтӗ. Хура ҫӗр
Хупларӗ те ямарӗ каялла.
Ыр сунансем сире ырах кураҫҫӗ,
Ҫав сыпӑнтартӑр хуҫӑк кӑмӑла.

14

Кӗнекерен, куллен-кунхи ӗҫрен те,
Тӗл пулнӑ ҫынсенчен те ыйӑнсан,
Час-час санпа лармашкӑн эп вӗрентӗм,
Сана пӗр сиктермесӗр тӑнласа.
Каланине ҫыра-ҫыра пыраттӑм
Кукаҫейсем, кукамайсем ҫинчен...
Хама пӗр пысӑк кил-йышра кураттӑм,
Халь ак эс ҫук та — ҫав тери кичем!

15

Ӱстересси — ун кулленхи нуши.
Ҫуратасси — хӗрарӑмӑн телейӗ,
Ачи кам пуласса ӑҫтан пӗлейӗ?
«Ҫын пултӑр»,— тет сӑпайлӑн апӑрши.
Анчах ак эп, сасартӑк витӗр курнӑн,
Анлантӑм хам кун-ҫулӑн тупсӑмне:
Мана эс ҫын та, сӑвӑҫӑ та турӑн,
Ик хут сана эп парӑмлӑ, анне!

16

Укерчĕкӳ нумай çынна пăхтарчĕ,
Пĕри апла курать, тепри капла.
Манра аннен тем чухлĕ сăн-сăпачĕ:
Расна курап кашни сăввăмпала.
Анчах, сăну мĕн евĕр пайлансан та,—
Паян, ыран е ӳлĕм, малашне,—
Санра эп курăп, теп, кирек хăçан та
Пĕр пĕтĕм сăн — чăвашăн амăшне.

17

Сăпка юррипеле чĕлхе упранă,
Вăйăсенче, туйра та юпара
Пĕр савăнса, пĕр хурланса юрланă
Пин-пин анне пекех эс асăмра.
Калас килет сана: пур пек вăя та,
Чуна та — халăха эп пехиллем.
Тайма пуça çĕре çитех таятăп,
Чĕлхемĕн амăшĕ, чăваш аннем!

1961.

# ИККЕЛЕНӲ

Ак иртрĕ тепĕр кун. Туман-ха нимĕн те.
Ирпе листанĕ календарь тепре.
Чăнах та ман хевтем пĕтсех пĕтним ĕнтĕ
Е манăн вăл пулман та чĕрере?

Е эп пуҫтах чунпа, хăюллă чĕрепе
Ҫука пур турăм-ши хам ăшăмра?
Нихҫан суха тивмен пăрахăҫ ҫерем пек
Арăвăма мĕнех вал ман пера?
Ман ĕҫ — Сизиф ĕҫĕ: тăрмаш ҫав чулпала,
Кустар ăна сăрт-ту тӳпинелле.
Хăҫан, мĕнле мелпе унта улăхмалла?
Хăҫан ун тӳпине ман ҫитмелле?

Ҫитеймесессĕн — мĕн тăрăшмалла?
Тытам эп шĕшлĕ пĕреххут алла!

1927.

# ЭЛЕК

Пĕлетĕп: кусăма хупсассăнах,
Ман пуç вĕçне пырса вăл ларĕ.
Малтан — пĕрре, унтан ик-виç сăмах,
Вара чан пулĕ ун çăварĕ.

«Поэт? Пулин! Вăл хамăр пек çынах.
Нимпех те иртеймен».— «Каларĕ!
Пиртен çĕр хут варланчăк мар-и?»
«Çĕр çеç-и? Пин!» — «Чăнах, чăнах, чăнах!..»

Чĕрне ӳсме те чаранмĕ-ха ман —
Пуçне вăл çĕклĕ, ĕмĕрхи тăшман.
Пĕлейĕттĕм: хăçан ăнланăн,
Çук чунупа намăсланса? —
Поэтăн сурчăкĕ те — санăн
Суя куççулӳнтен таса!

1939.

## КĔСКЕ САВӐСЕМ

### АСРА ТЫТАР

Асаттесем мĕн авалтан
Чӑваш ятне çĕртме хушман.
Ӑçта пулсан та, яланах
Асра тытар çак йӑлана!

### ÇӐМХАПА СĔВЕМ

Пĕрре ман каймаллах инçе çула,
Инçе пулсан та, вĕçĕ ун — çӑва.
Сĕвемĕ татӑлсан, çӑмхи юлать,
Ун вĕçĕмсĕр кун-çулĕ. Вӑл — чӑваш.

### КĔНЕКЕН ĔÇ-ПУÇĔ

Кĕнекен ĕç-пуçĕ йывӑр,
Пĕччене вӑл вӑй килет.
Çун, тарла, хӑш чух ан çывӑр,
Халӑха вара — тивлет.

### ТУТЛИ, ЙӰÇÇИ...

Тутли, йӳçҫи — йӑлтах хама кура
Кун-çулӑм ас тивтерчĕ. Çав паха.
Часран часах юрлатӑп пĕр юрра:
«Тата мĕн курасси, ай, пур-ши-ха?..»

## КИЛЕС ПОЭТ

Пĕр-пĕринпе «эпир» те «эпĕр»
Çырса тавлашнă хушăрах
Ăна мĕн пурĕ хатĕрлетпĕр:
Вăл ĕмĕтре, вăл шухăшра.

## КУН-ÇУЛ

Кун-çул вăл — черновик, атьсемĕр:
Çырса илмешкĕн вăхăт çук.
Таса хутпа пера илетпĕр —
Иртсе те кайнă пурнăçу.

## ÇАВĂНПА

Тĕлĕнӳ! Ак мĕн юлман
Пирĕнте ку чух.
Çавăнпа: — поэт нумай,
А поэзи — çук.

## ЕÇПЕ ВĂЙĂ

Еçре пиçнĕ çын ялан
Вăйăра та ирттерет.
Вăйăра савăнакан
Еçе лайăх хĕрттерет.
Тăрăшман çын, тупата,
Вăйăра та тунката!

## ПЫСĂК ВЫРĂН Е?..

Эп шырамастăп пысăк вырăн.
Эп хапсăнмастăп мăн чина.
Сăпайлăн, кăмăллăн та ыррăн

Курасчĕ ман кашни çынна.
Антив, вăл пултăр аслă чинлă,—
Эп чи малтан шыратăп с ы н л ă х.

## ÇИТМЕНЛЕХ ÇИНЧЕН

Çитменлĕхĕм пулма пултарĕ:
Ыр ут та такăнать çулта.
Пачах ăс пулмасан кам парĕ?
Çавна илес пулать шута!

## ТЕНЕЛ

Сăмахсен хакне пĕлни —
Питĕ пысăк пархатар:
Ç ĕ р ĕ н т ĕ н ĕ л ĕ тени—
Урапа тĕнĕлĕ мар.

## ТИРПЕЙ

*(Хĕвелтухăçри ăслăхран)*

1

Шанса килекене эс ăшăт,
Выçса килекене тăрант,
Ĕçме ыйтакана ĕçтер:
Вĕри вучах, çавра сар чăкăт,
Шерпет, çăл шывĕ, виноград —
Йăлтах çак Çĕр пилленĕскер.

2

Сăпайлă пул. Ан чăрсăрлан.
Ытла çăвар карсах ан ашкăн:

Пур пархатарсăр сасăран
Чи пархатарсăрри — ашакăн.

3

Çурта салам-алик парса кĕр,
Тухуçăн ырă сунса тух.
Çулта-йĕрте çын пынă чух
Сăмах хушмашкăн пул эс хатĕр.
Ялан çакна асра тытса тăр:
Утпа пыран — çуран çынна,
Çуран утан — ларакана,
Яшши — ватта м а л т а н пуç тайтăр.

4

Мухтанса эс ан çӳре.
Юратма вĕрен тӳрре.
Вак-тĕвекшĕн ан кӳрен,—
Ху вакне çеç пĕлтерен.

5

Кам çак илемлĕ тĕнчене
Тĕнче хăйне пăрахиччен
Пăрахса кайĕ — çав телейлĕ.
Кам хăйĕн ĕмĕрлĕх çĕрне
Ӳтпе кĕрсе вырнаçиччен
Куçпа курса тăрать — телейлĕ.

## ТЕРЛЕ ТЕНЧЕ

Тĕрлĕ çакă çут тĕнче,
Çынсене пĕр пек ан кур.
Пур шĕлепке умĕнче
Хул айне калпак ан хур.

## САЛТАВЕ

*(Пиçнĕ тута сăмахĕ)*

Авалхилле каласан —
Хăшпĕр хĕрарăмсене
Тамăк пушă тăрасран
Туса янă çĕр çине.

## ШĂПИСЕМ ÇАПЛАЛЛА

Кĕнеке тăвасси —
Тип юман касасси:
Ах, кĕрпи ӳсĕнмест,
Пăчăки мăкалать...
Мĕн тăвас тетĕн эс?
Шăписем çаплалла...

## ӲРКЕВ ÇИНЧЕН

Пĕр ватти калать хавассăн:
Ӳркеве вĕлер ăна!
Ĕçлени çынна пулсассăн,
Вĕренни юлать хăвна.

## ĔÇЕН КУРШАНАКЕ

Ĕçĕн куршанакĕ пур:
Пĕр йĕппи тăрăнсанах
Вăл сана тăвасшăн хур,
Хытăрах эс пус ăна!

## ПӲРНЕПЕ ЧĂМĂР

Пĕччен çын вăл — пĕр пӳрне.
Пилĕк çын вăл — пĕр чăмăр.

Пулăшсассăн пĕр-пĕрне,
Эпир вăйлă пурсăмăр.

## ТЕРЕСЛЕНЕ ЧАНЛАХСЕМ

1

Ту ярăнма çăмăл чух
Çуна туртма кăмăл çук.

2

Çынпала ан ятлаçах:
Аншăрчĕ лекет хăвнах.

3

Пĕр ăсли калана, тет:
Пуш пучах ялан çӳлте.

4

Ху камне пĕлес тесен —
Тĕкĕре пит ан ĕнен.

5

Çуламан пăрупалан
Пиçмен пашалу пĕр тан.

6

Тăм пăшалпа тăм писмен
Пĕр пекне тăм çеç сисмен.

* * *

Кашни ман сăвăм — юлашки пекех:
Тĕнчен пулма пултарасла драми
Мана вăл шухăшлаттарать текех,
Иртеймĕп эп ăна кури-курми.

Çынпа хутшăннинчен килет хевте,
Çӳретĕп эп инçе те, çывăх та.
Сасартăк, çӳçенсе илетĕп те,
Чĕнес сăмахăмах чĕнме тăхтап.

Хам шухăша вуланăн, тĕлĕнсе,
Пăхатăп эп çынсен куçĕсенчен:
«Мĕн курăпăр-ши малашне?» — тесе
Этемлĕх шухăшлать пек хăй çинчен.

Эпир, этемлĕх çутă ĕмĕтне,
Чи тутă маййăр пек шĕкĕлчесе,
Çитермелле кашни этем патне,
Эпир — тĕнчен хальхи поэчĕсем.

Этемлĕх пурăнасшăн тĕнчере,
Ун ырă генийĕ хăватлăрах.
Усаллине хăрттармĕ вăл Çĕре,
Ăна вăл парăнтарĕ ырăпах.

«Курман-илтмен, пĕлместĕп»,— тенĕ пек
Пăрăнаймасть поэт: ун тивĕç çук.
Чуппа, юнпа — кашни тумламĕпе! —
Тĕнче халне вăл туймалла ку чух.

Сейсмограф пулмалла поэт чĕри:
Аçта мĕнле хускав, мĕнле чĕтрев,
Патнерехри вăл е кăшт инçетри —
Йăлтах палăртмалла сикен чĕре.

Ку йывăр-и? Пит йывăр япала!
Вĕçтер, сăмахăм, хывăх-кипеке:
Тăхлан пек тĕшлĕ пул! Çавăнпала
Кашни ман сăввăм — юлашки пекех...

1967.

## ТУПМАЛЛИ

«Вуншар çулпа шутлатпăр ĕмĕре...» . . 5
Халăх поэчĕ (ум сăмах) М. Я. Сироткин 7

### ИРХИ

Тантăша . . . . . . . . . . 51
Ан тив, пире йывăр пултăр... . . . . 52
Ирĕк тимĕрçĕ . . . . . . . . . 53
Аннене . . . . . . . . . . 55
Тăвăл иртсен . . . . . . . . . 57
«Юр шывĕ сăрхăнсах пĕтмен чухне...» . 58
«Шанатăп хамăн çăлтăра...» . . . 59
Уй-хир юрри . . . . . . . . . 60
«Йĕс таканлă тимĕр-кăвак ут...» . . . 63
Сăлпăран . . . . . . . . . 64
Малаллăх маршĕ . . . . . . . 66
Çĕнĕ çул хăнисем . . . . . . 68
Пул примерлă Ленинçă . . . . . 70
Çар иртсен паттăр нумай . . . . 72
Хади Такташа . . . . . . . . 75
Çул мыскари . . . . . . . . 78
Ватă колхозник юрри . . . . . 81
Сен Катаямăна асăнса . . . . . 82
Хĕвел патнерех . . . . . . . 83
Çыру . . . . . . . . . . 86
Нарспи çĕршывĕнче . . . . . . 88
Çĕмĕрлере . . . . . . . . . 96
Урампа утсем иртеççĕ . . . . . . 98
Аван-и, Пушкин! . . . . . . . 100
Фредерико Гарсиа Лорка . . . . . 106
Максим Горькине . . . . . . . 108

# САВНИ

«Мерчен куçлă кĕмĕл çĕрĕ...» . . . 111
«Хурама та пĕкĕ, йĕс шăнкăрав...» . . 112
«Хура чĕкеç вĕçет çӳлелле...» . . . 113
«Ĕнер кăна тĕнче чăпарччĕ...» . . . 114
«Кĕтрĕм, кĕтрĕм эп сана, савниçĕм...» . 116
«Вăшăлах та вăшăл, ай, сулхăн çил...» . 117
«Уяр та сивĕ — кун илемлĕ...» . . . 118
«Хура тинĕс лăпкă мар...» . . . . 120
«Тавтапуç çуралнă çĕршыва...» . . . 122
«Мĕнле уяр. Ман ыйхăм çук...» . . . 124
«Ман çине пăхса пуçна эс ан пĕк...» . . 126
«Часран часах хама эп шантаратăп...» . 128
«Тулли уйăх — лирика çулпуçĕ...» . . 129
«Сан ялу — мухтавлă Кушкă...» . . . 130
«Чăвашран сан пекки эп курманччĕ...» . 132
«Сан сăну çине те сулхăн ӳкĕ...» . . 133
«Никам та ал сулса юлмарĕ...» . . . 134
«Сана саваттăм эп. Тен, халь те...» . . 136
«Нихăçан юрламăп, нихăçан!..» . . . 137
«Аçта пулсассăн та эс халĕ...» . . . 139
«Вăрман çара. Тумхах тункаталать хире...» 140
«Ак тухрăм эп Атăла та...» . . . 141
«Хăçан та пулин, пурăнсан-пурăнсассăн...» 142
«Ман чун халь çав кĕвве ĕнерчĕ...» . . 143
«Çак самант сан çинче манăн шухăш...» . 146
«Кăтра шур пĕлĕтсем тăртаннă...» . . 147
«Туллилĕх. Август перекечĕ...» . . . 149
Куçарнă хушăран . . . . . . . 151
«Пурте — савни те мана, савмани те...» . 152
Хăнара . . . . . . . . . 154
«Юмаххăн кĕтĕн ман пата...» . . . 156
«Савниçĕм! Ман анне тăван чĕлхипеле...» . 157
«Эс манăн халăхăм çинчен...» . . . 158
«Нумайранпа эп макăрманччĕ...» . . . 159
«Мускат пек анăç чӳхенет...» . . . 160
«Тинĕсрен тухать çур уйăх...» . . . 162
«Ак, тинĕс, эпĕр иккĕнех...» . . . 164

## ХУРА ПЕРКЕНЧЕК

«Урхамахам пит канаҫсӑртан...» . . . 167
«Пӗлтерсем эс мана, караванҫӑ...» . . 169
«Ашхабад тӑрринче ҫутӑ ҫӑлтӑр...» . . 171
«Савнӑ тусӑн ҫепӗҫ пӳрнисем...» . . 172
«Хамаспюрӗм, савнӑ Хамаспюр...» . . 173
«Уйӑх ҫак каҫ асамӑҫ...» . . . . 175
«Капед-Даг хыҫне хӗвел пытанчӗ...» . . 177
«Тӳпере ҫӑлтӑр нумай...» . . . 179
«Мӑссалас пек вӗрекен сӗткенӗм...» . . 181
«Уйӑхран эп ыйтрӑм: ма эс уйӑх...» . . 183
«Паян темшӗн Капед-Даг салхуллӑ...» . 184
«Шав чӗвӗлтетет сар кайӑк...» . . . 186
«Тантӑш-тусӑм, ма сывлатӑн ассӑн...» . 188
«Хурассан ҫӗрне эп ҫитеймерӗм...» . . 190
«Мӗскер калам сана юлашкинчен...» . . 192
«Ӑшӑма хыптарса ҫунтаран...» . . . 194
«Юлашки сехет эп санпала...» . . . 195
«Малалла-ха пурнӑҫ, малалла...» . . . 197

### Кӑнтӑр кӗввисем

«Горизонтра хура тӑхлан пек...» . . 199
«Вакун чӳречинчен пӑхсах эп...» . . 200
«Умра тӗрленчӗ кунӑм-ҫулӑм...» . . . 201
«Эп ҫиремре. Мана талантлӑ...» . . . 202
«Эп юрататтӑмччӗ пӗртен-пӗр...» . . . 203
«Паркра пиншерӗн ҫутӑ хурт...» . . . 204
«Ман ыйхӑм ҫук. Мӗнле уяр!..» . . . 205
«Пӗччен, пӗччен ҫӗм кӗҫӗр урӑ...» . . . 206
«Хумсем, епле сире эп тунсӑх!..» . . 207
«Эй, халь ҫав ӑшӑк, вараланчӑк... . . 208
«Ҫын тивӗҫӗ хапарнӑ тапхӑр...» . . . 209
«Паян вӑл Ҫеҫпӗл сӑвви пек...» . . . 210
«Эп таврӑнаттӑм халь яла...» . . . 211
«Ак эс хӑҫан иккен Хура...» . . . 213
«Тӑхлан тӳпе. Горизонтра...» . . . 215

## ХАМĂР ЯЛСЕМ

Унахви . . . . . . . . . 219
Шушкă . . . . . . . . . 223
Тавлашу . . . . . . . . . 225
Карпа Ваçукĕ — певевçс . . . . . . 232
Ухиме инке . . . . . . . . 235
Йăкăнат . . . . . . . . . 239
Пархатар юрри . . . . . . . 244
Тантăшсем . . . . . . . . 247
Элтиван . . . . . . . . . 252
Юлашки . . . . . . . . . 262

### Сиктĕрме

Ялăма . . . . . . . . . 274
Нĕсел . . . . . . . . . 276
Ятсем . . . . . . . . . 278
Сиктĕрме . . . . . . . . . 280
Питтапай çеремĕ . . . . . . . 283
Енчĕ . . . . . . . . . 287
Кун йĕрки . . . . . . . . 289
Чĕпсем . . . . . . . . . 291
Пултăрахчĕ телее . . . . . . . 293
«Тики-тики» . . . . . . . . 294
Виçшер йĕркен . . . . . . . 295
Çуллахи каç . . . . . . . . 300
Сăпка юрри... . . . . . . . 303
Тăватă хурăн . . . . . . . 304
Кĕрхи кĕреке . . . . . . . 306
Автанран автанччен . . . . . . 310
Вĕрентекен . . . . . . . . 324
Амăртăва . . . . . . . . 328
Хĕллехи ир . . . . . . . . 331
Кушак . . . . . . . . . 333
Сăлпăран . . . . . . . . 334
Тĕтĕм . . . . . . . . . 336
Ар ташши . . . . . . . . 338
Вак хĕрринче . . . . . . . 339
Емерхи . . . . . . . . . 340
Сывă тăр, хĕвел . . . . . . . 341

Херарăм тантăша . . . . . . . 342
Лашасем . . . . . . . . . 346
Аннене . . . . . . . . . 349
Сыв пуллашу . . . . . . . . 351

## АСЛĂ ЧĔРЕ

Ленин . . . . . . . . . . 355
Çак кун . . . . . . . . . 357
Пытарни . . . . . . . . . 359
Миçемĕш хут . . . . . . . . 360
Мухтав аслă Ленина! . . . . . . 361
Ленин пирĕнпе . . . . . . . . 363
Разлив аса килет . . . . . . . 365
Ленин . . . . . . . . . . 366
Ленин çулĕпе . . . . . . . . 368
Аслă чĕре . . . . . . . . . 371

## ПУЛЧĔ ВĂРÇĂ

Хăюллăн малалла! . . . . . . . 389
Фронтпа тыл пĕр пулсан çĕнтереймĕ тăшман 390
Тăван çĕршывшăн, нрĕклĕхшĕн, чысшăн . 392
Виçĕ ывăл . . . . . . . . . 395
Ытарайми сестра . . . . . . . 399
Ахмет Делиевăн маттурлăхĕ . . . . 401
Ширшов комсомолецăн паттăрлăхĕ . . 404
Арам Петросян . . . . . . . . 406
Памастпăр ирĕк хулана . . . . . 409
Епле чăтать-ши Çĕр сире?! . . . . 411
Сӳтĕк Гитлер ухмаххи сӳтĕлен суя çăмхи . 413
Тăван Мускавшăн . . . . . . . 416
Çăлтăр . . . . . . . . . . 417
Аннене . . . . . . . . . . 419
Мунча шăрши . . . . . . . . 421
Поэт тăпри çинче . . . . . . . 422
Саламши . . . . . . . . . . 424
Элкере — вăрçă хирĕнчен . . . . . 425
Павло Тычинăна . . . . . . . . 428
Мицкевич . . . . . . . . . 429

Орден . . . . . . . . . 431
Ас илӳ . . . . . . . . . 437
Шинель . . . . . . . . . 439
Çĕнтерӳ . . . . . . . . . 441

## ТИЛЛИ ЮРРИСЕМ

«Мехел тени мĕскер тени пулать?..» . . 447
«Пиллĕкĕнех эпир, ай, пĕр тăван...» . . 449
«Шурăмпуçсем килеççĕ шураласа...» . . 451
«Асаттеçĕм атлас тăхăннă...» . . . 453
«Тăват касра тăвата савни...» . . . 454
«Урампа иртсе пыруçăн...» . . . 456
«Шурăмпуçпе вăрантăм ыйхăран...» . . 458
«Ман тĕмескен тăпри типсе çитсен...» . 459
«Арăслан пек аттем пур...» . . . . . 460
«Хапха умне тайăлтăм...» . . . . . 462
«Аслă масар-хăямат...» . . . . 464
«Алла тытман шур ал тутри...» . . . 466
«Юрлăп кăна, юрлăп, мĕн парăр?..» . . 468
«Аттеçĕм ман Хусанăн хуçи мар...» . . 469
«Хăпартăм çӳллĕ ту çине...» . . . 470
«Эй, эсир, чĕлĕмçĕсем...» . . . . . 471
«Усрав акăш пек савниййĕм пурччĕ...» . . 472
«Турта тулли тур ут — тăпăлкка...» . . 474
«Куккук! Куккук! — Вăрман янрать...» . 475
«Çĕр палăрми юр çăвать...» . . . 476
«Ай-хай юрлас-юрлас юррăм пур...» . 477
«Юрла кăна, юрла теетĕр те...» . . . 478
«Çĕр те çитмĕл çăка эп касрăм...» . . 479
«Тарăн шыва антăм ăшăк тесе...» . . 481
«Хăй чиккине хĕртсе кăвар сӳнет...» . 482
«Кăмăлăрсем çемçе — кăпăк пекех...» . . 484
«Вăр çаврака кăшкар пек уçланка...» . 485
«Ĕлĕк чухне эп хам ĕлĕкчĕ...» . . . 488
«Шăнкăр кăна шăнкăр шыв юхать...» . 490
«Ай-хай варман кашлать, вăрман кашлать...» 491
«Тилли кăна Тилли тееççĕ...» . . . 492
«Купăсăма калас — шикленеп...» . . . 493
«Ут утланса кустартăм улăха...» . . 494
«Калăр-ха мана, калăр...» . . . . 495
«Ниçта ярса пусма аптратăн...» . . . 496

«Й утар-и, утар-и...» . . . . . 498
«Хурал пӳртне кӗтӗм хурланса...» . . 500
«Тахçантанпах тытман такмака...» . . 501
«Ӗмӗтӗмсем чӗлӗм тӗтӗмӗпе...» . . . 503
«Усрав саркайăк пек юррăм пур...» . . 504
«Улшуçăсем, ай, ут улăштараççӗ...» . . 506
«Карти-карти, ай, кайăк-хур иртет...» . 507
«Ай-хай ӗçмӗттӗм эп, ӗçмӗттӗм...» . . 508
«Ай-хай юрлассăм пур та çук ман сассăм...» 509
«Итле эс, ыр хӗрт-сурт, вучах ăсти...» . 510
«Ватăлатпăр пуль, Сарпайăм!..» . . . 511
«Чие тымарӗнчен пӗр чӗлӗм турăм...» . 514
«Пӗчӗк çеç тăваткăл куçкӗски...» . . 515
«Ни Киремет, ни Пӳлӗх, ни Хăрпан...» . 517
«Ăрăмçăсем ăрăм тунипелен...» . . . 518
«Купăсăмçăм тăвата хӗлӗхрен...» . . 519
«Ан макăрăр, кил-йышсем, маншăн...» . . 520
«Юман хăма çуртартăм, тупăк турăм...» . 522
«Çуралнă эп чышка чăмăртаса...» . . 523
«Кулать иккен пиртен çак çутçанталăк...» 524
«Элчелӗм çитрӗ. Куçăм хупăнать...» . . 525

## КУН-ÇУЛ ТУПИНЧЕН

Атăл хӗрринчи юман . . . . . . 529
Халăхăма . . . . . . . . 530
Раççейӗм . . . . . . . . 532
Эп — Советлă Союз гражданинӗ . . 544
Ноябрӗн 7-мӗшӗ . . . . . . 546
Аслă çулпа . . . . . . . . 548
Поэзи пулсан . . . . . . . 550
Константин Иванова . . . . . 552
Пирӗн Çеçпӗл Мишши . . . . . 555
Халăх сăвăçин уявне . . . . . 557
Кун-çул тӳпинчен . . . . . . 560
Н. Я. Бичурина (Иакинфа) . . . 562
Тăхти . . . . . . . . . 564
Тăхти . . . . . . . . . 565
Çурри . . . . . . . . . 566
Тезаврус лингве чунашорум . . . 570
Салам сонечӗ . . . . . . . 571
Ян Амос Коменский . . . . . . 572

Пултару . . . . . . . . 573
Бакен . . . . . . . . 575
О. И. Ырсеме . . . . . . . 576
Художнике . . . . . . . . 578
Скульптора . . . . . . . . 580
Кимепе . . . . . . . . 581
Композитор патĕнче . . . . . . 582
Аннс . . . . . . . . 583
Иккĕленӳ . . . . . . . . 589
Элек . . . . . . . . 590
Кĕске сăвăсем . . . . . . . 591
«Кашни ман сăввăм — юлашки пекех...» . 597

ПЕТР ПЕТРОВИЧ ХУЗАНГАЙ

ИЗБРАННОЕ. т. 1. СТИХИ

(На чувашском языке)

Общая редакция — профессор М. Я. Сироткин.
Редактор С. П. Павлов.
Художник Э. М. Юрьев.
Художественный редактор М. А. Ильин.
Технический редактор В. И. Павлова.
Корректоры С. Л. Баранова, З. Г. Федотова.

НТ 15532.
Сдано в набор 7/VIII-1967 г.
Подписано к печати 23/IX-1968 г.
Формат бумаги 70×84 1/32.
Физ. п. л. 19. Усл. п. л. 20,71. Уч. изд. л. 16,63.
Изд. инд. 7—4—3. Тираж 3000 экз.
Цена 1 р. 93 коп.
Тем. план 1967 г. № 84.

Чувашское книжное издательство
пр. Ленина, 4.

Типография № 1 Управления по печати
при Совете Министров Чувашской АССР

г. Чебоксары, Володарского, 5.

Чăваш сăмахĕ — пирĕн чăн çул куçĕ,
Шанкăртататъ вăл ĕмĕр-ĕмĕре.
Унпа кăна пӳрт хăйне çул уçĕ,
Унпа кăна вăл çĕрĕ тĕнчере.

П. Хузангай



